К 83.39(=448)6-8
К 89
Ч-42027

Владимир КУЗЬМИН



# МАН МĂН ПУРНĂÇ

Национальная библиотека ЧР
4-042027

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗ.
обозначенного здесь срока

Моргаушская типография Зак. 1296 Тир. 10.000 1981 г.

Обязат. экз.
К 83.39(=Чув)6
К 89

**Владимир КУЗЬМИН**

# МАН ПУРНĂÇ — МĂН ПУРНĂÇ

Пĕрремĕш кĕнеке

КР



Шупашкар
Çĕнĕ Вăхăт
2007

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-4
К 89

ПРОВЕРЕНО
2010 22 МАР 2017

**В.Кузьмин**
**Ман пурнăç — мăн пурнăç.** — Чебоксары, 2007 — 132 с.

Ч-42027

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Кузьмин В., 2007

## «СОЦИАЛИЗМ ÇУЛĔПЕ» «ÇĔНТЕРӲ ÇУЛНЕ» ТАКĂРЛАНИ

### Чуна ерекен чир

Ӳссен кам пуласси çинчен пуçламăш классенче вĕреннĕ чухнех пуçра тĕлĕкри пек ĕмĕт çуралнăччĕ. Те вăрçă вăхăчĕ çунатлантарнăран, те кĕнекесемпе киносенчи паттăр сăнарсем чун-чĕрене хăпартлантарнăран, манăн çар çынни, командир пулас килетчĕ. Хамăн ĕмĕтĕме эпĕ кӳршĕ ачисене камантласа, вăрçăлла выляттарса, хама итлеттерсе-пăхăнтарса пурнăçа кĕртме тытăннăччĕ ĕнтĕ. Анчах та шăпам манăн урăхла пулмалла пулнă иккен.

Хамăр ялти, Хурăнсур Çармăсри, аслă йысна Петр Владимирович Владимиров районти тата республикăри хаçат-журнал редакцийĕсемпе питĕ туслăччĕ, сăвă-калав пĕрмай çыратчĕ. Петр Ковский ятпа тăтăшах пичетленетчĕç вĕсем. Пирĕн ялта та, ытти çĕрти пекех, иртнĕ ĕмĕрти аллăмăш çулсенче библиотека пулман, вулав çурчĕ (изба-читальня) çеçчĕ. Çĕрпел ял Совечĕн çав культура кĕтесне, туса пĕтермен мăн клубăн пĕр пуçĕнчи анлăрах, унпа коридор урлă пĕчĕкрех, тăваткал икĕ пӳлĕме халăх йышлă пухăнатчĕ. Вулав çурчĕн хуçийĕ Петр Ковский çамрăк юлташĕсемпе пĕрле мĕнле кăна савăклăх пуçарса йĕркелеместчĕ-ши унта. Эпир, ачасем, вĕсен ури хушшинчех явăннă. Йыснасен килĕнче те, вулав çуртĕнче те кĕнеке, хаçат-журнал ăшне кĕрсе ӳкеттĕм. «Правда», «Социалистическое земледелие», районти «Социализм çулĕпе» хаçатсене, «Большевик» («Коммунист») журнала хама майлă вулама вĕрентĕм. Вĕсене кашни вулав çуртнех, парти органĕсем хушнипе, ял совечĕсем çырăнтарса панă иккен.

Районти радио редакцийĕнче ĕçлекен Петр Алексеевич Тихонов-Ялгир сăвăç Вăрнартан килсе çӳретчĕ. Вăл тата йысна çырнисене, вĕсен сăмах-юмахне аса илсе, иккĕшин пултарулăхне танлаштараттăм. Чăвашла çеç мар, вырăсла та нумай вулаттăм. Тем те пĕлес, тем çинчен те çырас килетчĕ.

Йысна пĕррехинче мана Вăрнара илсе кайрĕ. Пысăках мар йывăç çурта, редакци текен çĕре кĕтĕмĕр. Район хаçатне çакăнта кăларнине эпĕ пуçласа пĕлтĕм.

Редакторĕ Ефим Никифорович Волков пире ăшшăн йышăнчĕ. Унпа пĕрле калаçса лараканни (вăл Евгений Николаевич Ефре-

мов-Ени пулнă) манран ыйтрĕ: «Хаçат çине çырас килет и?» Вăтана-вăтанах хуравларăм: «Сысна ферминче ĕçлекенсем çинчен çырса янăччĕ те...» Редакторĕ йăл кулчĕ те, пĕр енне кăна пичетленĕ хаçат страницине ман умарах кăшăрт куçарчĕ: «вула, шăллăм». Унта мĕн-мĕн пуррине пăхса пынă май куç тĕлне хамăн хушамат сиксе тухсан... кĕлетке вĕриленсе кайрĕ, чĕлхе çĕтрĕ. «Гонорарне те парса ярăпăр», — хушса хучĕ Волков. «Мĕн-ши ку «гонорарĕ» тата? «Çырнине пичетленишĕн тав тăвас вырăнне манăн вĕсенчен тата темскер илсе каймалла-ши? Эй, çук, ним те кирлĕ мар мана, сăпаççипах», — тесе ура çине тăтăм. Пурте кулса ячĕç. Атте ятлăскерех, Прокопий Бушаев бухгалтер, тимĕр ещĕкрен укçа кăларса хут çине алă пустарсан тин гонорар мĕнне тавçăрса илтĕм. «Вăрнарти «Социализм çулĕпе» хаçатăн çĕнĕ корреспонденчĕ çуралнĕ ятпа саламлатпăр, вăйлă журналист пул», — тесе вĕсем пурте мана черетпе алă тытрĕç.

Çавăн чухнехи хавхалану туйăмĕ кĕлеткене халĕ те пăлхантарса ярать, чуна ачаран ернĕ çыравçă чирĕ пуç мимине чарăнма пĕлмесĕр кăшлать, ыйхăсăр аптăрататъ. Ĕмĕр чирĕ çапла манăн ĕмĕте çирĕ — командир пулаймарăм. Çыртăм та çыртăм çав заметка хыççăн... Хайлав çине хайлав, пĕлĕте çитиех пухăнчĕ пуль çур ĕмĕр хушшинче çырни-пичетленни.

### Ялгир шкулĕ

Салтака кайиччен хамăр колхоз çыннисем, киномеханикре ĕçленĕ чухне хамăн саккăрмĕш передвижка участокĕнчи Санарпуç, Элмен Сунар, Иртеменкасси, Мăн Турхан, Тĕмпек, Кушик, Чăрăшкас Мăрат, Кăмаш, Пăваяль, Кĕçĕн Кипек, Çĕн Алтăш, Туçи Çармăс, Уйкас Кипек, хушса панă улттăмĕш передвижкăн Кивĕ Мĕлĕш, Çĕнĕ Хирпуç (Апнерка), Хирпуç, Рункă, Уравăш, Çĕрпел, Хурăнсур тата ытти ялсен пурнăçĕ çинчен хыпарлаттăм район хаçатне, «Çамрăк коммунистпа» «Чăваш коммунине». Çарта Инçет Хĕвелтухăç округĕн «Суворовский натиск» хаçачĕн военкорĕччĕ. Вăл вăхăтра та Вăрнара манман, «Социализм çулĕпе» çыхăну татман.

1958 çул вĕçĕнче, П.А.Тихонов чĕннипе, салтак тумĕпех редакцие пырса кĕтĕм. Çарти гонорарпа пальто туяннăччĕ, урăх укçа юлманнипе костюмне илеймерĕм. Галифеллĕ шăлаварпа гимнастерка тăхăнса çӳренĕшĕн намăс тесе шутламан та, халăх хушшинче хăюллăнах утаттăм. Лăпкă океанăн Тутар проливĕнчен

Вăрнар станцине вун пĕр талăк айăк пĕрчи хăйраса килнĕ хыççăн ялта пĕр уйăх утса-чупса каннăччĕ ĕнтĕ, вăя пусармалли ĕç кирлĕччĕ. Киномеханикĕн чикан пурнăçĕ урăх туртмарĕ, колхоз ĕçĕнче малашлăх курмарăм. Килĕшрĕм редактор сĕнĕвĕпе. Редакци çынни пулса тăтăм.

Редакци Карл Маркс урамĕн 11-мĕш çуртĕнчеччĕ е Ленин урамĕн 48-мĕш çурчĕччĕ, КПСС райкомĕ çумĕнче, аяларах. Вăрнарла каласан, чукун çулран иккĕмĕш урамра, вокзалтан Нурăсалла каякан çул çинче. Çӳллĕ, япăха пуçланă вырăсла хапхаран кĕрсен, анлă килкарти. Кĕтеслĕ йывăç çуртăн сылтăм енче, чӳречесем умĕнче, хурăнсем. Ракатка картапа пӳлнĕ лаптăкра ытларах амерĕк вĕренисем сарăлса ӳсеççĕ. Кĕтесрен пăрăнса пĕчĕк картлашкапа хăпарсан, çивитти айĕнче тăмалли хăма сарнă вырăн пур. Тул алăкĕнчен кĕрсен, коридор кĕтесленсе сылтăмалла каять. Стенапа тан — тăваткал кăмака пуçĕ. Ун çумĕнче — ĕçмелли шыв бакĕ. Алюмини куркийĕ те пур. Сулахай енчи алăкран пысăк пӳлĕме кĕретĕн. Картлашкапа ансан — тата виçĕ алăк. Сулахай пӳлĕмĕ ансăр, унта бухгалтер ларать. Хире-хирĕçле пӳлĕмсенчен сулахаййинче — редактор, сылтăмминче — ответлă секретарьпе парти пурнăç пайĕ. Кĕтесри тăваткал пӳлĕмĕн икĕ çӳллĕ мăн чӳречи Карл Маркс урамнелле, тата иккĕшĕ Ленин урамнелле пăхаççĕ. Çавăнпа шалта çап-çутă. Урам урлă — хăмаран маçтăрласа лартнă кино афиши. Ку маншăн çывăх, кăмăллă пулчĕ. Манăн ĕнтĕ çак пӳлемре лармалла.

Коридорти сăрланă йывăç урай хăй кĕввипе юрлать. Тултан кĕрсен тӳрех — ялхуçалăх пайĕ, юнашар пӳлĕмĕ те унăнах. Ăна хирĕç — фотолаборатори. Настя Обофорова техничка пурăнакан пӳлĕм. Шаларах: сулахайра — çырусен пайĕ, сылтăмра — типографире ĕçлекен Шура Петрова пӳлĕмĕ. Хваттер çук пирки вăл ывăлĕпе унтах пурăнать.

Ку çуртра 1924–1934 çулсенче Вăрнар поселокĕн малтанхи шкулĕ, унтан парти райкомĕ ĕçленĕ, комсомол райкомĕ пĕрлех пулнă. Юнашар кирпĕчрен икĕ хутлă çĕнĕ çурт тусан, вĕсем унта куçнă. 1957 çулта йывăç çурта редакцие панă.

Эпĕ салтакра чухне «Социализм çулĕпе» тăватă страницăпа эрнере виçĕ хут тухма пуçланă, çавăнпа ĕçлекен те ытларах кирлĕ пулнă. Паллакансенчен Тихонов редакторпа Кайри Тукай ачи Георгий Игнатьев пурччĕ. Петр Алексеевич мана Николай Артемьевич Орлов патне ячĕ. Иртеменкассинче çуралнăскер, вăл хаçат «кашкăрех» пулса кайнă, терĕç. «Коммунизм ялавĕн» Трак-

Красноармейски тăрăхĕнчи корреспонденчĕ те пулнă. Çырма та, вĕрентме те пултарать. Пуçне лăк-лăк тутарса, çемçен калаçать, çав хушăрах пĕр-пĕр кулăш сĕвемĕпе сăмах-юмаха çивĕчлетсе ярать, итлекенсемпе тăнлакансен пуçĕсене ăслăнрах ĕçлеттерме пулăшать. Редактор мана мĕншĕн ун патне тĕкнине эпĕ каярахпа тата тăнлăрах ăнланса илтĕм.

Редакторĕ те вăтăр улттăра çеçчĕ, Орловĕ те унпа пĕр çулхисемрехчĕ. Хуратул пек хура тĕслĕ тепĕр япшар çынпа паллашрăм. Ялхуçалăх пайне ертсе пыракан Алексей Иванович Иванов пулчĕ ку. Тихонов пекех фронтра çапăçнăскер. Аслисем-пуçлăхсем-командирсем хăйсем тавра мĕнле пултаруллă çынсене пухса çĕнтерӳ тума пултарнине тишкерме ăс çитернĕ май, шутларăм вара: Петр Ялгирĕн ĕç ушкăнĕн чăмăрĕ пур. Эпир, çамрăксем, çав чăмăра çирĕплетме пулăшакансем.

Редакци алăкĕнчен кĕме çеç çăмăл. Унччен эпĕ мĕн те пулин çырса янă та, вăл хăçан пичетленсе тухасса кĕтсе пурăннă. Халĕ, штата лексен, санăн ĕç сĕтелĕ хушшине тăлланмалла, хăв çырнипе кăна лăпланмалла мар, çынсем çырнине те тишкермелле, ăна пурте ăнланса яка вуламалла туса хатĕрлемелле. Пуç кунтăкне çавăрттармаллăх, хăрамаллăх, хĕпĕртемеллĕх, хуравлăхне тӳссе иртермеллĕх вăхăт саманчĕн вĕçĕмсĕрлĕхĕ пуçланчĕ.

Эпĕ тӳрех ăнлантăм: мана халĕ шанаççĕ те, çав хушăрах ман пирки иккĕленеççĕ те. Пуçра хамăн тем тĕрлĕ шухăш пăтранать. Пултараймасан, кăларса ярсан? Намăс вĕт.

Николай Артемьевичăн манпа калаçса ларма та вăхăт çук, вăл черетлĕ номер ăшне пуçне чикнĕ. Редакцин ĕç-пуç йĕркине сăнанă май, хам малтанлăха панă хут листи çине мĕн пичетленине вуласа тăнлатăп. Район пурнăçĕн райком палăртнă тĕп ыйтăвĕсемпе пĕрлех ятарлă страницăсем кăлармалли график пур. Çакă мана ытларах кăсăклантарчĕ. Ĕçялкорсен, хĕрарăмсен, çамрăксен, пионерсен, канмалли кун, литература, «Капкăн» страницисем, ĕççынисен ыйтăвĕсем çине хуравланă тата вулакансен çырăвĕсенчен йĕркеленĕ уйрăм кăларăмсем валли пуçра хăш-пĕр шухăш, тема çуралчĕ те. Çав кунтанах вĕсене пурнăçа кĕртме пуçларăм.

Пĕтĕм хĕрӳлĕхе, пултарулăха парса çĕнĕ ĕçе кӳлĕнтĕм. Тĕрленчĕк, репортаж, очерк, фельетон çырма ытларах тиврĕ. Информаци, статья, корреспонденци пичетлемен пĕр номер те юлман.

Малтанхи вăхăтра Николай Артемьевич, Алексей Иванович, Петр Алексеевич хăй те, тимлесех вĕрентрĕç. Манран вĕсем

ку ача япăх çырнă тесе пĕри те кулман, кашни ăнăçлă хайлавшăн мухтаса та илетчĕç, çитменлĕхе чăтăмлăн, ăнланмалла кăтартса паратчĕç.

Аллăмĕш çулта редакцире пĕрремĕш хут пулнă чухне паллашнă упа пек тăлпан çын, Евгений Ефремов, «Советская Чувашия» корреспонденчĕ, пире пулăшу памасăр редакцирен тухса каймасчĕ, ялсене кайнă чухне пĕрле илме манмасчĕ.

Хаçат кăларасси ун чухне хальхинчен чылай йывăрччĕ. Уру утать-тĕк, районĕпех чупса çаврăн. Типографийĕ аякра, хими завочĕ хыçĕнчи йывăç баракра. Полосасене алăпа пуçтарса калăпланă. Типографийĕ редактор аллинчеччĕ. Наборщицăсем хыççăн йăнăшсене иккĕн тӳрлетеççĕ: хăй тăрăх пăхма юратакан, чĕлхипе пурне те вăрттăн кăшлакан Александра Ивановна Бобылева тата Мăн Яваш ачи Владимир Иванович Москвин. Вĕсем хыççăн редакцин тепĕр çынни страницăсене тĕплĕн вуласа пичетлеме ирĕк парать. Редактор ĕнтĕ хăй вулать, тӳрлетет. Вăл — пуриншĕн те хуравлă. Çапла эпĕ хаçат мĕнле хĕнпе тухнине хам куçпа курса, ăна хам алă витĕр кăларса туйрăм, пĕлтĕм. Кăмăла кайрĕ. Çав туйăм манăн ăшран халĕ те çухалмасть.

Редакци эртелĕ хутшăнса пычĕ. Вăрнарти зооветтехникумран вĕренсе тухнă Григорий Михайлов зоотехник ялхуçалăх пайĕнче Иванова пулăшма пуçларĕ. Пирĕнтен чылай аслăрах Степан Макарч Филиппов, аслисем мĕн каланине çирĕп пурнăçлама юратаканскер, пирусĕпе вăрçа-вăрçа пуç çĕклемесĕр ĕçлетчĕ. Хушăран унран Орлов мăшкăлатчĕ те пулас.

Пайсенче хатĕрленĕ мĕнпур материал ответлă секретарь сĕтелĕ çине купаланать. Уйăхра мĕн-мĕн тума палăртнине куллен тĕрĕслесе-йĕркелесе пырасси, кашни номере планласси, сотрудниксем çырнине редакцилесе набора ярасси, хаçата илемлĕ кăларасси йăлтах секретарь çинче, унăн ăс-пуçĕнче, ăсталăхĕнче. Секретаре çарти евĕр ахальтен штаб начальникĕ тесе каламан пуль çав. Секретарь мĕнле — хаçат сăнĕ те çапла.

Пур енĕпе те çак вырăнта лармалли çынччĕ ĕнтĕ Николай Артемьевич. Хăй ăста та илемлĕ çырнине пула унпа никам та, вăл шутра редактор та, ытлах тавлашаймастчĕç.

Никам та кăлтăксăр мар. Пĕрле, юнашар ларнă хушăра, эпĕ хамăра вĕрентекенĕн пĕр çитменлĕхне асăрхарăм. Çитес номер мĕнле пуласси çинчен редактор патĕнче калаçнă-тавлашнă-килĕшнĕ хыççăн Орлов макетсем тăвать, кашни полосана хатĕр хайлавсене лартать, çивĕч ыйтусене çутатмалли статьясен лап-

тăкне виçсе хăварать, ăна тултарма миçе йĕрке кирлине сăмсаран шаккаса калать, ытлашши çыртăн — касать, çитерейменрĕн — хуштарать. Ăста çыравçа пĕр енчен çак мел ансат та; маншăн вăл малашнехи ĕçре пулăшу çеç пулчĕ. Шухăша виçеллĕ чăмăртамалла, шыв юхтармасăр, ылтăн пĕрчи-татăкĕ тупса, материала йăлкăштармалла, пуянлатмалла çеç. Ăсталăх çитейменнишĕн, вăрăм çырма хăнăхнишĕн вара Орлов мeслечĕ чĕр нушахчĕ. Редактор хăй те çак меслете ырлатчĕ, уйрăмах кулăш-сатира япалисем кĕске те çивĕч сăналлă пулса тухнишĕн.

Ăнлантăм, Степан Макарчăн шухăшлав вĕçевĕ курăнсах каймасть. Тем пек тăрмашсан та, цифра купи çеç купалать. Иртнĕ çулпа та, унчченхи пилĕк çуллăхпа та танлаштарать, анчах вăл е ку çитменлĕхĕн, пăттăрмахăн сăлтавне тĕплĕн тишкерсе анлă шухăшлав пĕтĕмлетĕвĕ тусах çитерейместь. Степан Макарч Нурăс урлă Кăкшăма килне çӳретчĕ. Ирпе ялтан çитрĕ те вăл Орловран тӳрех хушу илчĕ: Туçи Çармăса каймалла, сакăрвунă йĕрккеллĕ статья çырмалла. Çурран кайса çӳресе икĕ кун ирттерчĕ, тепĕр кун çырса ларчĕ, машинисткăна çаптарса секретаре пырса пачĕ. Сăмсине нăш-нăш тутарса пуçне силлекелерĕ те Николай Артемьевич статьяна хăвăрт вуласа тухрĕ, вара хăй умĕнче мĕскĕннĕн тăракан Степан Макарча кударах каларĕ: «Хут карçинкки пушахчĕ-ха ман, шăпах çавăнта пăрахмалли макулатура ку. Пустуй вăхăт çунтарса ĕшенсе çӳриччен..» Филиппов та хĕрсе кайсан тавлашма ухутах-мĕн. «Апла пулсан, пар каялла материала», — тесе хăй çырнине илме аллине тăсрĕ. Орловĕ те памасть, мĕншĕн тесессĕн унăн хăй палăртнă вырăна çавна çеç лартмалла-çке. Редактор пырса кĕмен пулсан тем пулса тухатчĕ. Петр Алексеевич статьяна вуласа тухрĕ те, «кайтăр-и» тесе секретаре йышăнма хушрĕ.

Çырусен пайĕн пуçлăхĕ Георгий Игнатьев канмалли кун, çырусен,вулакансен страницисемпе ытларах ларать Эпĕ ăна хам ирĕкпе тӳрех пулăшма тытăнтăм, мĕн те пулин интереслĕ хайлав парсах тăратăп.

Редактор пуçарса çине тăнипе, хальхи «Аргументы и факты» хаçат майлăрах номерсем кăларма пуçласан, çырăнакансен хисепĕ тӳрех ӳссе кайрĕ. «Капкăн страници» те уйăхра икĕ хутчен тухатчĕ, вăл та пулăшрĕ тираж хăпартма. Ятарлă страницăсене палăртнă вăхăтрах кăларса тăни вулакан ватти-вĕттин кăмăлне кайни халăх çине тухсан тӳрех курăнатчĕ. Кашни страницăн, кăларăмăн хăйĕн çыравçă активĕ пурччĕ. Ĕçялкорсен пултарулăхне хаçатра усă курассишĕн хуравлă Игнатьев поселокри, ялти

çыравçăсене пĕрмай рейд ирттерттеретчĕ. Унта эпир хамăр та хутшăнаттăмăр. Хам эпĕ пĕрремĕш рейд Кĕçĕн Кипекри «Память Ленина» колхозăн сĕт-çу ферми япăхни çинчен йĕркелерĕм. Материал хаçатра пичетленсен, ăна парти райкомĕнче сӳтсе яврĕç, сĕт сăвассине нумай чакарнăшăн пуçлăхсене сисĕнмеллех лектерчĕç. Унпах лăпланмарăмăр, райкомпа райсовет ĕçтăвкомĕ палăртнисене кипексем мĕнле пурнăçланине сăнаса тĕрĕслесех тăтăмăр. Ĕçĕн вĕçĕ ăнăçлă пулчĕ.

Тепĕр рейд асрах, 1959 çулхи ака уйăхĕн пуçламăшĕнче Чăваш АССРĕнчи ĕçялкорсен сьезчĕ пулчĕ. Вăрнар районĕнчен унта Петр Тихонов, эпĕ, Григорий Михайлов, Павел Кошкин, Степан Юркин, Николай Мартынов, Серафим Ефимов, Иван Степашин, Виссарион Кожанов тата ытисем те пурĕ вунпĕрĕн хутшăнтăмăр. Шупашкара тухса каяс умĕн ялкорсем радакцире çĕр каçрĕç. Ирпе Георгий Игнатьев рейд бригади йĕркелерĕ. Николай Мартынов, Серафим Ефимов, Владимир Москвин пĕрле лачакаллă, путăк-шăтăклă, йывăççăр Вăрнар урамĕсем тăрăх утса тухрăмăр, нумай пуçлăхпа калаçрăмăр, пуйăс киличчен материалне çырса, машинкăпа пичетлеттерсе секретаре парса хăвартăмăр. Сьездран таврăннă çĕре «Вăрнарта лачакасем ан пулччăр» ятпа тухнă материал поселокра самаях шăв-шав çĕкленĕ.

Хама мĕн хушнине çийĕнчех тума тăрăшаттăм, аслисем çĕнĕ тема сĕнсен, ăна епле ансатрах та вирлĕрех, илемлĕрех хайлава сăнарлассишĕн ыйхă çухататтăм. Ял Совет, профсоюз, комсомол, шкул ĕçĕсем ума тухса тăчĕç. Коммунистсен, парторганизацисен кулленхи пурнăçне та хаçатра çутатма пуçларăм. Ĕçлеме тытăнсан иккĕмĕш уйăхĕнче мана Орлов, редакторпа канашланă хыççăн, хуравлă хушу пачĕ. Редакци планĕпе килĕшӳллĕн манăн ятарлă страница хатĕрлемелле. Тухса утрăм Хапăса. Ял Советне Чиркӳллĕ Хапăс, Мăньял Хапăс, Анаткас Хапăс, Вăрманкас Хапăс, Катăш ялĕсем кĕреççĕ. Вĕсем «Гигант», «Самолет», Чапаев ячĕпе хисепленекен колхозсене пĕрлештерсе тăраççĕ. Çак пысăк пĕрлĕхĕн партин XX тата XXI сьезчĕсем хушшинчи ӳсĕмĕсене кăтартса памалла. Г.М.Матвеев ертсе пыракан ял Совечĕ республикăри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава виççĕмĕш çул алăран ямасть. Григорий Матвеевич мана, палламан çамрăк корреспондента, шанчăксăртараххăн кĕтсе илчĕ. Калаçнă май унăн кăмăлĕ уçăлса пычĕ, эпĕ мĕн ыйтнине тивĕçтерчĕ, кунĕпех пĕрле ĕçлерĕ, ăнлансах çитерейменнине пуçа хывма пулăшрĕ. Икĕ кун иртсен «Хапăс ял Совечĕ партин икĕ сьезчĕ

хушшинче» полоса калăпланчĕ. Пичетленнĕ хыççăн вăл Матвеева хăйне кăна мар, райсовет ĕçтăвкомĕн пуçлăхĕсене те килĕшнĕччĕ. Шел, вăл вăхăтра хальхи пек материалсене кам хатĕрленине кăтартас йăла çукчĕ. Килти архивра тĕл пултăм ăна. Страницăна урлălla илемлĕн «Ку манăн пĕрремĕш пултаруллăх ĕçĕ» тесе çырса хунă.

Хаçат редакторĕ те, ответлă секретарĕ те пуçарулăха юрататчĕç. Çынсем пек мар, хам майлăрах, урăхларах çырни вĕсен кăмăлне каятчĕ. Пултарулăх шавĕ тăратчĕ пӳлĕмсенче. Çав шава çĕклекенсем хушшинче Мăн Явăш ачи Михаил Васильев та пурччĕ. Вăтам шкул хыççăн вăл колхозра ĕçленĕ, Çурçĕр Флотĕнче службăра пулнă, унтан пирĕн ушкăна лекрĕ.

Тихонов çыравçă-редактор сăвăçчĕ те, Петĕр Ялгир ятпа янратчĕ. Ялгир шкулĕнче журналистика вăрттăнлăхĕсене алла илме, чăтăмлăха хăнăхма вĕренсе малтанхи утăмсем турăмăр.

**Писательсемпе паллашни**

Ача чухнех нумай вулама юрататтăмччĕ те, çак кĕнекесене çыракан тĕлĕнмелле ăслăçсене çав тери курас килетчĕ. Чи малтан чĕрĕ поэтпа ялти клубра паллашнăччĕ. Петĕр Ялгир хăйĕн сăввисене вуласа пачĕ, юрларĕ, ташларĕ. Сĕрме купăсĕпе Кӳстӳмĕрти суккăр Самарин мусăкçă шăрантарчĕ. Çăвара карсах итлерĕмĕр. Ун хыççăн Çĕрпелти Çĕпритун Шăпчăк кулăшçăна курнăччĕ, каярахпа унпа паллашнăччĕ. Сталин читлĕхĕнчен тин çеç хăтăлса тухнă писатель кӳршĕри Хирпуçне çынсене сиплеме-сыватма çӳретчĕ.

Редакцие ĕçлеме пырсанах, 1958 çулхи раштавра, Вăрнара чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай килчĕ. Ăна Петĕр Ялгир литература кружокне чĕннĕ-мĕн. Пĕрлешĕве Петр Алексеевич хăй Хĕрлĕ Чутайран Вăрнара куçса килсен ертсе пыма пуçланă. Унăн ĕçне эпĕ те малтанах хутшăннăччĕ-ха, анчах хальхинчи пек хумханullă кун курманччĕ. Хусанкай, Ухсай, Элкер, Турхан ячĕсем ытла та асамлăн янăратчĕç. Çавăнпа Петр Петровича çывăхран курни, паллă çыравçăпа куçа-куçăн калаçни, пурнăçра халиччен пулман тĕлĕнтермĕшех пулчĕ. Унăн кашни сăмахне тăнласа итлерĕмĕр эпир: Николай Орлов, Анатолий Емельянов, Степан Юркин, Анатолий Иванов-Хум, Павел Николаев, Степан Филиппов, Георгий Игнатьев, Григорий Михайлов-Илепер, Василий Еремеев, Павел Вырсов тата ытти çыравçăсем те.

Гриша малтанах ӗмӗтленетчӗ сӑввисене Хусанкая кӑтартма. Ӗмӗчӗ тулнӑшӑн хӗпӗртенипе сывламасӑр тенӗ пек ларчӗ хайне «юсанӑ» вӑхӑтра. Аслӑ ҫыравҫӑ ӑслӑн, тӳрех ҫапса хуҫмасӑр тишкерчӗ ҫамрӑк сӑвӑҫӑн пултарулӑхне. «Атте масарӗ» поэмӑн пуҫламӑшне икӗ хут вуласа, куҫӗпе чупса тухрӗ строфасем тӑрӑх, вара ҫапла каларӗ: «Мӗнле хаваслӑхпа-хастарлӑхпа пуҫланӑ, ҫавнашкалах ӑнӑҫлӑ вӗҫлессе шанатӑп, малашлӑху курӑнать, тата ытларах тӑрӑшсан, поэт пулатӑрах». Анатолий Емельяновӑн хӑшпӗр сӑввисене те лайӑх енӗпе палӑртрӗ Хусанкай.

Тишкерӳ, вӗренӳ, туслӑ калаҫу хыҫҫӑн пурте пӗрле сӑн ӳкерттертӗмӗр. Илепере Петр Петрович малти ретре хӑй ҫумне, сылтӑма, туртса лартрӗ. Гришӑн ҫакӑн хыҫҫӑн ури ҫӗре перӗнмест, поэтсен чи ҫӳллӗ тӳпине, Парнас тӑвӗ ҫине вӗҫсе каяс пек хӑпартланать. Унтанпа чылай ҫул иртнӗ хыҫҫӑн, поэмине вӗҫлесен, Григорий Михайлович сӑмах май ҫав ӳкерчӗке аса илчӗ. «Поэма вӗҫне юлашки пӑнчӑ лартичченех Хусанкайӑн чӗри хӑвачӗпе ҫыртӑм, халӗ те сисетӗп ҫав хӗрӳ туйӑма», — тесе, чӑваш ӑсчахне асӑнса, черккинчи эрехне сӗтел ҫине тумлатрӗ.

Литература пӗрлешӗвӗн занятийӗсене иттерме Шупашкартан Георгий Ефимов, Георгий Орлов, Мӑн Явӑш агрономӗ Алексей Воробьев поэтсем тата ытти писательсем те час-часах килсе ҫӳретчӗҫ. Ӗҫ коллективӗсенче, районти, Нурӑсри культура ҫӳрчӗсенче паллӑ ҫыравҫӑсем иттерекен вулакансен тӗлпулӑвӗсене эпир те хутшӑнаттӑмӑр, хамӑрӑн хайлавсене халӑх умӗнче вуласа-каласа пама хӑнӑхаттӑмӑр. Культурӑллӑ, хӑйсене сӑпайлӑ тытакан литераторсемччӗ вӗсем. Ҫавна май Пӑваялӗнчи Иван Кораков ватӑ ялкор калани аса килчӗ. Валентин Урдаш пырса кӗнӗ вӗсен килне. Арӑм лаҫра сӑмакун юхтаратчӗ, тет. Чӑвашӑн Инди киновӗнчи Джага сӑнлӑ сӑвӑҫ-шӑпчӑк, пӳрте кӗриччен, лаҫалла лаплаттарчӗ, унтан, пӗр бакал ҫавӑрса хунӑ хыҫҫӑн тин, кил хуҫипе калаҫма пуҫларӗ, тет. Ӗҫкӗ шыраса, ял-ял тӑрӑх авланса ҫӳрекен намӑссӑр ҫыравҫӑсенчен аякра, ҫӳлерех шайра тӑратчӗҫ кусем — Ялгир хӑнисем.

Петр Алексеевичӑн райкомра ӗҫлекен кӑмӑллӑ, чипер арӑмӗ Клавдия Васильевна яланах упӑшкин тусӗсем валли вӗри яшка, кукӑль тата ытти апат-ҫимӗҫ хатӗрлетчӗ, чей вӗрететчӗ. Астивсе пӑхмалӑх сӗтел ҫинче эрех-сӑри те пурччӗ. Этем шайӗпе тутлӑхлӑн хӑналанса тухаттӑмӑр эпир те. Кӗркури Илепер купӑс каласа чӑваш юррисем юрлаттаратчӗ. Калаҫу ытларах — литература ыйтӑвӗсем пиркиччӗ. Мускаври литература институтӗнче

вĕреннĕ Георгий Ефимовпа Петĕр Ялгирăн асаилĕвĕсем пире те шухăша яратчĕç, ĕмĕт-туйăма вĕçтеретчĕç. Ахальтен мар Илепер Мускава тапрĕ. Экзаменсенче 18 балл илсе таврăнчĕ. Анчах... вăл баллпа эпир Вăрнарта бал тăваймарăмăр. Илепере вĕренме пыма чĕнмерĕç.

Юлташăма лăплантараттăм, «Поэт пулма литинститут мар, литпурнăç кирлĕ», — теттĕм. Хăть те мĕнле йывăрлăхран те чĕррĕн те типĕ тухма, хамăра çирĕп сыхласа хăварма тăрăшаттăмăр. Пуçа усман, пĕрмаях çырнă, мĕнпур савăнăça, хуйха-суйха хут листи çине кăларса шăрçаланă, унпа хавхаланса тата малалла талпăннă, мĕн ĕмĕтленни-палăртнине вĕçне çитермесĕр лăпланман.

Аллăмĕш-утмăлмĕш çулсенче Вăрнар тăрăхĕнчи çыравçăсенчен чи вăйлă аталанса пыраканни Мĕтри Кипекчĕ. Пирĕн ялтан пилĕк çухрăмри Тимĕрçкасси Кипек ялĕнче вунвиççĕмĕш çулта çуралнăскер вăл ялтан çамрăклах тухса кайнă, фронтра çапăçнă, çар училищи, академийĕ пĕтернĕ юстици подполковникĕ Мускавра пурăнатчĕ. Яла тăванĕсем патне килсе çӳретчĕ, Шупашкар таран темшĕн ярăнса çӳреме юратмастчĕ. Хăйĕн çитмĕл çулхи менелникне те вăл республикăн тĕп хулинче мар, Чăвашăн хăй çуралнă Вăрнар хулинче ирттерчĕ. Шупашкарта унта йăпăлти, кут çуллакан трибунсене ытларах шак хураççĕ те, подполковник никам умĕнче те офицер карттусне хывас темен пулас. Пирĕн таврара унашкал çирĕп йăла пур. Мĕтри Кипеке эпир, çамрăксем, «Сунарçă калавĕсемпе» «Кайăк тусĕ» роман сăнарлăхĕпе пĕлеттĕмĕр. Каярахпа унăн вăйлă романĕсем чăвашла та, вырăсла та пысăк тиражпа çĕршыва саланчĕç, «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» романшăн ăна Чăваш патшалăх премине те пачĕç. Ку — каярахпа.

Халĕ альбома пăхатăп та, эпир редакци çумĕнчи хресчен çурчĕ умĕнче ӳкерттернĕ сăнӳкерчĕкре Петĕр Ялгир, Мĕтри Кипек тата эпĕ, пурте пĕр çӳлĕш шайĕнче тăратпăр. Пурте типтерлĕ тумланнă, галстук çакнă. Эпир Ялгирпе карттуспа, Кипек — шлепкепе. Уйрăмлăх кăштах пур. Çӳлĕшпе тан пулсан та эпир пултарулăх шайĕпе танах мар иккен. Пултарулăхра кашнин хăйĕн виçе шайĕ пур. Дмитрий Афанасьевич Афанасьев, 1960 çулта тăван çĕрĕ çине Мускав пуйăсĕнчен анса юлнă ентеш, хăйĕн пултарулĕпе района, республикăна анлă та çӳллĕ шая çĕклекенсенчен пĕри пулнине ăнлантăм.

Вăл чăвашла тап-таса калаçать, чăвашла яка çырать. Амăшĕ панă чĕлхине ют халăх хушшинче сапаласа яман, чăваш вула-

канĕсемшĕн сыхласа хăварнă. Эпир, редакцире ĕçлекенсем, литературăна юратакансем, темле магнит туртнă пек ун тавра пуçтарăнтăмăр. Унăн ыркăмăллăхĕ пурне те тыткăнларĕ. Ахаль те пуян тырăллă авăн уйăхне Кипек тата та пуянлатса ячĕ.

Дмитрий Афанасьевич хресчен çуртĕнче выртса тăратчĕ те, вăл Петр Алексеевичпа иксĕмĕре çул куркине чĕнчĕ. Мускав шпрочĕсемпе пĕрле ялтан парса янă шăрттанпа хăналасшăнччĕ пире, анчах эпир хамăрăн аш-какай комбиначĕ тăвакан «московски» кăлпассине кăлартăмăр. Хăнан çула хăналла тухмалла-çке.

Редакцире сăвă-калав çырманни те Настя инке çеçчĕ. Вăрçăччен «Социализм çулĕпе» редакторĕнче ĕçленĕ Денис Алексеевич Обофоровăн тăлăх арăмĕ редакци кил-çуртне тирпей-илем, тасалăх кĕртсе тăратчĕ. Уншăн вăл чунне паратчĕ. Хваттер иличченех редакцире пурăнчĕ. Настя инке юптарса каланисем хушăран хаçат страницисене те куçкалатчĕç. Апла-тăк, эпир пурте пултарулăх çурчĕн сăнарлă сăмах ăстисем пулнă.

Вăрнар писательсене пултарулăх çимĕçĕн шăршипе туртатчĕ пулас. Ăçта вăйлă-тутлă çимĕç — çавăнталла алă туртăнать çав. Шухăшлаттармалла-астармалла çырма хăтланакан Петĕр Львов прозаик, чăваш чĕлхин тĕпне тухма ĕмĕтленекен çавраçиллĕ сăнавçă-сăнарçă, Вăрнар çийĕн çавраçилле çавăрттарса-шавласа иртсе кайрĕ. Ун хыççăн Аркадий Лукин хăйĕн «Парти билечĕпе» ялсене хĕретсе çӳрерĕ. Поэми ĕнтĕ унăн Маяковскин хăй вăхăтĕнче кĕрленĕ «Облако в штанах» сассипех тутлă шăршă саратчĕ. Вăрнарта, Хурăнсурта тĕл пулусем ирттертĕмĕр. Ялти клубăн мăн залне халăх лăках тулнăччĕ. Сăмах ăстисене итлеме, вĕсемпе калаçма юрататчĕç сынсем. Илепер пире хăйсен ялĕнче кĕтеççĕ, терĕ. Хамăр патра апат хăпăл-хапăл çинĕ хыççăн лашапа Чăрăшкас Мăрата тухса чашлаттартăмăр. Салтакран таврăннă çĕре аннесем ман валли тăлăп çĕлетнĕччĕ. Анне Аркадий Васильча, хулалла çăмăл тумланнăскерне, ман тăлăпа тăхăнтартрĕ. «Ну, кинемей, «Тăлăп» ятлă сăвă çыратăп халь», — тесе аннене тав туса сăра ĕçрĕ те вăл сăввине виличчен те çыраймарĕ. Пăваяль витĕр тӳрĕрен çитес çĕре часах çитрĕмĕр. Тулькăш клубĕнче халăх юлман, кĕтнĕ-кĕтнĕ те, саланнă. Гриша амăшĕ шаркку çитересшĕн пулчĕ. Пирĕн хырăм тутă. Урам урлă пурăнакансем ĕçке чĕнсе кайрĕç. «Халăхпа хуть те ăçта тĕл пулсан та пирĕншĕн çавах», — терĕ те Лукин, эпир те килĕшрĕмĕр. Маччана пусĕпе кăшт кăна перĕнеймен Аркадий сăвă калакала, такмакласа ташша сӳрĕ. Тĕлпулу хавас иртрĕ.

Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕ çамрăк çыравçĕсемпе тачă çыхăну тытатчĕ. Районсене тухса çӳренисĕр пуçне правлени членĕсем пире Шупашкара та чĕнетчĕç. Правлени председателĕ Александр Алга алă пуснă чĕнĕве илтĕмĕр. 1962 çулхи юпа уйăхĕнче Кĕркури Илеперпе республикăри çамрăк писательсен канашлăвне тухса кайрăмăр. Икĕ кун хушшинче мĕн чухлĕ тӳлпулу пулчĕ, кама кăна курса калаçмарăмăр пуль. Политвĕренӳ çуртĕнче, канашлу уçăлнă чухне, президиума Петр Хусанкай ларсан, пурте хытă алă çупрĕç. «Мана мар, ак çак маттурсене саламлас пулать, акă камсенче чăваш поэзийĕн малашлăхĕ», — тесе хăй çумĕнчи Геннадий Лисин — Айхине тата Кĕркури Илепере аларан çĕклесе тăратрĕ Петр Петрович. Паллă писательсем пирĕнпе ăшшăн, хăйсемпе тан хурса калаçни мана питĕ килĕшрĕ. Пурте тенĕ пекех вĕсем канашлăва пынă. Çамрăксене хаклани, шанни, пултарулăха аталантарма пулăшни каярахпа чăваш литературин кун-çулĕнче тулăхлăн палăрчĕ. Çав канашлăва хутшăннă çамрăк çыравçăсенчен чылайăшĕ халĕ хăйсем чăваш халăх писателĕсем, нумай кĕнеке авторĕсем, пултарулăх канашĕн пуçĕнче тăракансем, çамрăк талантсене тупса çыравçă ăсталăхне вĕрентекенсем.

Тепĕр пилĕк уйăхран, ака уйăхĕн 3—5-мĕшĕсенче, Чăваш писателĕсен улттăмĕш сьезчĕ пулчĕ. Петр Ялгирсĕр пуçне, Союз правленийĕ унта Кĕркури Илеперпе иксĕмĕре те чĕннĕччĕ. Ятлăсумлă писательсемпе çывăхрах палашса кайрăмăр. вĕсем пекех ăста çырас, чаплă пулас килетчĕ.

Василий Иванович Краснов-Асли, Александр Галкин литпĕрлешӳре ирттернĕ пултарулăх калаçăвĕсем те асрах.

Çамрăк хунавсем ӳссех пычĕç. Анатолий Емельянов, Порфирий Егоров, Анатолий Цветков, Калистрат Воробьев, Анатолий Хум, Григорий Илепер, Степан Юркин, Михаил Васильев, Георгий Чернышев республика шайĕнче палăрма пуçларĕç. Хаçатри «Литература страници» пирĕншĕн вĕренӳри практика вырăнĕ пулса тăчĕ. Унта тухнă хайлавсене тишкерӳллĕн сӳтсе яваттăмăр. Никама та пуçран шăлман. Тепĕр чухне редактора та витĕмлех лекетчĕ. Литература умĕнче пурин те таса чунлă, илемлĕх енчен пултаруллă, идейăлăх тĕлĕшĕпе çирĕп пулмаллине асăрхаттарсах тăнă, çав йĕркесене пăсакансене куçран пăхмасăр намăслантарса тĕрĕс çул çине тухма пулăшнă.

Тĕрлĕ жанрпа çырма хăнăхаттăмăр. Поэзи шавĕнче хăйĕн сассине тупнă Петĕр Ялгир прозăпа усăсăр аппаланса пăхрĕ.

Кĕркури Илепер, Николай Орлов, Калистрат Воробьев, Анатолий Хум шăрçаланă сăвăсем халăха килĕшетчĕç. Георгий Игнатьев юптарупа йăпанатчĕ. Анатолий Емельяновăн Пегас урхамахĕ кăштах чăхăмларĕ, унăн проза лавне туртмалла пулнă иккен. Мана «Капкăн страници» шанса панăччĕ те, кашни кăларăмне çав тери хавасланса хатĕрлеттĕм. Кулăшла калав, фельетон, кĕске кулăш ăсталама вĕрентĕм. Эпĕ ачаран тĕрĕсмарлăха, ултава, вăрра кураймасăр ӳснĕ те, пурнăçра тĕл пулакан пăтăрмахсем, çаратнă тĕслĕхсем, мораль тĕлĕшĕнчи тӳнтерлĕхсем, мĕнпур çитменлĕх ман чуна вăркаттарнă. Вĕсемпе мĕнпур вăйран кĕрешес, инкек тӳснĕ çынсене май килнĕ таран часрах пулăшас килетчĕ. Çавăнпа сатира сăннине çивĕчлетсех тăнă. Çак ăсталăх хăвачĕ мана кайран, «Капкăн» журналта ĕçленĕ çулсенче, нумай пулăшрĕ.

Кĕркури Илеперпе эпир юлашки укçапа кĕнеке нумай туянаттăмăр, литература теорине хамăр тĕллĕн вĕренеттĕмĕр. Ку хатĕрленӳ педагогика институтĕнче вĕреннĕ чухне манăн ĕçпуçа çăмăллатрĕ.

**Юрлама та, ташлама аван**

Пирĕн редактор эстрада артисчĕ пулма çуралнă пуль, теттĕмччĕ эпĕ юлташсемпе калаçнă чух. Вăрçа кайиччен хăйсен ялĕнче, Хĕрлĕ Чутай енчи Çĕн Ирчемесре, Канашри педагогика училищинче илемлĕхпе, сĕтеклĕ те хĕлхемлĕ çивĕч чĕлхипе çынсене савăнтарнă иккен вăл. Йĕркелӳçĕ пултарулăхĕ Чутай çамрăкĕсене ертсе пынă çулсенче ытларах туптанса ăсталаннă, паллах. Гриша Михайлов ашшĕ пекех купăс калама юрататчĕ. Свердловскри музыка училищинче вĕренекен Кăмаш ачи Володя Яковлев каникул вăхăтĕнче редакцирен тухма пĕлместчĕ. Петр Алексейч вĕсемпе пĕрмай театр, музыка ыйтăвĕсене сӳтсе яватчĕ. Тихоновăн юрă çырас йăла пурччĕ тата. Районти культура çуртĕнче ĕçлекен музăкçăсем те пирĕн пата кĕрсех çӳренĕ. Редакципе типографире çамрăксем йышлă. Тытрĕ те йĕркелерĕ вара Петĕр Ялгир журналистсемпе полиграфистсен хорне. Илепер — пире купăспа юрлаттараканни-ташлаттараканни. Пуçланчĕ ĕç хыççăнхи савăк вăхăт!

Репетицисем ирттерме те çăмăлах марччĕ. Мĕншĕн-ха? Çĕршыв майĕпен ура çине тăрса пынă май, полиграфи промышленноçĕ те аталанса çĕнелчĕ. Пурнăçĕ те пичет япалине лайăх-

рах, илемлӗрех ыйтма пуçларӗ. Çавна май райхаçатсем çине те урӑхларах пӑхатчӗç ӗнтӗ. Хими завочӗн баракӗ тивӗçтерми пулчӗ. Пичетлемелли, наборламалли çӗнӗ машинӑсене вара редактор лараракан аслӑ пӳлӗме вырнаçтарчӗç. Редакцие парти райкомӗ хӑйӗн çуртӗнче икӗ пӳлӗм пачӗ. Чукун çулран инçех мар, Коммунальнӑй текен тӑкӑрлӑкра, типографи никӗсне хывма тытӑнтӑмӑр. Стройкӑна типографи мастерӗ Никифор Зубровский йӗркелетчӗ. Редактор вара пире ӗç хыççӑн «ударлӑ стройкӑна» хӑвалатчӗ. Çапах юрлама-ташлама та тупаттӑмӑрччӗ вӑхӑтне.

Аллӑ тӑххӑрмӗш çул пирӗншӗн театр çулӗ пулчӗ пулас. Районта клуб пур яла çитменни хӑвармарӑмӑр. Репертуарта ытларах халӑх юратакан, юрлакан чӑваш юррисемччӗ. Вӑйӑ юррисем ташӑпа хутӑш аван тухатчӗç. Кулӑш-такмак ӑстисем вырӑнти çитменлӗхсемпе йӗркесӗрлӗхе çунтаратчӗç. Мана Ялгир пӗрмаях «Çӑрулми хуйхи» сӑвва калаттаратчӗ. Ташкента кайса хаклӑ хакпа çӗрулми сутакан, халӑха чике тӑршшӗ лартса пуякан ултавçӑсене тӑрӑ шыв çине кӑларакан фельетончӗ вӑл ман. Такӑш ялта та кула-кула итлетчӗç ӑна. Володя Москвин ташӑ маçтӑрӗччӗ. Мӗлӗш хӗрӗ, улӑхри чечек пек, пӗр кашӑк шывпа çӑтса ямалли илемпи-пике Зоя Клочкова сар кайӑк пек шӑрантаратчӗ. Хор солисткиччӗ вӑл. Пирӗн хусахсенчен пӗри ун умне чӗркуçленсе ларса: «Тархасшӑн ман арӑм пул?» — тесе те йӑлӑннӑ. Анчах, кӑлӑхах. Чиперккен ялта юратнӑ каччи пулнӑ çав. Анчахрах-ха Чӑваш патшалӑх юрӑпа ташӑ ансамблӗн ӗртӳçи Юрий Васильев, иксӗмӗр тӗл пулнӑ вӑхӑтра, ӑна ырӑпа асӑнчӗ. «Сасси пурччӗ çав хӗрӗн, вӗрентнӗ, пулӑшнӑ пулсан унран начар мар юрӑç тухасса шанаттӑм. Пурччӗ Зойӑн сас янравлӑхӗ. Çапла çухалаççӗ вӗсем — талантсем. Хӑйӗн те çине тӑмаллаччӗ ӗнтӗ ятарлӑ пӗлӳ илмешкӗн... Вӑрнар ятне çӗклемелли юрӑçчӗ», — тесе ӑшшӑн калаçрӗ. Кӗçӗн Кипек хӗрӗ Маруся Аполлонова, Элӗкри Света Широкова уйрӑммӑн юрласа паратчӗç. Ыттисем те, пурте ӑстаччӗ хӗрхӗрарӑмсенчен юрӑ-ташӑран. Кашниех хӑйне май пултаратчӗ.

Вӗсем вунтӑваттӑнччӗ, эпир, арçынсем, çиччӗн çеç. Аптрамастӑмӑрччӗ.

Пӗр-пӗрне хисеплес, пулӑшас, коллектив чысне çӳлте тытас кӑмӑл-туйӑм вӑйлӑ пулнӑ пирӗн. Темле, чуна парса ӗçлесе, хамӑр эртелшӗн, халӑхшӑн, обществӑшӑн мӗнле те пулин вырӑнлӑ усӑ тӑвас шухӑш малта тӑратчӗ. Вӑрӑм укçашӑн, пуяссишӗн, кама та пулин ура хурса мала тухассишӗн çунман. Çитмен шалу çумне гонорар хушӑнатчӗ. «Кун кӗнеки» çине эпӗ çапла çырса хунӑччӗ:

«Кашни кун республикăри хаçат-журнал е радио валли пĕр материалтан кая мар çырмалла». Пурнăçланатчĕ вăл манăн. Çĕрĕçĕрĕпе, канмалли кунсенче алăран ручка кайман. Акă тата 1961 çулхи çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче çырса хуни куç тĕлне пулчĕ: «Паянхи Сăпасра çирĕм тăваттă тултартăм. Мĕн тума пултарнăха эпĕ ку таранччен? Ял пурнăçĕпе пурăннă. Киномеханикра ĕçленĕ. Салтакра пулнă. Хамăрăн Ленин ячĕпе хисепленекен колхозри комсомол организацине ертсе пынă. КПСС членне йышăнчĕç. Редакцире парти пурнăç пайне тытса пыратăп. СССР журналисчĕсен Союзĕн членĕ. Кусем — сахалтарах-ха. Халăхшăн, партишĕн, çĕршывшăн тата ытларах кĕрешмелле. Çемье чăмăртасси пирки те тарăнрах, тĕплĕнрех шухăшламалла. Чарăнса тăмалла мар, малаллах каймалла».

Ушкăнпа кинона çӳреттĕмĕр, района театр килсен, пĕр спектакльне те курмасăр хăварман. Вĕсене эпир хамăр хушăра питĕ тавлашса сӳтсе яваттăмăр. Паллă журналистсен пурнăçĕ, уйрăмах Михаил Кольцов ĕçĕ-хĕлĕ шухăш-ĕмĕте тарăнлатма пулăшатчĕ мана. «Коммунизм ялавĕнче» ĕçлекен Василий Максимов, Александр Аслут, Николай Герасимов, Иван Михайлов, «Капкăнра» пичетленекен Уравăшри Степан Юркин фельетонист пултарулăхне сăнасах тăраттăм. Вĕсенчен вĕренмелли, шухăшлава аталантармалли нумайччĕ.

Халĕ пурăнма çав тери йывăр та хăрушă тесе шавлама-пакăлтатма хăнăхрĕç. Танлаштаратăп та аллăмĕш-утмăлмĕш çулсемпе паянхине, тĕлĕнетĕп çав ирĕклĕх çыннисенчен. Ун чухне хальхинчен пур енĕпе те нумай йывăртарах пулнă. Пурнăç шайĕ, ырлăх «райĕ» хулара та, ялта та çынна ытлашши асма-иртĕхме паман, типтерлĕхе, перекетлĕхе çирĕп пăхăнма вĕрентсе хăнăхтарнă. Кашни мăн яла асфальт витнĕ çул Вăрнарпа çыхăнтарассине, Шупашкартан тӳрех çуралнă яла автобуспа кĕрлеттерсе çитессине ĕмĕтленмен те. Ленинăн ГОЭЛРО планĕн электричество таппи те çитменччĕ-ха пирĕн таврана. Çавăнпа лаша вăйĕ çине те ура уттине ытларах шаннă. Юрать-ха типографи валли пĕр кивĕ грузовик тупса пачĕç. Ямшăкĕ Михаил Ивановчĕ. Сăвă çырма юрататчĕ вăл. «Литература страницинче» курăнкалатчĕç вĕсем. Халĕ вăл автобуспа çӳрет. Кĕрхи, хĕллехи сивĕ вăхăтра Миша пире ял-ял тăрăх вашкăртатса çӳретчĕ. Хытăркаса шăл шаккани те пулнă. Пикесен хĕрӳлĕхне те шăнтатчĕ сивĕ хĕл алли. Кăштах апат çиме, ăшăнма укçе-тенкĕ те кирлĕччĕ. Çавна шута илчĕ пулас пирĕн ансамбль пуçлăхĕ Ялгир. Типографире билет-



НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики
ч-42027

сем çаптарчĕ. Пĕр тенкĕпе кĕртеттĕмĕр концертсене. Кӳршĕри районсене тухса çӳренĕ чухне хакне виçĕ тенке çитертĕмĕр. Пухнă укçапа баян, гитара, балалайка, мандолина туяннăччĕ. Хаçат республикăра лайăххисен шутĕнчеччĕ. Хаçатçăсен пĕлӳ шайĕ çеç çителĕксĕртерехчĕ. Аслă пĕлӳллĕ журналист та Тихонов кăначчĕ. Алексей Иванов ялхуçалăх институтĕнче, Николай Орлов СССР журналисчĕсен Союзĕ çумĕнчи курсра хăй тĕллĕн вĕренетчĕç. Акă райком урлă Кĕçĕн Кипекри вăтам шкул учительне Василий Михайлович Еремеева редакцие куçарчĕç. Фронтра пулнăскер, вырăс, нимĕç чĕлхисене ăста пĕлекенскер, чăваш чĕлхипе те хăйне суттарманскер, литературăна каçса кайса юратаканскер, шутсăр нумай пĕлекенскер, редакци сывлăшне тӳрех уçăлтарса ячĕ. Журналистикăра пиçсе курман педагогшăн çĕнĕ ĕç малтанлăха чĕр нуша вырăннех пулнине эпĕ сисрĕм, мĕншĕн тесен пĕчĕк материалпах нумай чакаланса ларатчĕ. Майĕпен вăл хăнăхрĕ, хăй мĕн çырнинче ăслăлăхĕ, пĕлĕвĕ аванах курăнатчĕ. «Капкăн страниципе» те ĕçлесе пăхрĕ. Хăй унта лектернĕ Вăрнар аçтахисенчен шикленетчĕ. Каçпа пĕррехинче ăна урам кĕтессинче вĕсем персе хĕстернĕ иккен. Çавăн хыççăн сунтăхĕнче тимĕр авăрлă мăлатук тытатчĕ. Хваттере куçиччен редакцирех çывăрса пурăнчĕ. Ялтан питĕ вăйлă библиотека турттарса килчĕ, ăна майлаштарма пулăшрăмăр. Ыр кăмăллă, йыша хавас çынччĕ. Тулькăш пĕр çитменлĕх пурччĕ. Урă чух та, ĕçсен те юрлама юратмастчĕ. Тем юптарма та маçтăр, юрă шăратма турри паман. Çавăн пиркиех харкашусем пулса иртетчĕç редакторпа иккĕшин хушшинче. «Мана эсир хăть çапса пăрахăр, манран юрăç тухмасть, ячĕшĕн сирĕнпе юнашар тăрăп, юрласси вара пурпĕрех пулмасть», — тесе лăх-лăх кулса яратчĕ те, аллине ласт сулатчĕ.

Утмăлмĕш çула кĕтĕмĕр çапла айланкаласа. Республика пысăк уява хатĕрленет. Хĕрĕх çулхи менелнике эпир те хатĕрленме пуçларăмăр. Репертуара çĕнетрĕмĕр. Репетицисем иртерме районти культура çурчĕн баянистне чĕнчĕç. Районти смотр-конкурсра эпир те республикăри ĕçпе юрă уявне хутшăнма тивĕç пултăмăр. Савăнăçа ниçта хураймастпăр.

Çĕртме уйăхĕн 22-мĕшĕнче Шупашкара пуйăспа хăлтăртатса çитрĕмĕр. Пире пĕрремĕш номерлĕ шкула вырнаçтарчĕç. Пулăшма Чемоданов дирижера янă. Репетицисем пуçланчĕç. Юрлас вырăнне кулас килет. Дирижер аллисемпе хăлаçланса пит-куçне камитçĕ пек пăркалантарса хурать те... Хор юрласа ярать:

Вăй-хал хурсан, пурнăç пулать.
Эй, атьсемĕр, тантăшсемĕр...

Çав хушăрах Чемоданов шалпар шăлаварне йăшт çўлелле туртса хăпартать, пит-куçне пăрăç çинĕ пек каллех йўçĕхтерсе илет. Эпир, Гришăсемпе Георгий Игнатьевсем, ахăлтатса кулса яратпăр. Мусăкçă-ертўçĕ юрра çĕнĕрен пуçлать:

Вăй-хал хурсан, пурнăç пулать...

Петр Алексеевич Еремеева «çăварна ма уçмастăн» тесе пўрнипе юнать. Лешĕ йĕпĕл кулса тăрать. Çур кун юрласан тин хăнăхса çитрĕмĕр çак камитçĕ сăнлă дирижер хусканăвĕсене. Йĕркеллех тухаççĕ-мĕн юррисем, халăх умĕнче намăс курас пек мар. Çакна пĕлтĕмĕр Чемодановăн пĕтĕмлетĕвĕнчен.

Каçпа уçăлма эртелпе тухрăмăр, Хĕрлĕ площадьре çўренĕ хыççăн Атăл хĕрне кайрăмăр. Юханшыв хĕрринче тăвалла-аналла юрла-юрлах утрăмăр:

Тантăшсене пухрăмăр, пухрăмăр,
Атăл хĕрне тухрăмăр, тухрăмăр...

Ыран уяв халăхне кăтартмалли çак сценăна пурте тепĕр хут аса илсе пытăмăр. Кăвак çутла тин таврăнтăмăр хамăрăн «хăна çуртне».

Уява хутшăнакан «артистсен» ушкăнĕсене ирпе Советсен çурчĕ умне йĕркипе тăратса тухрĕç. Мыскарасăр та пулмарĕ. Пирĕн умран тĕрленĕ пир кĕпе тăхăннă, чечеклĕ тутăр çыхнă, саппун çакнă, çăпата сырнă, çурăмĕ хыçне пир хутаç çакнă темле хĕрарăм юрласа иртсе пырать. Çав вăхăтра шăпах мăн пуçлăхсем саламлама тухнăччĕ. Йĕрке хуçисем хĕрарăм патнелле урнă йытăлла чупрĕç, анчах вĕсене аслăраххи чарса лартрĕ. Чăвашла тумланса, çăпатапа Чăвашăн чаплă çурчĕ умĕнчен хăюлланса иртни мăшкăлланă пекех пулнă-çке. Совет çыннин пурнăç сăнлăхне ку тўнтерле кăтартать вĕт. Ют патшалăха лекес пулсан уяв кунĕнчи çак ўкерчĕк?.. Çапла, вăхăчĕ урăхлаччĕ. Халĕ пулсан-и? Алă çупса саламлаççĕ.

Пуçлăхсен саламне пуç кунтăкне чăмтарнă хыççăн аслă урампа Лакрей вăрманне çити çуран утрăмăр. Чĕрере хаваслăх туйăмĕ. Çынсемпе пĕрле юрлас килет. Кану паркне кĕрсенех, сылтăм енче, пысăк сцена пур. Эпир çавăнта юрă хыççăн юрă шăрантартăмăр, уяв сюитине лартса патăмăр.

Тăван республика менелникĕ питĕ савăк иртрĕ. Шупашкартан Хисеп грамоти илсе таврăнтăмăр.

Хамăрăн илемлĕх шайне чакарас мар тесе ансамбльти кашни çын тăрăшрĕ. Хамăра-хамăр хавхалантарса, чун хавалĕпе хаçат кăларатпăр.

## Хастарлă, хыт утăмлă

Салтакра хăнăхнă çирĕп йăлапа «гражданкăра» та пурăнма çăмăл иккен. Хăвăн тӳсĕмлĕхӳ, вăй-хал виçи çеç кирлĕ. Хистев шайне чакармалла мар. Ирпе пĕр кун сиктермесĕр гимнастика тăвасси, кăкăр таран сивĕ шывпа çăвăнасси е юрпа кĕлеткене сăтăрасси йăларан тухмалла мар. Салтак уттине сыхласа хăвармалла тата. Урама тухсанах Сибагатуллин капитан сасси хăлхара янăрать: «Халăх хушшинче утнă чухне эсир хăвăр салтак пулнине нихçан та ан манăр, кĕлеткене тӳрĕ тытăр, чăнк-чăнк утăр». Пушкăрт тутарĕн ăс вĕрентĕвĕ ку таранччен асра.

Редакцире ĕçленĕ малтанхи кунсенче кун йĕрки туса хутăм. Унта талăк вăхăтне сехетпе-минутпа палăртнăччĕ. Ăна çирĕп пурнăçласа пыма тăрăшрăм. Ялтан Вăрнара, ĕç хыççăн каллех яла утса-чупса çӳренĕ. Кун каççичен вăтăр-хĕрĕх çухрăм пулаччех. Ывăнма пĕлмен.

Ялти çамрăксен ĕçне хутшăнма та май тупаттăмччĕ. Çĕрпелти Ленин ячĕпе хисепленекен колхозри комсомол организацине Василий Романов агроном ертсе пыратчĕ. 1959 çул пуçламăшĕнче ăна председателе суйларĕç. Ака уйăхĕнче çамрăксен ертӳçи пулса тăтăм. Çĕрпел, Хурăнсур, Кайри Тукай хĕрĕсемпе каччисене халăхшăн уссăллă ĕç кĕрешĕвне чăмăртаса пĕтĕçтерсе, вĕсен идейăллă шайне ӳстермелли майсемпе пĕлсе усă курса, физкультурăпа спорт вăййисем, ăмăртăвĕсем йĕркелесе çĕнтерӳллĕ çулпа хавхалантарса пымала пулчĕ. 1961 çулта Вăрнар район организацийĕн çирĕм иккĕмĕш конференцийĕнче мана райком членне суйларĕç те районти «Комсомол прожекторне» алла тыттарчĕç. Ĕç нумайланнă, кăткăсланнă май вара колхозри комсомол организацине Çĕрпелти тепĕр хастар каччăна Мефодий Ягушова ăнăçу сунса парса хăвартăм.

«Комсомол прожекторĕпе» «Çăмăл кавалери» вăл çулсенче пурнăç тӳнтерлĕхĕпе кĕрешмелли çивĕч хĕç-пăшалччĕ. Ялта та эпĕ виçĕ экземплярпа «Çăмăл кавалери» кăларса тăраттăм. Паянхи кунчченех манман хăшĕсем унăн кулăшĕпе витĕмлĕхне. Рай-

онти «КП» штабне çичĕ çамрăка кĕртрĕç. Выльăх-чĕрлĕх пăхакан çамрăксен ĕçне ертсе пыраканĕ, тинтерех Красноармейскинчен куçса килнĕ Анатолий Степанов журналист, уй-хир ĕçĕ енĕпе «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕн агрономĕ Владимир Чумаков, экономика тишкерĕвĕпе ялхуçалăх управленийĕн план пайĕн пуçлăхĕ Валентин Мурашкин, йăла тата кану ыйтăвĕсемпе Вăрнарти вăтам шкулти Юлия Смирнова аслă пионервожатăй, шкулти прожектористсемпе тата çул çитмен ачасемпе, спорт енĕпе ĕçлессипе милици пайĕ çумĕнчи ачапча пӳлĕмĕн инспекторĕ Иван Степанов, пресс-ушкăншăн районти радиоорганизатор Михаил Васильев хуравлăччĕ. «Комсомол прожекторне» эрнере пĕрре кăлараттăмăр. Карикатурăсемпе вăйлатнăскерне милици пайĕ çумне çакаттăмăр. Ун умĕнчен кунĕпе çын татăлмасчĕ. Вăйĕ пурччĕ çав унăн. Пулăшаканĕсем те йышлăччĕ. Мĕн тери курайман ĕçчен халăх çитменлĕхе, ултава, тăрпалттайлăха, тӳрккеслĕхпе сăпайсăрлăха. Нурăсри ветеринари пункчĕн хуçине «Прожектор» çуттинче вĕтелентерсен, ай епле шăв-шав çĕкленчĕ! КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕн В.Д.Даниловăн çывăх юлташне çаклатнă иккен эпир. Кулăшла ӳкерчĕкре сивлесе сăнарланă тĕслĕхсене — кукăр алăпа взятка илнисене — тепĕр хут çирĕплетсе парассишĕн эпир, халăх çырăвне пирĕн пата илсе çитернĕ Анатолий Филиппович Штыков автоинспекторпа, уйăх ытла Нурăс тăрăхĕнчи çынсемпе тĕл пулса калаçрăмăр, вĕсене чăнлăхшăн алă пустарса ĕнентерме хатĕрлентĕмĕр. Ыйтăвне парти райкомнех пăхса тухма лартнăччĕ-çке. Бюро ларăвĕнче пире хăшĕсем хĕстерме хăтланчĕç. Кульцаври С.К.Коротков витĕмлĕ сăмах каланă хыççăн, вĕсем пуçсене пĕкрĕç. «Комсомол прожекторне» пурпĕрех сӳнтерейменрĕç.

ВЛКСМ райкомĕ «КП» ушкăнĕсенчен йĕркипе отчет итлетчĕ. Хамăр та штабра кĕрĕк арки йăваласа ларман. Сӳнмен вулкан пек пĕрĕхтерсе тăратчĕ хĕрĕвне пирĕн штаб.

Комсомол райкомĕн «çыннисем» эпир редакцирен иккĕнччĕ. Владимир Москвин манран та аслăраххиччĕ — бюро членĕччĕ. Унти ĕçе тунăшĕн редактор пире хĕстермен. Çамрăксен пурнăçĕ çинчен çырма нумай пулăшатчĕ обществăлла ĕç. Çавăнпа хаçатра комсомол, çамрăклăх теми — тĕпписенчен пĕриччĕ. Уншăн эпĕ хамах хуравлăччĕ.

Чи малтанах тахçантанпа хăнăхнă пĕрешкел йăларан, штампран эппин, хăтăлса çĕнĕ çулпа кайрăмăр. Пĕр-пĕр кăсăклăрах ĕçрен е пурне те хумхантарма-шухăшлаттарма пултаракан пу-

лӑмран, фактран пуҫлас килетчӗ хамӑн хайлавӑмсене. Комсомол конференцийӗн, пленумӗн, бюровӗн, пӗр-пӗр организаци пухӑвӗн ҫывӑрттарса яракан вӑрӑм отчечӗсем вырӑнне пичетленнӗ вулакана малтанхи предложениренех тыткӑнлакан чӗрӗ те сӑнарлӑ материалсем халӗ те илемлӗн вуланаҫҫӗ, хӑйсен пӗлтерӗшне ҫухатман. Районти паллӑ пуху е канашлу хыҫҫӑн ҫӗрле ҫырнӑ статья е корреспонденци ирпе редактор сӗтелӗ ҫинче выртатчӗ. Хӑвӑртлӑхпа витӗмлӗхе туптасах пынӑ.

Комсомола нумай ирӗк панӑ та, шаннӑ та, вӑйӗ те сисӗнетчӗ ҫав. Райкомне те чи пултаруллисене, чи ҫивӗччисене ҫеҫ чӗнетчӗҫ. Парти райкомӗ ҫамрӑксен ертӳҫисемпе тӑрӑшсах ӗҫленӗ, вӗсене суйласа илнӗ чухне Вӑрнарта йӑнӑшман. Акӑ, Анатолий Емельяновах илер. Унпа эпӗ ӗҫлесе курман. Партин Хусанти аслӑ шкулне вӗренме янӑ май ӑна пӗрремӗш секретарь ӗҫӗсенчен хӑтарнине тата ун вырӑнне Рункӑ ачине Альберт Купчикова суйланине астӑватӑп. Пухӑвӗнче хам пулнӑччӗ делегат правипе. ВЛКСМ райкомӗн иккӗмӗш секретарьне Анатолий Малова хаҫат — «Ҫиҫӗм» кӑларса панӑччӗ. Каярахпа комсомол райкомне ертсе пыракан Купчиков та, Малов та, Павлова та «Емельянов чухне ҫаплаччӗ», «Анатолий Викторч пулсан халӗ ҫапларах тумалла» тесе калаҫнине тӑтӑшах илтеттӗм.

Тӗлӗнмелле пӗрпеклӗх аса килчӗ. Комсомол райкомӗн тилхепине Анатолий Емельянов ун чухне Альберт Купчикова парса хӑварчӗ, чылай ҫул иртсен парти райкомне, Анатолий Викторович хыҫҫӑн, Альберт Тимофеевич ертсе пыма пуҫларӗ. Иккӗшне те вӗсене комсомол ҫывӑхлатнӑ пуль ҫав. Астӑватӑп, 1961 ҫулта Владимир Андреевич Захаров шахматла выляма тесе хӑйсен килне чӗнчӗ. Паллӑ педагог хаҫатпа ҫывӑхчӗ, ҫырма та пулӑшатчӗ, хӑй те ҫыратчӗ. Мана вӑл сӑнӳкерчӗк тыттарчӗ. Хӑна сӗтелӗ хушшинче Захаровпа мӑшӑрӗ, хӗр ачи тата Купчиковпа Емельянов савӑнӑҫлӑн ларҫҫӗ. Вӑрнарӑн аслӑ комсомолецӗсем те кӑмӑллӑ учитель патне шахматла выляма пынӑ-мӗн. Вӑйӑ хушшинче пирӗн туслӑхпа юлташлӑх ҫинчен калаҫу хӗрсех кайрӗ, юлашкинчен Владимир Андреевич ҫав сӑнӳкерчӗке мана парнелерӗ, хыҫала ҫапла ҫырса хучӗ: «Ҫывӑх ҫамрӑк тусӑма Владимир Кузьмина. Туссем инкекре уҫҫӑн палӑраҫҫӗ». Вӗсен туслӑхӗ мӗнле пулчӗ-ши, ӑна хӑйсем лайӑх пӗлеҫҫӗ. Эпӗ вара Владимир Андреевичпа ҫавӑнтанпа ҫывӑх хутшӑнусене ҫухатман, май пур чухне ӑна пулӑшма та манман.

Ӗҫ нумай, колхозсенчен час таврӑнайман, ҫанталӑк шутсӑр начар чухне яла каймастӑм, редакцирех ҫывӑрнӑ. Сӗтел е пукан-

сем çине тăсăлса выртнă та, пуç айне хаçат подшивки хунă, плащпа е пальтопа витĕнсе шăпчăкла çывăрса илнĕ. Çичĕ çула пычĕ çакнашкал спартанла пурнăç. Альберт Купчиков мана хăй пӳлĕмĕнче диван шанса панăччĕ. Унта çывăрма çемçерехчĕ. Хăй те тепĕр чухне унтах çывăратчĕ. Хусахчĕ те, пĕрле ташăсене, хĕлле водокачка пĕвинчи пăра тасатса тунă каток çине коньки-пе ярăнма çӳреттĕмĕр, йĕлтĕрпе чупаттăмăр. Пĕр хĕре куçлани те пулнă. Утмăл иккĕмĕш çулхи нарăсăн 20-мĕшĕнче Альберт хусахсен ретĕнчен тухса ӳкрĕ. Çĕрпелĕнче манпа пĕр класра вĕреннĕ, ачалăхри манăн Пĕрремĕш Юратăва, Тамара Осиповна, качча илчĕ. Николай Орловпа вĕсене сăн ӳкерме ЗАГСа кайрăмăр. Тем тĕрлĕ ыйтупа та тавлашаттăмăр, пĕрмаях кĕрешеттĕмĕр Альбертпа коврик çинче. Хăйне çĕнтерсен, вăл кăмăлсăр юлнине сисеттĕм.

Комсомол райкомĕн шур лаша тата мотоцикл пурччĕ. Вĕсемпе редакци транспорчĕ пекех усă курнă. Ăçта каймалла — нихçан та чару пулман.

Пĕр ирпе Купчиковпа хăш столовăйне ирхи апат çиме каймалла-ши тесе чӳречерен пăхса тăратпăр. Райком умĕнчен вокзал еннелле салтак тумĕ тăхăннă пĕр вăтам пӳллĕ çамрăк вашлаттарса анать.

«Пĕлетĕн-и, Володя, — терĕ Альберт, — çак ачаран райком çынни пулать, мана ун хастарлăхĕ пирки каласа пачĕç». Кушикри Леонид Тянгов пулнă иккен вăл. Райкомăн çитес бюро ларăвĕнче ăна чăнах та инструктора çирĕплетрĕç. Майĕпен пай пуçлăхне, иккĕмĕш секретаре çитрĕ... Купчикова парти ĕçне куçарсан, пĕрремĕшĕ пулса тăчĕ. Уçă кăмăллă, çынна шанакан, ĕненекен ентешĕмпе часах туслашрăмăр. Манăн Кульцава каймаллаччĕ. Хамăрăн машина çук, хăй «Уралпа» Нурăс енчи колхозсене çитсе çаврăнма палăртнă. Вăрнарсем яланах малта пынă та, вĕсене ВЛКСМ тĕп комитечĕ, комсомол обкомĕ хавхалантару шучĕпе мотоциклсем парсах тăнă. «Пирĕн тепре те пур, «М-I», чупма пултаратăн-и?» — терĕ вăл. «Чупса курман та, вĕренме пулать пуль», — терĕм шанчăклăн. Райком кил хушшинче малтан хăй чупса çаврăнчĕ, ун хыççăн мана вĕрентрĕ. Эпĕ пуçласа мотоцикл рульне тытрăм, тапрантăм та, хуллен çаврăнма пуçларăм. Ăнсăртран газ ытларах хушĕнчĕ-ши, ĕрĕхрĕ те кайрĕ манăн «урхамах». Пăлханнипе, чарма пĕлмесĕр, гараж кĕтессинчи кантăр çурăмĕсем тăрăх хăпарса кайрăм. Район выставки хыççăн райком çуртĕнчен кăларса тăратнăскерсемччĕ кусем. «Чупма пĕлетĕн, парса яратăп. Воробьева кĕл ту», — тесе ахăлтатсах кулчĕ Тянгов.

Евсей Дмитриевич ертсе пыракан «Гвардеец» колхоз кантăр вăйлă туса илетчĕ те, хамăр та вĕсен паха опытне мухтаса пĕр страница кăларнăччĕ. Чăн та, вăрăм кантăр çурăмĕсем пулман пулсан шлакпа бетон кĕтессинче... Кульцавра Коротковпа та калаçрăм, юратнă хĕрпе те, çамрăк агрономпа, тĕл пулса çунатлантăм.

Пĕрремĕш секретарьсем, çӳлелле хăпарса пынă май, улшăнсах тăчĕç. Анатолий Малов, Александр Дмитриев, Владимир Кириллов пире нумай пулăшу панă. «Çамрăксен страници» пичетленес умĕн е райкомра, е редакцире материалсене пăхса тухаттăмăр, мĕнле ыйтусене маларах тата туллинрех çутатмаллине палăртаттăмăр. Пурин те пĕрешкел хавалччĕ. «Мĕн вăл телей?», «Коммунизм тăвакансен мораль кодексне мĕнле пурнăçлатăн?», «Юратупа туслăх» тата ытти темăсемпе те хĕрӳ калаçу чĕртсе янăччĕ хаçатра. Пĕтĕмлетĕвне çамрăксен пухăвĕсенче, комсомол пленумĕсенче сӳтсе явма тата хĕрӳрех калаçу тăваттăмăр. Райком секретарĕсем Валентина Павлова, Цета Яковлева-Васильева, Геннадий Михайлов хĕрсемпе каччăсен, шкул ачисен пултарулăхне хаçат урлă пĕтĕм халăха кĕтартса пама тăрăшатчĕç. Çав ĕçе чун-чĕрепе тăрăннине пула тепĕр чухне мана райкомра ĕçленĕнех туйăнакан пулатчĕ.

Утмăл виççĕмĕш çулхи чӳк уйăхĕнче ВЛКСМ Чăваш область организацийĕн çирĕм улттăмĕш конференцине хутшăнтăмăр. Вăрнар райкомĕ райхаçат редакцийĕпе пĕрле çамрăксене воспитани памалли ыйтусене пурнăç ыйтнă шайра туса пыни çинчен докладра ырăпа асăнчĕç.

Хамăр патра кăна мар, «Çамрăк коммунист» хаçатра та сахал мар очерк, тĕрленчĕк, статья кăлартăм районти яш-кĕрĕм çинчен. Райком ĕçченĕсен хастарлăхне, кĕрешӳри пурнăçне сăнарланă «Çиле хирĕç» калав Вăрнар хаçатĕнче (1963 ç., 150-152 №№), «Хулăн тетрадь» повесть «Ялав» журналта (1986 ç., 5 №) пичетлерĕм. «Хулăн тетрадь» 2002 çулта Шупашкарта «Вăрланă юрату» кĕнекере «Улина çăлтăрĕ» ятпа тухрĕ.

## Тӳсĕм

Çамрăклăх шаймăклăх вăхăчĕ çав. Ăшри туйăм вылянса кăна тăрать. Мĕн те пулин тĕлĕнтермелли, каçса кайса кулмалли ĕç тăвас килет. Тен, пурин те унашкал мар пуль кăмăлĕ. Анчах та Георгий Игнатьевпа Владимир Москвин пурнăçри мĕштĕрккесенчен, тӳрккесрехсенчен, хăйне пит çирĕп тытма

хăтланакансенчен кулса илме те хатĕрехчĕ. Эпĕ хам та вĕсенчен юлсах каймастăм. Николай Орлов хăй те кулатчĕ, анчах хăйĕнчен мăшкăлласа илекенсем те пурччĕ.

Орловпа Иванов шахматла выляма юрататчĕç. Николай Артемьевичĕ фигурăсене вăрттăн каялла илме хăнăхнăччĕ те, тĕрĕслĕхе пăхăнакан Алексей Ивановичĕ, ăна малтанхи пекех куçма ыйтатчĕ.

Лешĕ килĕшмесĕр турткалашать. Тавлашсах каятчĕç вара иккĕшĕ. Игнатьевĕ юнашарах ĕшĕртсе тăрать. Кĕç Георгий Степанович, пĕррехинче чӳрече еннелле çаврăнчĕ те кăшкăрса ячĕ: «Курăр-ха, курăр? Прокурор ӳсĕр пырать!» Кĕтмен хыпарпа тĕлĕннĕ шахматистсем чӳрече патнелле ыткăнчĕç. Çав хушăра Игнатьев Орловăн шур «лашипе» «офицерне» Алексей Ивановичăн пиншак кĕсйине чикрĕ те хучĕ. Вĕсемултавшăн Игнатьева хăтăрса илчĕç те, вăййа пикенчĕç. Часах Иванов Орлова мат пачĕ. Фигурăсене тепре лартрĕç, анчах шуррисен «лашипе» «офицерĕ» çитмест. Орлов Алексей Иванович çине сиксе ӳкрĕ. Тавлашнă хушăрах хăйсем апата кайма хатĕрленеççĕ. Иванов пиншакне тăхăнчĕ те аллине кĕсйине чикрĕ, унтан фигурăсене туртса кăларчĕ. Унччен килĕсене хырăма саплама пĕрлех каяканччĕ, хальхинче вара умлă-хыçлă тухса утрĕç.

Шăрчĕ вĕсен хыççăнах иртсе каятчĕ. Çапах та... акă, ака уйăхĕн 1-мĕшĕ çитрĕ. Кама суйса тыттармалла-ши тесе пуç çĕмĕрсе ларатпăр Орловпа. Темскер шутласа кăларчĕ пулмалла, акă вăл пуçне лăст-лăст тутарса илчĕ те, телефон трубкинчен: «Почта? Центральная, да? — тесе ыйтрĕ. — Хорошо. 1-82». Тӳрех тавçăрса илтĕм: ку — Алексей Ивановичăн телефон номерĕ. Телефонистка çыхăнтарчĕ пулас, Орлов малалла калаçрĕ: «Алексей Иванч? Здравствуйте. Это Туганов. Зайдите-ка побыстрее ко мне насчет кольцовского материала. Коротков что-то недоволен». Чăтаймарăм, кулса ятăм. Сергей Ксенофонтовичран пурте аçа çапасран хăранă пек хăраканскер, Алексей Ивановичăн чĕри тапма чарăнмарĕ-ши тесе коридоралла васкарăм. Кĕç Иванов алăкран хыпăнса тухрĕ. «Исполкома, хуçи патне каятăп, ыйтастăвас текен пулсан, Володя, пĕлтер эп ăçтине», — тесе чуптарчĕ.

Ĕçтăвкомра лару пынă иккен, час вĕçленмен. Алексей Иванович чăтăмсăррăн кĕтсе ларнă. Çынсем салансан, ĕçтăвком председателĕ Туганов тухать те, ыйтать: «Эсир ман пата-и, Алексей Иванович?». «Çапла, хăвăр чăннипе. Сергей Ксенофонтович ăçта тата? Кульцав председателĕ кунта, терĕр-çке?» «Çу-ук, эп сире

чӗнмен. Короткова та паян курман. Эх, ку суя кунӗ...» — тесе ахӑлтатсах кулса ярать.

Сасӑран ҫынна тӳрех чухласа илменни Алексей Ивановича пӗтеретчӗ. Ҫав уйӑх вӗҫнеллех-ха, эпӗ те, сасӑ улӑштарса, «Суворов ячӗпе хисепленекен колхоз ӗнер Масар тӑвайккине 10 гектар ясмӑк акса хӑварчӗ» текен информаци патӑм Иванова. Вӑл ӑна машинкӑпа ҫаптарса Орлов патне илсе пычӗ. Николай Артемьевич та, «Ку — сенсаци!» тесе, ӑна тӳрех номере лартрӗ. Редактор та вуласа алӑ пуснӑ. Хӑвӑртрах наборлама Настя инкене типографине чуптарчӗҫ. Республикипех ун чухне ясмӑк акма пӑрахнӑччӗ. Вӑрнарта та хӑҫан акнине астумаҫҫӗ. Туҫи-ҫармӑссем те ӑна акман. Масар тӑвайккийӗ те Хурӑнсур Ҫармӑс ҫӗрӗ ҫине кӗрет. Тавҫӑрса илекен пулмарӗ. Ҫаплах пичетленсе тухатчӗ пуль? Ун ҫинчен Гриша Михайлов ҫеҫ пӗлетчӗ, ун патӗнчен шӑнкӑравланӑ-ҫке. Инкеке чарса лартрӑмӑр. Орлова калатӑп: «Николай Артемьевич, ҫуракине вӗт пирӗн хӑйӑрлӑ ҫӗрлӗ мӗлӗшсемпе пӑртассем кӑна тухнӑччӗ, акма никам та тытӑнман-ҫке, туҫиҫармӑссем вара темле...» Куҫне мӑчлаттарса илчӗ те Орлов телефон трубкине ярса тытрӗ: «Суворова парӑр?!» Председателӗпе, Лазаревпа, калаҫрӗ пулас, трубкӑна хурсан, «Маттур, кала ҫав Ясмӑк Иванча, чуптӑр типографине. Нимле ясмӑк та акман. Сурӑхла пуҫа чиксе ҫӗрет». Редактор таҫта кайнӑччӗ те, номере каҫпа пӑхман, ирпе, хаҫатра ясмӑк акни ҫинчен янӑ информаци мӗншӗн ҫуккишӗн, Орловран пуҫласа корректорсем таран ҫунтарма пуҫларӗ. Алексей Иванович ӑнлантарса парсан тин Ялгир ӗнсине хыҫрӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн аташма пӑрахрӑмӑр. Унсӑрах кулмалли-макӑрмалли кашни номерте тенӗ пекех пулса пыратчӗ те... Степан Юркин Алексей Иванович хатӗрленӗ заметкинче «Уравӑшра мартӑн 9-мӗшӗнче кишӗр акса хӑварнӑ» тесе кайнӑччӗ. Ирех райкомран шӑнкӑравларӗҫ. Тулта юр ирӗлме те шутламасть-ха та.

Тӳсетчӗ Иванов. Институтӗнче те вӗренетчӗ, сӗтел хушшинче пуҫ ҫӗклемесӗр ларатчӗ. Район ял хуҫалӑхӗ аталаннине хаҫат тӑрӑхах пӗлме пулатчӗ. Ӑҫта пур лайӑххи — хаҫатра та пур уйрӑм страница. Хуҫалӑха ертсе пыракансемпе, специалистсемпе пӗрле наука ҫитӗнӗвӗсене ялсене саратчӗ. Анлӑ тишкерӳсем тӑватчӗ. Вӑрнарсен паха опытне кӗнекесенче ҫырса кӑтартатчӗ. Элӗк енчен куҫса килсе, вӑл Вӑрнар ҫынниех пулса кайнӑччӗ ӗнтӗ. Чӑтӑмлӑхӗ пысӑкчӗ. Чӑваш Республикин, Раҫҫейӗн тава тивӗҫлӗ зоотехникне ҫитрӗ кайран.

Хăйсен айăпне, йăнăшне йышăнман чул çамкасемшĕн вăйхала пĕтермелле, чĕрене ыраттарса канăçа çухатмалла пулса тухатчĕ хушăран. Çӳлтен выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерме хушатчĕç. Анчах çамрăк выльăха аякалла нумай ярăнтаратчĕç. Çавна чарса лартас тесех пуль КПСС обкомĕ «Сысна çурисене сутса пĕтернĕшĕн хурав тыттарасси çинчен» йышăну кăларчĕ. Ăна райкомсен пурнăçламаллах. Райком хаçата хушать. Эпир те «Знамя» колхозра тупрăмăр унашкал тĕслĕх. Ферма пуçлăхĕ Михайлова çинчен фельетон кăлартăмăр. Пуçланчĕ вара асар-писер. Райком, райĕçтăвком алăкĕсене хаяррăн уçса-хупма пуçларĕ Михайлова. Документсем те суйса улăштарман иккен вăл, сысна çурисем те аяккалла нумай сутман. Çӳрет те çӳрет тухман куççульне ирĕксĕррĕн пăчăртаса юхтарса.

Эпир те парăнмастпăр. Çапла, 1961 çулхи çурла уйăхĕн 25-мĕшĕнче, Чăрăшкас Мăрата велосипедпа ярлаттартăм, хама кирлĕ хутсене правленире тепрер тутартăм. Çав кунах колхозри партком ларăвне ирттертĕмĕр. Пĕрне-пĕри хӳтĕлеççĕ çав ял çыннисем. Михайловăна парти енĕпе айăпламарĕç, ĕçрен хăтарнипех лăпланса ларчĕç. Фельетон тĕрĕсех, тесе йышăнчĕç.

Сахал пулнă-и унашкал тĕслĕхсем? Сиссе те юлаймастăн тепĕр чухне çамкана выговор çапнине. Тĕрĕслĕхшĕн кĕрешсе хăвах айăплă пулса юлатăн. Хаçат çыннине турри тӳсме хушнă, тет-и?

Корректорта ĕçленĕ хушăрах Владимир Москвин самай курăмлă тĕрленчĕксем шăрçалама пуçларĕ. Ача çине алă хунă Анфиса Васильева учительницăна лайăхмарлантарса çырнă статья пичетленсен, унăн та чăнлăха тӳрре кăларассишĕн самай тертленмелле пулчĕ.

Çынна пăхса, çырас та килет пуль çав. Тепĕр корректорĕ те, Александра Бобылева, шур хута сăрмакласа пăхрĕ. Малтан эпир çырнине кашни эрнерех редактор пӳлĕмĕнче «тарăннăн» тишкерсе ларакан «çыравçă», хăйĕн çырнисене эпир юсама тытăнсан, лăпланчĕ. Тин туйрĕ пулас çыравçă шухăшĕ, чĕлхийĕ, сăмахĕ мĕнлине, мĕн хак тăнине.

Анатолий Степановпа редакцире хăшĕ-пĕри çывăхланасшăнах марччĕ. Мана вăл питĕ килĕшетчĕ. Унăн çирĕп кăмăл-туйăмĕ, пĕлĕвĕ пурччĕ. Çырма пĕлетчĕ. Тускил псевдонимпа сăвăсем пичетлетчĕ. Çемйине куçарса киличчен редакцире пĕрле пурăнса, çывăрса тăрса нумай нушалантăмăр. Тĕрĕслĕхшĕн чунне пама хатĕрччĕ. Улталанине, суйнине юратмастчĕ. Техникум, университет пĕтерчĕ, ялхуçалăх пайĕнче нумай çул ĕçлерĕ, ре-

дактора çити ӳсрĕ. Кайран та, Вăрнара пырсан, унпа тĕл пулса калаçмасăр тухса кайман. Шел, вăхăтсăр уйрăлчĕ пирĕнтен. Район хаçачĕ 50 çул тултарнă кун вăл мана хисеплесе Хисеп грамоти пачĕ. Маншăн вăл чи пысăк награда шутланать. Çирĕм çул ытла совет пичетĕнче тăрăшса та ниçтан та пĕр хисеп хучĕ илсе курманччĕ. Анатолий Степанович, çавна сиснĕ пекех, мана çав тери савăнтарчĕ.

Редактор пире, шаймăксене, каçпа редакцире хăварасшăнах марччĕ, пурăнмалли вырăн шырама хушатчĕ. Пирĕн унтан тухас килмест. Юлашкинчен те мăшăрĕ, те хăйех, тупнă пирĕн валли хваттер. Хăйсенчен инçех мар пурăнакан пĕр хĕрарăм патне куçрăмăр. Георгий Игнатьев, Григорий Михайлов тата эпĕ урайĕнче çывăраттăмăр. Кĕнеке чирĕ пĕтеретчĕ-çке пире. Хамăра кирлисене туянсах тăраттăмăр. Укçа пĕтсе çитетчĕ те, хваттерте çусăр яшка те пĕçерсе çиеттĕмĕр. Выç хырăмпа ĕçе тухса утни те пулкаланă.

Георгий Степанович, пăхма Сергей Филиппов артист майлăскер, йăм хура çӳçлĕскер, сăмах ытларах ваклама юратманскер, сăнĕ-пуçĕпе темле камитлĕрех курăнатчĕ. Çăварне уçсан, чĕлхи ай-ай сăнарлă-йĕплĕччĕ. Çырусен пайĕнче йăла ыйтăвĕсемпе, столовăйсемпе, сутуçăсемпе тата ытти вак-тĕвексемпе мăшăлтатса лараканскер, хушăран пиртен çухалса каятчĕ. Çурхи паккасем чĕрĕлнĕ вăхăтра Тукая, çуралнă ялне, çӳреймерĕ. Çирĕм çухрăм утмаллаччĕ вĕт. Хĕрарăм ушкăнĕсенче шапа юптарăвĕсем ытларах юхтарчĕ пулас.

Тукайра вĕсен тăванĕ Анна Тимофеева пур. Пит халтăрскер. Хаçата ачаранах çырса тăрать.

Пĕр ирпе Игнатьев пӳлĕмĕнче ларатпăр. Куртăм-ха, анлă чӳрече умĕнчен Анна Тимофеевапа Георгин ача йăтнă арăмĕ Варя-Варвари вашлаттарса иртрĕç. Игнатьев, пуçне хут çине чиксе лараканскер, вĕсем алăкран кĕнине те сисмерĕ. Акă Анна инкĕшĕн аллинчи пĕчĕк ачана тытрĕ те ашшĕ умне, хулăн кĕленче çине, тап тăратрĕ. Вĕр-çĕнĕ çăпата сыртарнă пĕчĕк Игорь, ашшĕне курса савăннипе, тăпăртатса ташласа илчĕ. Георгий мăнă куçне чарса пăрахрĕ, ун-кун пăхкалать. Вăл кĕç, тем тавçăрса илчĕ пулас та, «Что за хулиганить туса çӳреттĕр эсĕр кунта? Ĕçлеме чăрмантарнăшăн сире çиччас милицине тыттарса ярап!» — терĕ хаяррăн. Тапранса кайрĕ çав Анна Тимофеевна, ай çунтарать тăванне... Арăмĕ чĕнмест. Георгий тăчĕ те, варт тухса шурĕ. Ывăлĕ нĕ-ĕр! йĕрсе ячĕ. Çĕрпел шкулĕ çĕр çул тултарнă чух Канашран салам-

лама килнĕ тăлпан, йăрăс пӳллĕ хурарах сăнлă хăна камне пĕлтĕм те, тĕлĕнтĕм. Игорь Георгиевич Игнатьев, ӳссен, ашшĕ çулĕпех кайнă-мĕн, хăй «Позиция-экспресс» хаçат кăларать. Мускав таранах шавларĕ. Чăваш Республикин Журналистсен Союзĕн Семен Элкер ячĕллĕ премине тивĕçрĕ.

Редакцирен çыракан çын таталмастчĕ. Уравăшри Степан Юркинăн кĕсйинче яланах свеший фельетон пурччĕ. Çĕрпелти Иван Иванов культура пурнăçне ытларах сăнлаччĕ. Пирĕн ялти Калистрат Воробьев Кĕркури Илеперпе сăвă ăшне кĕрсе ӳкетчĕç. Енĕшри Виктор Нестеров, Çавалкас Мăратри Вася Минин, Аçамçырминчи Алексей Смирнов учительсен хăйсен, педагогика темиччĕ. Чăраш Хирлепрен Николай Мартыновпа Геннадий Яковлев пĕрмай çырса тăратчĕç. Вăрманкасри Павел Кошкин алăпа çырса кăларакан стена хаçачĕпе таçта çити чапа тухнăччĕ, хаçатăн чи активлă корреспонденчĕсенчен пĕриччĕ. Питĕ хĕрӳ çын, тăнлă пуçлă юрист Василий Долгов прокурор çырнă материалсене вуламасăр никам та хăвармастчĕ. Пĕнертен Леонид Архипов хыпарлатчĕ, пирĕн çывăх тусчĕ. Павел Николаев Ершепусĕнчен статья йăтса килетчĕ. Калав-повесть хайлакан Георгий Чернышев редакцие Хапăсран пушă алăпа нихçан та килмен. Хаçатра пичетленнĕ сăвă-калава критик пекех тишкерме юрататчĕ. Хапăсран çыракансем тата пурччĕ: Виталий Краснов, Григорий Скворцов. Элĕк районĕнчи Сурăмварри ăсчахĕ Кирилл Макарович Никишев чăваш ялĕсен аваллăхĕпе хальхи пурнăçĕ çинчен çырнă статьясем илсе пыратчĕ. Кашниййĕн вĕсен пултарулăхĕ курăмлăччĕ. Вĕсенчен хăшĕсем каярахпа журналистсем, редакторсем, писательсем пулчĕç. Актив тени вăйлăччĕ.

Çурçĕр Флотĕнчен амăшĕ патне курма килекен Виктор Турингене вокзалта кĕтсе илнисем, кайнă чухне перрон çинче купăспа-баянпа юрласа ăсатса янисем куç умне тухса тăраççĕ. Мăн Явăш сăвăçĕ редакцин кĕтнĕ хăниччĕ. Капитан-лейтенантăн сăввисем хаçатра пĕрмаях пичетленсе пынă.

Редакцин кулленхи пурнăç саманчĕсене Виссарион Кожанов ĕмĕрлĕхе асра хăварма тăрăшатчĕ. Ун чухнехи сăн ӳкерчĕксем çине пăхатăн та, мĕн чухлĕ çывăх çын сăнарĕ тухса тăрать куç умне. Акă ман альбомра редакципе типографире ĕçлекенсен тулли ушкăнĕ. Иккĕмĕш ретре, сылтăмран виççĕмĕшĕ, Ефремов-Ени ларать. Евгений Николаевич та ют марччĕ пирĕншĕн. 1932 çулта вăл, «Социализм çулĕпе» тухма пуçласанах, редакцире литсотрудникре ĕçлеме тытăнать. Хĕрӳ журналист каярахпа ĕçрех вилсе кайрĕ.

Чěмпěр енчи Сентилей районне кěрекен Ялавăр ялěнче 1914 çулта çуралнăскер, вăл хăйсен çемйипе Вăрнар районне куçса килнě. Нурăсри вăтам шкулта, Чулхулари рабфакра вěреннě. Тăван çěршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Йăмăкě, унран çулталăк ытларах кăна кěçěнрех Александра Николаевна Посадская, ěмěрне ачасене вěрентес, халăха пěлӳ, воспитани парас ěçре ирттерчě. 34 çул Вăрманкасри вăтам шкулта тăрăшрě. Раççейри наци шкулěсенче вырăс чěлхине вěрентес енěпе унта наука центрě йěркеленěччě. «Посадская шкулě» тетчěç ăна мускавсемпе шупашкарсем те. Александра Николаевнана вěрентӳ ěçěнчи çитенӳсемшěн 1967 çулта Чăваш Республикин Ěçпе Мухтав тата Паттăрлăх Хисеп кěнекине кěртнě. Евгенийпе Александра — хисеплě пěртăвансем. «Посадская шкулě» çинчен эпě нумай çырнă. Чиперкке хěрне те юратнă.

Хальхи вăхăтра, ěçрен пушансан тумалли кашни ěçшěн, суйлав участокěсенче кут хěртсе ларнăшăн та çынсем укçа нумай илеççě. Эпир пурне те песплат, хамăрăн вăя, сывлăха хěрхенмесěр хаваспа туса-пурнăçласа пынă. Штатра тăман тем тěрлě должнăç та пурччě. Çапла утмăл пěрремěш çулхи авăн уйăхěн 18-мěшěнче райком енчен наукăллă атеизм семинарне тухса кайрăм. Çул çинче ěнерхи партпуху çинчен шухăшласа пыратăп. Пухăва «Советская Чувашия» хаçатăн собкорě Евгений Николаевич Ефремов ертсе пычě. Пирěн парторганизацире тăратчě вăл. «Кузьмин коммунист хăйěн парти пурнăç пайě урлă ялхуçалăх ыйтăвěсене çителěксěр çутатать» тесе чиперех калаçу пуçарса ячě Алексей Иванович. «Ялхуçалăх пайěн мěн тумалла тата, ялти коммунистсем, парторганизацисем çинчен вěсене çырма чарнă-им? Китай хӳми тытар мар, пěрле, канашласа алла-аллăн тытăнса ěçлер, Иванов юлташ», — терěм. Секретарě, Александра Бобылева, Алексей Иванч енне çаврăнса ӳкрě. Кӳренěвнешăртне тавăрупа ирттерсе яракан парторга эпě анчахрах çиллентернěччě. Лăпăр-лапăр статйине пěрахăçларăм, карçинккана петěм. Çынсен хутшăнăвěнчи тасамарлăх ялан ăша вăркаттаратчě.

Шупашкарта виçě кун ирттермеллеччě. Тепěр кунне, апат вăхăтěнче, «Коммунизм ялавне» кěтěм. Ответлă секретарě Михаил Юрьев хаçатра ыран тухмалли хурлăхлă хыпар статйине вулаттарчě. Хама хам ěненмесěр тепěр хут вуларăм. Паян Евгений Николаевич вилсе кайнă-мěн. Вăт хуйхă.

Семинар вěçленсен, автовокзалта Николай Орлова тěл пултăм. Вăл Шупашкара хаçат хучě пирки пынă. Канаш, Нурăс урлă

аран-аран Вăрнара çитрĕмĕр, хамăрăн юлташăма, вĕрентекенĕмĕре юлашки çула ăсатма ĕлкĕртĕмĕр.

Эпĕ редакцине пыриччен ялхуçалăх пайĕнче Пуканкасси ачи Василий Викторович Викторов ĕçленĕ. Ăна партин аслă шкулне вĕренме ярсан, Ялгир ун вырăнне Алексей Иванова ĕçлеме чĕннĕ. Викторов редакцие кĕрсе çӳретчĕ хуларан таврăнсан. Эпĕ хамăр ялти сысна пăхакансем çинчен очерк çырнăччĕ. Çавна вуланă та Викторов, хам çук чухне редакцире мухтанă та пăрахнă мана, «акă мĕнле çырмалла», тесе каланă çынсене. Хамăн пĕрремĕш очерка опытлă журналист ырланишĕн ăшра хĕпĕртерĕм, çапах юташсем умĕнче лайăхмарлантăм. Манран нумай тар тăкнă «стариксем» те пур-çке редакцире.

Пурне те чăтса ирттерме, тӳсме тиветчĕ. Укçа пĕтсен, тăван акка патне кайнă пек, райкома, Ялгир мăшăрĕ ĕçлекен иккĕмĕш хута улăхаттăмăр. Клавдия Васильевна пире, мĕскĕнсене, куçран пăха-пăхах шеллетчĕ, пулăшатчĕ. Кăмăллă, ытлашши хыткукăр та мар Павел Григорьевич Григорьев бухалтерĕн штатра тăман кассирĕсем те пулса куртăмăр Гриша Михайловпа. Пĕр нушаччĕ, уйăх вĕçнелле ялан «растрата» тăваттăмăрччĕ. Арçын алли укçа патне те, хĕрарăм пилĕкĕ енне туртăнать, тесе ахальтен каламан пуль çав.

Редакцире ĕçлекен юлташсем Володя Москвин, Григорий Михайлов, Георгий Игнатьев, Анатолий Степанов манран маларах авланса ачаллă пулчĕç. Вăрнар хĕрĕсем хушшинче хĕртĕнсе те хамăн телее тупаймарăм. Райхаçатра тата хамăр ял клубĕнче пит хĕрӳленсе «Мĕн вăл телей» дискусси ирттернĕ хушăра хам ума телей çăлтăрĕ анса ларнине те сисмен. Элĕк енчи Торпкасси хĕрĕ чĕре алăкĕнчен шаккаса тăрать иккен. Манăн та çынсенчен юлас килмерĕ, утмăл виççĕмĕш çулхи çу уйăхĕн пуçламăшĕнче эпир те Римма Ильинична Ильинапа çемье чăмăртарăмăр.

### Мускавра камит лартнă çулсенче

Халăха ялан тăнсăр çынсем-пуçлăхсем пăтратнă. Утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнче те кукуризаципе химизаци халăхăн пуçне минретрĕ. Хамăрăн пулсах çитмен ученăй текенсем те чăваш чĕлхине пăтратса ячĕç. Шкулсенче, хаçат-журналта, издательствăра ĕçлекенсем орфографи лачакине кĕрсе ӳкрĕç. Камит хыççăн камит лартаççĕ.

Мускав енчен хăлтăртатса килекен çурхи уяр çанталăкри аслати утмăл иккĕмĕш çулта Чăваш çĕршывне те лайăх кăрслаттарса аçа çапрĕ. Пурнăç тинĕс хумĕ пек шавларĕ тĕнче çыранĕнче. Ялхуçалăхне çĕнĕлле йĕркелесси çинчен ака уйăхĕнче хаяр йышăну тухрĕ. Район редакцийĕсене пĕтересси пирки те каланăччĕ унта. Малашлăхпа карăнтарнă ĕмĕт çиппине касса татнă пекех пулчĕ партин Тĕп комитечĕн йышăнăвĕ. Мĕн чухлĕ пуçлăх, мĕн чухлĕ хаçатçă, мĕн чухлĕ ытти ĕçри çын шăпине улăштарчĕ вăл. Хулăнрах пуртвĕл хĕстерекенсем сăхсăхсах пуççапрĕç пуль Никита Сергеевич Хрущева, пуртвĕл çухатакансемпе карьера пусмин аяларах картлашкине анса лараканcем вара макăрсах ылханчĕç пуль ăна, партипе çĕршыв пуçĕнче тăракан вăтам шайлă палкавça.

Анчахрах-ха эпир, 1961 çулхи кĕркуннене, «Социализм çулĕпе» юлашки хут утса кĕтĕмĕр. Пире «Çĕнтерӳ ялавĕ» тыттарчĕç. Чăваш чӳке хатĕрленнĕ вăхăтра хаçат ятне улăштарчĕç. Çĕнĕ ялав айĕнче нумаях та утаймарăмăр, çĕнĕ çула кĕтĕмĕр.

Тĕпком йышăнăвне пурнăçласа, район хаçачĕсене пĕтерчĕç. Вĕсем вырăнне... Акă, ака уйăхĕн 29-мĕшĕнче Вăрнарта КПСС Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Министрсен Совечĕн Вăрнар территориллĕ производство управленийĕнчи районсем валли кăларакан «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат тухма пуçларĕ. Çĕнĕрен туса хунă управление Йĕпреç, Вăрнар, Элĕк районĕсем кĕреççĕ. «Çĕнтерӳ ялавĕ» тăватă пин çурăпа тухнă пулсан, çĕнĕ хаçат вунă пин экземплярпан иртрĕ.

Паллах, редакци ушкăнĕ çĕнелчĕ, вăйланчĕ те, темелле. Пирĕн рете республикăра унчченех палăрнă журналистсем хутшăнчĕç. Элĕкрен Александр Николаевич Мешков, Михаил Григорьевич Кустиков, Харитон Иванович Лисин, Çĕмĕрлерен Захар Андреевич Андреев, Йĕпреçрен Римма Федорова килчĕç. Редакторне обком бюровĕ Петр Тихонова çирĕплетрĕ. Ответлă секретарьне вăл Владимир Москвина лартрĕ. Алексей Иванович нумаях ĕçлемерĕ, чăх чĕппи кăларакан станцине хуçа пулса кайрĕ. Çĕнĕ Сăрьелти Серафим Ефимов, Мăньял Хапăсри Иван Степанов, Анатолий Степанов коллектива çамрăклатрĕç. Эпир тата «ваттисем», журналист чĕлхипе каласан, «стариксем» — Орловсемпе пур. Ку йыша йĕркелесе тытса тăмашкăн редакторăн та хуравлăхĕ самаях ӳсрĕ ĕнтĕ. Аякран килнисем яланах хăйсем патĕнчи ĕçпуçа тĕпе хураççĕ, çĕнĕ çĕртине тӳрех йышăнмаççĕ, тиркевлĕрех куçпа пăхаççĕ, хăйсене мухтаççĕ.

Вăрнарсем эпир нихçан та аптăрасах кайман та, çак революциллĕ вăхăтра та улшуç урапи айне пулмарăмăр, хамăрăн чыса çӳлте тытрăмăр, кӳршĕсене хамăртан иртерсе ямарăмăр, пуç пулма памарăмăр. Пултарулăх енĕпе пирĕнтен иртсех ĕрĕхекенни пулмарĕ-ха. Римма Федорова кăна çĕнĕ темăсемпе проблемăсем шыратчĕ.

Малтанхи вăхăтра кулмалли-макăрмалли те сиксе тухкаларĕ. Ял лăпкăлăхне хăнăхнă элĕксенчен хăшĕ-пĕри нушана та лекрĕ. Унта вĕсем хăйсене хуçалларах тытнă пулас çав, кирлĕ чухне хăратса илме те пултарнă. Хула манерлĕ Вăрнар тӳрех вĕсене хăйĕн çирĕп аллине çавăрса илчĕ, кăшăлларĕ. Çапла пĕр кун, ĕçлеме пуçласанах, Александр Мешков урăлтаркăчра çĕр каçать. Шупашкартан Юрий Петров поэт килнĕччĕ. Кĕркури Илепер унпа поселок тăрăх çӳрерĕ. Каçхи апат çиме вĕсемпе Мешков та ресторана кайрĕ. Поэзи каçех ирттернĕ пуль çав вĕсем. Унтан тухсан тата темшĕн редакцине мар, милици еннелле шавласа уттарнă-çке çунат хушнăскерсем. Кĕптĕртеттерсе илсе кĕрсе кайнă çав вĕсене алăк умĕнче тăракан «хĕрлĕ карттус». Илеперĕпе Петровне, те сăвă каласа панăшăн, кăларса янă. «Эп — кам!» тесе кăкăрне çапакан Мешковне ирччен лăпланса канма вырттарнă.

Эпĕ редакцире ирех тăрса очерк çырса лараттăмччĕ те, вĕсене каçпа кĕтсе илейменскер, Александр Николаевича уçса кĕртрĕм. Ни вилĕ, ни чĕрĕ, мухмăрпа чĕтрет. «Пĕтрĕм, Кузьмин, урăлтаркăча тытса хупрĕç, райкома пĕлтерсен... Элĕке каялла, киле мĕнле сăн-питпе пырса кĕрес», — тет вăл куçлăхне хыва-хыва тăхăнса. Эпĕ ăна лăплантартăм. Милици начальникĕ Никита Васильевич Васильев майор патне, килне часрах шăнкăравларăм, ĕç кунĕ пуçлансан РОВДна кайса килтĕм. Пăтăрмах йĕркеллех иртсе кайрĕ. Мешкова КПСС райкомĕн бюровĕнче редакцин ял хуçалăх пайĕн заведующийĕ пулма çирĕплетрĕç. Çапла пулăшрĕ Элĕк кĕрӳшĕ Элĕк ачине.

Михаил Кустикова çырусен пайне пачĕç. Римма Федорована Николай Артемьевич хăй çумне илчĕ, Урал университетĕнче вĕреннĕ Йĕпреç пикийĕ илемлĕх тĕнчинче пултаруллă утăмсемех турĕ.

Типографи çĕнĕ çурта куçрĕ, хими завочĕн баракне пурăнмалли хваттер пек майлаштарчĕç. Унта Александр Мешковпа Михаил Кустиков, Михаил Васильев, типографи шоферĕ Михаил Иванов, типографи хĕрĕсем пурăнатчĕç. Захар Андрейч Çĕмĕрлене пуйăспа çӳретчĕ. Эпир вара Харитон Лисин, Анато-

лий Степанов, Григорий Михайлов редакцире çĕр каçаттăмăр. Георгий Игнатьев та унтах вырткаланă.

Виссарион Кожановпа Йĕпреç редакцийĕн мопедне илсе килтĕмĕр. Унпа чупасси пулмарĕ. Элĕксен «ИЖ-56» мотоциклĕ вара ух! хăватлăччĕ. Леонид Тянгов курсне пĕтернĕскерне мана редактор çав урхамаха çирĕплетсе пачĕ. Урăх никама та чуптармастчĕ, никама та партармастчĕ. Ман хыçра вара ялан редакцирен кам та пулин сиккелесе ларатчĕ. Управлени текен анлăш Пăрачкав-Улатăр районĕсенчен пуçласа Етĕрне районĕн чикки таранахчĕ. Элĕкре 30, Вăрнарта 27, Йĕпреçре 11 хуçалăхчĕ. Пурне те çитмелле вĕт, пурин пурнăçĕ çинчен те хаçатра çырмалла. Кунĕпе чупса урасем хытса ларатчĕç, ĕнсе ыратакан пулатчĕ, куçсем шывланса каятчĕç. Мăньял Хапăсри Анатолий Емельянов, партин Ленинградри аслă шкулĕнче вĕренекенскер (Хусанти партшкула пĕтерсен, ăна Мускава куçарнă, тĕп хулари партшкула та хупсан, вăл Балти тинĕсĕ хĕрнех çитнĕ), каникула килнĕ те, Петр Тихонов ăна вăхăтлăха ĕçлеме редакцие вырнаçтарнăччĕ. Питĕр пирĕштийĕсем çитмен, лăплантарайман чăваш утаманне, вăл Николай Орловăн савнине, Римма Федоровна, чее куçĕпе сăнăланă. Унпала унăн Вăрнар-Йĕпреç вăрманне «касмалла» пулнă-мĕн. Емельянов манран: «Федоровна Йĕпреçе çитиччен ăсатмалла», — тесе мотоцикл ыйтрĕ. Манăн хамăн та шухă шухăш пурччĕ те, Анатолий Викторовича урхамаха памарăм. Çавăншăн кӳреннĕ-ши вăл мана, пĕлместĕп, анчах вărттăн çыртма юратманскер, хăй халсăрланичченех ман ума чаркăç хыççăн чаркăç лартса пымарĕ. Мĕн кăна тутармасть иккен ют хĕрарăм ытарлăхĕ: темле тăнлă-пуçлă çынна та ухмахлантарса ярать.

Редакцире чухне кăнтăрла Вăрнаркăна кайса шыва кĕнĕ, гонорар илсен, ĕç хыççăн, эртелпе çавăнтах, хырлăхра каннă. Кĕркури Илепер купăс калатчĕ, Орловпа Федорова куçран пăхса вылятчĕç, эпир юрлаттăмăр. Сăвă калакансем миксе тухатчĕç. Виталий Степанов бухалтер та, кайран милици начальникĕ пулнăскер, полковнике çитнĕскер, çамрăклăх саманчĕсене пирĕнпе пĕрле ирттеретчĕ.

Районта эпир çитменни, çырманни юлманччĕ ĕнтĕ, çавăнпа та савăнтăмăр пултарулăх чикки анлăланнăшăн. Пире Элĕкпе Йĕпреç ытларах интереслентерчĕ, унти аваллăх пулăмĕсене, паллă çынсене, кулленхи ӳсĕмсемпе çитменлĕхсене хаçат страницисенче тăрăшсах çырса кăтартаттăмăр. Лайăххи сисĕнмесĕрех иртсе каятчĕ, япăххи вара... Кашни районăн хăйĕн райкомĕ пур-

çке. Кашнин пĕрремĕш секретарĕ — хăй районĕн помещикĕ. Мĕнле-ха хăяççĕ вĕсене сăнăлама Вăрнартан? Шупашкартан пулсан, урăхларах. Тĕп хула журналисчĕсенчен вĕсем вăл вăхăтра хăратчĕç-ха. Элĕксем вăл енчен пуçĕсене ытлах çĕклеместчĕç. Йĕпреçре хаяртарах секретарь пурччĕ те... Петр Александров йĕпреçсене çип тăрăх утма, хăй мĕн каланине пуçпа шутламасăр пурнăçлама хăратса çитернĕччĕ пулас. Вăрман ен кашлавĕ пирĕн пата та çитнĕччĕ. Тĕп хуласенчен вĕçсе килекен хушусене шухăшламасăр, пуç тавра çавăрттарса пăхмасăр пурнăçласа чапа тухма хăнăхнă карьерист ял халăхне самаях макăртма ĕлкĕрнĕччĕ. Вĕсенчен чи хăрушши — килти ĕнесене колхоза парса фермăран киле шывпа хутăштарнă таса мар сĕте питтунпа йатса килмелле туниччĕ. Çав хушăрах Йĕпреç колхозĕсем пĕтсе ларма пуçланăччĕ. «Капкăн страницинче» те, ытти страницăсенче те йĕпреçсен çиçĕм çинĕ мăйăр пек малта пыракан опычĕ пирки çивĕч фельетонсем, статьясем пичетленчĕç. Александров обкомпа хăрататчĕ. Района пырсан, ялан тарса çӳретчĕ. Юрать ăна вăхăтра хăпăтрĕç унтан. Пултаруллă, халăха ăнланса ĕçлекен секретарьсемпе райсовет пуçлăхĕсем кайран Йĕпреç районне республикăра малтисен ретне кăларчĕç.

Тинĕс, укиян хумханăвне курнăскер пирĕншĕн, Михаил Васильевпа иксĕмĕршĕн, ялхуçалăхĕ çав вăхăтра хресчен хаярлăхĕн чи çӳллĕ шайне çитнĕн, ăна хум çырана хаяррăн çапнăн туйăнатчĕ. Унпа эпир шухăшлама, тавлашуллă пĕтĕмлетӳсем тума пикенеттĕмĕр, пурнăçра темле улшăну пуласса кĕтеттĕмĕр.

Акă, ăссăр пуçра шутласа кăларнă шухăш хумĕ çĕршыв çыранне çапăнса кăпăк кăларчĕ. Утмăл иккĕмĕш çулхи кĕркунне Чăваш АССРĕнче 21 ял райкомĕ вырăнне колхозсен тата колхозсемпе совхозсен производство управленийĕсен тăхăр парткомне тата промышленность производствин икĕ парткомне туса хучĕç. Хулакомсенчен тăваттăшĕ малтанхи пекех юлчĕç. Вăрнар промышленноçĕ Улатăра пăхăнма пуçларĕ. Райкомсем пĕтрĕç. «Çĕнтерӳ çулĕ» колхозсен Вăрнар производство управленийĕн парткомĕпе ĕç çынни депутачĕсен район Совечĕн хаçачĕ пулса тăчĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕншĕн критика ирĕклĕхĕ уçăлчĕ, тек виçĕ райком пире чаркăç лартса пымасть. Хуçасем уççăнран палăра пуçларĕç. Пысăклатнă Вăрнар районĕ хăйĕн хĕрӳ ĕçне тытăнчĕ. Улатăр енчи Ирçе Çармăс хресченĕ те, Элĕк енчи Вырăс Сурăмĕн çынни те пĕр-пĕр справка илме Вăрнара танккать. Пĕрре килсе кайнипех çырлахсан юрать-ха. Бюрократи машини вăл ĕмĕр сӳнмен çаврăм.

Нушаланса-ёшенсе таврăннă çын çак «аталану» пурнăçне хăйне май тарăхса ылханнă пуль. Мăн район пуçлăхěсемпе тěрлěрен учрежденире ěçлекенсен халăхăн кӳтсе çитнě ыйтăвěсене тивěçтерессси чылай кăткăсланчě. Хальхи пек яка çулсем тата автобуссем пулман-çке. Кантуртан-кантура çӳресе йăлăхнă е ывăннă çынсем, юлашки пулăшу кěтсе, редакцие пыратчěç е хăйсем патне чěнетчěç. Çапах та пичет вăйě пурччě. Сумлă, çивěч вăях. «Капкăн страници» выранне «Вăрнар Капкăнě» кěрешěве тухрě. Ун тавра виçě район сатирикěсем чăмăртанчěç.

СССРта социализм туса хунă, коммунизма куçса пынă тапхăрта пурăнатпăр-çке. Халăхăн шухăш-кăмăлě, палитикăллă ěнену-хěмленěвě вăйлăччě. Хăш-пěр ялти колхозник, хăй çăпата сырма пăрахайманнине, хěлěн-çăвěн фуфайка хывса курайманнине, апат çитменнипе юлашки ěнине патшалăха сутнине пăхмасăр, коммунизмра мěнле ырлăхра пурăнма пултарни çинчен лекци-юмах ярса пама хатěрччě. Тěлěнмелле хăватлă ěненетерӳ вăйě халапла вěçев хăйăвěпе çавăрса ытамланăччě çынсене. КПСС Программине пурнăçламалли анлă çул тăрăх эпир те ăмăртмалла чупнă. Пушши кутран тивертсех пынă та. Ой, мěн чухлě пуш сăмах, юмах çаптарнă вăл вăхăтра... Журналистикăри чи паллă тапхăрсенчен пěри пулнă ěнтě.

Ăша хывнă пěр-пěр вăйлă, асамлă шухăш çынна ухмахах кăларать иккен. Вăл çав шухăша ыттисен чунне варăнтарать. Ушкăнра, мăн эртелте аталаннă вăй тěнче юххинче ишет, çутçанталăк вěçевěнче çаврăнать, матери куçăмěнче çěнелсе улшăнать. Парти йышăнăвě те çěршыв, халăх пурнăçěн пěр тапхăрěнче совет çыннин ăс-хакăлěнче, ěмěт-туйăмěнче сиктерӳллě-хавхаланулла аталану кăтартăвě выранěнче юлчě. Унăн режиссерне те, спектакльте вылякан тěп артисчěсене те халăх малтанах тăвăллăн алă çупрě, пěр камитех курса йăлăхнă май, унран майěпен писме пуçларě. Унччен...

Пурнăç тумхахěсенче сиккелесе, сулнăкěсенче сирпěнсе юлмасăр, умри хěвеле хирěç куçа хупмасăр чупаттăмăр. Пěрпěринчен ăмăртса çырнă. Хаçатра пичетленнě чи лайăх умстатья, статья, очерк, фельетон е ниме тăман чи япăх сăрмаклав редакцин пултарулăх шайěнче тӳрех палăратчě. Никамăн та япăх çырас килмен ěнтě. Çапах та чи ăста, витěмлě, интереслě, вулакана асра юлмалла çыракан, кулленхи ěçре мала тухакан пурччě. Ятарлă пěлӳсěр çын хăйěн тавракурăмěнче çеç явăнать, нушаланать. Çав енěпе аслă пěлӳ илни вара практикран чылай мала иртсе каять.

Ăс-тăнĕ, чун-чĕре хĕлхемĕ пулсан. Йĕпреç пики Римма Федорова çакна пире уçăмлăн кăтартса пачĕ. Пултарулăх тишкерĕвĕ вăхăтĕнче пирĕн илемлĕх лидерĕ Николай Орлов та, хăй хисеплекен çамрăк журналистăн хайлавĕсене кĕвĕçӳллĕнрех ырлатчĕ. Мухтамасан, май та çук. Федорова çырнă очерк е публицистикăлла статья — чи лайăххи. Ăçтан мĕнле ахах-ылтăн шыраса тупма, чӳхесе кăларма пĕлетчĕ Римма. Ăсталăхĕ ашшĕнченех пыратчĕ пулас. Ашшĕ Йĕпреç тăрăхĕнче палăрнă чи чаплă çĕвĕçсенчен пĕриччĕ.

Малтанах эпĕ Александр Мешков хăйĕн урăлтаркăчри айăпне редактор умĕнче çуса тасатассишĕн пит хытă ĕçлет пуль тесе шутланăччĕ. Пĕлсех çитереймен иккен эпĕ çав «педагога». Учительтен хаçат ĕçне куçнă Александр Николаевич, никамран хăрамасăр, хăюллăн журналистика картлашкипе хăпарнă çыравçă иккен. Элĕкре редактор та пулнă. Хăвăртлăхĕ пысăкчĕ. Пӳлемре ларма юратмастчĕ. Пĕрмаях ăçта та пулин, чи аякри кĕтессе çитмеллеччĕ унăн. Ĕмĕтне пурнăçлама эпĕ пулăшаттăм. «Ижокдвижокпа» тухса вĕçтеретпĕр. Вăл ытларах критика, тишкерӳ паратчĕ хаçата. Хушăран управлени парткомĕн пуçлăхĕсем умĕнче те тĕрĕслĕхшĕн хĕремесленсех тавлашма, ĕнентерме тиветчĕ унăн. Пурпĕрех пуçа усмастчĕ. Çул çинче хавхалантараттăм: «Тĕрĕс çырнă эсир. Мĕн хăрамалла партбилет çухатасран. Паян вĕсем начальник те, ыран — сӳсленнĕ мучаланчăк». Хăйĕн кăмăл-сипетне улăштармарĕ Мешков.

Редакцин чи хĕрӳ кĕтесĕ — çырусен пайĕччĕ. Парти пурнăç пайĕ анлă, проблемăллă ыйтусемпе ытларах ĕçлет пулсан, кунта хаçатра çутатса пĕтерме май çук тĕрлĕрен ыйтуччĕ. Кустиковăн ку ĕçе чĕртсе пыма хĕрĕвĕ çитетчĕ. Элĕкри хăнăхăвĕ, çаврăнăçулăхĕ пурччĕ.

Михаил Григорьевичпа тата Александр Николаевичпа манăн тепĕр темиçе çултан Элĕк хаçатĕнче каллех пĕрле ĕçлеме тӳр килнĕччĕ. Пĕр-пĕрне малтанах пĕлни, ăнланни, шанни пире пулăшатчĕ.

Вĕсемпе пĕрле Вăрнара лекнĕ Ехремкасси чăвашĕ Харитон Иванович Лисин, маларах чăвашăн тĕп хаçатĕнче ĕçленĕ пулин те, самай йăшнăччĕ, сăмах-юмахĕпе ытларах палăратчĕ. Иртнĕ вăхăта паянхи хĕрӳ те çивĕч хайлавпа çирĕплетсе парайман журналист пурнăç уттипе тан пыраймасть. Çапах та ăна радиоорганизатора лартрĕç. Унта ĕнтĕ хаçатри пек ытла пултарулăх кирлех марччĕ. Пĕррехинче вăл ирпе таçтан ӳсĕр таврăнчĕ, радиоузела

тухса кайрĕ. Степановпа иксĕмĕр уншăн кулянма пуçларăмăр. Ахальтен мар. Кĕç репродуктортан Харитон Ивановичăн тасах мар, тытăнчăклă сасси илтĕнсе кайрĕ. Хăйсен ялĕн культури ӳсни çинчен малтан çырса хатĕрлемесĕрех репортаж пама пуçларĕ. Хăй аран-аран чĕлхине çавăрттарса, сăмахсене тăсса, тата-тата хăйăлтатать. Унтан шăп пулчĕ, Мускав калаçса кайрĕ. Итлекенсем шăнкăравланипе радиомеханик передачăна чарса лартнă иккен. Радиоузелтан таврăнсан Лисин ытлашши хумханса та ӳкмерĕ, «мухмăр чĕртмелле-ха» тесе ресторана тухса утрĕ. Юлашки передача пулчĕ вара ватă хаçатçăн.

Редакцире фронтовиксем йышланчĕç. Вĕсенчен пĕри — Захар Андреевич Андреев. Çапăçусене хутшăннă офицер, вăйлă наступлени иртсе кайнă хыççăн, Польшăра Упатовек хулин коменданчĕ те пулнă. Кăра çиллĕ, хăйĕн сăмахне тытма пултаракан çынччĕ. Çĕмĕрлере хăйсен килĕ-çурчĕччĕ. Уçă кăмăллă хитре арăмĕпе чипер хĕр ӳстерчĕç, ăна Хусан консерваторийĕнче вĕрентсе кăларчĕç. Зоя Шупашкарта ĕçлерĕ, чăваш халăх артисткине çити ӳссе чап илме пултарчĕ, шел, сарăмсăр вилмелле пулчĕ Çĕмĕрле шăпчăкĕн. Упăшкипе, Алексей Ковалев артистпа, Шупашкартан Çĕмĕрлене хăнана кайма тухнăскер, «Горьковский поворот» текен вырăнта автоаварине лекнĕ. Ашшĕ йăрăс пӳллĕ, капăр тумланакан, хитре сăн-питлĕ арçынччĕ. Аван çыратчĕ. Критикăллă статьясем хатĕрленĕ чухне асăрханулăччĕ, пире те çапла пулма вĕрентетчĕ. Пĕрле ĕçлеме, ларса калаçма кăмăллăччĕ унпа.

Вăл та, Алексей Иванов та, Мешков, Кустиков, Лисин та Элĕк районĕнче çуралнăскерсемччĕ. Кӳршĕлле ăмăртатпăр.

Этемăн, чĕрчунăн, ӳсентăранăн хитрелĕхĕ пур та, çав вăхăтрах хаçат та илеме юрататъ. Ăна халăх умне капăрлатса кăларасси вара хуравлă секретарьтен нумай килет. «Çĕнтерӳ çулĕ» ниçта та, никам умĕнче те япăх сăн-питпе намăс курмастчĕ. Владимир Москвин тӳрех тĕрĕс çулпа кайрĕ. Вăл вăхăтра хаçатсене, уйрăмах Мускавра тухакансене, ют патшалăх хаçачĕсен мелĕпе калăплама пуçланăччĕ. Материалсене вертикаль е горизанталь майлă тăваткалăн-тăваткалăн вырнаçтарни йăлтах урăхла сăн паратчĕ хаçата. Линейкăсемпе пĕлсе усă курни, статьясен ячĕсене мĕнле саспаллисемпе пухни паллă вырăн йышăнатчĕ. Алла та илемлĕ япала тытнă пек илетĕн хаçатăн çĕнĕ номерне. Хăвна кирли куç умне хăйех тухса тăрать. Шупашкар хаçачĕсем те кивĕллех тухатчĕç те, ытти районсен хаçачĕсене тытас та килместчĕ те, Владимир Ива-

нович, кăшт хěрсен, мухтанкаласа та илетчě. Кăмăл-туйăм тилхепине кăштах ҫирěпрех туртса карăнтарнă пулсан унран малашне республикăри вăйлă журналист тухатчě. Ҫапах та вăл халě те ҫырма пăрахмасть-ха, пери, чěлхи мăкалман юлташăмăрăн.

Утмăл иккěмěш ҫулхи кěркунне машинăллă та пултăмăр. Пире ҫěнě «Москвич» пачěҫ. Тихонов Санарпуҫěнчи хамăр ялкора Тимофей Мокеева ямшăка лартрě. Чиперех кěрлеттерсе ҫӳреттěмěр. Инкек куҫа курăнса килмест ҫав.

1962 ҫулхи чӳк уйăхěн 14-мěшěнче Николай Орловăн Элěк енчи колхозсене ҫитсе килмеллеччě. Петр Алексеевич ун пирки Мокеева пěлтернě. Ямшăк «урхамах» ҫумěнче кулкаласа кěтсе тăрать. Унпа пěрле ялхуҫалăх пайěнчен Гриша Михайлов та кайма хатěрленнě. Николай Артемьевича тем пулчě, хăй йышăнăвне улăштарчě те, Римма Федоровапа вăрман промышленность предприятийěсен пăтăрмахě пирки тишкерӳллě статья ҫырма тесе Йěпреҫе ҫул тытрě. «Кузьмин, ман вырăна эсě каятăн, машинăра асли пулатăн», — терě. Редактор ҫуккăччě те, ман тавлашса тăма вăхăт пулмарě, килěшесси-итлесси ҫеҫ юлчě. Вăл — редактор ҫумми-ҫке.

Миша Васильев пире ěнерех Виктор Туринге Мускав урлă отпуска килесси ҫинчен пěлтернěччě. Ăна вокзалта кěтсе илтěмěр те, ҫула майлăрах килнех ҫитерсе яма шутларăмăр. Мăн Явăша ҫитсен Виктор лавккара пěр сетка эрех туянчě. Амăшě патěнче уяв сěтелě ҫавăрчě. Тем тěрлě пулă, вăлчасем, консервăсем, тинěс купăсти, кальмар, кит текенни... «Сукарно ҫěленне ҫеҫ илсе килеймерěм сирěн валли», — тесе вылятать. «Ҫěленěсем хамăр патра та ҫителěклех-ха. Индонези ҫěленне ҫатма ҫинче ăшаласа ҫиме пулать пулсан, хамăр кут хыҫěнчисем пире чěрěллех ҫиеҫҫě», — тесе кулкалатăп. Гриша ватă ҫынпа, Виктор амăшěпе, юмахлать.

Ҫуралнă тăван яла машинăпа пěр чăрмавсăр ҫитни ун чухне халě тěнче уҫлăхне вěҫнě пекех туйăннă. Моряк тельняшкăна хывса пăрахрě, ялти чăвашлăх уҫăмлăхěпе кăкăр туллии сывларě. «Маленков стаканěсене» эрехпе чăппи тултарчě, айта ятратпěр по-морскому, терě. Ҫавăрса хутăмăр стакансене. Ямшăк та пирěнтен юлмарě. «Ҫěркаҫ сирěн Лукка куккусем патěнче кума ěҫкинче пулнăччě те, кунта ҫитиччен чут вилеттěмччě», — терě ман еннелле куҫне мăч тутарса Тимофей. Ман ним каламалли юлмарě, Гришăна ҫула тухма васкатрăм ҫеҫ.

Ӳхěрсе ҫитрěмěр Элěке. Ҫул ҫинче машина пăт-пат ҫеҫ тěл пулать. Хирлеппуҫěнчи «Красный Октябрь» колхоз парторгěпе

каласса ун ячĕпе пичетленмелли статья турăм. Манăн ĕç пулчĕ. Гриша Михайлов зоотехникпа каласса илчĕ. Унăн та йĕркеллех. Таврăнмалла çеç. «Ман арăм амăшĕсем патĕнче, кунтан инçех мар, атя кĕрсе илсе тухатпăр», — терĕ. Эпир килĕшрĕмĕр. Ай вай-вай, Хитекре ĕçкĕ кĕрлет. Гриша арăмĕн Катьăн піччĕшĕсем Çурçĕртен курма килнĕ. Пире кĕрекене, вăрăм тенкел çине туртса кĕртсе лартрĕç. Гриша арăмĕн тăванĕсемпе çатăлтатать, хăйĕн Хитекушкăнь ялне халалланă сăввине вуласа пачĕ, ўсĕр халăха пушшех астарса ячĕ. Черетпе эрех, сăра ĕçтереççĕ. Тимофей малтан турткаланса ларчĕ, ăна тав турăм та, «Хăвна пĕлсе хăв пек яр вăрнарла», — терĕм те, пушаннă черкке хĕррине çулласа çеç илчĕ пирĕн ямшăк. Унтан çине-çине... Эп те хĕрсе кайсах элĕксем çинчен юмах ятăм пулас... Çапах та, ĕçкĕрен хăпăнса, çула тухрăмăр. Катерина Куликована мала лартрăмăр. Кĕркури ун хыçĕнче, эпĕ — ямшăк çурăмĕ хыçĕнче. Элĕке çитнине сисмерĕмĕр, Çĕньялтан иртсе Нурăсалла анатпăр. Музыка итлесе те, юрласа та чуна çĕклентеретпĕр. Епле çĕкленўллĕ хаваслăхпа çунатлă ĕмĕт ытамĕнче пынă вăхăтра... Темле хăрушă кĕрлев хăлхана хупласа хучĕ, куç чармакланса кайрĕ, çиçĕм пек çутă ялтлатрĕ, кĕлетке вĕриленчĕ. Куçа уçса пăхрăм та, мана хирĕç Элĕк уйăхĕ хĕрхенўллĕн сăрхăнса пăхать. «Эпир элĕкелле мар, вăрнаралла каяттăмăрччĕ-çке», — тесе хăвăрт çавăрттарса илчĕ пуç кунтăкĕ. Тута хĕрринчен юхакан юна чарас тесе аманнă вырăна сăмса тутрипе пăчăртаса тытрăм та, алăкран тухрăм. Пĕр çын мана шлепкене пырса пачĕ. Умра грузовик тăрать. Кайри урапине хăпăтса кăларнă. «Кунашкал вăйлă ĕçленине курманччĕ-ха, маттур эс, Мокеев юлташ, çăмăл автомашинăпа грузовике таран тунăшăн сана Вăрнар геройĕ ятне пама юрать», — терĕ Нурăсран персе çитнĕ Анатолий Штыков автоинспектор. Вăл пирĕн ямшăка Нурăс пульницине, мана Вăрнара ăсатрĕ. Çул инкекне асра хăварнă ўкерчĕке пăхатăп та халĕ, ассăн сывлатăп: «Турри пулнă пуль çав тăватсăмăрăн та çав кĕрхи каç». Нурăсран пĕр икçĕр метртта вутă тиенĕ грузовик хăпарнă. Пирĕн хĕрнĕ ямшăк, ансăр çул çинче, хăвăртлăх виçине шута илеймен пулас та, малти сулахай урапапа грузовикĕн хыçалти сулахай урапине кăрслаттарнă, «Москвич» тепĕр майлă çаврăнса ларнă. Вăрнар пульницине лексен çапла пурнăçра пĕрремĕш хут операци сĕтелĕ çине выртмалла пулчĕ, хирург çурăлнă тута хĕррине çĕлесе ячĕ. Палатăсенче пуш вырăн çук, коридорта выртас килмерĕ манăн, редакцинех таврăнтăм, икĕ эрне хăймапа та ытти шĕвек апатпа пурăнтăм.

Юлташлăхра та сутлăх пуррине çав кунсенче эпĕ аванах ăнланса туйрăм. Командировкăшăн Кузьмин хуравлă тесе мĕнпур айăпне ман çине тиеме хăтланчĕç. Тепĕр кунне редакторăн машинăпа Шупашкара канашлăва каймалла пулнă-çке. Анчах... мĕнпе каян? Йĕпреçрен тăранса таврăннă Орлов «эп ним те пĕлместĕп», терĕ. Гриша мăк-мак турĕ те пуçне чикрĕ. Парти пухăвне пынă партком секретарĕнчен Виталий Данилович Даниловран сехĕрленнипе хăшĕсен йĕмĕ те йĕпеннĕ пуль. Мокеевĕ: «Хитекре мана Кузьмин ĕçме хушрĕ», — тесе тухса каларĕ. Мана тӳнипе лăпланчĕç те вара пухăва хупрĕç. Ман ăшра çеç çав пуху халĕ те вĕçленмен-ха, командировка трагедийĕшĕн чăннипе кам айăплă пулнине этемĕн чăн-чăн судйи — тасалăх судйи — айăпласа пынине курса пурăнатăп.

## Чăнлăхпа ултав пĕрле чухне

Çапла, вĕсем ялан ытакланса утаççĕ. Çутçанталăкри тĕнчекурăм аталанса пынă май этемпе этем хушшинчи нихçан пĕтмен çыхăну. Çын ушкăнĕ-эртелĕ Çĕр çинче пĕрне-пĕри юратса, хăпартса, кăшласа, пĕтерсе, çĕнтерсе пурăнать. Чĕрĕ чун, этемлĕх аталанăвĕн сăлтавлăх, яланлăх категорийĕнчен эпир ниçта та тарса пытанаймастпăр, мĕншĕн тесессĕн вăл йăлтах хамăрта, хамăр ăшра пытанса пурăнать, кирлĕ чухне камăн пĕр енĕ, камăн тепĕр енĕ ытларах палăрать. Шайĕ вара унăн ахаль çынран пуçласа патша таранах пĕр. Чăнлăхпа ултав ытамĕнчен никам та уйрăлаймасть.

Редакцире ĕçленĕ май тем тĕрлĕ çынпа, нумай пуçлăхпа курнăçса, çĕршыв аталанăвĕн темиçе паллă тапхăрĕнче пурăнса эпĕ ăна ăнланса, тишкерсе пытăм, икĕпитлĕх юрри юрлаттаракансемпе ташлаттаракансене çамрăклах курса тĕлĕнтĕм, вĕсен куçĕнчен пăхакансене, вĕсене халăх умĕнче тасатсахитрелентерсе кăтартакансене курайми пултăм. Вĕсем пичĕсене кĕççе çĕлемесĕрех халăх умне тухма, халăх ячĕпе калаçма, халăхшăн тăрăшатпăр тесе кăкăра çапса мухтанма, шантарма пултараççĕ. Вĕсенчен хăшĕсем халăхран, обществăран уйрăлсах та каймаççĕ, паттăрлăх хăвачĕн сывлăшĕпе хăйсене хăмпălла хăпартса яраççĕ, çав хушăрах хăйсен чапĕшĕн, хăйсен ырлăхĕшĕн ытларах хыпăнса, хăйсене-хăйсем турă вырăнне хурса мăнкăмăлланса каяççĕ, хăйсене çӳлти пуçлăхсем хӳтĕлессе шанса вĕсен ячĕпе пурне те хăратса пăхăнтарма хăтланаççĕ.

Унашкал шăршăнтарнă шăршлă пушă сулмакне пирĕн Чăваш çĕршывне ертсе пыракансем те, вăрнарсем те çамкапа та, çурăм çинче те тӳссе курнă.

Мĕнле уçă кăмăллăн тухаттăмччĕ ăс-тăн çулçӳревĕнчен Вăрманкаса кайсан! Николай Петрович Петров председатель манпа, палламан ачапа, ывăлĕпе калаçнă пек калаçать, ялта пĕрле çӳрет, фермăсене ертсе каять, юлашкинчен клуба илсе кĕрет. Унта унăн «культура министрĕ» Павел Евдокимович Кошкин пур. Пĕрле «Самолет» колхоз малашлăхĕ, ял культури çинчен калаçатпăр.

Тем çинчен калаçнă вăхăтра та Николай Петровичăн пĕр сăмах тухса каятчĕ: «Сĕт сăвассипе пире районта çитекенни çук та, çавах куçса çӳрекен ялава пире памаççĕ». Сăлтавне, уншăн кам айăплине ăшă кулăра ирĕлтерсе яратчĕ. Тепĕр чухне «Эсир ăна ăнланма кирлĕ», — тесе алă сулатчĕ.

Эпĕ ĕнтĕ районта мĕнле спектакль лартнине курса тĕлĕнме пуçланăччĕ. Çав суя спектаккăле мухтаса «тăвăллăн алă çупакансенчен» кулас та килетчĕ. Йăлтах районта, райком çуртĕнче, пĕр çын хушнипе, пĕр çынран хăранипе пулса иртетчĕ çакă. Выльăхчĕрлĕхпродукчĕсем туса илессипе тата вĕсене патшалăха сутассипе пыракан социализмла ăмăрту кăтартăвĕсене парти райкомĕн бюровĕпе райĕçтăвком (ячĕшĕн) кашни виçĕ уйăх хыççăн пăхса тухаççĕ. Йышăнăвне хаçатра тӳрех пичетлемелле. Пире редактор пĕрмаях тăхтаттарать, «татса параймаççĕ-ха», тет. Кольцовкăри Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз сĕтпе тата аш-какайпа «мала тухайман» иккен. Статистика кăтартăвĕсене майлаштарса çитереймен. Район халăхĕнчен пуçтарнă сĕте тата аш-какай комбинатне уйрăм çынсем пырса панă выльăх-чĕрлĕх шутне кульцавсем çине çырса хурайман. Хут-хĕтĕре майлаштарнă хыççăн Сергей Ксенофонтович Коротков куçса çӳрекен хĕрле ялавсене пурне те хăй çавăрса тытать. «Ленинец» колхоз председателĕ Иван Сергеевич Сергеев та, аш-какайпа малта пыраканскер, ялан иккĕмĕшне тăрса юлатчĕ.

Куçпа курсах суя йышăну тăваççĕ, район хаçачĕ те куçпа курсах таса мар информаципе тăрантарать вулакансене. Редакторăн хирĕçлеме хал çитмест. Каласа пăх-ха?

Коротков çинчен пĕр усалтарах сăмах илтсен е хăйне хирĕçлесе тăрсан, никам та ĕç вырăнĕнче сыхланса юлайман. Обком секретарĕсене те Кульцав ташши ташлаттарнă. «Советская Чувашия» хаçатра пĕр сăнӳкерчĕк пичетленнĕччĕ. Корот-

ков унта кукуруза пуссинче тӑрать, «Хрущев пуҫӗ» кӑвапа таран ҫеҫ. Ҫулла ӳкернӗскерне темшӗн тата хаҫатҫисем кӗркунне лартса янӑ. Унччен Кульцав пӗтӗм тӗнче илтмелле кукуруза юрри шӑрантаратчӗ те... Малтанах кукурузи чӑн та Коротковран хӑйӗнчен ҫӳллӗ пулатчӗ. Мускав писателӗсемпе журналисчӗсем Вӑрнартан тухма пӗлмен. Анатолий Емельянов та чи малтан Кульцав кукурузин пуҫне тутанса литература анлӑшне чӑмрӗ, пӗрремӗш кӗнеке кӑларчӗ. Евгений Ефремов-Ени ӗнтӗ Коротковӑн ҫыравҫӑ-адьютанчӗ вырӑнӗнчехчӗ. Нумай ыйтусене Шупашкар журналисчӗсем ун урлӑ татса паратчӗҫ. Чӑнлӑха пӑсса кӑтартнӑ тесе «Советская Чувашия» хаҫатӑн редакторне редактор ручкисӗр тӑратса хӑварчӗҫ Чӑвашӑн сехре хӑпнӑ пуҫлӑхӗсем.

Майлашӑнса-шайлашӑнса пурӑнма хӑнӑхнӑ парти «патшисем-чурисем», КПСС Чӑваш обкомӗн пӗрремӗш секретарӗ С.М.Ислюков ертсе пынипе, 1961 ҫулхи утӑ уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче Сергей Ксенофонтович патӗнче ӗҫлӗ хӑнара пулнӑ. Вӗсем Шупашкара тухса кайсассӑнах Коротков аптӑраса ӳкет. Арӑм-хӗрарӑм сутти туса помещикла пурӑннӑ теҫҫӗ те ӑна, Кульцавпа Зеленовка хӗрӗсемпе каччисене туй умӗн тата туй хыҫҫӑн ӗмӗрлӗхе йӗртсе-тавлаштарса мӑшкӑла хӑварнӑ тӗслӗхсем халӗ те халӑхра чӗрӗ те...

Ирхине радиопа пӗлтернӗ хурлӑхлӑ хыпар, паллах, бомба ҫурӑлса кайнӑ пекех пулчӗ: Чӑваш Республикин ЦИК председателӗн, ЧАССР Совнарком председателӗн заместителӗнче, Ҫӗр ӗҫ халӑх комиссарӗнче, Вӑрнар райкомӗн пӗрремӗш секретарӗнче ӗҫленӗ. СССР, РСФСР, ЧАССР Аслӑ канашӗсен депутачӗ, КПСС виҫӗ сьезчӗн делегачӗ, парти обкомӗн членӗ пулнӑ, икӗ хут Социализмла Ӗҫ Геройӗ, тӑватӑ хут Ленин орденӗн, виҫӗ хут Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялавӗн тата ытти нумай орденсемпе медальсен кавалерӗ, чӗрӗк ӗмӗр тӑван колхоза ертсе пынӑ Сергей Ксенофонтович Коротков 1961 ҫулхи июлӗн 3-мӗшӗнче сарӑмсӑр вилсе кайнӑ.

Ӗнер кӑна курнӑ ҫын тек ҫук ӗнтӗ. Чӑваш патшалӑхне нумай ҫулсем хушши ҫирӗп кӑшӑлра тытса тӑнӑ «ҫӗр кӑвапипе» сывпулашма Шупашкарти хӑйӗн тарҫисем кӑна мар, Мускавран та, Чӗмпӗртен те, республикӑри кашни хулапа районтан халӑх килсе тулнӑччӗ. Эпир те унта васкарӑмӑр. Пӗтӗм район пуҫлӑхӗ кульцавалла талпӑннӑ вӑхӑтра станцире пушар тухрӗ. Мазут ҫунма пуҫланӑ. Унччен кӑшт маларах йӑла ыйтӑвӗсен комбиначӗн мастерскойӗ хыпса тухнӑччӗ те, пушар ҫумӗнче райкомӑн технички таран тенӗ пек камантласа тӑратчӗҫ. Халӗ унтан хаяртарах пушар та кирлӗ мар, Короткова пытарма вӑхӑтра ҫитмелле.

Виле пытарса шăппăн таврăнтăмăр, каçчен станцири пушара та сӳнтернĕ. Эпир хамăр хаçатпа малалла ĕçлеме пуçларăмăр.

Нумай çул иртсен, Шупашкарта трактор завочĕ тунă çĕрте ĕçленĕ вăхăтра, коммунизмла субботниксенчен пĕринче, 12-мĕш строительство управленийĕн бытовкине лекрĕм. Çавăнта пĕр паллакан çын ыттисем пек çур стакан мар, тулли икĕ стакан шур эрех тӳрех ячĕ те чăх тукмаккине çулса тытрĕ. Хăйне куçран пăхнине сисрĕ пулас та вăл манран ыйтрĕ: «Эсир мана паллатăр-им?». «Çапла», — терĕм. «Ăçта курнă? Мĕнле майпа?» «Вăрнарта. Директорччĕ эсир. Эрех мĕнле ĕçнинчен пĕлтĕм». Вăл та мана аса илчĕ. Калаçса-калаçса Коротков патнех çитрĕмĕр. «Да, нумай ĕç майлаштарнă унпа, — тере Болтухов. — Халĕ вăрттăнлăх мар ĕнтĕ. Уншăн пире никам та хупаймасть. Никам та тĕрĕслĕхне тупаймасть. Аш-какай комбиначĕн ашне Кульцав колхозĕ çине хушса çырни чăнах та пулнă. Ăна район хуçисем те, республика пуçлăхĕсем те лайăх пĕлнĕ. Кури куçа курми тунă çеç. Пултарнă çын. Давай, ĕçер Сергей туса асăнса».

Коротков вилнĕ хыççăн Вăрманкасри Петров, Кăкшăмри Сергеев тата ытти председательсем тин çăмăллăн сывласа ячĕç пулас. Район пуçлăхĕсен те кăмăл-туйăм пусăмĕ чăнлăх карчĕ патнерех çывхарчĕ. Арăсланран хăракан йыт çурисем пек туйăнатчĕç мана вĕсем коротковщина-хрущевщина çулĕсенче. Коротковĕ Хрущев ячĕпе чĕкĕртсе тăнă-çке пурне те. Хаçата вăйлă кăларма, асса кайнă пуçлăхсене çивĕч критиклеме çăмăлах марччĕ.

Кульцавсене хирĕç çăвар уçма хăяйман тапхăрта ӳссе çитĕннĕ йĕркелӳçĕ-паттăрсем сахал марччĕ Вăрнар районĕнче. Евсей Дмитриевич Воробьев, Нурăс райхаçачĕн редакторĕ, райком секретарĕ пулнăскер, районти чи пысăк «Гвардеец» колхоза çӳллĕ шая çĕклерĕ, хуçалăх халĕ те республикăра малтисен ретĕнче. Чăваш Республикин Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп кĕнекине кĕртнĕ Исак Федорович Кошкин «Правда» колхоза чаплантарчĕ. Николай Петрович Петров «Самолет» колхоза 28 çул ăнăçлă ертсе пычĕ. Семен Валерианович Валерианов Ишекри «Россия» колхоза, «Вурнарский» совхоза çĕклеме нумай вăй хучĕ. Михаил Петрович Петров мăн явăшсене пуйтарчĕ. Çĕрпелте Василий Игнатьевич Романов, Хирпуçĕнче Александр Ильич Ильин çамрăклах пăларчĕç. Ял Совет председателĕсенчен Хапăсри Григорий Матвеевич Матвеев, Санарпуçĕнчи Иван Кузьмич Кузьмин ытларах асра юлнă. Вĕсен ĕçĕ çыпăçуллăччĕ, халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерессипе, уççăнлăхĕпе палăратчĕç. Ырă ячĕ

халĕ те халăхра юлнă. Вĕсен ăслă сĕнĕвĕ, пулăшăвĕ пире хаçат кăларнă çĕрте пайтах усă панă.

Халăх ăс-тăнне вырнаçса тĕпленнĕ ĕненĕве коммунизм мăлатукĕпе тӳнклеттерсе парти программин наркăмăшĕпе ăшран кăларса, пуçра шĕветсе ярас çуккине ăнлансах тĕне хирĕçле ĕçе пĕлипĕлми тенĕ пек хĕмлентеретчĕç. Усси çукрахчĕ те ĕнтĕ, çапах нумай-нумай çынна хутшăнтарнăччĕ унта. Иртеменкасси чиркĕвĕ — тапăнмалли чи курăмлă вырăнччĕ. Район Совечĕн ĕçтăвком председателĕн çумĕ Павел Алексеевич Алексеев, çӳлтисем хушнипе, чиркĕве хупма патнех çитнĕччĕ, анчах тĕн çыннисем коммунистсенчен çаврăнăçуллăрах та ăслăрах пулчĕç, хăйсене тапăнакансене тукмак çитерттерчĕç. Пирĕн те тĕне хирĕçле çырнă, çĕнĕ йăла-йĕркене кăтартса панă материалсем ятарлă страницăсенче йĕркеллех тухса тăратчĕç. Халăхĕ пурпĕрех чиркĕве туртăнатчĕ. Çак уссăр ĕçĕн хурлăхлă вĕçĕ вăл халăх хушшинчи авалхи йăлайĕркене ӳсекен ăру пурнăçĕнчен пистерни кăна пулчĕ.

«Иртеменкасси чиркĕвĕнчи Василий атте вырăнне Христос хăй ларас пулсан мĕн тăвĕччĕ-ши тĕнсĕр пурăнмалли коммунизм идейисен талпăнăвне хирĕç?» — тесе шухăшлаттăм атеизм страницисене хатĕрленĕ чухне.

Районсене пĕрлештерсен, халăх пурнăçĕ виçĕ районта виçĕ тĕрлĕ пулни курăнатчĕ. Вăрнар йĕпреçсемпе элĕксенчен чылай маларах çĕкленнĕ иккен социализм коммунизма эстафета патаккине тыттарнă çулсенче. Миша Васильев Йĕпреç районĕнчи «Березовка» колхозра Вьетнамра рис пуçтарнă пек хĕрарăмсем кĕписене пилĕк таран хăпартса çаруран шывра тырă вырнине курса тĕлĕннĕ. Ун пирки хаçатра тухсан, Йĕпреç пуçлăхĕсем «эсир пиртен мăшкăллатăр, ун пекки пулман» тесе хирĕçлерĕç, çапах тĕрĕслĕхе çĕнтерейменĕç.

Вăрнар районĕнчи ялсенче çĕнĕ клуб, шкул çурчĕсем ӳсеӳсе ларнă вăхăтра Элĕк енче... «Красный Октябрь» колхоза çитсен хам куçа хам ĕненмерĕм.Хирлеппуç клубĕ улăм шлепкепе ларать. Улăм витнĕ сарай юлман ялĕнче. Культура кĕтесне вара манăçа хăварнă. Фельетон çыртăм çакăн çинчен:

«Клубсем калаçма пуçласан

Клуб Таутович паян та кăнтăрлачченех тутлă ыйха туртрĕ. Чăрмантаракан çук. Хытă вырăн çинче вăрах йăваланса выртнипе аяк пĕрчисем сурма пуçласан тин хăрах куçне уçрĕ, тепĕр куçне уçиччен упа сассипе мĕкĕрсе ячĕ:

— Эй, Тимĕр Кăмака?!

— Кхăм! Эпĕ кунтах. Мĕн кирлĕччĕ? — мачча тăрринчен пуçне кăларса пăхрĕ Тимĕр Кăмака.

— Çăраççине чĕнтер кунта!

— Çиччас. Эрешменсене халех чуптарап.

Тепĕр темиçе çекунтран ал арманĕ пек Çăра Клуб умне хашкаса çитет.

— Мĕн хыпарпаччĕ, хисеплĕ Клуб Таутович?

— Тăхта. Эй, Тимĕр Кăмака? Эсĕ те кĕр! — пит сурьюснă калаçмалли пур паян сирĕнпе. Каллех мачча çӳлĕш çăхав-шалăп. Иксĕре те ял халăхĕ вилсе каясла тарăхать. Мĕн тума кирлĕ вĕсем, теççĕ. Япăх ĕçлетпĕр, тăвансем, çав тери япăх!

— Эпĕ япăх ĕçлетĕп-и? — çухăрса ячĕ иртнĕ хĕлле каскăнçăсен айне пулса хăрах урине хуçнă Тимĕр Кăмака. — Çулла каннă, ун хыççăн, шартлама сивĕре, çынсене ăшăтнă-çке...

— Вăт канальăсем, — шăлтăртатса илчĕ Çăра. — Ыр тунăшăн мĕнпе тав тăваççĕ? Эс пур, çĕрĕ-çĕрĕпе, кунĕ-кунĕпе сивĕре хытăркаса хурал тăр. Тăлăп илсе парасчĕ хăть Выл пасарĕнче.

— Шăпланăр! — тарăхнă пек кăшкăрса тăкрĕ Клуб Таутович. — Халăх ыйтăвне тивĕçтермеллех. Ĕçрен хăтармалла пулать сире.

— Мана-и? — хул хушшинчи туйисене урайне вăркăнтарчĕ Тимĕр Кăмака. — Мана-и, вăрçă уксах-чăлахне... Урасăр инвалида никам та тĕкĕнме пултараймасть.

— Эпĕ... эпĕ... — шăлтăртатса илчĕ Çăра. — Суда паратăп. Çакăнта ĕçе килсе кĕнĕренпе чистă простутицă çаклатрăм, ăшсăр пултăм. Тошĕ инвалид. Кăххăм-кăххăм...

— Эй, ухмахсем, çавна ăнланмастăр. Ман сире «тăн кĕртни» çинчен пуху йышăнăвĕ сăрмакламалла. Çăхав-шалăп çине мĕнле хуравлас? Вăрнара, культура пайне мĕн, хăвăра ăсатас-им? Хвармалисăм юххине юхтармалла-çке? Ăнланмалла-и?

— Паçăрах çапла каламалла та...

— Апла-тăк, мĕн пуçусене тăнсăр сурăхла усрăр? Пенси çинчен шухăшлама та вăхăт. Эсĕ, Тимĕр Кăмака, хĕрĕх çиччĕмĕш çултанпах ĕçлеттĕнччĕ-и-ха кунта?

— Аха. Кирпĕч Кăмака улăштарнăччĕ мана пĕр хушă.

— Ну вăл нумай тытăнса тăман, хута кайнă-кайманах хавшаса урайне тĕшĕрĕлнĕ. Пĕтнĕ вăл чирпе. Ячĕ те çухалнă халĕ унăн. Сана та, Çăра, тĕнче илтмеллех ырламалла. Хуралта сыхă тăратăн. Паянах иксĕре те комĕç ударникĕн хисеплĕ ятне пама саявка тăрататăп.Çĕнĕ çула çĕнĕ наградăпа кĕтсе илетпĕр.

— Турă пулăштăр сана, Клуб Таутович, — алă çупса ячĕç Тимĕр Кăмакапа Çăра. — Ураскилт пачăшкине сан сывлăхушăн ятарлă кĕлĕ янраттарма ыйтас.

— Апла пулсан, ĕçе çĕнетесси çинчен пуç тавра шухăшлар. Культура çурчĕсене Турра шанмасăрах хĕле хатĕрлемелли юхăм пуçарнă. Кам мĕн тунипе-туманнине пĕр-пĕрин тĕрĕслемелле тесе хытарчĕç культхуçасем. Атьăр-ха каяр эпир те, кӳрше, Хирлеппуçне, виç-тăват çухрăма уксакласа çиткелĕпĕр, — хаваслантарчĕ вĕсене Клуб Таутович.

— Унтах кăлтăртатса çитме пулĕ-ха, - савăнса ӳкрĕ Çăра. — Унти Çăраççин малта пыракан опытне вĕренес...

— Эс, çавракаскер, çапла пуль-ха, — ахлатса ячĕ Тимĕр Кăмака. — Ман ура шăмăпа туртса сурать, çанталăк пăсăласса пулас. Эпир хатĕрлениччен кустар-ха лаща патне.

Çур сехетсенчен Çăра хуйхăрса таврăнчĕ, кĕç йĕрсе ярас пек.

— Шариков  ăйăр мар, кĕсре те памасть. Снать не снаю сире, всякий клуп-тармуетсене, сирнпе ман аш-сĕт планĕ тулмасть, тесе ятлаçса ларать, — пĕлтерчĕ вăл.

Эй-яй-яй, халиччен пире культура вырăнне хуманнине паян та хисеплес çук ĕнтĕ. Каяр çурранах, çиткелесе килĕпĕр, — тарăхнине шăнарса тусĕсене лăплантарчĕ Клуб Таутович.

— Çапах та, çурран намăс пулать, çитменнине тата халăх ĕçне тăватпăр. Çавăнта, пахчара, улмуççи шуратса çӳрекен качака пурччĕ, тытас та кӳлес. Ан тив, пире мар, «Таутово» колхоз хуçине Шарикова намăс пултăр, — сĕнӳ пачĕ Тимĕр Кăмака.

Кĕçех акă Тавăтран Хирлеппуçнелле пĕр урапа тухса хăлтăртатрĕ. Тилхепине Тимĕр Кăмака тытнă. Клуб Таутович хыçала ларнă. Ал арманĕ пек Çăра ун çинче çакăнса пырать. Урхамахĕ мекеклетет кăна.

Яла кĕрсен, кĕпер урлă каçнă-каçман, вĕсене хирĕç Хирлеппуç Клубĕ чупса тухрĕ.

— Аван-и, Клуб Хирлеппович! — эртелпе саламларĕç тавăтсем, чарусăр урхамахĕ чалт! сиксе чĕвен тăчĕ те хуçа пуçĕ çинчи улăм шлепкене мăйракипе тирсе чăшкăнтарчĕ.

— Салам. салам, — тайăлнă шлепкине тӳрлетрĕ Клуб Хирлеппович. — Тем, çĕнĕ йышши транспортпа курăнать эсир. Вăлку юрĕ-çке, техника, пурнăç аталанăвĕ, нимĕн те калаймăн, çитменнине тата — мутă улшăнса çĕнелсех пырать-çке. Пурнăççи лайăхланнă май çи-пуçĕ те якалать вĕт. Пурин пуçĕ çинче те халь тимĕртен çĕленĕ кепкă та шифер карттус. Ман анчах пуç тăрринче вăрçăчченхи улăм шлепке.Çĕрсе кайнăскер, кашни çулах çĕтĕлет çав, то çил çавăрттарса каять, ак çак шаймăк йышшисем те мăшкăллаççĕ манран. Ну сана, хаклă хăнана... ятламастăп ĕнтĕ, çĕн улăмпа саплакалăп. Çапах та, пĕрре çĕтĕлнĕскере ĕмĕрĕпех ăçтан юсаса ларăн-ха. Эх, тăмпуçа мана, пакăлтатса кайрăм, ара мĕн тума кирлĕ çак ман улăм шлепке сире... Малалла, ял тĕпелнелле иртĕр.

— Кирли кирлех-ха, Клуб Хирлеппович. Сирĕн пата эпир шăпах çав ыйтупа килнĕччĕ. Хĕл тумтирне тĕрĕслеме, шалти ĕçпуçпа паллашма, — алă тытрĕ Клуб Таутович.

— Тархасшăн, хаклă хăнасем-кӳршĕсем, — хыпăнса ӳкрĕ Клуб Хирлеппович. — Ак анчах каларăм-çке пуçа улăм шлепке тăхăнни вăтăр çул çитет тесе. Чăвашра тезкăсем пиншерĕн, аçа çапса çунтарса ятăр та мана çак самантрах, анчах манашкал улăм шлепкепе капăрланса «культурăланса» ларакан клуб урăх пулас çук. Хамăр ялта улăм витнĕ сарай юлмарĕ те... Ма аçа çапмасть вĕсене, колхоз хуçисене, манран та, халăхран та мăшкăлланăшăн. Хăйсемшĕн вилеççĕ-ха, пирĕн çине çеç куç хӳрипе те çаврăнса пăхмаççĕ. Иван Кузьмич пулчĕ председательте — ман пуçра çав шлепкех юлчĕ, Николай Федорч ларчĕ ун хыççăн пукан çине — ак çав сирĕн урхамах шăтарнă хăрах хĕррине çеç сапласа пачĕ. Иван Платонч пуртвĕль йăтса çӳрерĕ — улшăну пулмарĕ. Михаил Иванчпа Тимкă Якимова суйласан та тимĕр кепкă кĕтсе илеймерĕм. Вĕсем хуçаран тухсан халăх хăйĕн тилхепине Николай Тихăнча тыттарчĕ — çанталăк улшăнмарĕ, халĕ ĕнтĕ — çĕнĕ пуçлăх. Ку ĕнтĕ, Иван Емельянчă, вĕренме пăрахман, наука çынни, культурăшăн чи малтан тăрăшмалла пек.

— Куратпăр епле тăрăшнине, — хаш! сывланипе Клуб Таутовичăн алăкĕ çинчи Çăра çĕре татăлса анчĕ. — Пирĕн те çавахçке. Çирĕмрех ватăлса лартăм, тумтир çĕтĕлсе пĕтрĕ, куçлăх ванчĕ, ял шăпăрланĕсем çил ачисемпе туй тунă вăхăтра Тимĕр Кăмакана амантрĕç те, халĕ хĕле Çурçĕрти пек кĕтсе илмелле пулать ĕнтĕ.

— Хĕл Мучи хисепĕпе чапланса савăнатпăр, — Клуб Хирлеппович тутăрпа пĕркеннĕ Çăраççийĕ çумне пырса тăчĕ Тавăт Çăри.

— Юрать-ха сирĕн Тимĕр Кăмаки матур, уксак пулин те — службăрах. Манăн Кирпĕч Кăмака вара çумăр шывĕпе чирлесе хĕне кайрĕ те, ниепле те ураланаймасть, — пĕлтерчĕ хуçа. — Çак çĕрĕк шлепкепе йăшнă кăмаках ватăлтарчĕç ĕнтĕ мана.

— Та-ак, ĕçпе паллашар-ха, мĕн тукаланă эс? — ыйтрĕ хăнасенчен асли.

— Хĕлле урăлтаркăч уçнăччĕ. «Сивĕре вăрах ларни ял çыннин ĕмĕрне тăсма пулăшать-и?» ятпа ыйтупа хурав каçĕ ирттертĕм, «Пăрланнă эрешмен» спектакль кăтартрăм. Кино тенине маннă ĕнтĕ. Ак çак сĕнĕве халăх хушшине саратăп: «Хĕлле «Красный Октябрь» колхоз клубне мăлахайпа тĕпленĕ çăматă, кĕрĕк е тăлăп, виçĕ хутран кая мар алсиш тăхăнса пымалла е кĕсьене чиксе çӳремелли кăмакапа усă курма юрать. Çăва тухсан плащпа е зонтпа пымалла, урана атă тăхăнмалла...» — хăюллăнах хуравларĕ Клуб Хирлеппович.

Тĕрĕслӳ хыççăнхи калаçăва пуçлăха та чĕнчĕç, анчах И.Емельянов унта хутшăнмарĕ.

Тунсăх юрри юрласа таврăнчĕç яла тĕрĕслевçĕсем. Тепĕр кунне Тимĕр Кăмакапа Çăра Клуб Таутовича кăвак çутлах вăратрĕç.

— Мĕншĕн пирĕн намăс курмалла? Халăха пухар та калар: колхоз пуçлăхĕ В.Шариков хăй вĕрсе ăшăттăр сана, эп ĕçрен тухатăп, — терĕ хăюллăн Тимĕр Кăмака.

— Эпĕ те, — хут татки тыттарчĕ хуçана Çăра. — Ман вырăнта сана колхоз пуçлăхĕ хăй хураллатăр. Санăн вучахна чĕртсе ятăр.

Клуб Таутовичпа Клуб Хирлеппович вара пĕр харăс чан çапса ячĕç. Инкек сассине халăхсăр пуçне кам илтет-ши?

*В.Кузьмин.*
*1964 çулхи юпа уйăхĕн 29 мĕшĕ».*

ĂНЛАНТАРСА ПАНИ: Ку фельетона ЧАССР Верховнăй Совечĕпе Вăрнар производство управленийĕ (Вăрнар, Элĕк, Йĕпреç районĕсем кĕнĕ) кăларса тăнă «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакторĕ П.А.Тихонов-Ялгир пичетлеме хăрарĕ. Коммунизм патне çывхарнă вăхăтра та Элĕк районĕнчи пек улăм витнĕ клубсем сыхланса юлни совет халăхĕн пурнăç сăнарне вараласа кăтартни пулать, уншăн çӳлтисем никама та тавтапуç калас çук, тесе фельетона каялла тавăрса пачĕ. Халĕ вăл пуçласа пичетленет.

Элĕк райкомĕ те ăша хыптарнăччĕ. «Вăрнар капкăнĕнче» «Молния» колхоза тĕртсе илнĕччĕ. 1962 çулхи çичĕ уйăхра вĕсем кашни чăхран 24 çăмарта çеç илнĕ. Производство управленийĕнче вĕсенчен кайри те никам çук. Кулăшла ӳкерчĕкре эрех кĕленчисем тытнă хуçа чăхсемпе-автансемпе пуплет. Аяла сăвăлла çапла çыртăм:

Чăхсем:

— Кăт-кăтик, кăт-кăтик,
Эпир выçă, кăт-кăтик!

Колхоз председателĕ Г.Судаков:

— Эрехпе çырткаламалăх
Турăр-и пĕр çăмарта?
Мĕн çӳретĕр çухăрса,
Епле хăйрăр калама!

Тĕрĕс мар критикленĕ тесе райкомран Вăрнара шăнкăравлаççĕ, хаçата вăрçаççĕ. Тихонов пире, Александр Мешковпа иксĕмĕре, каçару ыйтма тата «Молния» колхоз çинчен мухтав статйи çырса килме хуса кăларса ячĕ. Çитрĕмĕр мотоциклпа Ураскилте, фермăра пултăмăр. Çыннисем хăйсен хуçинчен тăрăхланăшăн çав тери хĕпĕртенĕ. Ферминче ним латти те çуккă. Юхăннă хуçалăхпа паллашнă хыççăн аран-аран шыраса тупрăмăр хаяр хуçана. Мешков каçару ыйтнă пекки турĕ, кайран Судакова мухтаса пысăк статья сăрмакларĕ. «Хăтăлас килчĕ, Элĕкре чухнех эпир унран сехĕрленсе çеç тăнă. Пĕрремĕш секретарьпе хăратать. Туслă», — тет мана куçран пăхаймасăр. «Эсир коммунист вĕт, пурăнса курнă çын», — терĕм те, вăл алă çеç сулчĕ.

Утмăл тăваттăмĕш çул вĕçĕнче çĕршыв çийĕн икĕ хутчен аслати кĕрлерĕ. Парти хăйĕн тĕп канашĕсенче ултавлă пурнăçа сивлерĕ, промышленноçпа ял хуçалăхне каллех пĕр алăпа тытса пырсан лайăхрах пулать тесе йышăнчĕ. Районсене, райкомсене çĕнĕрен туса хучĕç, колхозсене пысăклатса пычĕç, совхозсем тума пуçларĕç. Çĕнĕ çула шавлăн кĕтĕмĕр. Александр Мешкова Элĕк райсовет ĕçтăвкомĕн секретарĕ пулма илсе кайрĕç. Михаил Кустикова редакцирен пăрчĕç. Вăл «Юдин наступленийĕ» фельетонпа çунса кайрĕ. Тĕп-тĕрĕс çырнă пулин те, журналиста аслăраххисем хӳтĕлемерĕç, фельетон геройĕ майлă тăчĕç. Лайăх çыракан пултаруллă çынна ухмаха тăратса хăварчĕç.

Ахаль те вăл вăхăтра Вăрнарта камитле мыскарасем пĕрин хыççăн тепри пулса иртрĕç. Ветеринари пункчĕ, зооветтехникум пуçлăхĕсем йĕркерен тухса кайнăччĕ. Техникум директорĕ Роман Иосифович Осипов тăрантас ямшăкĕнче вĕренекен ачана тытса усранă. Хуçалăх, воспитани ыйтăвĕсемпе нумай пăтăрмах сиксе тухнă. Вĕренекенсене сусăрлатнă, вĕлернĕ тĕслĕх пулнă. Хуçисене пуçлăхсем пуçран шăлнă. Редакцие çырусем нумай килчĕç. Вĕсене хаçата яртармаççĕ. Николай Орлов вара, ушкăнпа çырса, «Известия» хаçата ячĕ. Унтан Элла Максимова килчĕ. Эрнипех тĕрĕслерĕ вăл. Райком бюровĕнче пăхса тухрĕç. Çитменлĕхсене, ирсĕрлĕхе хăй куçĕпе курса ĕненнĕ паллă журналист, ушкăнпа хăйне хирĕç тăрсаултава пытарса хăварассишĕн талпăнакансене сăмахпа çĕнтереймесĕр, макăрса ячĕ. Кĕçех «Моральная сторона» ятпа хаçатра вăйлă питлев тухрĕ, ăна Шупашкарта та, Вăрнарта та сӳтсе яврĕç. Пуçлăхсене улăштарчĕç.

Кăрлачра парти райкомне Мăньял Хапăс ачи Анатолий Викторович Емельянов ертсе пыма пуçларĕ. Кăшт каярахпа райхаçат редакторне Çĕпритун Шăпчăк ывăлне Анатолий Спиридонович Толмасова çирĕплетрĕç. Иккĕшĕ те вĕсем малтан комсомол райкомĕнче, тăван района таврăниччен, КПСС обкомĕнче пĕрле ĕçленĕ.

Чăнлăх ултава çак вăхăтра çавăрса çапрĕ-çапрех.

## Вăрнар чĕпписене вĕçтерет

Çак пăлхавлă та хĕрӳ çулсенче эпир те редакцин хĕрнĕ лаççинче туптанса çирĕплентĕмĕр. Пурте ялкортан кăштах уйрăлтăмăр пек. Малтанхи «сар тутасем» марччĕ ĕнтĕ. Пурнăç ыйтăвĕсене, районăн, республикăн экономика, социаллă пулăмĕсене тишкерсе хак пама, тĕрлĕрен жанрпа çырма тата çамрăксемпе ĕçлеме вĕрентĕмĕр. Вĕсенчен чи пултаруллисем хăйсен вăйне редакцире виçсе пăхма пуçларĕç. Мăньял Хапăс ачи Виталий Краснов ăсталăхĕпе палăрчĕ.

Йăва та тăварланса пынине туйрăмăр. Григорий Михайлов, ялхуçалăх институтĕнче диплом илнĕ хыççăн, колхоза кайрĕ. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ зоотехникĕ ята тивĕçрĕ, чунĕ чăтмарĕ пулас, юлашкинчен каллех хаçат ĕçне таврăнчĕ. Серафим Ефимов Хусан çумĕнчи технологи техникумне вĕренме кĕчĕ. Владимир Москвин Чăвашрадио корреспондентне куçрĕ.

Эпĕ Элĕк районĕнчи «Ленин çулĕпе» хаçатăн яваплă секретарĕнче ĕçлеме тытăнтăм. Римма Федорова хăйсен тăван енне таврăнчĕ.

Кайăксем çунатланнă чĕпписене вĕçтернĕ пекех, Вăрнар редакцийĕ те хăй ӳстернĕ çамрăк журналистсене çĕнĕ пурнăç анлăшне ăсатрĕ.

Пĕрле ĕçленĕ, вĕреннĕ юлташсенчен каярахпа Михаил Васильев, Павел Николаев, Анатолий Степанов «Çĕнтерӳ çулĕн» редакторĕнче ĕçлерĕç. Манăн Йĕпреç районĕн хаçатне кăларма тӳр килчĕ. Хама «Советская Чувашия» хаçата куçарнă чухне «Çĕнтерӳшĕн» редакторĕ пулма Серафим Ефимова сĕнтĕм. Çирĕм çул ытла редактор пулчĕ вăл.

Вăхăт иртнĕçемĕн редакци çыннисем те улшăнсах пыраççĕ. Пирĕнпе ĕçленĕ хаçатçăсенчен Виталий Краснов çеç юлнă, вăл журналистикăра та, литературăра та курăмлă утăмсем тăвать. Пирĕн «хурт вĕлли» те тахçанах çук ĕнтĕ. Кивелнĕ йывăç çурта пăснă. Урам кĕтессинчи пушă вырăна пăхса иртсе кайнă чухне çамрăклăх вăхăчĕ тухса тăрать, туслă ĕçлесе пурăннă юлташсен сăнарĕ вылянать, вĕсен сасси, кулли хăлхара янăрать. Хама-хам вара нумайлăха кайнă командировкăран таврăнннă пек туятăп.

*2000 çулхи пуш уйăхĕн*
*21-23 кунĕсем.*

## УМРИНЕ КУРМАСĂР — ПУЛАССИНЕ ТУЙСА

### «Стариксем» хушшинче

1962 çулхи кĕркуннехи Элĕк мыскари-асапĕ хыççăн мана ним хĕрхенмесĕрех хĕнерĕç. «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакторĕн Петр Тихоновăн пӳлĕмĕнче ирттернĕ пухура мунча кĕни ĕмĕрлĕхех асра юлчĕ. Малтан «Кузьмин, сана хӳтĕлетпĕр», текен «хăюллă» коммунистсем ялхуçалăх производство управлени парткомĕн секретарĕ Виталий Данилович Данилов умĕнче шăп пулчĕç, малтанах хатĕрлесе хунă йышăнушăн алă çĕклерĕç. Партком бюровĕн ларăвĕнче мана çĕнĕлле ислетрĕç. Чи аслин çывăх çынни пулмасан унта, тăшман вырăнне хурса, тулласа тăкма та хатĕр «паттăрсем» ларатчĕç. «Командировкăра ушкăнпа ĕçкĕ йĕркеленĕшĕн тата редакци автомашинине çĕмĕрнĕшĕн» тесе, чи хаяр выговор пачĕç, ăна райкомра упранакан учет карточки çине хурапа çырса хучĕç. Пĕрремĕш хут айăпа кĕтĕм çапла парти умĕнче — хамран кăна килмен сăлтавсене пула. Кама мĕнле шанмаллине, кампа епле калаçмаллине лайăх ăнлантарчĕç-тăнлантарчĕç. Пĕрле çӳремелли шофер текен çынна кайран, ĕçнине курсан е пĕлсен, нихçан та шеллесе тăмастăм.

Хуйха хĕрӳ ĕçпе пусарнă. Хама «пулăшнă» юлташсенчен те писмен, хушăран «Сирĕн чĕре кутĕнче пурпĕрех мулкач йăпшăнса ларать», — тесе кулаттăм вĕсенчен. Александр Мешковне малтанах инкекрен хăтăлма пулăшнăччĕ. Николай Орловне, хăй Йĕпреç пикипе Римма Федоровапа юрату кулăшĕнче выляса арăмне Надьăна йĕртнĕ вăхăтра та, сутмарăм. Редакцире лартнă водевиле коммунистсемпе сӳтсе явнă чухне те унчченхишĕн тарăхса тавăрас темерĕм. Вăхăт пурпĕрех пурне те хăй вырăнне лартать, тесе шухăшласа ирттерсе ятăм.

Шупашкара кайсан редакцисенче пĕрмаях пулнă, «Çамрăк коммуниста» та кĕрсе тухаттăм. Ăшра çĕкленӳлĕх, пуçра çулăмлă шухăш çуралатчĕ паллă журналистсемпе калаççан. Вĕсемпе ĕçлесе курас ĕмĕт те çуралнăччĕ.

Çĕнĕ çула хамăн юратупа кĕтсе илтĕмĕр. Пĕлтĕр désинститутран вĕренсе тухнă Римма Ильинана Çĕрпелти вăтам шкула ачасене акăлчан чĕлхи вĕрентме янă. Элĕк ен пикипе эпĕ ялта паллашнăччĕ. Ăна пĕрле вĕреннĕ тантăшĕсем бал-маскарада чĕннĕ. Çĕнĕ телей сунчĕç ĕнерхи студенткăсем пире désинститутра.

Хаҫатăн вĕҫĕмсĕр ĕҫĕ ҫамрăка та самаях ĕшентерет. Тылă витĕр тухнă пек туятăн тепĕр чухне. Кăрлачра та пулин канса илес терĕм кăштах. Хурăнсурта, Ҫĕрпелте Римма Ильинична-па, шкулти, ялти хĕрсемпе каччăсемпе вăхăта савăк ирттеретпĕр, халăх умĕнче тĕрлĕрен ыйтупа калаҫатпăр, юрлатпăр, клубра спектакльсем лартатпăр. Сакăр спектакль лартнăччĕ эпĕ ун чухне. Юратупа туслăх ҫинчен лекци хатĕрлесе клубра хĕрӳллĕн калаҫса-тавлашса илтĕмĕр. Манăн «Таса юратушăн» лекцие пурте ырларĕҫ.

Кăрлач варринче Вăрнар ялхуҫалăх производство управленийĕн комсомол организацийĕн иккĕмĕш конференцийĕ пулчĕ. Унта эпĕ хамăр колхоз ҫамрăкĕсен ячĕпе делегат пулса хутшăнтăм. Шупашкартан обком секретарĕ Феликс Павлов, «Ҫамрăк коммунист» хаҫат редакторĕн ҫумĕ Исаак Кириллов килнĕччĕ. Тĕлпулура Исаак Пантелеймонович мана хăйсем патне ĕҫлеме пымашкăн чĕнчĕ. Феликс Константинович та хапăлах пулчĕ. Ҫапла эпĕ 1963 ҫулхи кăрлачăн 28-мĕшĕнче унта ĕҫлеме пуҫларăм. Мана комсомол пурнăҫĕн пайне литсотруднике илчĕҫ.

Володарский урамĕнчи 5-мĕш ҫурт, Пичет ҫурчĕ, мана хăйĕн ăшшипе ыталарĕ. Пирĕн редакци 4-мĕш хутра, чи ҫӳлте. Кириллов ман пирки малтанах тĕплĕн ăнлантарнă пулас та, редакторĕ, Петр Григорьевич Маркин, чăп-чăмăр питлĕ, яка тумланнă вăтам пӳллĕ, арҫын пулса ҫитнĕ пек курăнакан ҫын, манпа нумаях калаҫмарĕ, вырăсла: «С нами захотелось заострить перо, да?», — тесе йăлл кулчĕ. Пай пуҫлăхĕ Василий Прокопьевич Романов, Элĕк-Ҫĕмĕрле ен ачи, пит йĕрĕскер, ыр кăмăлне тӳрех кăтартрĕ, Ҫĕрпӳ каччипе Вася Петровпа паллаштарчĕ. Пĕрле, пĕр пӳлĕмре ларатпăр, терĕ. Тăвату сĕтелрен пĕри пушăччĕ. Кăшт вăхăтран ун хушшине Хĕрлĕ Чутай учителĕ Иван Лисаев кĕрсе ларчĕ.

Пурте вырăсла ҫыраҫҫĕ. Хаҫачĕ икĕ чĕлхепе тухать те, чăвашли валли Клим Сергеевсем материалсене куҫарса ҫаптараҫҫĕ. Вĕсен ĕҫне Исаак Кириллов тĕрĕслесе-йĕркелесе тăрать. Редакцире тата пропаганда, вĕренекен ҫамрăксен, физкультурăпа спорт, ҫырусемпе массăллă ĕҫ пайĕсем пур. Ответлă секретарĕ вырăс ачи, Альберт Пономарев, вăйлă хаҫатсенче пиҫсе ҫитнĕскер, пирĕнтен кăшт аслăрахскер, атлет пек хулҫурăмлă, ялан хаҫат пирки кăна калаҫакан «старик». Кам миҫе ҫулхине пăхмасăр, унăн пултарулăхĕнчи ҫитĕнĕвĕсене хакласа, чи вăйлă ăстаҫăсене калаҫҫĕ иккен «старик» тесе. Аристарх

Дмитриев, Виталий Захаров, Аркадий Белов, Юрий Плотников пӳлӗмрен-пӳлӗме кумкаласа, коридор тӑрӑх чупаҫҫӗ. Иван Никифоров фотокорреспондент пӗрмаях вӗсенчен «Клише айӗ ҫырса парӑр-ха часрах», — тесе йӑлӑнса ҫӳрет.

Пирӗн ӗҫ вӑл кунта та райхаҫатри пекех. Мӗн хушнине тумалла, хӑвӑнтан тӗнчене тепӗр майлӑ ҫаварса лартмалли пек вӑйлӑ «япала» тупса пурне те тӗлӗнтермелле. Таса чӗлхепе яка, сӑнарлӑ ҫырмалла. Пӳлӗмре тӗлӗрсе лармалла мар. Мухтанса, тӳпене вӗҫсе ан кай.

Манӑн та ӑс-тӑна тата ҫирӗпрех чӑмӑртамалла пулчӗ. Эпир районта чухне хамӑртан ҫамрӑкраххисене шкул ачине учитель вӗрентнӗ пек ӑсталанма чӑтӑмлӑн пулӑшнӑ пулсан, кунта сан ҫумра ӑслӑ канаш парса тӑракан ҫук. Пай пуҫлӑхӗпе ответлӑ секретарь тата редактор пуҫ-али витӗр ылтӑнланса тухнӑ материала ҫеҫ ырлаҫҫӗ-хурлаҫҫӗ хаҫат пичетленнӗ хыҫҫӑн. Кашни журналист мӗне тӑни эртел лаҫҫинчи тӗтӗм-сӗрӗмре, ялкӑшакан вучахра курӑнать.

Пай пуҫлӑхӗ пирӗн, ку хаҫат ветеранӗ («Молодой коммунистра» никам та нумай вӑхӑт ӗҫлемен) пулин те, ҫырас маҫтӑрлӑхӗпе ытти «стариксенчен» ӳксех юлмастчӗ. Йӗркене юрататчӗ, пире пурӑнма вӗрентетчӗ, хусах та, пирӗнтен уйрӑлмастчӗ, ҫывӑрма час-часах пӳлӗмех юлатчӗ. Эпир виҫҫӗмӗр те сӗтел ҫинче, вӑл-пукансем ҫинчеччӗ. Кӑштах «пуйсан», «Атӑл» хӑна ҫуртне е Хресчен ҫуртне вырнаҫаттӑмӑр. Ытларах «Атӑл» ресторанта апатланнӑ. Василий Прокопьевич ҫамрӑк официанткӑна, хӑйӗнчен шит ҫӳлӗш пысӑкрах, йӑрӑс пӳллӗ чипперккене юратса пӑрахрӗ. Пӗччен кайма вӑтанатчӗ те, пире каҫалапа ирӗксӗрлесех пӗрле сӗтӗретчӗ. Пӗррехинче ресторанта тем юсама пуҫларӗҫ. Романовӑн хӗрне вӑхӑтлӑха урӑх ҫӗре куҫарнӑ. Эпир те шыраса тупрӑмӑр пуҫлӑхӑн чун ыратӑвне. Атӑл хӗрринче, «Юрату сӑмсахӗнче», буфетра иккен. Каярах юлтӑмӑр та, шалтан алӑкне питӗрнӗччӗ. Никӗс пуҫӗ ҫине хӑпарса чӳречерен пӑхрӑмӑр. Унччен ресторанта пирӗн умра авкаланса йӑл кулса тӑракан чӑваш «ҫӑлтӑрӗ» кунта урай ҫӑвать. Урай ҫӑвакан хӗрарӑм ҫине пӑхса киленменӗмӗтленмен-ӑнтӑлман арҫын туршӑн та сахалрах пуль тӗнчере. Кӗлетки Атӑл хӑви пек авӑнать. Ун чухне хальхи пек колготки текенни ҫуккӑ-ҫке. Туртса хӑпартнӑ кӗпе аркипе вылякан тулли пӗҫ кӑкӗ пурне те астарса ячӗ пулас, чӑтаймасӑр виҫҫӗмӗр те (Петров ялтаччӗ) ҫӗре харӑс сикрӗмӗр. Кӑшт лӑплансан, Лисаев каларӗ: «Пӑхма хитре те... анчах... Василий Прокопьевич, эс

вĕт хăвна ялан хисеплетĕн, начар çын тесе шутламастăн, нивушлĕ пурнăçна урай сĕрекенпе иртерĕн?». Эпĕ те хушса хутăм: «Ресторанта унта чарăнман ăйăрсем нумай». Çакăн хыççăн пирĕн пуçлăх шухăша кайрĕ, «Атăл» пикишĕн чăнах та вилмерĕ, çамрăк хĕрпе паллашса, çемьеллĕ пулчĕ. Хамăрăн тăваттăмĕш хутри «хăна çуртĕнче» çывăракансем эпир виççĕнех тăрса юлтăмăр.

Вася Павлов пире районсем тăрăх çил вĕçтерсе илсе çӳрет. «Газикне» юрататчĕ вăл. Кайран «Советская Чувашия» хаçатра «Волгăпа» ярăнса канăва кайрĕ. Çĕр каçмалла пулсан, леçсе хăваратчĕ те аякка, тепĕр кунне пырса илетчĕ. Бензин çурхи шыв пек çеçчĕ те.

Ун чухне редактор Шупашкарта çурран е автобуспа çӳренĕ пулас, Ăна кĕтсе Вася Павлов нихçан та Пичет çурчĕ умĕнче тĕлĕрсе лармасчĕ. Каярахпа редакторсем асса кайрĕç, ирхине вĕсене машинăпа пырса илеççĕ, пуçлăх апата килне машинăпа кайса килет, обкома та, каçпа килне те личнăй ямшăк турттарать. Мĕн чухлĕ тăкак тӳснĕ патшалăх. Маркин таçта кайма та чармасчĕ. Анчах пĕр «урхамаха» харăс виç çулпа чуптараймастăн. Эпир вара час-часах е самолетпа, е автобуспапуйăспа çитеттĕмĕр кирлĕ çĕре.

Чун ман вăрнараллах туртать. Унта ман — кĕтекен хĕр, çуралнă, ĕçленĕ район. Пурнăçне те тĕплĕнрех пĕлетĕп. «Ленинец» колхозра пĕр хастар каччă пуррине астурăм. Колхоз пуçлăхĕ Александр Сергеевич Сергеев ăна хăрамасăрах сĕт-çу ферми шанса панăччĕ. Вăрнарсен çамрăксене мала ярас йăла çирĕпленнĕччĕ çав. Колхоз патшалăха кашни кун тонна ытла сĕт сутать. Вăрманкассенчен юлмасть. Эммануил Ластухин комсомолец ертӳçĕ пĕтем республикипе чапа кăлармалли çын. Пуçласа янăрарĕ кăкшăмсен ячĕ нарăс уйăхĕн 8-мĕшĕнче «Çамрăк коммунистра» пичетленнĕ «Ĕç кунĕ юрăпа пуçланать» тĕрленчĕк хыççăн.

Канмалли куна яла таврăнсан, кӳршĕри Çĕрпелне çитрĕм. Унта манăн юлташăм Давыд Иванов пурччĕ. Сĕт-çу фермине ертсе пырать. Хамăр колхозри ĕç-пуça аван пĕлекенскер, комсомол секретарĕнче ĕçленĕ чухнех хĕрсене çывăх паллаканскер, маншăн сĕт-çу ферми çинчен çырма çăмăлах пулчĕ. Нарăсăн 20-мĕшĕнче «Кăвакарчăнсем каллех фермăра» очерк тухрĕ. Вăл тепĕр темиçĕ çултан, нумай хушăнмасăр-якалмасăрах калава куçрĕ, «Тăван Атăлта» пичетленчĕ.

Ушкăнри аслă «старик» Альберт Пономарев хаçатра тухнă кашни чаплă материалшăн редактортан та ытларах каçса кайса

хĕпĕртетчĕ, çĕнĕрен-çĕнĕ шухăшсем, хальччен пулман темăсем сĕнетчĕ. Хăйĕн ăсталăхĕ пирки каламалли те çукчĕ ĕнтĕ. Вăл — вăйлă очеркист та, поэт-лирик та. Статьясен, очерксен ячĕсемшĕн тăнран яратчĕ. Ячĕ пуçра çуралмасан, хайлавĕ те ăнăçлă, йăкăр-йăкăр юхса пымасть-çке. Тепĕр чухне ятне вуласанах ăнкаратăн ун айĕнче мĕн пытаннине. Вулакана та туртать кăсăклануллă ят. Пĕр шухăш-тĕллевпе пухнă материалсене страницăна (полосана) вырнаçтарма ансатрах вăйлă пĕлекен ответсекретаре. Вĕсен идейине, пĕр пĕтĕмĕшле шухăшне уçса паракан чĕнӳллĕ ят тупасси вара чĕр нушах. Ăна хаçатçăсем «шапка» теççĕ. Статья ятне е «шапка» тупма Пономарев ăмăрту ирттеретчĕ. Чи лайăххишĕн пысăк гонорар лартса паратчĕ.

Мускав ĕçтешĕсем, Шупашкара пырсан, тусĕ патне кĕмесĕр кайман. Хăйсен çынни вĕсене тараватлăн, «чăвашла» кĕтсе илетчĕ. Акă пĕр кунне «Комсомольская правда» хаçатран Юрий Титов самолетпа вĕçсе çитрĕ. Редакци ямшăкĕ Вася Павлов ăна комсомол обкомне мар, тӳрех Володарски урамĕнчи 5-мĕш çурта лартса килчĕ аэродромран. Пономарев çапла хушнă иккен. «Пирĕн редакцире ял хуçалăхне Кузьмин пек тĕплĕн пĕлекенни çук, кайăр пĕрле», — терĕ хăнана Альберт. Шупашкар райкомĕн секретарьне Николай Борисова чĕнтĕмĕр те, тухса вĕçтертĕмĕр колхозсем тăрăх çулçӳреве. Хамăра валли тутлă апат купипех тупрăмăр. «Крокодил» йĕплевçисем те «Капкăнра» мар, Пономарев йăвинче тупатчĕç ăшă вырăн.

«Комсомол прожекторне» кунта Вăрнар районĕнчинчен анлăрах, инçерех çутататтăмăр. Çутине хăш еннелле ямалли тупăнсах пыратчĕ. Акă, ака уйăхĕн пуçламăшĕнче Вася Павлов пире «газикĕпе» десант сиктернĕ пек Вăрмара пăрахса хăварчĕ, виçмине илме килетĕп, тесе шантарчĕ. Вася Петров, Иван Никифоров ял-ял тăрăх çуран çӳретпĕр. Колхозсемпе совхозсен производство управленийĕ çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитменнине кашни утăмра куратпăр. Районти «Комсомол прожекторĕ» çутатмасть. Фермăсенче тислĕк тулса ларнă. Кашни ĕнерен виçĕ килограмм та сĕт сăваймаççĕ. «Победа» колхозра хĕрарăмсем темле хăлтăр-халтăр çуртра чĕчĕ пăрушĕсемпе пурăнаççĕ. Колхоз-совхоз ĕçĕнче çамрăксен тӳпи курăнмасть. Вĕсене хавхалантарса кĕрешĕве çĕклекен çук. «КП»ăн хаçатри ятарлă кăларăмĕ хыççăн вăрмарсене хĕрхенмесĕр çунтарчĕç комсомолпа парти обкомĕсенче. Эпир те нушине куртăмăр. Çилçунат ямшăкне кĕтсе илеймерĕмĕр, вара Канаша пуйăспа çитрĕмĕр, унтан таксипе таврăнтăмăр.

Юрать-ха такси ун чухне лашапа чупнинчен те йӳнӗрехчӗ. Альберт Пономарев пит кӑмӑллаччӗ ҫав «Атӑл» ятлӑ ҫӑмӑл машинӑсене. Пӗррехинче... хаҫат туса пӗтернӗччӗ ӗнтӗ. «Сире халь, «стариксене», пулӑ шӳрпи ҫиме илсе каятӑп. Ваня чӗнчӗ». — тесе хавхалантарчӗ Альберт. Кӗсьесене йывӑрлатрӑмӑр та Хӗрлӗ площадь енелле васкарӑмӑр. Унтан Иван Франко урамне хӑпарма инҫе те мар. Пономарев таксипе ҫеҫ каятӑп, тет. Машинисем нумаях марччӗ те, чылай кӗтмелле пулчӗ. Вася Петров, Иван Лисаев, Вася Романов, пиллӗкӗн ларса хӑпартӑмӑр Никифоровсен ҫурчӗ патне. Никифоров кӑштах юптарма юрататчӗ те, сӑмах май ҫеҫ каланӑ иккен вӑл секретаре пулӑ яшки пирки. Хӑй пӗҫерме те шутламан. Ӗнер Атӑлта тытнӑ шит тӑршшӗ хӗрлӗ куҫ ишет шыв янӑ банкӑра. Ун ҫине ула кушакӗ ӑмсанса пӑхса ларать. «Пӗҫер, Ваня, пулӑ шӳрпи тутанмасӑр пурпӗрех каймастпӑр», — тесе камантӑ пачӗ Пономарев. Никифоровпа арӑмӗ туххӑмра яшка пӗҫерчӗҫ. Сыпса тухрӑмӑр вара: эрехне те, шӳрпине те, пуллине тӗкӗнмерӗмӗр, кушака пар, терӗмӗр. Ваньӑна хӑналаса хӑварнӑ хыҫҫӑн каллех таксипе аяла антӑмӑр, «Атӑл» ресторанта ӑшаланӑ стерлӗк тӑраниччен ҫирӗмӗр.

Вӑл вӑхӑтра Шупашкар урлӑ-пирлӗ чупса-утса тухма та ҫӑмӑлахчӗ. Пит васкасан е кахаллансан, автобус ҫине ларса кай. Маршручӗсем нумаях пулман: 5 ҫеҫ. Пӗрремӗшӗ: Етӗрне ҫулӗ — Хӗрлӗ площадь — автовокзал. Иккӗмӗшӗ: Чапай ячӗллӗ поселок — Хӗрлӗ площадь — трактор пайӗсен завочӗ. Тӑваттӑмӗшӗ: пир-авӑр комбиначӗ — Хӗрлӗ площадь — автовокзал — аэропорт. Пиллӗкмӗшӗ: Чапай ячӗллӗ поселок — Хӗрлӗ площадь — чукун ҫул станцийӗ. «Мир», «Родина», «Юность» кинотеатрсем тата Хресчен ҫуртӗнче кинозал пурччӗ. Атӑл хӗрринче, халӗ пассажирсем кӗрсе-тухан причал патӗнче, вырӑс драма театрӗ ӗҫлетчӗ. Хамӑр чӑвашӑн музыка драма театрӗ «Чапай» опера лартнӑччӗ. Ҫамрӑксен тата ачасен театрӗ пуҫ ҫӗклетчӗ. Ҫав автобус маршручӗсемпе ҫӳренӗ халӑхпа пӗрле эпир те, ҫак театрсенче юлташсемпе, хӗрсемпе кино, спектакль курнӑ, концерт итленӗ.

Тӗлӗнтермӗш хыпаршӑн кашниех тӑрӑшаттӑмӑр. Анчах Чӑвашра кашни эрнерех «атом бомби ҫураймастӑн». Пӑшӑл пӑттинчен те, хӗрарӑм кӗпи арки вашкӑртнӑ сывлӑш хумӗнчен те, тепӗр чухне самаях интереслӗ хыпар ҫуралать. Пӗр ирхине редакцире лӑпкӑ шӑв-шав илтӗнчӗ. Пирӗн пӳлӗме те ҫитрӗ вӑрттӑнлӑх сасси: тӗнчери чи паллӑ разведчиксенчен пӗрин Николай Кузне-

цовӑн ҫывӑх ҫынни пулнӑ Валентина Довгер Шупашкарта пурӑнать!!! Иван Никифорова ҫавӑтнӑ Альберт Пономарев сарлака картлашка туллин аялалла чупса анса кайрӗ. Вӗсем хыҫҫӑн Аркадий Беловӗ хашкаса пырать. Пир-авӑр комбинатӗнче «пытанса» ӗҫлесе пурӑнакан сып-сывӑ паттӑр хӗрарӑмран интервью илсе килчӗҫ. Никампа та калаҫмаҫҫӗ, васкавлӑ ӗҫлеҫҫӗ. Тепӗр ирпе хаҫатӑн — сенсаци! Ӑна вуланӑ хыҫҫӑн ТАСС корреспонденчӗ Алексей Студенецкий Мускава хыпарлать, «Советская Чувашия» хаҫатра пысӑк статья кӑларать. Пономарев «Комсомольская правдӑра» очерк пичетлет. Шупашкар хыпарне ТАСС пӗтӗм тӗнчипе салатать. Петр Маркин, аллисене пилӗке тытса, коридор тулли мӑнкӑмӑллӑн утать. Валя Довгерпа пӗрле вӑл хӑй те мухтавлӑ разведчике ҫав тери пысӑк пулӑшу панӑ пек туять пулас. Иван Лисаев, хӑпӑ комбинатӗнчи хӗрсен канӑвне япӑх йӗркелени ҫинчен ҫырса илсе килнӗ хӑйӗн статйине кӑларса ҫапса Довгер сенсацине лартнӑшӑн, секретарьпе редактора вӑрттӑн вӑрҫать: «Мӗн, ҫирӗм ҫул хӑйӗн паттӑрлӑхне ӑшӗнче тытса усранӑ хӗрарӑма тепӗр темиҫе кунран халӑх умне кӑларсан, тем пулатчӗ ӗнтӗ...»

Тем пуласси пулчӗ вара. Разведчикпе ҫыхӑну тытакан нимле хастар патриотка та мар, хӑйне чапа кӑларма шут тытнӑ ултавҫӑ-авантюристка пулнӑ иккен ҫак хӗрарӑм. Ятарласа кӑларнӑ сас-хурине редакцие ҫитернӗ. Тӗлӗнтермӗш вирусӗ сумлӑ ятлӑ журналиста та сисмесӗрех чирлеттерет иккен.Пономаревсемпе Маркинсем чылайччен пӑрӑҫ хыпса ҫӳрерӗҫ ҫӑварӗсенче.

Шупашкартан, Мускавран чарӑнмасӑр шӑнкӑравлаҫҫӗ, ҫырусем килеҫҫӗ... редакцире «ЧП». Петр Маркин, арӑмӗ вилнӗ пек, хура костюм тӑхӑннӑ, коридора тухмасть, пӳлӗмӗнче лесник йытти пек хаярланса ларать. Планеркӑра черетпе пурне те юсаса илчӗ те вӑл, сӑран пуртвӗльне выговор тултарма илсе, обкомалла пуҫа чиксе утрӗ.

Совет пичечӗн яваплӑхӗ пысӑкчӗ те, Довгер сенсацийӗ ҫамрӑксен хаҫатне хур тумасӑр хӑвармарӗ. Кулакансем йышланчӗҫ, тӗлӗнмелле статьясене асӑрханса та иккӗленсе вулама пуҫларӗҫ.

### Пултарулӑх ҫӑлкуҫӗ

Вырӑсла ҫырнипе, шухӑшланипе редакцире чӑвашлӑх тени палӑрсах каймастчӗ. Вырӑсларан куҫарнӑ материалсем чӑвашла ҫырнӑ пек мар. Ялсенчен килнӗ ҫырусене те вырӑсла хатӗрлесен,

куçаруçăсем вĕсене тепĕр хут чăвашлататчĕç. Чăн-чăн чăвашла хатĕрленĕ кăларăмсем çукчĕ. Исаак Кириллов ун пирки шавласа пăхрĕ те, ăна «вырăссем» часах лăплантарчĕç. Хамăрăн вăя кăтартаймарăмăр, тĕрĕссипе, çине тăраканах та тупăнмарĕ. Çапах эпир чунпа Исаак Пантелеймонович çумнерех çывхараттăмăр. Тăван çырулăхран писес мар тесе «Коммунизм ялавĕпе» тачăрах туслашса пытăм. Хушăран «Капкăна» та леккелеттĕм. Кулăш журналăн алăкĕ маншăн уçах тăратчĕ.

Нимĕн те калаймăн, ачисем-«старикĕсем» ăсталăхĕпе, шухăшлавĕпе вăйлăччĕ ĕнтĕ. Вĕсенчен вĕренмелли пайтахчĕ. Альберт Пономарев, Аристарх Дмитриев, Виталий Захаров литературăра палăрнăччĕ. Физкультура тата спорт ыйтăвĕсемпе чăтăмлăн аппаланакан Юрий Плотников чăвашла сăвăсем çыратчĕ, Александр Сергеев композиторпа юрăсем хайлатчĕ. Редакторĕ Петр Маркин та вăрман, чĕр-чун темипе калавсемпе повĕçсем пичетлетчĕ. Пăхма çеç чĕмсĕртерех курăнатчĕ вăл, сăнарлăхĕпе-çивĕчехчĕ.

Писательсем хушшинче хаçатра, хаçат çумĕнче сăмсаланса ӳснисем нумай. Хытса ларнă пăркăчлăх идеологине хавшатнă май, Мускав енчен ирĕклĕх хумĕ Чăваш çĕршывне те чупса килчĕ. Республикăри писательсен Союзĕ «Çамрăк коммунист» çумĕнче литература пĕрлешĕвĕ йĕркелерĕ. Кашни эрнерех редакцие шавлă каччăсемпе хĕрсем пухăнатчĕç. Союзри çамрăк литераторсен секцийĕн пуçлăхĕ Аркадий Лукин, литпĕрлешĕве ертсе пыраканĕ тата тин çеç педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă Виталий Никитин-Станьял Пичет çуртне чăваш çырулăхне малалла çĕклеме пултаракан яш-кĕрĕме хулипех пухнăччĕ. Вениамин Тимаков, Николай Петровский-Теветкел, Хветĕр Коновалов-Агивер, Петĕр Дмитриев-Эйзин, Василий Дмитриев-Шашкар тата ыттисем çырнисене Петĕр Хусанкай, Александр Артемьев, Александр Кăлкан, Стихван Шавлы, Александр Алка тĕплĕн, кăтартуллăн тишкеретчĕç, кашнин пултарулăхне ушкăнпа çӳтсе яватчĕç. Тавлашăва чăвашла та питĕ лайăх пĕлекен Çĕрпӳ каччи Аристарх Дмитриев та хĕрӳ хутшăнатчĕ. Дмитриевсем литература уйĕнче хунаса кайнипе хăшĕсем псевдоним тупрĕç. Аристарх хăй хушамачĕпех паллă писатель, ăста тăлмачă пулса тăчĕ. Редакцире пĕрле ĕçлекен Василий Петровпа Иван Лисаев та, литпĕрлешӳре пĕрне-пĕри хĕрхенмесĕрех тӳнĕ, шăв-шав çĕкленĕ ытти çамрăксем те халĕ — чăваш литературине малалла аталантаракансем. Писательсен Союзĕпе «Çамрăк коммунист» вучахĕ хĕмлентернĕ, сăнарлăх сунталĕ çинче туптанă

хĕрӳ ушкăн хăйĕн вăйĕпе, илемлĕхĕпе чăваш литературине тĕнче сăнарлăхĕн анлăшне кăларчĕ.

Камăн укçа пур, тавлашу чашкăрăвне «Атăлта» татах вăйлатса яратчĕç. Камăн кĕсье шăтăк, вăл патунпа маргарин çиме, сахăрсăр чей ĕçме студентсен общежитине уттаратчĕ. Ресторанта апатланакансем хушшинче писательсемпе журналистсем çур йышчĕ пуль. Ахăртнех хăшĕ-пĕри унта ĕçлекенсене йăлăхтарса çитерне. Каçхи апата хамăр ушкăнпа эпир те «Атăла» антăмăр. Алăк умĕнче хаяр йытă пек чăваш пăхаттирĕ тăратчĕ. Шавлакана, ытлашши ярса лартнине çиччас кăларса сирпĕтетчĕ. Эпир пынă тĕле ун умĕнче Куçма Чулкаç, лутакаскер, ачалла йĕрсе ярасла тархасласа кукалет. Хĕрĕнкĕскерне хуралçă хăрах аллипе сирсе ярать. «Здорово, господин Илья! — сассине хăпартса алă пачĕ пăхаттире Пономарев. — А ну немедленно пропусти чувашского классика в собственный ресторан!» Илле салтакри пек йăнк! тӳрленсе тăчĕ, «Рат старацă», — терĕ. Хуралçă уçнă алăкран Куçма Чулкаç йытă çури пек вăшлаттарса кĕрсе кайрĕ. Илле Куçма Чулкаçа мĕншĕн кĕртменни çинчен пире Вася Романовăн «юратăвĕ» каласа парсан, пĕлтĕмĕр. Чулкаç хăйĕн «Сунарçă калавĕсем» кĕнекине официанткăсемпе буфетчицăсене ală пусса панă, хуралçа темшĕн манса хăварнă. Ку йăнăша вăл кайран тӳрлетнĕ. Илле паттăрăн та вара кăмăлĕ çавраннă, Лапшу Çтаппанĕн Арăсланĕнчен «хăранă» пуль.

Çуркуннехи каникул пуçлансан, Çĕрпелтен манăн юратăвăм — Римма килчĕ. Икĕ Иван: Лисаевпа Никифоров пирĕн туя пырасшăн. Никифоровĕ иксĕмĕре юнашар тăратса ӳкерчĕ. Çав сăнӳкерчĕкрен вăл, пирĕн пуçсене чечек ăшне вырнаçтарса, туй чĕнĕвĕ пĕр купа пичетлесе пачĕ. «Ку манран туй парни», — терĕ.

«Комсомол пурнăçĕнче» хамăр майлă туслăхчĕ. Пĕрне-пĕри пулăшнă. Канмалли кунсене тăван кĕтесселле саланаттăмăр. Эпĕ самолетпа — Вăрнара, Лисаев автобуспа — Хĕрлĕ Чутая. Самолетран ансан яла çурран чупнă. Иван та хăйĕн Хирлукассине çурранах вĕçтернĕ. Вася Петровăн Энĕшкасси ялĕ Çĕрпӳрен Хусан çулĕпе тухсан çывăхрах ларатчĕ те, ăна çӳреме çăмăлрах пулнă. Пушăлла нихçан та тавăрнман, çитсен ĕç сĕтелĕ çине силлемелли пурин те пуç кунтăкĕнче сăнар пуянлăхĕ туллиех пулнă. Районсене чи хытă чупакансем эпирччĕ. Хушăран комсомол обкомĕм çавраçилĕсем рейдсемпе тĕрĕслӳсем ирттерме хăйсемпе илетчĕç. Çав хушăрах вĕренме те вăхăт тупмаллаччĕ.

Очерксем пухăнсах пычĕç. Малтанхи очерк кĕнекисене эпир çав чупура пухнă хайлавсемпе кăларнă. Нумай сăнар калавсемпе повĕçсенче вырăн тупрĕ.

Çирĕм ултта пуссан, авланас шухăш çирĕпленсе çитрĕ. Хĕрĕ те килĕшет. Çу уйăхĕн 2-мĕшĕнче Хурăнсурта комсомолла-çамрăкла туй турăмăр. Çуркунне вăраха кайнă пирки çул-йĕр пылчăклăччĕ. Лисаевпа Петров Шупашкартан таксипе пирĕн пата килме тухнă, анчах та кутăн ямшăк, çул япăх тесе, çур çултан каялла тапнă.

Малтан çемьеллĕ пулас килетчĕ, авлансан... тепĕр хуйхă сиксе тухрĕ. Ăçта пурăнмалла: ялта е хулара? Хурăнсурта атте-анне килĕнче савăнса кăна пурăнмалла. Инçĕшĕ пĕтерет. Çĕр çухрăма пĕрмай каллĕ-маллĕ хутла-ха. Арăма Шупашкара куçарса килес — ăна тин пуçланă ĕçрен уйăрасси. Çитменнине тата хваттер çук. Çын патĕнче нушаланмалла-кĕлмĕçленмелле. Шутларăмăр-шухăшларăмăр та иксĕмĕр, тĕп хула Атăлпа юхса каймĕ, май килсен, унта çаврăнса çитĕпĕр-ха, халĕ манăнах Вăрнара таврăнмалла, тесе йышăнтăмăр. «Çĕнтĕрӳ çулĕпе» вара малтанхи пекех хастаррăн утма тытăнтăм. Ăсталăх Шупашкарта татах ӳснĕ пек туйăнчĕ.

Етĕрнери педагогика училищинче вĕреннĕ Иван Лисаев малтан шкулта ĕçленĕ, мантан маларах авланнă. Эп «Çамрăк коммунистран» кайсан вăл та района таврăннă, каярахпа Шупашкарта строительсен хаçатне кăларчĕ, хулара тĕпленчĕ те пултарулăхне «Ялава» пачĕ. Вася Петров, техника училищи хыççăн, стройкăра вăй хунă. Казахстанран ăна салтака илнĕ. Çартан таврăнсан вăл Свердловскри Урал университетне журналиста вĕренме кĕнĕ. Лисаева яла ăсатсан вăл та нумаях тытăнса тăман «Çамрăк коммунистра», «Пионер сассине» хăйпе пĕрле илсе кайнă ăна Исаак Кириллов. «Ача шутĕнчен тухсан» вара Петров «Коммунизм ялавĕнче» чылай ĕçлерĕ, унтан «Ялава» куçрĕ. Каярахпа та эпир çĕнĕрен лартнă Пичет çуртĕнче пĕрлех ĕçлеттĕмĕр. Лисаев, Петров, Аристарх Дмитриев «Ялавра», эпĕ — «Капкăнра», «Тăван Атăлта». Туслăха халĕ те çухатмастпăр.

Çамрăксен хаçачĕ пирĕн çамрăклăха çунатлантарчĕ, çав вăхăтри хĕрӳлĕх нихçан та чакмарĕ. Володарский урамĕнчи Пичет çурчĕ пирĕншĕн ăсталăх керменĕ, нихçан манми «хăна килĕ» пулса юлчĕ. Пултарулăх çăлкуçĕ сиплĕ пулчĕ, пуласси-не туйма вăй хушрĕ.

*2000 çулхи*
*ака уйăхĕн 3—5-мĕшĕ.*

## ЭЛĔК ЕН ТЕ — ТĂВАН ЕН

### Ăçта йывăр — çавăнта

Пире комсомол çапла вĕрентнĕ. Парти те çаплах хушнă. Маншăн вăл çамрăклах пурнăç тĕллевĕ пулса тăнă. Унран пĕрре те пăрăнман. Хĕрӳ пурнăçа хăнăхнă.

Пурăнан пурнăçра ăçта кăна çитместĕн, мĕн кăна курмастăн-тӳсместĕн пуль. Кам шутланă-ха ăна маншăн, Вăрнар ачишĕн, хамăр Хурăнсуртан темле çурăм хыçнерех сарăлса выртакан Элĕк çĕрĕ çывăх ен пуласса. Эпир ачаранах вăрманалла, пуйăс сассийĕ еннелле, туртăнма хăнăхнăран аталаннă пуль вăл çав ютшăнуллăрах туйăм. Каярахпа, унти ырă çынсемпе çывăхлансан, чун туртăмĕ урăхланнăччĕ.

Утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнче, çĕршывăн аслă театрĕнче халăх пурнăçне, ĕçне-хĕлне ертсе пымалли камит лартнă вăхăтра, элĕксемпе йĕпреçсем те пуçсăр тăрса юлчĕç. Чипер аталанакан районсенех пайăн-пайăн вакласа кӳршĕсене валеçсе тухрĕç. Хулапа яла саккунлă уйăракансен камитне алă çупса курнă вăхăтрах редакцисем те çухалчĕç. Пукансăр тăрса юлнă Элĕк çыравçисем вара чукун çул еннелле туртăнчĕç. Ял лăпкăлăхĕнчен тин çеç уйрăлнăскерсем Вăрнар йĕркелĕхĕпе шăвшавĕнче кăштах тарлакаласа та илчĕç, анчах та аптрасах ӳкмерĕç, хăйсен ăсталăхне тӳрех кăтартма пуçларĕç. Александр Мешковăн виçĕ район ял хуçалăхне кутамккаламалла пулчĕ. Михаил Кустиков хăйне çывăх ĕçе кӳлĕнчĕ — халăхăн социаллă ыйтăвĕсемпе çанă тавăрсах паллашма пуçларĕ. Харитон Лисин район микрофонне ума лартрĕ.

Пире ун чухне, журналистсене, районта кăна мар, Шупашкарта та, вунă çул хăть темле чăм тар ăшĕнче пăчăхсан та, хваттер уççин çуттине те кăтартмастчĕç. Ăçта килнĕ унта выртса тăнă. «Химик» клуба, районти культура çурчĕпе ăвăс паркне, ташша çӳренĕ.

Элĕк редакцийĕн мотоциклне панăччĕ пире. «ИЖ»а Вăрнара илсе киличчен, ăслăраххисем çĕнĕ камерисене киввипе улăштарма ĕлкĕрнĕ пулин те, моторне тĕкĕнменччĕ, вăйлăччĕ. Урапасене йĕркене кĕртнĕ хыççăн пĕччен те, иккĕн те кунĕ-кунĕпе каллĕ-маллĕ мăкăрлантарса çӳреттĕм. Александр Николаевич сводка тăрăх вырăнта статья çырса ларма юратмастчĕ, чунĕ унăн ялаллах туртатчĕ, çавăнпа манран уйрăлмастчĕ. Материалсене эпир

хăвăрт хатĕрлесе çыраттăмăр. Темиçе кунлăх ялсене çурран кайсан, çырмара мĕн чухлĕ выртса çырман пуль. Хыпара васкавлă çитерме çул çине тухса пĕр-пĕр шофертан парса яраттăм мĕн çырнине. Элĕк енчи ялсенче те сахал мар пулнă.

Çапла çăрăлкаласа, айланкаласа тенĕ пек утмăл тăваттăмĕш çула вĕçлетпĕр. Çĕршыв сцени çине каллех тепĕр спектакль кăларчĕç тĕп режиссерсем. Районсене çĕнĕрен тума йышăнчĕç. Çĕнĕ çула уйрăмах элĕксемпе йĕпреçсем хавас кăмăлпа кĕчĕç. Каллех хăйсен редакцийĕсем пулаççĕ-çке. Элĕксем тăван çĕрĕ еннелле хавассăн пăхса, тарăннăн сывлама пуçларĕç. Тăван тутлă шăршă вĕсене килелле туртать.

Пирĕн çав вăхăтра редактор çухалчĕ тата, Петĕр Ялгире урăх ĕçе куçарчĕç. Николай Орловăн units пĕлӳ çуккăччĕ те, вăл редактор пулаймарĕ. Унăн ĕçĕсене çеç чылай хушă туса пычĕ. Уншăн мана йывăр лекрĕ, пĕр вăхăт парти пурнăç пайĕпе çырусен пайне те туртса пыма тиврĕ. Çĕн редактор хура кураксемпе пĕрле тин вĕçсе килчĕ. Ĕнтĕ малтан пĕтернĕ хаçатсем те пуш уйăхĕнче пуçĕсене çĕклерĕç. Етĕрнерен Аркадий Григорьевич Кустиков Элĕке каялла таврăннă. Хирлеппуç ачи çĕнĕ редакци ушкăнне пухать. Александр Мешков унăн çумĕ пулма килĕшнĕ. Явaплă секретарĕ çук. Чĕнсе, манпа та калаçса пăхрĕç. Вăрнарта та ĕçлеме япăх мар ĕнтĕ, хаçат ăшне пуçласа кунта пуçа чикнĕ. Редакторĕ те хама пĕлекен-паллакан-скер, кӳршĕ ялти, Çĕрпелти Çĕпритун Шăпчăк ачи, Анатолий Спиридонович Толмасов мана аякка ярасшăн мар. Владимир Москвин хăй вырăнĕнчех çирĕпленнĕччĕ. Манăн та, секретарьте ĕçлесе, ача чухне капăр çăпата тунă пек илемлĕ сăнпитлĕ хаçат калăплас шухăш-ĕмĕт пурччĕ-ха. Вăя, маçтăрлăха кӳршĕре тĕрĕслесе пăхас терĕм вара.

Элĕк енне сулăнмашкăн тата тепĕр пысăк та паллă сăлтав сиксе тухрĕ манăн пурнăçра. Утмăл иккĕмĕш çулта пирĕн Çĕрпел вăтам шкулне саркайăксем вĕçсе анчĕç. Вĕсенчен пĕрин тĕп йăвийĕ Торпкассинчеччĕ. Çамрăклăх вăййинче сисмен те çав хайхи саркайăкпа унта анса ларнине. Çул та кĕскелчĕ вара, Элĕк ен те çывăхланчĕ, кăмăл-туйăм та хĕр еннелле çаврăнчĕ. Утмăл виççĕмĕш çулта эпĕ Элĕк кĕрӳшĕ пулса тăтăм, тепĕр çулне торпкассисене ывăла пырса кăтартрăм. Хаваспах йышăнчĕç ют çĕрте мана, элĕкле хăналарĕç: каткана вĕри чул ярса вĕретнĕ сăрапа, салатран юхтарнă эрехпе, тутлă-тутлă хуплупа, сĕткенлĕ сарă чăкăтпа, техĕм шăршлă шăрттанпа...

Мана ёнтӗ Вӑрнар коллегисем-ӗҫтешсем ӑсатма та ӗлкӗрчӗҫ ҫӗнӗ ҫӗре. Хамӑн та шухӑш-туйӑм урӑхланнӑччӗ.

Ҫапла 1965 ҫулхи пуш уйӑхӗн 26-мӗшӗнче КПСС Элӗк райкомӗнче калаҫу пулчӗ, бюрора мана «Ленин ҫулӗпе» хаҫатӑн ответлӑ секретарьне ҫирӗплетрӗҫ.Пӗрремӗш секретарьпе хамӑн ҫӗнӗ хуҫа, куҫран уҫҫӑн пӑхса ӑшшӑн кулкаларӗҫ те, ҫирӗппӗн ҫапла каларӗҫ: пӗрремӗшӗнче, тепӗр пилӗк кунран, акана тухмалла. Ӑнлантӑм Понятновпа Кустикова.

Аркадий Гигорьевичпа Александр Николаевич ҫырса хатӗрленӗ, анчах машинкӑпа ҫапман коррепонденцисемпе статьясене хул хушшине хӗстерсе, райкомран тухса утрӑм.

Ун чухне Элӗкпе Нурӑс хушшинчи ҫул манерсӗр начарччӗ, ҫавӑнпа машина тавраш сахал ҫӳрет, хӑть чупса ҫит. Редакцире виҫҫӗмӗр ҫеҫ. Ҫуртне патшалӑх банкӗ йышӑннӑ. Машина та, машинка та, наборламалли-пичетлемелли те, нимӗн те ҫук.

Вӑрнара тракторпа нушаланса ҫитсен, «Туслӑх» хӑна ҫуртне вырнаҫрӑм. Кунти пӳлӗм вара пирӗн хаҫатӑн штаб-хваттерӗ пулчӗ. «Ҫӗнтерӳ ҫулӗн» редакцине кайса машинисткӑпа материалсене пичетлеме килӗшӳ турӑм. Хаҫат ҫапма типографире хуҫаран ирӗк илтӗм. Владимир Москвинпа ӗҫ черечӗ йӗркелерӗмӗр. Халӗ ёнтӗ манӑн пурне те хамӑннах вуламалла: машинистка хыҫҫӑн та, корректор вырӑнне те. Мешков бензовозпа килсе, хатӗр номере пӑхса тухрӗ те, почта машинипе кайрӗ. Ака уйӑхӗн пӗрремӗшӗнче ҫапла, райком палӑртнӑ вӑхӑтрах, хӗрӳ сӑмах акине тухрӑмӑр. Элӗк хаҫачӗ каллех тӗнчене саланать! Уншӑн Элӗк ачисемпе пӗрле эпӗ те чуна ҫӗклентерсе савӑнтӑм. Вӑрнарсем урра йӑтсах саламларӗҫ. Вӗсене те, хамӑра пулӑшнӑшӑн, тав турӑм.

Малтан хаҫат тума хӑнӑхни-тӑрӑшни пире нумай пулӑшрӗ. Ҫапах та чӑрмавӗсем сӑмса умне ӳксех пычӗҫ-ха. Типографире икӗ хаҫат калӑпласа пичетлеме ӗлкӗреймеҫҫӗ. Кӗҫ пӗр-пӗр машини ванать, тепӗр чухне электровӑй чӑхӑмлать. Вӑрнарсем-коллегӑсем кӗвӗҫкелени-чӑркӑшланни те пулкалать хушӑран. Ҫапах ҫав йывӑр вӑхӑтра эпир виҫҫӗмӗр пӗрле (Кустиков, Мешков, эпӗ) пуҫа усмасӑрах чӑтса ирттертӗмӗр, хаҫата Элӗк халӑхӗ патне йӗркеллех ҫитерсе тӑтӑмӑр.

Эпӗ ёнтӗ редакцин Вӑрнарти чрезвычайлӑ тата полномочиллӗ посолӗ вырӑнӗнчехчӗ. Чылай ӗҫӗ ман урлӑ пулса пыратчӗ. Элӗкрен никам та килеймен вӑхӑтра хаҫата пӗччененех кӑлараттӑм. Пӗр-пӗрне шанни пире ӗҫре пулӑшса пынӑ.

Çуркуннехи йĕпе-сапара, лапра-пылчăкра Элĕке сахал çӳренĕ. Пĕррехинче укçа илме тесе кайрăм. Бухгалтер, пĕр лутакарах хĕрарăм, манпа калаçса кайрĕ, пĕрремĕш хут куратăп сире, тет. Эпĕ те сире пуçласа куратăп, редакцире ĕçлетĕп-ха, тетĕп. Ведомость çине алă пустарма хăрать. Редактора шыраса тупсан тин укçаллă пултăм.

Хаçат кăларасси вăл пирĕншĕн çăмăл ĕç те мар, ытлашши йывăр ĕç те мар ĕнтĕ. Кашни маçтăр хăйĕн йĕп çăртине курса ăсталать. Пирĕн те вăл йĕркеллех пулса пынă темелле.

Патшалăх банкĕ районти хăйĕн пĕр пĕчĕк енчĕкĕ валли çырма хĕррине хӳтлĕх тупнă хыççăн, эпир те Элĕке таврăнтăмăр.

Халă, çав вăхăтри кун кĕнекине вуласа аса илнĕ май, пĕр саманта çеç ирттерсе ярас марччĕ. Шупашкарта вырăссемпе ĕçлеме хăнăхнăран-ши, сăмăхĕсене чăвашла çырман. Акă, вĕсем: «Наконец-то мы – в Аликове! Да здравствует наша редакция! Да, сегодня летнее воскресенье. Но редакция работает. Потому что - обязательно надо работать. Черт возьми, мы же – целинники!

Встретил Александра Горшкова из «Правды». Какой чудесный, настоящий парень. Люблю его, сердечно. Тракторист. Умный. Поэзия – его любимое занятие. Страстно говорит о Tукташе, Бернсе. Есенине... Сколько стихов написал. Надо помочь».

Тем вăхăтран ялтах хаçат пичетлеме тытăнтăмăр. Хальхи пек шур халатсемпе мар, паллах, хура алăпа, сăрăллă питкуçпа, алăпа кашни саспаллине пухса, калăпласа, юсаса, тӳрлетсе пичет шайне çитерсе, çапах та ир енне типографи алăкĕнчен «Ленин çулĕпе» тухаттăмăр. Тавах вĕсене, типографире вăй хунă ăçчен те тӳсĕмлĕ хĕр-хĕрарăмсене. Вĕсемсĕр хаçат епле кăларăн-ха!

## Чĕресем пĕрлешсен

Хаçатăн чи пысăк йывăрлăхĕ, паллах, редактор ĕнси çине тиеннĕ. Вăл хаçатшăн кăна мар, типографишĕн те хуравлăччĕ. Икĕ тĕрлĕ ĕçпе ĕçлекен пĕр коллектива чăмăртама вăй та, ăслай та кирлĕ. Çавна пурнăçлама пултараканни районта Аркадий Григорьевич Кустиков çеç пулма пултарнине райком хуçи Лев Петрович Понятнов туйнă. Çавăнпа вăл ăна часах шыраса тупнă. Кустиков Етĕрнере «пытанса» пурăннă. Элĕк хаçачĕ хупăннă хыççăн, 1962 çултанпа, унта редакторта ĕçленĕ. Понятнов вара



Петĕр Ялгир Ковскисен килĕнче хăнара хăйĕн çĕнĕ сăввисене вулать. Итлекенĕсем (сулахайран сылтăмалла): Сергей Петрович Александров фельдшер, культура ĕçченĕ Иосиф Иванович Шашков, Çĕрпел ял Совечĕн секретарĕ Петр Владимирович Владимиров.



«Социализм çулĕпе» хаçатăн редакцийĕнче ĕçлекенсемпе корреспонденчĕсем (сулахайран сылтăмалла): лараççĕ — редакторта ĕçленĕ Ефим Волков, бухгалтерĕ Прокопий Бушаев, Пăваялĕнчи Анатолий Алгашев, Чăрăшкас Măратри Григорий Михайлов, Чăрăшкас Хирлепри клуб заведующийĕ Николай Мартынов; тăраççĕ — пай заведующийĕ Василий Викторов, пай заведующийĕ Георгий Игнатьев, Николай Васильев учитель, редакторĕ Петр Тихонов, «Ленинец» колхоз председателĕ Александр Сергеев, «Советская Чувашия» хаçат корреспонденчĕ Евгений Ефремов, Уравăшри Евстафий Захаров киномеханик КПСС райкомĕн çуртĕнче. 1958 çулхи майăн 5-мĕшĕ.

М.Астафуров сăн ӳкерчĕкĕ.



Владимир Кузьминпа (сулахайри) Георгий Игнатьев (сылтăмри) редакцие пынă ялкорсем хушшинче. 1959 çул.

*Виссарион Кожанов ӳкернĕ.*



«Социализм çулĕпе» хаçат редакцийĕн ĕç ушкăнĕ (сулахайран сылтăмалла): Георгий Игнатьев, Павел Григорьев, Владимир Москвин, Григорий Михайлов, Николай Орлов, Зинаида Емельянова, Александра Антонова-Бобылева, Петр Тихонов-Ялгир, Владимир Кузьмин. 1959 çул.

*М.Астафуров сăн ӳкерчĕкĕ.*



Ӳкерчĕке редакцирен анатарах вырнаҫнă «Фотографире» тунă (сулахайран сылтăмалла): малти ретре — Георгий Игнатьев, Григорий Михайлов-Илепер, Петĕр Хусанкай, Петĕр Ялгир, Василий Еремеев, Павел Вырсов; иккĕмĕш ретре — Николай Орлов, Анатолий Емельянов, Степан Юркин, Филипп Андреев, Степан Филиппов, Анатолий Иванов-Хум, Павел Николаев, Владимир Кузьмин (салтак гимнастеркипе).



Редакцире пуҫланнă илемлĕх калаҫăвĕ Тихоновсен килĕнче малалла тăсăлать (сулахайран сылтăмалла): Георгий Игнатьев, Алексей Воробьев, Георгий Орлов, Георгий Ефимов, Клавдия Васильевна Тихонова, Петр Алексеевич, Владимир Кузьмин, Григорий Илепер. 1960 ҫулхи чӳк уйăхĕ.

*Алексей Припалов сăн ӳкерчĕкĕ.*



Вăрнарти хресчен çурчĕ умĕнче (сулахайран сылтăмалла): Петр Ялгир, Мĕтри Кипек, Владимир Кузьмин. 1960 çул.



Чăваш халăх поэчĕ Петр Петрович Хусанкай çамрăк çыравçăсемпе калаçнă самант (сулахайран сылтăмалла): Любовь Мартьянова, Галина Зимина, Владимир Кузьмин.

*А.Припалов ӳкернĕ.*



Алексей Припалов сăн ӳкерчĕкĕнче (сулахайран сылтăмалла): Аркадий Лукин, Леонид Агаков, Геннадий Лисин-Айхи, Георгий Ангер, Григорий Михайлов-Илепер, Юрий Скворцов, Владимир Кузьмин, Николай Андреев-Чураш, Гаврил Лосев-Луç.



Журналистсемпе полиграфистсен тин çеç йěркеленнě хорě 1960 çулхи кăрлач уйăхěнче юсавпа техника станцийěн клубěнче концерт парать. Ăна ун чухне те МТС клубě тетчěç. Халě ун вырăнěнче — магазин. Виссарион Кожановăн сăн ÿкерчěкěнче (сулахайран сылтăмалла): Петр Тихонов, Василий Еремеев, Николай Орлов, Владимир Москвин, Алексей Иванов, Владимир Кузьмин; Нина Александрова, Нина Чашкина, Анюта Кудрявцева, Зоя Клочкова, Елизавета Кудрявцева, Маруся Аполлонова, Нина Иванова, Света Широкова. Кулăс каласа хора ертсе пыраканě — Григорий Михайлов.



Редакци йěкěчěсенчен пěри Владимир Кузьмин типографи пикисем хушшинче: сулахайри — Рая Петухова, сылтăмри — Анфиса Макарова. 1960 çулхи кăрлач.

*Виссарион Кожанов сăн ÿкерчěкě.*



Ӳкерчĕкре (сулахайран виççĕмĕшĕ): Алексей Воробьев, Василий Краснов-Асли, Александр Галкин, Петр Ялгир Вăрнар литпĕрлешĕвĕн çыравçисем хушшинче. 1960 çул.



Хаçат çывăхлатнă туссем (сулахайран сылтăмалла): Мускаври Чайковский ячĕллĕ консерватори студенчĕ, Кăмаш ачи Владимир Яковлев, Мăньял Хапăсри Иван Степанов корреспондент, редакци сотрудникĕ Михаил Васильев ырă кăмăл-туйăм ытамĕнче. 1962 çул.

*Владимир Кузьмин сăн ӳкерчĕкĕ.*



Вăрнарти комсомол ачисем педагогсен çемйинче хăнара. Кил хуçисем — Агриппина Яковлевнапа Владимир Андреевич Захаровсем хĕрĕпе. Хăнисем — Альберт Тимофеевич Купчиков тата Анатолий Викторович Емельянов. 1959 çул.

В.А.Захаровпа, В.П.Кузьмин. Хурăнсур Çармăс вăрманĕнче Ленин ячĕллĕ колхоз акатуйĕ вăхăтĕнче. 1964 çул.

*Виссарион Кожанов ӳкернĕ.*





Хаҫат ĕҫтешĕсем, ҫывăх юлташсем (сулахайран сылтăмалла): Алексей Ивановпа Николай Орлов шахматла выляс умĕн редакцин вут шаршанĕ ҫумĕнче шухăша путнă. 1961 ҫул.

*Владимир Кузьмин сăн ӳкерчĕкĕ.*



1962 ҫулхи пуш уйăхĕн 21-мĕшĕнче пулса иртнĕ ĕҫялкорсен районти канашлăвĕнче (сулахайран сылтăмалла): малти ретре — Кирилл Никишев (Элĕк), Татьяна Алексеева (Рункă), Иван Кораков (Пăваяль), Петр Тихонов редактор, Анна Тимофеева (Кайри Тукай), Владимир Кузьмин (редакци); иккĕмĕш ретре — Альберт Купчиков (КПСС райкомĕ), Нина Мышкина (Ярмушка), Яков Андреев (Ҫĕньял-Нурăс), Анатолий Николаев (Малтикас), Николай Мартынов (Мачамăш), Михаил Иванов (типографи), Петр Степанов (Кайри Тукай), Владимир Москвин (редакци), Василий Егоров (Вăрнар), Василий Иванов (районти милици пайĕ).

*Виссарион Кожанов ӳкерни.*



Виссарион Кожанов 1960 çулхи январĕн 19-мĕшĕнче КПСС Вăрнар райкомĕн çуртĕнче çапнă сăн ӳкерчĕкре район хаçачĕпе типографире ĕçлекенсене куратăр (сулахайран сылтăмалла): 1-мĕш ретре лараççĕ: Григорий Илепер, Георгий Игнатьев — литсотрудниксем; 2-мĕш ретре: редакци секретарĕ Николай Орлов, редактор заместителĕ Василий Еремеев, Нина Иванова печатница, типографи мастерĕ Никифор Зубровский, хаçат редакторĕ Петр Тихонов-Ялгир, Василий Семенов бухгалтер, «Советская Чувашия» хаçатăн Вăрнарти собкорĕ Евгений Ефремов, Анна Ермакова наборщица, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Алексей Иванов; 3-мĕш ретре: Владимир Москвин корректор, Зоя Клочкова наборщица, Анастасия Обофорова техничка, Нина Иванова, Полина Александрова, Мария Петрова, Анфиса Макарова, Мария Аполлонова печатницăсем, Александра Антонова-Бобылева корректор, Александра Яковлева метранпаж, Александра Волкова, Паша Игнатьева, Александра Петрова наборщицăсем; 4-мĕш ретре: Иван Иванов хут касакан, Анюта Кудрявцева, Юлия Кудрявцева наборщицăсем, Алексей Васильев печатник, Владимир Кузьмин литсотрудник.



Захар Андреевич Андреев



Район тăрăх çăмăл автомашинăпа катаччи чупас умĕн (сулахайран сылтăмалла): Владимир Москвин, Тимофей Мокеев тата Владимир Кузьмин. 1962 çулхи кĕркунне Виссарион Кожанов редакци картишĕнче ӳкернĕ.



Вăрнар енчи Уравăш çыравçи-капкăнçă Степан Юркин, Владимир Кузьмин тата Михаил Васильев «Çĕнтерÿшĕн» редакторĕн ĕç пÿлĕмĕнче. 1973 çулхи раштав.



Александр Мешковпа (сулахайри) Владимир Кузьмин Элĕк енчи «Молния» колхозран мыскара курса таврăннă хыççăн. 1962 çулхи кĕркунне.

*Владимир Кузьмин сăн ÿкерчĕкĕ.*



Владимир Москвинпа (сулахайри) Владимир Кузьмин — ВЛКСМ Вăрнар райкомĕн активисчĕсем: пĕри — райком бюровĕн членĕ, тепри — райком членĕ, районти «Комсомол прожекторĕн» штаб начальникĕ. 1964 çул.



Туссем каллех Вăрнарта тĕл пулнă (сулахайран сылтăмалла): Владимир Кузьмин, Владимир Яковлев, Михаил Васильев.



Тăван района ĕçпе е курма килсен, редакцие кĕрсе юлташсемпе калаçмасăр-савăнмасăр чун чăтмасть. 1990 çулхи авăн уйăхĕнче «Коммунизм ялавĕ» корреспонденчĕ Юрий Дмитриев пире редактор пÿлĕмĕнче пултарулăх каласăнĕ вăхăтĕнче ÿкерсе илчĕ. Уравăшри Степан Юркин (сылтăмри) хăйĕн çĕнĕ фельетонне вулать. Сулахайри — Михаил Васильев редактор.



Владимир Кузьминпа Василий Петров ВЛКСМ обкомĕнчи канашлу вăхăтĕнче.

*Иван Никифоров ӳкернĕ.*



Пӗтӗм Союзри «Комсомол прожекторне» пулăшакан ушкăн членӗсене ҫав ушкăнрах тăракан Иван Никифоров фотокорреспондент Шупашкар районӗнче ял хуҫалăх техникине ҫуракине мӗнле хатӗрленине тӗрӗсленӗ кун ӳкерсе илнӗ (сулахайран сылтăмалла): Николай Борисов — ВЛКСМ Шупашкар райкомӗн секретарӗ, Владимир Кузьмин — «Ҫамрăк коммунист» корреспонденчӗ, Юрий Титов — «Комсомольская правда» хаҫатăн ятарлă корреспонденчӗ. 1963 ҫул.



Петр Григорьевич Маркин.



Элĕк районне çĕнĕрен туса хурсан «Ленин çулĕпе» Вăрнар типографийĕнче пĕрремĕш хут тухнă хыççăн редакцин ответлă секретарьне Владимир Прокопьевич Кузьмина «Çĕнтерӳ çулĕн» журналисчĕсем саламлаççĕ (сылтăмран сулахаялла): ял хуçалăх пайĕн заведующийĕ Анатолий Игнатьевич Степанов, ответлă секретарĕ Владимир Иванович Москвин, парти пурнăç пайĕн заведующийĕ Николай Артемьевич Орлов...

*Виссарион Кожанов ӳкернĕ.*



Йĕпреç ен сăн-пичĕн çаптаркка маçтăрĕ Дмитрий Семенович Киселев 1968 çулхи раштавăн 1-мĕшĕнче. Автопортрет.



Мухтавлă çĕнтерӳ паллине — Ялав илнĕ хыççăн эртелпе сăн ӳкерттернĕ (сулахайран сылтăмалла): малти ретре — «Çĕнтерӳшĕн» редакторĕн заместителĕ Владимир Кузьмин, Чăваш АССР Пичетпе полиграфи управленийĕн председателĕ Алексей Васильев, хаçат редакторĕ Геннадий Мальцев, Вера Афанасьева печатница, КПСС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Клавдия Оленина, типографи мастерĕ Перасковья Кузнецова; иккĕмĕш ретре — редакципе типографи çуртне типтерлекен Перасковья Медведева, Нина Петрова печатница, Евдокия Трофимова печатница, хуçалăха йĕркелесе сыхлакан Афанасий Петров, Владимир Давыдов ответлă секретарь.



Çĕмĕрлепе Вăрнар Улатимĕрĕсем — Шалтайкинпа Кузьмин. 1965 çулхи юпа уйăхĕ.



ЧАССР район хаҫачĕсен ответлă секретарĕсен семинарĕнче. Хыҫалти ретри сылтăмри — «Ҫĕнтерӳшĕн» хаҫат редакцийĕн «штаб начальникĕ» Владимир Кузьмин. Шупашкарти Володарский урамĕнчи Пичет ҫуртĕнче Виталий Исаєв фотожурналист ӳкернĕ.



Республикăри паллă спортсмен тата фотокорреспондент Виссарион Кожанов.

*Владимир Кузьмин 1965 ҫулта Вăрнар типографийĕнче ӳкернĕ.*



Йĕлтĕрçĕсен «Çĕнтерӳшĕн» парнине илессишĕн irттернĕ районти ăмăрту хыççăн Хурашыв çумĕнчи кану паркĕнче (сулахайра) Владимир Кузьмин.



1966 çулхи нарăсăн 20-мĕшĕнче ирттернĕ ĕçялкорсен канашлăвĕ вăхăтĕнче (сулахайран сылтăмалла): лараççĕ — Мария Атамова, Каçал ен ачи, Василий Дмитриев поэт, редакци сотрудникĕ Никонор Павлов Йĕпреçре пурăнакан Иванов вăрçă ветеранĕнчен интервью илет; тăраççĕ — редакцин чи çамрăк литсотрудникĕ Николай Перлов (иккĕмĕшĕ), Владимир Давыдовпа Владимир Кузьмин (хĕрринчисем).

Йĕпреҫ вăрманĕн кашлавĕнче пурнăҫ юрри хывакан пултарулăх илемĕн хунавĕсем (сулахайран сылтăмалла): тăраççĕ — Владимир Кузьмин (Вăрнар районĕнчи Хурăнсур Ҫармăс), Николай Максимов (Канаш районĕнчи Кăшнаруй); лараççĕ — Михаил Богатов (Комсомольски районĕнчи Тимĕрҫкасси), Владимир Давыдов (Комсомольски районĕнчи Хирти Мăнтăр). 1966 ҫул.





Кулăш ăсти, Йĕпреҫ ĕҫченĕсене хаҫат урлă чаплантарма ăста, ырă кăмăллă ҫыравҫă, Аслă Каҫал ен чăвашĕ Спиридон Трофимович Борцов (Ҫĕвеҫук Ҫĕпритунĕ).



Йĕпреçри колхоз театрĕн музыкçи-артисчĕ Никита Константинович Чернышев-Шетмĕ (Трак-Красноармейски тăрăхĕнчен) юн сиксе тухасла вĕренĕ самантра кĕлеткине хĕртсе выртать (сылтăмри). Суту-илӳ таврашĕнче упа-кашкăртилĕ ролĕсене выляса халăхра ырă ят илнĕ Павел Федорович Федоров, Энтриел йĕкĕчĕ, вăрманпромхозăн ОРСне — рабочисене таварпа тата апат-çимĕçпе ытлăн-çитлĕн тивĕçтерекен чи пуян пайне тытса пыракан шухăшлавпа шуглав ăстаçи, хăйĕн пирĕштийĕсене аса илсе, канлĕх шухăшне путнă (варринчи). Тĕлпулăва йĕркелекенĕ - Владимир Кузьмин. 1966 çул. Йĕпреçĕн кану паркĕ.



Çĕршыв хуралçи Владимир Давыдов рядовой, Архангельск облаçĕнчи артиллери чаçĕнчен курма килнĕскер. Салтака кайиччен, 1966 çулхи утă уйăхĕнче парнеленĕ хăйĕн сăнӳкерчĕкĕ хыçне çырса хуни аса килчĕ çав кунсенчен пĕринче: «Çсçкери пек çамрăклăх пăхрĕ ман куçран. Пирĕн çирĕп туслăх юлмĕ пурнăçран». Сулахайри — Анатолий Миронов редактор.



Туслӑх-юлташлӑх вӑйӗ ӗҫре кӑна мар, кану вӑхӑтӗнчи ирӗхлӗхре те палӑрать. Епле савӑк Йӗпреҫӗн вӑрман паркӗнче (сулахайран сылтӑмалла): Маруся Киселева, Римма Кузьмина, Владимир Давыдов, Владимир Кузьмин Олег Мальцевпа, Геннадий Мальцев арӑмӗпе, Людапа.



1967 ҫулхи ӳкерчӗкре (сылтӑмран сулахаялла): ҫӳлти ретре — Спиридон Борцов, Николай Максимов; варринче — Владимир Кузьмин, Никонор Павлов, Никита Чернышев, Василий Андреев, Анатолий Миронов.



Ик ҫӑвӑр автан хушшинче чӑрсӑрланса сиккелесе илесси те пулкалать. Камӑн лӑплантармалла вӗсене? Паллах, манӑн, аслӑраххин. Николай Перлов (сулахайри), аслӑ «пиччӗшӗ» Улатимӗр хӗрӳ чунлӑ кӑра Улатимӗр «шӑллӗне» юсанине хӑпартланса сӑнать.



Редакцин йывӑҫ ҫурчӗ умӗнче (сулахайран сылтӑмалла): Петр Кузьмин-Ҫӑлкуҫ, Николай Перлов, Василий Андреев-Хурамал, Петр Кузьмин (Чӑвашрадио), Василий Башкиров, Василий Давыдов-Анатри (Шупашкар), Аверкий Смирнов, Виталий Родионов, Геннадий Кузнецов, Константин Алимасов; малти ретре — Геннадий Мальцев, Владимир Кузьмин, Роман Чепунов. Чӑваш литературин аталанӑвӗ пирки пӗр-пӗринпе турткалашса минренӗ хыҫҫӑн.




Çĕршывăн илемлĕ тепĕр кĕтесĕнче Донецкра пуçласа пултăм. Украина ССРĕн çĕр кăмрăк министерствин тĕп хулийĕ типтерлĕхĕпе, илемлĕхĕпе тата халăх культурин шайĕпе тĕнчери чи чаплă хуласенчен пĕри пуль тесе шутларăм сарлака та сип-симĕс урамĕсем тăрăх çынсемпе пуплекелесе çӳренĕ май. Тавралăх чечекленсе ешернĕ вăхăтра чун юрлать. Эпир, ĕçялкор университечĕсене ертсе пыракан тăваттăмĕш семинарне пухăннă пĕтĕм çĕршыв журналисчĕсем, украинецсен ырă кăмăлĕпе савăнтăмăр. СССР Журналистсен Союзĕпе УССР Журналистсен союзĕн Донецк облаçĕн организацийĕ питĕ лайăх йĕркелесе ирттерчĕç çак вĕрсйĕве. Лекцисем те итлерĕмĕр, секци занятийĕсенче те пултăмăр, каçпа театрсене те çӳрерĕмĕр, пĕр-пĕринпе, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашрăмăр.

Пирĕн ушкăн ĕçялкорсен Донецк университечĕн Макеевкăри филиалĕн хăни пулчĕ. Ĕçе вĕсем питĕ аван йĕркеленĕ. Хулара металлурги промышленноçĕпе çĕр кăмрăкĕн отраслĕ вăйлă аталаннă. Хула тавра, Донецкри пекех, шатхăсемпе терриконсем. Çĕр айĕнчен кăларнă çĕр тăвĕсем мана Инçет Хĕвелтухăçĕнчи тайгари сопкăсене аса илтерчĕç.

«Сивĕ тип вар» (Холодная Балка) шахтăна илсе кайрĕç. Унта чăваш шахтерĕсемпе те тĕл пулса калаçрăм. Хамăр ушкăн сăн ӳкерчĕкĕн хыçне УССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Ярмаш çапла çырса пачĕ: «Здесь, на шахте «Холодная Балка», чуваши как и многие представители других национальностей, работали и работают в полную силу, от всей души. Большое спасибо чувашскому народу за то, что прислали нам таких не унывающих богатырей».

Хăйсен чăн-чăн борщĕпе, салипе, горилкипе хăналарĕç пире Макеевка журналисчĕсемпе шахтерĕсем. Туссем хутшăнсах пычĕç: Георгиу-Деж хулинчи Новикова Николаевпа Терешкова пек пĕрле космоса вĕçме чĕнет; Çĕпĕрти Щучьери Волков пулла илĕртет; Молдаван ССРĕнчи Кагул хулинчен Мирон, Сороки хулинчи «Путь Ильича» хаçатран Сагайдак «Каберне» ĕçтерсе ташлаттарасшăн...

Сăнӳкерчĕкре *(сылтăмран сулахаялла)*: В.Волков — Устье хули, В.Кузьмин — ЧАССРчи Йĕпреç, А.Ярмаш — Макеевка хули.



Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, КПСС Чăваш обкомĕн членĕ, Йĕпреç райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Николай Григорьевич Лермонтов.



Василий Иванов радиойĕркелӳçĕ (сылтăмри) Кĕтне пуллине хăй мар, Николай Перлов тытнишĕн вĕчĕхсе, Надежда Уткина линотиписткăна шантару сăмахĕ парать: «Тепринче çĕлен пулă тытатăпах!» Перасковья Ильинична Кузнецова печатницăна, редактора тата Мария Тимофеевна Артемьева наборщицăна пушă сăмах мар, чĕрĕ пулă ытларах интереслентерет. Сăмахне тытсан аванччĕ ачан.



Хаçат редакторĕ Владимир Кузьмин Ленин ячĕллĕ колхозри хастар çыравçа-сăвăçа Луç Кавĕрлине Хисеп хучĕ парать.




Хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕсен пĕр ушкăнĕ тата райхаçат çыннисем Шупашкар хăнисемпе асра юлмалăх сăн ӳкерттерсе юлас тенĕ (малти ретре): Василий Варганов, Аверкий Смирнов, Гаврил Лосев; иккĕмĕш ретре: Василий Андреев-Хурамал, Спиридон Борцов; хыçалти ретре: Владимир Кузьмин, Николай Перлов, Чăваш журналисчĕсен Союзĕн хуравлă секретарĕ Антип Николаев, Геннадий Кузнецов, «Пионер сасси» хаçат редакторĕ Исаак Кириллов, Василий Башкиров.



«Çĕнтерӳшĕн» хаçат редакцийĕнче, типографийĕнче ĕçлекенсем тата хаçат активисчĕсем (сулахайран сылтăмалла): пĕрремĕш ретре — Галина Кириллова, Перасковья Кузнецова, Мария Артемьева, Валентина Кузнецова, Людмила Артемьева, Надежда Асанова, Христина Башкирова; иккĕмĕш ретре — Павел Уткин, Геннадий Кузнецов, Николай Ядрицев, Николай Перлов, Никита Чернышев-Шетмĕ, Анатолий Семенов, Владимир Кузьмин, Дмитрий Васильев, Эдуард Николаев, Полина Федорова; виççĕмĕш ретре — Афанасий Мородин, Анатолий Кушев, Илья Ефимов, Александр Дмитриев, Василий Абрамов, Михаил Федоров, Анатолий Миронов, Аркадий Сергеев, Владимир Ильин, Василий Башкиров. 1974 çул.



«Культурăна юратакансен клубĕнче» илем çуттине вăйлатса пыракан Виталий Григорьевич Родионов (Вăрнар), Элĕк ен ачи Вениамин Павлов, Геннадий Кузнецов, Владимир Кузьмин Йĕпреç массовкинче-акатуйĕнче.



«Çĕнтерӳшĕн» редакторĕ Владимир Кузьмин вăрман ĕçченне-специалистне Дмитрий Дубинина пичетре активлăх кăтартнăшăн мухтавлăн саламлать. Лараканни — вăрманпромхоз директорĕ Анатолий Шереметьев. 1972 çул.



СССР Аслă канашне депутата суйлама тăратнă кандидат, çывăх тусăм Василий Игнатьевич Романов (сулахайри) Йĕпреç суйлавçисемпе чунне уçса калаçать.



Ӑсату саманчĕ. Шупашкаралла ҫул тытнӑ хыҫҫӑн (сулахайран сылтӑмалла): Геннадий Кузнецов, Дмитрий Киселев, Виталий Родионов, Лилия Орлова, Вениамин Павлов, Владимир Кузьмин, Василий Башкиров, Мария Судакова, Константин Алимасов. 1974 ҫулхи утӑ уйӑхĕ.



Районти тĕп библиотекӑра «Виҫĕ юман» повеҫе (кĕнекене) сӳтсе явнӑ вӑхӑтра.

*Сӑн ӳкерчĕкĕсене Дмитрий Киселев тунӑ.*



Вăрнар районĕнчи Çĕрпелти культура керменĕнче. Менелник кĕрекинче: сылтăмра — Владимир Кузьминăн мăшăрĕ Римма Ильинична, сулахайра — пĕрремĕш учительници Нина Николаевна Баюкова.

Йĕпреçсен ячĕпе вăрман комбиначĕн директорĕ, Зеленовка ялĕнче çуралса ӳснĕ ентешĕ Александр Николаевич Ведин саламлать.

*Борис Кузьмин сăн ӳкерчĕкĕсем.*





Вăрнарсемпе йĕпреçсем нумай çул хушши ăмăртаççĕ. Редакцисен туслăхĕ çирĕпленсех пырать. Электричество енчен йывăр вăхăтра эпир хаçата Вăрнар типографийĕнче пĕрре кăна мар пичетленĕ. Каярахпа Канаш типографийĕн филиалĕпе Вăрнар типографийĕ пĕрне-пĕри алă пачĕç. «Çĕнтерӳшĕн» утмăл çул тултарнине уявлама вăрнарсем те пынăччĕ. Типографи директорĕ, Чăваш Республики промышленноçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, манăн çывăх юлташăм Вениамин Иванович Сорокин, авă, пире çуллă кулăшпа астарать.



Культура министрĕ П.Краснов Йĕпреç районĕн «Çĕнтерӳшĕн» хаçачĕн редакторне Константин Алимасова саламлать. 2007 çул.



«Çĕнтерӳшĕн» 50 çул тултарнă ятпа ирттернĕ савăнăçлă лару хыççăн унта хутшăннисем КПСС райкомĕн çурчĕ умĕнче сăн ӳкерттернĕ. Малти ретре (сулахайран сылтăмалла): парти райкомĕн бюро членĕ, район Совечĕн депутачĕ, райхаçат редакторĕ Серафим Ефимов, райсовет ĕçтăвкомĕн председатель заместителĕ Анатолий Ядровский, «Коммунизм ялавĕн» корреспонденчĕ Вениамин Васильев, Канашри «Коммунизмшăн» хаçат редакторĕ Михаил Ефимов, КПСС райкомĕн секретарĕ Христина Башкирова, Комсомольски районĕнчи «Октябрь ялавĕ» хаçат редакторĕ Геннадий Уткин, КПСС райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ Валентин Михатайкин, ял хуçалăх управленийĕн начальникĕ Геннадий Яковлев.



Кӗтне улӑхӗнчи лесник кантурӗнче, 1998 ҫул. Серафим Ефимов хӑйӗн утмӑл ҫулхи пурнӑҫӗ ҫинчен сӑмах калама хатӗрленнӗ вӑхӑтра уяв сӗтелӗ хушшинчен тутлӑхланса тухнӑ юлташӗсем юмах ҫаптараҫҫӗ. Редакци ҫыннисен ҫывӑх тусӗ, районти почта уйрӑмӗн начальникӗ Николай Григорьевич Григорьев хӗрарӑм илемӗн тӳпи ӑҫтараххи ҫинчен пас пӳрнине ҫӳлелле тӑратсах калаҫуирттерет. Хӑлха тӑратса итлекенӗсем: район администрацийӗн социаллӑ пай заведующийӗ Петр Яичников, «Тӑван Атӑл» журналӑн литпай пуҫлӑхӗ Владимир Кузьмин, район администрацийӗн экономика службине ертсе пыракан Вадим Брагин... Сылтӑм енче — ЧР Пичет министерствин пай пуҫлӑхӗ Михаил Тихонов шухӑшлавлӑ калаҫура.

ăна хăй туртса пынă та, тăван района пулăшма ыйтнă. Çанăсене тавăрнă çакăн хыççăн журналист-ертӳçĕ. Мешкова ӳкĕтлесе райсовет ĕçтăвкомĕн секретарĕнчен юратнă ĕçне тавăрнă. Мана тупса килĕшнĕ. Редакципе типографин малтанхи çуртне каялла тавăрассипе мĕн чухлĕ хĕрме, тавлашма тивнĕ Шупашкарти пуçлăхсемпе. Укçа хуçисем кайсан çуртне юсаттарчĕ. Райкомăн йывăç çуртĕнчи пĕр пӳлĕмре вырнаçнă редакци тин унта куçрĕ. Алăпа наборламалли шрифтсене унтан-кунтан тупкаларĕç. Вăрнарсем пичетлемелли машина пачĕç. Сарайне хут касмалли машина вырнаçтарчĕç.

Патшалăх линийĕнчен Элĕке электричество пыманччĕ-ха, çавăнпа кивĕрех электродвижок туянчĕç.

Тем пек йывăр пулсан та, çын куçĕнчен пăхмастпăр халь, тесе савăнтăмăр. Типографире малтан ĕçленĕ Н.Серафимова, Р.Митрофанова, Т.Кузьмина, В.Чернова тата ыттисем те апата каймасăр, тепĕр чухне çĕрĕ-çĕрĕпе хаçат кăларатчĕç. Чăтăмлăхĕ çитетчĕ çав.

Редакципе типографи тытăмĕ йĕркеленсе кайсассăн, «Ленин çулĕпе» хăйĕн çул йĕрне такăрласа пычĕ, пирĕн йыша пултаруллă тата ытти çыравçăсем хутшăнчĕç: Михаил Кустиков, Иван Михайлов, Николай Пахомов, Семен Ухтеринов... Ухтеринов мораль темипе çырма юрататчĕ. Унăн çуралнă кунне паллă туни манăçмасть-ха.

Вăрнарти типографире ĕçлекен Светлана Широкова амăшĕ патĕнче хваттерлетчĕ вăл хăйĕн кану вăхăтне. Эпир унăн менелникĕнче урăхларах савăнасшăнччĕ, паркра ытакланса утса çӳресшĕнччĕ. Анчах та Семен хирĕçлерĕ, хваттертех, сĕтел хушшинчех кăмăллă, терĕ.

Пит ыркăмăллă та савăк иртрĕ туслăх каçĕ. Шăпах авăн уйăхĕ пирĕн хушша тулли пĕрчĕ сĕткенне сапатчĕ. Аркадий Григорьевич вăл, велосипедпа яла çӳрекенскер (редакцин пĕртен-пĕр транспорчĕ), юратнă арăмĕн куç хĕлхемĕпе çунма васкарĕ пуль, эпир, урапасăр пынăскерсем, Широковасен хваттер ытамĕнчех юлтăмăр. Ирпе-ирех кӳршĕрен пĕр чипер хĕрарăм тулли кăкшăм йăтса каçрĕ, Мешкова палласа илчĕ те, вĕлер те уйрăлмасть, юмахлать те юмахлать, «маленковски стакана» шур шĕвек тултарать те тултарать. Чăтаймарĕ Александр Николаевич, хĕрарăмпа ытакланса ташă çаврăмĕ турĕ те, «Тепре ĕçер те - ĕçе!» —терĕ. Ухтеринов 56 градуслă эрехе рюмкăсене тултарчĕ...

Сĕт завочĕ çуммипе тӳрĕрен хăпаратпăр редакци еннелле. Иртнĕ эрнере анчах хаçатра заводри йĕркесĕрлĕхсене питлесе çырнăччĕ. Хуçи чӳречерен сăнасах тăнă пулмалла çав, тӳрех райкома шăнкăравланă. Лерен — Кустиков патне.

Мешков чăтаймарĕ, тӳрех сарайнелле лаплаттарчĕ, кунĕпе хут купи çинче харлаттарчĕ. Манăн хаçат кунĕ, страницăсене калăпламалла. Наборщицăсемпе ĕçлемелле, материалсем те çитместчĕç. Александр Николаевич валли, çунакан темăпа, пĕр лаптăк хăварнăччĕ. Эпĕ çитсенех машинисткăна Александр Горшков çинчен «Пурнăç çулĕ» очерка каласа çаптартăм та, наборлаттарса Мешков хăварттарнă вырăна лартрăм. Хаçат калăпланса çитрĕ.

Ĕçлетпĕр, мăшăлтататпăр, мухмăр çинчен те маннă, редактор пире пĕр хирĕçле сăмах та каламасть. Мешков пит-куçне сăтăркаласа кĕчĕ. Хаçата пичетлеме алă пусса панă хыççăн тин Кустиков: «Пухăнса кăшт калаçса илер-ха», — терĕ. Калаçу хĕрсе кайрĕ çав, редактор хăйĕн çуммине типĕллех мухмăр чĕрттерчĕ. Асăрхаттарăвĕ пурне те çитсе çапрĕ. Ара, сĕт заводĕнчен килнĕ шалăпа хыççăн райкома пĕлтермелле-çке тивĕçлĕ мерăсем йышăнни çинчен.

«Урнă ĕне сĕчĕ» хыççăн тата тутлăрах сĕт çитерчĕç асăрханулăхпа чăтăмлăх çитмен Мешков журналиста. Менелник камитпе вĕçленчĕ.

Редактор хăйне пăхăнакансемпе ăшшăн, кӳрентермесĕр, сасă хăпартмасăр, ăнланса калаçатчĕ, ăста çыракансене юрататчĕ, мухтатчĕ, хăйне ыттисенчен уйăрса пуç каçăртса çӳреместчĕ, хуйха-суйха ăнланатчĕ, пулăшма хатĕрччĕ. Пирĕн çемьене районти культура çурчĕпе хирĕç тăвакан çуртра хваттер пама та шантарнăччĕ.

Фотокорреспондент çукки йывăрлăха кĕртсе ӳкеретчĕ. Район пурнăçне сăнлакан сăнӳкерчĕксемсĕр хаçат пичĕ илемлĕ курăнмастчĕ. Çавăнпа Шупашкартан командировкăна килнĕ Иван Никифорова, Семен Игнатьева ытларах ӳкерттерсе хăвараттăмччĕ.

Йĕркен-йĕркен шăратса наборлакан линотип вырнаçтарсан, ĕç çăмăлланчĕ.

Хунькассине çул кĕскелчĕ. Торпкассине тăвата çухрăм кăна. Пĕччен те, арăмпа пĕрле те, вăл хамăр ялтан килсен, пĕлекен çулпа чуптаратпăр. Ялĕ çумĕнчех вĕсен топографи вышки пурччĕ.

Балти тинĕс шайĕнчен 204 метр çӳллĕшĕнче вырнаçнă-мĕн Торпкасси. Элĕк çĕрĕнчи чи çӳллĕ вырăнтан, Тури Хурасантан,

1 метр кăна аяларах. Палăртнă вырăнсенче, геодези йĕркипе, тригонометри пункчĕсем е вышкăсем пур. Кашни вышкăран виççĕшне те курăнмалла лартаççĕ. Çапла çĕре виçкĕтеслĕхсем çине пайланă. Çав виçкĕтеслĕхсен (Тури Хурасан-Торпкасси-Ураскилт) варринче, Чăваш Республикин чи çӳллĕ тӳпинче, ăмăртмалла тапма пуçларĕç пирĕн çамрăк чĕресем. Шаймăкланса вышка тăрне кушаксем пек улăхаттăмăр, çӳллĕ çĕртен таврана сăнаттăмăр. Инçетре-инçетре, тухăç енче, пирĕн Хурăнсур та курăннă пек туйăнатчĕ. Ик район хушшинче чикĕ пулсан та, пирĕн хушăра чикĕ çукчĕ ĕнтĕ чĕресем пĕрлешнĕ майăн. Пуçăмра сăвă та çырăннăччĕ вара çав чарусăр кунсем хыççăн, вăтăр çул ытла иртсен:

**Элĕкьен — Вăрнарьен — тăваньен**

Сăр вăрманĕн, ват вăрманĕн уçланки
Варринче пурнатпăр эпĕр, чăвашсем.
Тыр кăрманĕн, мăн кăрманĕн хуплашки
Айĕнче хунатпăр йышлăн, кӳршĕсем.
Элĕкьен — Вăрнарьен — Чăвашьен.

Сурпан çыхнă Сурăм лăпкăн хумханса
Çавалпа вылять ăш пĕрхĕм сирпĕтсе.
Тӳпере çич тĕслĕн, уççăн йăлкăшса
Карăнать кĕпер хушша, чуна чĕртсе.
Элĕкьен — Вăрнарьен — туслăх ен.

Пуян çĕрĕн тарăн çăллă куçĕсем
Чăл пăхаççĕ Тенипе Кӳлхĕрринчен.
Çыхăнаççĕ кӳлĕсен тымарĕсем,
Вăй илеççĕ çул уçса çĕр айĕнчен.
Элĕкьен — Вăрнарьен — ĕçчен ен.

Элĕк енĕ — Чăваш çĕрĕн çӳл тӳпи.
Çывхарать унтан тăссан тăван алли.
Вăрнар енĕ — Чăваш çĕрĕн кăвапи.
Элĕксемшĕн те вăл пурăнăç апи.
Элĕк ен — Вăрнарьен — пĕрлĕх ен.

Хĕвел хывнă асамат кĕперĕн айĕнче,
Çĕр-анне тымарĕн хĕрӳ юн выляВĕнче

Юрату çунат сарать те туслăх туптанать,
Элĕкпе Вăрнар пĕр çеммĕн юрă шăрататать.
Элĕкьен — Вăрнарьен — тăван ен.

Кивьял Хапăс ачи Николай Маркелович Андреев композитор манăн çак сăввăма юрра хыврĕ, ăна вăл, паллă юрăçă-артист, хăех шăрантарать, вăрнарсемпе элĕксене чунпа çывăхлатать.

Вăхăт ухмахлăхĕ йăлана кĕнĕ ят-шыва та улăштарать. Тахçан «Ленин çулĕпе» утаттăмăр, халĕ элĕксем «Пурнăç çулĕпе» кĕрлеттереççĕ. 1997 çулта, хаçат 65 çул тултарнине паллă тума чĕнсен, эпĕ пĕлекен уçă çулпах хăнана кайрăм. Маншăн икĕ çулĕ те пĕрех — пурнăç çулĕ.

Аванччĕ ĕçлеме. Районăн тата редакцин пĕр хушă татăлнă пурнăç сыпăкне çыпăçтарма хамăн та хутшăнма тӳр килнĕшăн халĕ те çав тери хĕпĕртетĕп. Элĕк ен ĕнтĕ маншăн чĕре ен пулса тăчĕ. Торпкасси ялне те, мана чипер хĕр ӳстерсе панăшăн, Туркасси тетĕп.

*2000 çулхи*
*ака уйăхĕн 6—7 кунĕсем.*

## КАШ-КАШЛАТЬ ЙĔПРЕÇ ВĂРМАНĔ

### Çĕнĕлĕх чĕнет

Чăваш çĕршывĕн çак илемлĕрен те илемлĕ вырăнĕпе чи малтан паллашнăранпа нумай çул çитет ĕнтĕ. Ун чухне Йĕпреç колхозĕсен ытларах пайĕ Вăрнар ял районне кĕретчĕ. «Çĕнтĕрӳ çулĕ» хаçатра ĕçленĕ май, пирĕн кунта час-часах килсе çӳреме тиветчĕ. Энгельс урамĕпе мĕкĕрсе майĕпен тăвалла хăпаракан, каснă йывăça сыпăламасăр тиенĕ машинăсем, хăйăрлă çулсем, шăнкăртатса юхакан йăнк тăрă юханшывсем, катасем хыçĕнче пытанса выртакан уйсем, тĕтреллĕ улăхсем, вăрман кашлавĕн тĕлĕнмелле кĕвви чĕрере темле романтикăллă туйăм çурататчĕ.

Кăшт тĕксĕмрех те çиллесрех сăн-питлĕ вăрман сыннисем, пуянах мар çĕр çинчех вăйлă тырпул ӳстерме, йышлă фермăсенче самăр выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе ытлă-çитлĕ сĕт-çу, аш-какай туса илме пултаракансем çинчен хаваслансах çырас, вĕсен йывăр та пархатарлă ĕçне хаçат урлă халăха уçăмлăн пĕлтерес килетчĕ.

1965 çулта Йĕпреç районне те малтанхи пек çĕнĕрен туса хучĕç. Ун хыççăн «Çĕнтĕрӳшĕн» хаçат та тухма пуçларĕ. Редакцисем хушшинче ылмаштару йĕрки пурччĕ те, ăна Элĕкре илсе тишкереттĕмĕр.

Элĕксемшĕн чи йывăр вăхăт хыçала тăрса юлчĕ. «Ленин çулĕпе» шанчăклах утаттăмăр. Çапах ăшра уçах марччĕ. Çыннисене хăнăхнăччĕ. Район центрĕ, ялĕсем лăпкăччĕ. Вырăсланман, чăн-чăн чăваш кĕтесĕ-кĕтĕвĕ. Таса чĕлхи мĕне тăрать, ыттисенчен уйрăмах. Вăрнарсем пек «мĕн-ха» мар, «мĕн-ке» тесе калаçççĕ. Ĕçлесех кайсан, çемьепе пурăнма пуçласан... Вăрнара, Çĕмĕрлене тухма чĕр нуша. Аталаннă, культурăллă Çĕрпеле, вăйлă шкула лекнĕ мăшăрăм та Элĕк пуласлăхĕ пирки татсах каламасть. Нурăсран пырса кĕнĕ чухне пирĕн «столица» хула пек курăнса ларать, тесе мухтанрах çыратчĕ те Михаил Кустиков, çапах та пилĕк-ултă лутра чул çуртпах Элĕке хула шайне çитерме çукчĕ ĕнтĕ. Элĕк те, ытти ялхуçалăх районĕсен центрĕсем, халĕ те илемленнĕ, сарăлнă мăн ялсем çех.

Çĕрĕн-кунĕн хаçат кăларса хăшкăлнă хыççăн редактор кăштах канма ирĕк пачĕ. Вăтам шкул хыçĕнчи тирексем хушшинче Семен Ухтеринов, Александр Мешков туслăн калаçсаларатпăр. Черкке пушатнă хыççăн Александр Николаевич, куçлăхне хывса, ыйтрĕ: «Кала тĕрĕссине, Володя. Урăх килместĕн вĕт эсĕ кунта

ĕçleme?» «Мана та çaплах туйăнать, тăвăр пулмалла сана Элĕкре», — терĕ Ухтериновĕ. Кулкаласа, вĕсенчен иккĕллĕ шухăшпах уйрăлтăм. Тĕрĕсех ăнланнă мана Çемен. Чăнах та тăвăрччĕ мана Элĕкре, тата кăткăсрах, анлăрах, пысăкрах ĕç ыйтаччĕ вăйланса, хĕрсе çитнĕ чун-чĕремĕм.

Йĕпреç енне çитсе курас килчĕ. Тахçан Вăрнар енчи Санарпуçĕнчен Костера аннен пиччĕшĕ Илья пурăнма куçса кайнă. Кукки ачисем Кĕркурипе Укахви патĕнче хăнара пулнă хыççăн редакцие кĕрсе тухас килчĕ. Партин Ленинградри аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнă Геннадий Мальцев редакторччĕ. Мана вăл ăшшăн йышăнчĕ, вăхăту пулсан, пулăшса пар-ха, терĕ. Редакцин ответлă секретарьне Константин Дмитриевич Александрова парти райкомне куçарнă пулнă. Ун вырăнне ĕçлеме сĕнчĕ. Килĕшрĕм.

Кам райхаçатра пиçсе курнă, çавă секретарь ĕçĕ мĕнлине пит аван ăнланать. Пайсенчен пынă материалсене илемлĕ, тивĕçлĕ чĕлхепе якатасси, кирлĕ шая çитересси, номерсене планласси, полосасене калăпласси аякран пăхса тăраканшăн çеç çăмăл иккен. Макетран хаçат пулса тухиччен секретарĕн пайтах пăс кăларма, типографине чупса ура тупанне якатма тивет. Ахальтенех танлаштарман пуль çав хаçатçăсем секретаре ункăра чупакан пакшапа. Редакцин «штаб начальникĕ» те теççĕ ăна. Ячĕ те «ответлă» ятлă-çке!

Умри йывăрлăхсене куçпа курсах, чун-чĕрепе туйсах ярса илтĕм хамăн алла редакцин пĕтĕм оперативлă ĕçне. Редакци çыннисем хушшинче ютшăнмарăм. Вĕсем мана унччен те, çырнă тăрăх та пĕлеççĕ. Эрне ĕçлерĕм, иккĕмĕшĕнче... Геннадий Степанович мана райкома çавăтса кайрĕ, секретарьсемпе паллаштарчĕ. Пĕрремĕшĕ — Александр Петрович Петров. Унпа эпир Шупашкарта, эпĕ «Çамрăк коммунистра», вăл Чăваш комсомолне ертсе пынă чухне, сахал мар тĕл пулнă. Эпĕ кунта килнĕренпе çырма ĕлкĕрнĕ хайлавсене вуласа лайăх хак пама та ĕлкĕрнĕ вăл. «Шутларăм çав эсех пуль тесе, «Çамрăк коммунист» йĕрри пур, Йĕпреçе килнĕренпе курманччĕ-ха унашкал çивĕч, илемлĕ, яка вуланакан япаласем. Понятнов сан пирки мухтаса калаçатчĕ, мĕн, Элĕкрен пăрахса килтĕн-им?» —терĕ юнашар ларса. Эпĕ хам пирки ăнлантарса патăм. «Вăрманти капкăна лекнĕскерне вĕçертер мар, Геннадий Степанович», — тесе Петров Элĕк райкомĕпе çыхăнчĕ, пĕрремĕш секретарьпе, Понятновпа, ман пирки калаçса татăлчĕ.

Çапла эпĕ юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче Йĕпреçре хамăн тепĕр юпана — пурнăç юпине-лартрăм. Элĕкпе сывпуллашса килтĕм те...

Пуҫланчӗ вара тепӗр хӗрӳ тапхӑр.

Опытлӑ, квалификациллӗ журналистсем ҫителӗксӗррине пула, ман сӗтел ҫине пуклак чӗлхепе ҫырнӑ пиҫсе ҫитмен статьясемпе корреспонденцисем ытларах пырса выртатчӗҫ. Вӗсене саваласа якатни ҫителӗксӗрччӗ, нумайӑшне идея тӗлӗшӗнчен вӑйлатса, содержанине пуянлатса журналистика саккунӗсен ыйтӑвӗсене тивӗҫӳллӗ туса ҫитермеллеччӗ. Хӑшне-пӗрне ирӗксӗрех хуҫисене каялла тавӑрса пама тиветчӗ. Ун пек чухне материал е ҫӗнелет, е пусӗпех пӗтет. Ку вӑл ҫыравҫӑ пултарулӑхӗнчен те, чӑтӑмлӑхӗнчен те нумай килет-ҫке. Вӑхӑт иртетчӗ, хаҫат ҫеҫ нимӗн те пӗлместчӗ, вил те, ҫурӑл та, анчах пар эсӗ тӑватӑ хатӗр полоса — унсӑрӑн ҫырлахмасть.

Ҫав хушӑрах секретарӗн хаҫат сӑн-сӑпатне те капӑрлатас килет тата. Ку енӗпе тӗрлӗрен ҫӗнӗ мелсем, формӑсем шыраттӑмӑрччӗ. Материалсене полосасем ҫине тӑваткал майпа вырнаҫтарни тахҫантанпах ҫыпӑҫуллӑччӗ. Ку майпа Элӗкре усӑ кураттӑм. Кунта та ҫапла туса, материалсене илемлӗ линейкӑсемпе уйӑрса, хупса, статья ячӗсене уҫӑмлӑ, чӗнӳллӗ, кӗскен парса пыма пуҫларӑм. Вуншар ҫул хушши хытса ҫитнӗ йӑларан пистерме, ҫӗннине алла илме вӗрентме ҫынна мӗн тери йывӑр. Кунта киличчен те эпӗ вӑл чире сиплессишӗн халран кайнӑччӗ. Йӗпреҫсем те тӑрухах улшӑнасшӑн пулмарӗҫ. Умстатья вырӑнне мӗнле те пулин ҫивӗч материал лартсан, пуҫа пӑркалатчӗҫ: «Мӗнле-ха хаҫат умстатьясӑр?» Партипе комсомол, профсоюз, промышленность-строительство, советсен ыйтӑвӗсене иккӗмӗш страницӑра кӑна ҫутатмаллаччӗ. Виҫҫӗмӗш страницӑна ял хуҫалӑхӗ йышӑннӑ. Тӑваттӑмӗшӗнче — пур вак-тӗвек. Пӗрремӗш страницӑна хальхи пек ҫаппа-ҫарамас майрапа ҫутӑлтарса та салампа пӗлтерӳ тултарса лартаймастӑн. Майӗпен ҫӗмӗрсе пымалла пулчӗ ҫӑмӑллӑн, еккине ярса мӑшӑлтатса пурӑннӑ йӑлана. Ҫынсене вӑрҫтарсах.

Хаҫата сӑнӳкерчӗксемпе пуянлатас, илемлетес ҫӗрте те хӑшпӗр чӑрмавсем пурччӗ. Тин ҫеҫ редакцире вӑй виҫме пуҫланӑ Чӗмпӗр вырӑсӗн Дмитрий Семенович Киселевӑн ку енӗпе хӑнӑху, маҫтӑрлӑхӗ ҫитменни сисӗнетчӗ. Ырӑ кӑмӑллӑ, сӑпай ҫынччӗ вӑл. Ӳкерчӗксене ҫийӗнчех, вӑраха ямасӑр, килӗнче пичетлесе паратчӗ. Пирӗнтен аслӑрах пулин те, юлташла вӗрентсе каланишӗн кӳренместчӗ. Унӑн ывӑнма пӗлмен, нихҫан чӑхӑмламан кӑмеллӗ ИЖӗпе район тӑрӑх миҫе пин ҫухрӑм чупман пуль. Пӗрле ҫӳресе, вӗсене фотокорреспондент майӗпенех композици тӗлӗшӗнчен виҫеллӗ, хитре, чӗрӗ ӳкерчӗксем хатӗрлесе пама пуҫларӗ. Редак-

тор та йăлл кулса ячĕ: «Эпир те каçалсенчен юлмастпăр!» Вĕренме кайиччен Мальцев Каçалра-Комсомольскинче ĕçленĕ-çке. Лаврентий Таллеров шкулĕнче пиçнĕ Элĕк ачи курăмлă хаçатах тăвасшăнччĕ. Мана тĕл пуличчен унăн çав тĕллеве пурнăçламашкăн сылтăм алли çитменнине тӳрех туйрăм. Почта килсен те, хăнăхнă «Октябрь ялавне» чи малтан ярса тытатчĕ.

Çыраттăмăрччĕ, тата нумайрах çырас килетчĕ. Çапах та вăхăт ытларах творчествăлла ĕçре мар, типографире, хаçат калăпланă çĕрте, иртетчĕ.

Унăн сăлтавĕсем нумайччĕ ĕнтĕ. Шăпах вăл вăхăтра материалсене линотип текен кăткăс машинăпа наборлама тытăннăччĕ. Унпа пĕрлех тата çырнă йеркесене алăпа саспаллин-саспаллин пухса пичете хатĕрлеттĕмĕр. Мĕншĕн тесен, типографире пĕр линотип çеçчĕ. Йĕркипе иккĕ кирлĕ. Час-часх ванатчĕ вăл. Юсама Шупашкартан е Улатăртан республикăри Пичет управленийĕн мастерне чĕнсе илеттĕмĕр. Пĕр линотиписткине тата, юсавçă хыт кăмăла кайнă пулмалла та, тăлпан хитре Улатăр йĕкĕтне курас килсенех машинине «çĕмĕрсе» пăрахатчĕ. Линотипа пĕлекен ăста вырăнта çукчĕ. Улах ачи тĕп хуларан персе çиттичен кĕтмеллех. Линотип вучахне те, хуçине те чĕртсе ярсан тин ĕç юрăри пек кал-кал каятчĕ. Пĕр хĕрарăмăн юрату юррине юрлаттăмăр. Нимĕн тума та çукчĕ.

Çав çулсенче тата, çитменнине, поселокра электроснабжени енчен начарччĕ. Каçалапа çутă тăтăшах сӳнсе хăшкăлтаратчĕ. Линотипăн металл шăратмалли кăмаки шăнса ларатчĕ. Электрик шыраса тупса киличчен, Филиппов подстанцире чакаланса ток панă хыççăн кăмака хĕриччен, чылай вăхăт иртетчĕ. Калăпласа пĕтермен полосасем сĕтел çинче выртатчĕç... Калăпланă хыççăн страницăсен оттискне текстпа майлаштарса вуламалла, йăнăшсене тӳрлетмелле... ответлă секретарĕн çеç мар, корректорăн та, хаçата черетпе вулаканăн та, редакторăн та çĕрĕ-çĕрĕпе ниçта тухмасăр ларма тиветчĕ. Тепĕр чухне, ирпе ĕçе васкакан çынсем, эпĕ киле кайнă чух, манран улахран таврăнатăн-им, тесе кулатчĕç. Полосасене Вăрнарпа Канаша та илсе кайса пичетленĕ хаçата. Вăхăтра ан кăлар-ха? Сăлтавне вулакан пĕлмест, пăтăрмахне аслă пуçлăхсем йышăнмаççĕ.

Типографи хĕрарăмĕсем, алă ĕçне хăнăхнăскерсем, çавăнпа малтанах линотип мăшкăлне чăтма пултараймастчĕç. Хутăш наборпа хаçата калăплама тата кăткăсрахчĕ. Саспаллисем, йĕркисем тан мар. Пичетленĕ чухне те асап кăтартатчĕ.

Йывăр тапхăра эртелпе чăтăмлăн çĕнтерсе ирттертĕмĕр. 1966 çулта редакципе типографире ĕçлекенсем республикăри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава çĕнсе илнĕччĕ.

Çыннисем ĕçчен те пултаруллă, çыннисем маттурччĕ çав. Вера Михайловна Арсентьеванах илер. Чĕвĕлти чĕкеç пек чĕлхеллĕ, ырă кăмăллă, ăста алăллă ĕçчен ĕмĕрне хаçат кăларса ирттернĕ тесен те йăнăш пулмĕ. Миçе пин йĕрке пухнă-ши Туçа хĕрарăмĕ алăпа? Ăна никам та шутламан. Çавăнпа ĕнтĕ кайран, хам редакторта ĕçленĕ чухне, коллективăн Хисеп кĕнекине тусан, Вера Михайловнана чи малтан унта кĕртме йышăнтăмăр.

Наборщицăсен ĕçне сăнаса тăраттăмччĕ те, вĕсем мана çĕре сапса панă тулă пĕрчисене васкаса тăклаттаракан чăхсене аса илтеретчĕç. Куç вăйĕпе ал çаврăмĕ çивĕч кирлĕ наборщицăна. Ун умĕнче — хăмаран çапса тунă тăваткал ещĕк. Ăна 110 пая пайланă. Тарăнах мар тăваткал пӳлĕмсенче-йăвасенче литерăсем — хура тăхланран, тăхланран тата сурьмаран шăратса кăларнă тăрăхла пĕчĕк тăваткăлсем, пĕр пуçне саспалли е цифра, е урăх паллă тепĕр майлă çапнăскерсем. Çав литерăсене-саспаллисене верстатка текен ал хатĕрĕ çине йĕрки-йĕркипе вырнаçтарса пымалла. Кассă текен ещĕкĕсем уçă шкафра вуннă-вуниккĕ таранах, саспалли виçи-пысăкăшне кура. Шкафĕн тăррийĕ чалăш. Çав сĕтел çине хурса ĕçлет наборщица. Хаçат тухнă хыççăн саспаллисене хăйĕн вырăнне пăрахмалла, унсăрăн, пăтрашăнсан, наборланă чухне йăнăш нумай каять, тӳрлетме вăхăт тăсăлать, хаçат кая юлать. Евдокия Тимофеевна Трофимова, Мария Тимофеевна Артемьева, Анастасия Ивановна Соснова, Перасковья Ильинична Кузнецова Арсентьева пекех куçа хупса наборлама пултаратчĕç. Нина Петровна Петрова хаçата ăста çапатчĕ. Нихçан пуçа усма пĕлмен Перасковья Ильинична цехсенче хаваслă кăмăлтуйăм çĕклеме пултаратчĕ, çамрăк хĕрсене саспалли пухма, хаçат, бланк хучĕсем пичетлеме çине тăрсах вĕрентетчĕ. Амăшĕ патне Виктор ывăлĕ час-часах пыратчĕ. Полиграфист пулас ĕмĕт çавăн чухнех çуралнă пуль унăн, ӳссен вăл Самар техникумĕнче ятарлă пĕлӳ илчĕ, КПСС Чăваш обкомĕн издательство типографийĕнче цех начальникĕ, машинăсем тăвакан заводăн типографи директорĕ пулчĕ. М.Т.Артемьева йăмăкĕсене хавхалантарса хăй çулĕпех яма пултарчĕ. Виçĕ йăмăкĕ те ĕç мехелне Йĕпреç типографийĕнче çунатлантарчĕç, ырă ят хăварса, малалла вĕçрĕç. Нади Мускаври полиграфи институтĕнче вĕренчĕ, республикăри І-мĕш типографире производство пайне нумай

çул хушши ăнăçлă тытса пычĕ, ăста, мухтава тивĕçнĕ йĕркелӳçĕ-инженер халĕ «Чувашия» издательство-полиграфи комплексĕн тĕп технологĕнче тăрăшса ĕçлет. Тамарипе Люди те — чăваш полиграфийĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем.

Полиграфи ĕçĕ çăмăл мар. Унăн хăйĕн вăрттăнлăхĕсем, уйрăмлăхĕсем пур. Çавăн пекех — хăйне евĕр туртăмĕ те. Çав хастар чунлă хĕрарăмсем сăрă шăршинчен, хут, металл тусанĕнчен, вăхăт ытлашши ирттернинчен тата ытти çĕрти ĕçченсенчен сахалтарах укçа илнинчен пĕртте хăраса ӳкмен. Вуншар çул типографи çулĕпе вĕсем хавасланса утнă, юратнă ĕçе чунтан тăрăшса тунă, вăйне шеллемен. Вĕсен ĕçне Пахалăх палли парас пулсан, уншăн халĕ те икĕ аллăма харăсах çĕклемелле. Вĕсенчен полиграфи вăрттăнлăхĕсене хаçат çыннисем те сахал мар вĕренчĕç. Хăйсем пĕлсе çитерейменнине эпир вĕсене хамăр та вĕрентнĕ. Вĕсем халĕ те куç умĕнче алăра верстатка тытса е пичетлемелли машина çумĕнче хут листи ярса тăнăнах туйăнаççĕ. Вĕсен ĕçĕпе эпир нихçан та кăмăлсăр пулман.

Çапла редакцире те, типографире те çĕнни çĕнтерсе пычĕ.

### Ала витĕр

1963 çулта Йĕпреçре вăхăтлăха хаçат тухма пăрахсан, редакторне, вăтам шкул учительне, Иван Яковлевич Тенюшева, партин аслă шкулне вĕренме янă. Мускавран пĕлӳ пухса таврăнсан вăл парти обкомĕн пичет секторне тытса пыратчĕ. Районсене аркатнă хыççăн Йĕпреçе куçса пынă Александр Мефодьев тăван Патăрьелне тухса «тарнă». Хăшĕ Йĕпреçрен урăх ĕçе куçнă, хăшĕсене «симĕс çĕлен» явса илнĕ.

Килти ĕнесене фермăсене пухса «çĕнĕ коллективизаци» тунă Александров коммунист-ертӳçĕ тата колхозсен Вăрнар территори управленийĕн парткомĕ халăха нушалантармалли пăтăрмахсем туса тултарнă хыççăн, çĕнĕрен йĕркеленĕ Йĕпреç райкомĕн пĕрремĕш секретарĕн Александр Петровăн чăннипех революциллĕ улшăнусем тумалла пулнă çĕнĕ çĕрте. Александр Петрович «сĕм вăрманта» та çухалса кайманнине эпĕ унта ĕçлеме пуçласанах курса ăнлантăм. Чи малтанах вăл çирĕп йĕрке гума, хастаррисене, пуçаруллисене çул пама, халăха пулăшма пуçланă. Çапла майпа хăй тавра часах вăйлă çынсем пуçтарнă, чăкрашсене, çатăлтатакансене, патшалăх шучĕпе пуясшăн хăтланакансене аяккалла сирсе янă. Района чăннипех кирлĕ çынсене хӳтĕленĕ, пулăшнă.

Çĕнĕ вăй тĕттĕмлĕхе прожектор çути пек касса кĕнĕ çĕрте хирĕçтăру пурах. Çав çутăпа хастаррăн утакансемпе вĕсен куçне хупласшăн ăнтăлакансем тĕркĕшнĕ вăхăта лекрĕм эпĕ шăпах. Парти комитечĕ те, редакци те çавăнпах пуль йăлтах çĕнĕ çынсенчен йĕркеленнĕччĕ. Вăрнарти пек мар. Хаçатра ĕçлеме, çырма пултаракан шанчăклă çынсем тупса хатĕрлес, вĕсене воспитани парас тата вĕсен ĕçпе йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе Александр Петровичсăр пуçне райкомăн иккĕмĕш секретарĕ Мария Ивановна Иванова, пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Клавдия Павловна Оленина хăйсене панă правасемпе туллин усă курса пулăшатчĕç. Мальцева райком çуртĕнче тӳрех виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер панă. Çурчĕ райкомпа редакци хушшинче. Тăн илме те, ĕçлеме те лайăхчĕ унăн.

Эпĕ малтанах е редакцире, е хресчен çуртĕнче выртса тăраттăм. Юпа уйăхĕн вĕçĕнче Хурăнсуртан арăма илсе килтĕм. Хамăр районти Çĕньял Хапăс ачи Ананий Федорович Алексеев Римма Ильиничнана хăй тытса пыракан çутĕç пайĕн аппаратне вырнаçтарчĕ. Вĕренӳ çулĕ вăхăтĕнче учитель валли ăçтан тӳрех вырăн тупать? Октябрь урамĕнче пурăнакан ватă педагог Анна Васильевна Посадская пире хăйĕн килĕнче пĕр пӳлĕм пачĕ. Çӳретĕп чукун çул урлă.

Йĕпрес çав çулсенче лăпкă вырăн пулман. Тĕттĕм урамсенче, станцире вăрă-хурах хуçаланнă. Никама та уяса тăман вĕсем. Пĕррехинче пĕрремĕш секретаре те пĕсехерен ярса илнĕ. Александр Петрович мăшăрĕпе ĕç хыççăн лавккасем тăрăх çӳреме шутланă. Вăрманпромхоз енче вĕсене, палламанскерсене, самаях сехĕрлентернĕ. Финкăсăр е свинчаткăсăр çĕрле пĕччен çӳреме шиклентеретчĕ.

Поселок Вăрнар çулĕ тăрăх Энгельс урамĕпе Хурашыв еннелле сарăлать. Çĕнĕрен тунă хĕрринчи икĕ хутлă çурта райкомăн икĕ пӳлĕмлĕ хваттерĕ такама кĕтнĕ. Петров ăна пире партарттарчĕ. Стройки çуркуннесĕр вĕçленмерĕ.

Редактор талантлă çыравçăсем шырасах тăратчĕ. Вĕсене кӳршĕ районсенчен, Шупашкартан туртма хăтланатчĕ. Пиçсе çитнĕ вăйлă журналистсем аякри вăрманьенне яланлăхах килме ытлашши çунмастчĕç. Çапах та тупăнкаларĕç. Çĕмĕрлерен Владимир Ильич Шалтайкин пăравус пек мăкăрлантарса çитрĕ. Пилĕк кун хашкаса чупса çӳресе çĕрĕ-çĕрĕпе пашкаса ларатчĕ те, редактор умне е ман сĕтел çине хатĕр материал купалантарса хăваратчĕ те, пуйăспа Канаш урлă килнелле çунтаратчĕ. Шупашкартан Васлей Ива-

нов сăвăç-çыравçă килсе çӳреме пуçларĕ. Канашсем çул такăрларĕç. Çапах, ĕçлеме пултараканнисем те, тĕрлĕрен сăлтавсене пула, чăтăмлăн тытăнса тăраймарĕç кунта. Шанчăк çамрăксем çинче çеçчĕ.

Каçал енчи çамрăк хунавсене ӳстерме Мальцев хăй те пулăшнă ĕнтĕ. Манпа вăл пĕр ача пирки хавасланса калаçатчĕ. Владимир Давыдов çырнисене вулакаланă, асра юлакан хайлавсемех пурччĕ унăн. Геннадий Степанович ăна Шупашкарта тупса Йĕпреçе илсе килчĕ. Давыдов тӳрех ман çума çыпçăнчĕ. Ачи чăннипех хаçат çынни пулма çурални тӳрех палăрчĕ. Канаш районĕнчи Шуртан каччи Геннадий Кузнецов ăслă куçĕсемпе Йĕпреç енне сăнарлăн тинкерме пуçларĕ. Кульцав вăтам шкулĕнчен тинтерех вĕренсе тухнăскер, ăслайĕпе, çĕнĕлле шухăшлавĕпе ваттисене те тĕлĕнтерсе пăрахрĕ. Ваттисем ĕнтĕ Тенюшев умĕн «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» (хаçат малтан çав ятлăччĕ) çичĕ çул редакторта тĕрмешнĕ Никонор Павлович Павлов тата «Хатĕр пул», Советски райхаçачĕн редакторĕ пулнă Василий Иванович Андреев-Хурамалччĕ. Мальцев вĕсене, мăнкăмăлланса, хăпартланса чун тилхепине пушатса янăскерсене, хăй патне «юсама» илнĕччĕ. Тĕрлĕ вăхăтри çынсем, ватти-вĕтти пĕр кăрманта хаçат хылчăкĕпе хыçкаланаттăмăр.

1965 çулхи раштав варринче Шупашкарта яваплă секретарьсен тăватă кунлăх семинарĕ пулчĕ. Хам вырăна хăварма Володя Давыдова вĕрентсе çитерненччĕ. Хăй тĕллĕн макетсем тума, полосасене калăплама, шрифтсемпе, линейкăсемпе усă курма пултаратчĕ. Алçырусене набора яма хатĕрлесси çинчен манăн Пичет çуртĕнче каласа памалла пулчĕ. Республика шайĕнче ĕçтешсене пуçласа вĕрентрĕм.

Парторганизаци пирĕн ун чухне райкомри коммунистсемпе пĕрлеччĕ. Партбюро секретарĕ Геннадий Федорович Степанов, Çĕрпӳ ен ачи, редакцири коммунистсемпе ăнлануллăн, ăшшăн, куçран витĕр пăхса калаçнисем халĕ те асăмрах. Пĕр-пĕр çитменлĕх е кăлтăк пулчĕ пулсан, вăл нихçан та тӳрех пухура е ларура шав çĕклеме васкамастчĕ, çынсемпе тĕплĕн калаçса, сăлтавĕсене пĕлсе-ăнланса, ăна вырăнтах, коллективрах татса пама тăрăшатчĕ. Пропагандăпа агитаци пайĕнче ĕçлекен Зиновий Михайлович Сергеев та çынна ăнланма, унăн ăсталăхĕпе пултарулăхне хаклама пĕлетчĕ, ăна тĕрĕс çулпа утма вĕрентетчĕ. Редакципе типографи çыннисем хушшинче туслăха çирĕплетме

нумай пулăшнă вĕсем. Çавăнпа ĕнтĕ, тĕрĕс çулран пăрăнманнисем, ăслă та кирлĕ канашшăн вĕсене халĕ те тав тума манмаççĕ.

Парти ĕçĕн организаторĕсемпе, ĕççыннисен воспитателĕсемпе пĕрле пĕр тытăмра тăни пирĕншĕн, çамрăк коммунистсемшĕн, пурнăçри уйрăмах пысăк шкул пулчĕ. Унта пуçа хывни, вĕренни малашнехи ĕçре яланах усă паратчĕ.

Район центрĕсем, хулаланса пынă май, кивĕ çуртсене çăтса яраççĕ. Вăрнарти пекех, Йĕпреçре те эпир ĕçленĕ çурт çуккă ĕнтĕ, ун вырăнне çĕнĕрен лартнă пилĕк хутлă капмар çуртра поселок çыннисем пурăнаççĕ. Йĕпреçе пырсан, Пионер урамĕпе Шкул урамĕ кĕтесленнĕ вырăнпа шухăшлавлăн иртсе çӳретĕп. Пирĕн ĕç килĕ шутланнă пĕр хутлă йывăç «кермен» те хăй вăхăтĕнче самай капмар çуртах пулнă. Редакци унта вăрах ĕçленĕ, района çĕнетсен те, çавăнтахчĕ. Тавралла ракатка карта тытнăччĕ, чӳречесем умĕнче — йывăççем. Кĕтне тата Ирçе Çармăс вăрман хуçалăх кантурĕсем çумĕнче ешĕл пахчаччĕ. Пире тутанмалăх чие çырли, тутлă панулми çителĕклехчĕ. Канма та аванччĕ унта.

Редакципе типографине икĕ алăкпа кĕнĕ. Редакцие пырсан, йывăç картлашкапа хăпаратăн. Унăн икĕ енĕпе те хăма урай. Тавралла-чӳречеллĕ пӳртум. Алăкран кĕрсен, сулахай енче, ответлă секретарĕн пӳлĕмĕ. Ман сĕтел çинче кĕленче айĕнче Каверинăн «Икĕ капитан» кĕнекинчен илнĕ çулăмлă йĕркесем тӳрех куçа тăрăнатчĕç: «Кĕрешмелле те шырамалла, тупмалла та парăнмалла мар». Хамăн вĕренекенсем те çав тĕллевпе ĕçлеме хăнăхса пычĕç. Юнашар, тăваткал кăмака çумĕнче, редактор ларать. Кĕтеслĕ пӳлĕмĕн — икĕ чӳрече. Кĕрсенех сылтăмра — сĕтел, çумĕнче — документсем тата ытти хаклă япаласем упрамалли сейф, умра пукансем, сулахайра — кĕнеке шкапĕ. Редактора хирĕç, секретарь-машинисткăна вырнаçтарнă кĕтес урлă, заместитель пӳлĕмĕ. Коридорпа сылтăмалла пырсан — çырусен пайĕ, ун çумĕнче — ялхуçалăх пайĕ. Вĕсене хирĕç — бухгалтери. Икĕ енче те — çавра кăмакасем. Пӳлĕмĕсем анлах мар пулин те редакци çыннисем валли вырăн çитетчĕ. Журналистăн ĕç вырăнĕ халăх хушшинче пулмаллине ăнланаттăмăр. Ку çуртра унччен КПСС райкомĕ те ĕçленĕ.

Пӳртумĕнчи тепĕр алăкран типографинелле тухмаллаччĕ. Кĕрсенех унта хут касмалли станок ларать, сылтăм енче — наборламалли, ун çумĕнче пичетлемелли цехсем, бригадир пӳлĕмĕ. Çĕнĕ техника вырнаçтарма кунта тăвăрччĕ. Çавăнпа редактор питĕ çине тăрсах кирпĕч стенасем тĕктерсе купалаттарчĕ. Çĕнĕ цеха икĕ линотип лартрĕç.

Тӗп ҫуртран хыҫаларах — хут склачӗ, гараж тата линотип «ҫӑкӑрӗ» — чушка шӑратса хатӗрлемелли пӗчӗк «мартен кӑмаки».

Малашлӑха пӑхсах ӗҫе хӗрӳ пуҫӑнчӗ Геннадий Степанович. Хуҫалӑх ыйтӑвӗсемпе чупаканскерне хӗрхенсе, эпӗ редакци тытӑмӗн тӗп ӗҫӗсене ӳркенмесӗрех вӑй ҫитнӗ таран туса пыраттӑм. Йывӑр чирпе асапланакан заместителӗ Сорокин Буинск поселокӗнче вырӑнпах выртатчӗ. Тӗрӗслесе пӑхма тесе илнӗ ваттисем хытнӑ йӑлана улӑштармарӗҫ. Никонор Павлович пушшех аташса кайрӗ. Яла ҫырма кайсан, эрнипех ӗҫсе ҫухалатчӗ, килсен, поселок тӑрӑх мухмӑр чӗртсе ҫӳретчӗ. Никам каланине те хӑлхана чикмест. Аптранӑ енне ирӗксӗрлесе сыватас терӗҫ алкаша. Райком секретарӗ Иванова Канашри-Шӑхасанти психбольницӑпа калаҫса татӑлнӑ. Вӑл — Степанова, редактор — мана Павлова шырама кӑларса ячӗҫ. Столовӑйсем тӑрӑх чупса, палланӑ ӗҫкӗҫӗсемпе калаҫса ҫур кун иртрӗ, Никонор Павлович ниҫта та ҫук. Пулӑшма ҫывӑх тусне, шкул-интернат учительне Анатолий Миронович Миронова тата милици старшинине хутшӑнтарчӗҫ. Павловсем культура ҫурчӗ ҫумӗнчи хӑлтӑр-халтӑр йывӑҫ пӳртре пурӑнатчӗҫ. Унтан инҫех мар, чукун ҫул хӗррипе, икӗ милиционер хуралта кумлать. Темӗнле хаяр вӑра-хураха е шпиона тытнӑ пек пырать операци. Ҫав вӑхӑтра ӳсӗр Павлов килӗнчех вӑрттӑн хуп турттарнӑ. Пуйӑспа аран-аран Канаша ҫитертӗмӗр старшина, Миронов тата эпӗ хайхи «таркӑна». Талпӑнать те талпӑнать, вакунран сикесшӗн, Канаш вокзалӗнче кӑшкӑрать. Лӑплантарас тесе ӑна Миронов ресторанта ҫӗр грамм эрех ӗҫтерчӗ. Кӗҫ пире илме Шӑхасантан «васкавлӑ пулӑшу» ҫитрӗ. Аран-аран тӗксе хӑвартӑмӑр тӗп врач аллинех ҫухӑраканскерне. Каялла пире ӑсатса ячӗҫ, анчах Харьков поезчӗ хӳрине ҫеҫ кӑтартса хӑварчӗ. Хӑна ҫуртӗнче ҫӗр каҫма тиврӗ. Тепӗр виҫ кунтан вӑтам шкул умӗнче Павлов шаплаттарса пырать, хӗрӗнкӗ, сив куҫпа мӑкӑль пӑхрӗ те, манпа калаҫмарӗ те. Наркологи уйрӑмӗсем ҫуккӑ вӑл вӑхӑтра, ҫавӑнпа ӑна ухмахсен палатинех кӗртсе янӑ, лешсем лайӑх ислетсе юсанӑ, тет. Арӑмӗ курма пырсан пӗчӗк ача пек йӗрет, тет. Янӑ вара ӑна тӗп врач. Сывпуллашмалла пулчӗ Мальцевӑн юсанман ачапа-алкашпа.

Тӗп хуларан ҫыравҫӑсем киле-киле каятчӗҫ. Пирӗншӗн хӑшӗпӗри кӗтнӗ хӑначчӗ, теприсем — тӑшман вырӑнӗнчеччӗ. Василий Хурамал, Геннадий Кузнецов, Владимир Давыдов писательсенчен уйрӑлмастчӗҫ ҫав. Эпир те хутшӑнкалаттӑмӑр халӑх хуш-

шинчи тĕлпулусене, хăнасене укçа-тенкĕрен те пулăшнă, хайлавĕсене пичетлесе ĕçме гонорар туса параттăмăр.

Эпĕ ĕнтĕ редакторăн çумĕ. Хам вырăнта ответлă секретарьте ĕçлеме, Давыдова хатĕрлесе çитертĕм. Мальцев манпа килĕшрĕ. Ĕçлетпĕр. Володьăна пулăшатăп. Профсоюзăн вырăнти комитечĕ пурччĕ тата ман ĕнсе çинче. Шупашкара эрнелĕх семинара чĕнчĕç. Вĕçленмен ĕçрен кăштах унта канса та илтĕм. Малашнехи ĕç-пуç пирки хавхаланса таврăнтăм. Ахух, эп çук хушăра редакцире инкек пулнă. Шупашкар çыравçисен ушкăнĕпе çӳренĕ Андреев-Хурамал вокзал патĕнчи хресчен çурчĕпе хирĕç столовăя апата кĕнĕ. Сăра-эрех ĕçнĕ вăхăтра хирĕçнĕ те кайнă пĕр пуçтахĕ Хурамалпа. Лешĕ ăна сăмса шывĕ, хам çын турăм сана тесе хăтăрса илнĕ. «Сăмса шывĕ» ваттине пит-куçĕнчен сăрапа сапнă. Пуçланнă тĕркĕшӳ... Милици персе çитнĕ. Чарусăрланнăшăн тата кружка-тарелка ватнăшăн никама та пуçран шăлма шутламан. Усал хыпар утпа çӳрет, тет. Пĕрремĕш секретарь Мальцева чĕнтерсе тăнкăрук парать: «Паянах вĕсене ĕçрен хăтармалла!» Кузнецова пурнăç пуçламăшĕнчех усал шăтăка кĕрсе ӳкиччен... пулăшмалла пулчĕ. Ентешĕм, çывăх юлташăм Анатолий Спиридонович Толмасов Красноармайски район хаçатне пусса кăларатчĕ. Унпа калаçрăм та, Геннадий Васильча вăрмантан уялла ăсатса ятăм. Унта вара вăл çичĕ çул ăçлерĕ, авланса ача-пăчаллă пулчĕ.

Чукун çулран инçех мар, вăрман хĕрринче, Мереçен ятлă пĕчĕк тăпăлкка ял пур. Çавăнта çуралса ӳснĕ вăтанчăкрах сарă ача Коля Перлов хутшăнчĕ пирĕн йыша. Çапла, юхтарсан-юхтарсан, хăйăртан та ылтăн пĕрчи суйланса юлать, тенĕ пек, пирĕн редакцире те пултаруллă йĕкĕтсем умлă-хыçлă курăнса кайрĕç. Давыдов, Кузнецов, Перлов хаçатра хăйсен вăйне пĕр вăхăталлах виçме пуçларĕç. Çулĕпе, кăмăл-туйăмĕпе, ăсталăхĕпе виççĕшĕ виçĕ тĕрлĕ пулин те, ман вĕсене пĕрешкел юратас килет. Мĕншĕн? Чи малтан — хаçат ĕçне парăннăшăн. Редакци алăкне пуçласа уçса кĕни вĕсемшĕн пурнăç алăкĕнчен кĕниех пулчĕ çав. Унтан каялла тухмарĕç. Йывăрлăхсем умĕнче пуçа усмарĕç. Тĕлĕнмелле, виççĕшĕ те ответлă секретарь ĕçне каçса кайсах кăмăллатчĕç. Çавăнпах-и, тен, Владимир Васильевич Йĕпреçре, кайран Комсомольскенчи «Октябрь çулĕпе» хаçатăн, Геннадий Васильевич «Çĕнтерӳшĕн» хаçатăн ответлă секретарĕнче ăнтарчĕç. Вĕсен ĕçне республикăри конкурссенче пĕрре кăна мар палăртнă. Николай Андреевич та пĕр хушă редакцин «штаб начальникĕ» пулнăччĕ, хаçата тивĕçлĕ шайра кăларса тăрассишĕн

вăй хунăччĕ. Партин Чулхулари аслă шкулĕнчен вĕренсе килсен вăл тĕп редактор заместителĕ пулчĕ, каярахпа хуçалăх ĕçне куçрĕ, журналист карьерине малалла тăсмарĕ.

Хусахсене пур енĕпе те пулăшаттăм. Пĕр-пĕрне чунтан ăнланаттăмăр. Вĕсемшĕн ялан чун вăркатчĕ.

1966 çулхи пуш уйăхĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çемьене хĕр ача хутшăнчĕ. Надьăна эпир районти Культура çуртĕнче ят хунă чухне Владимир Давыдова тыттарнăччĕ.

Редакцире каччăсемпе пирĕн малтан та, кайран та ăнчĕ. Хĕрсемпе вара... Ваттисемпе шар курнă хыççăн Мальцев хăйне валли тепĕр инкек тупрĕ. Хитре пикесене куç хывма никама та чарман, анчах кашни чиперккеренех хаçатçă, журналист йăваласа тума май çук. Илемписен йăваламалли вырăнĕ вырăн çинче иккен. Çапла, ухмахла вăрттăн шухăшлавĕпе редактор намăс çеç курчĕ.

Эпĕ ĕçлеме пуçланă хыççăн иккĕмĕш уйăхĕнчех Геннадий Степанович вăтам шкул пĕтернĕ пĕр хĕре Туçаран тупса килчĕ, хăй çумне лартса машинкăпа çапма вĕрентрĕ. Хăвăрт пичетлейменнипе тата йăнăш нумай янипе çав хĕр мана пайтах тарăхтарнă. Унран вăйлă журналист пулать тесе Мальцев ăна ялхуçалăх пайĕн литсотрудникне те лартса пăхрĕ. Тур памасан турпас çаврăнмасть çав. Куратăп, пулмасть чиперккерен нимĕн те. «Çăкăр пĕçериччен малтан чуста çăрма вĕренмелле», — теттĕмччĕ вĕсене. Геннадий Степанович вара ытти ĕçе тума мансах вăл çырнисене юсаса е ун хыççăн çĕнĕрен çырса ларатчĕ. Авторĕ редактора, çумĕнче кăкăрĕпе хулпуççине пĕçертсе тăрса, вăй кĕртетчĕ. Умсатья хыççăн умстатья тата ытти корреспонденци çуратса кăлараççĕ ваçка «мăшăрланнă» пултаруллă авторсем. Командировкăсене пĕрле тухса çӳреме пуçларĕç.

Хĕрарăм купине лекрĕн пулсан, асăрхануллă пулмалла çав. Мальцев çакна астума шутламарĕ. Типографире пăшăл пăтти пĕçереççĕ. Сас-хура çĕрлехи чӳречерен те, кăнтăрлахи алăкран та сирпĕнсе тухать. Эпĕ вăрттăн систернине те пуçа хывмасть ман редактор.

Çĕнетӳ чирĕ те тамалманччĕ-ха Мальцевăн. Ман умĕн ĕçленĕ Александровпа та, Андреевпа-Павловпа та эпĕ пыричченех тытăçса илнĕ иккен вăл. Хĕрарăмсем хăйне çини те килĕшмерĕ пулас. Никампа канашламасăр вĕсене ĕçрен хăтарма пуçларĕ. Василий Сенькин судья вĕсене каялла илтерет. Картла вылянă пек кадр вăййине пикенчĕ редактор. Йĕпреç кашкăрĕсем майлă саманта

кĕтсех тăнă çав. Дмитрий Киселев лаборатори кирлĕ тесе сăмах пуçартрĕ те, «Сан фотолаборатори авă кăмака мăрйинче», — тесе кӳрентерчĕ хăйĕнчен чылай аслă, вăрçăра та пулнă ĕçчене. Купипех пухнă кӳреннисен ушкăнĕ редактора çунтармалли кăвайта. Чĕртсе ячĕç. Пĕрремĕш секретарь Петров, редакцие пырсан, пушар пушшех вăйланчĕ. Хăй пӳлĕмĕнчех çунса кайрĕ Мальцев. Пуканĕ кăна пушă тăрса юлчĕ.

Хирĕçтăру пăтранăвĕнче те пирĕн хаçат кăлармалла. Ĕçлетпĕр. Ниме пăхмасăрах.

Авăн уйăхĕн вĕçĕнче йĕтем çинче пăрça аштарнă пек редакцие тапăртаттарса илнĕ хыççăн, юпара юптара-юптара редактор шыраса тупрĕç. Элĕк районĕнче çуралса ӳснĕ, Йĕпреçре тымар янă Анатолий Миронович Миронов (Никонор Павлова психбольницăна ăсатаканни мар) райсовет ĕçтăвкомĕнче ĕçлетчĕ, хаçата çыркаласа тăратчĕ. Редактор пӳлĕмне сар ача вырăнне хурарах сăнлă, çаврака пит çăмартиллĕ, кăтраланса тăракан çăра çӳçлĕ, интеллигентлă тумланнă çӳллĕ хуçа йышăнчĕ. Куçран пăхмасăр, чĕтревлĕрех сасăпа калаçать. Çĕнĕ çынна хаçат тума вĕрентетĕп. Райкомра килĕшсе хăй мĕнле лачакана кĕрсе ӳкнине вăл темиçе номер кăларса редакцире çĕр каçнă май ăнланчĕ. Çӳлтен хушаççĕ те — чăтмаллах.

Владимир Давыдовăн салтак ячĕ тухрĕ Çаврăнăçуллă, кăмăллă, йăм хура çӳçлĕ, çивĕч куçлă, хĕрӳ, ĕçе юратакан каччă. Хĕрсене наччас çавăрма пултарать. Вăхăтра асăрханса, тĕрĕслесех тăмалла, унсăрăн юхха кайма пултарать, тесе ăна çумран уйăрман. Çара эртелпе, хĕрсемпе, хамăр пурăнакан çуртран, ентешĕн Михаил Богатовăн хваттерĕнчен, пиллесех ăсатрăмăр. Кукашшĕпе кăна ӳснĕ ачана тăлăха хăвармарăмăр.

Редакцие идея, мораль тĕлĕшĕнчен çирĕп, тӳсĕмлĕ кадрсемпе çирĕплетес пирки КПСС райкомĕ Мальцева ĕçрен хăтарнă чухне çырса хăварнă бюро йышăнăвĕ пурччĕ. Ăна пурнăçлама, райплан председателĕнче чипер ĕçлекен Валентин Петрович Удалова Мироновăн заместительне пырса лартрĕç. Пиччĕшĕ Маркиян Удалов халăхра палăрнă вăйлă писательччĕ, поэмăсем, пьесăсем çыратчĕ. Шупашкартан шăллĕ патне килсен редакцире литература калаçĕвĕсем ирттеретчĕ. Шел те, пӳрнесем тан мар. Турри Валентинне сăнарлăх илемĕн çулĕ çине кĕртмен, хăй пултармалли финанс, перекетлĕх енĕпе янă. Ах, мĕншĕн ăнланмаççĕши хăш-пĕр тăм пуççем хăйсен пултарулăхĕ ăçтине тата хăш шайрине! Çын аллинчи кукăль тутлă пек курăннăран-ши, ним

шухăшламасăрах сĕкĕнеççĕ çын вырăнне, пĕлмесĕрех вĕрентеççĕ, пуринчен те ăслăрах пулма хăтланаççĕ. Хаçачĕ çеç никама та пăхăнмасть. Унăн — хăйĕн саккунĕсем. Вăл — хăй судья. Вăл — хăй хаклавçă.

Ку таранччен хаçат вуласа кăна пурăннă паллă çынсем çапла, редакци авринчен çатăрласа тытса, «Çĕнтерӳшĕн» «кĕрешме» пуçларĕç.

Ялан çынран çурхи шапа пек ахăрса çăвар туллин кулма юратакан Удалов тӳрех редактор йăнăшĕсене «тупма» пуçларĕ. Хăнăху çуккипе яках пулса тухаймастчĕç ĕнтĕ Миронов çырнисем. Вĕсем ман алă витĕр тухнă хыççăн тин пичете юрăхлăччĕ. Уншăн вăл мана кӳренместчĕ, хăçан та пулин сиртен иртсе каятăп-ха, тесе кулкалатчĕ çеç. Валентин Петровичăн йăнăш тупни çеç мар, ун пирки типографире ĕçлекенсемпе павраси йăлараччĕ. Хăй дежурнăй чухне, малтан редактор алă пусса янă материалсене калăпланă полосасенчен кăларса пăрахатчĕ. Ман материалпа та хăтланса пăхрĕ пĕринче. Эпĕ алă султăм çеç, маçтăр полиграфисткăсем умĕнче кулкаласа ирттерсе ятăм. Хаçат тăвакан пĕлет çакă миçе çынна миçе сехет ытлашши нушалантарнине. Çырассипе хăй ялкор шайĕнчен хăпараймарĕ. Унăн сăрмаклавĕсене никамăн та тĕкĕнме юрамастчĕ. Урса каять. Çырулăхра Мироновăн майĕпен ӳсĕм пекки пулчĕ. Удалов анекдотпа усал кулăшран малалла хăпараймарĕ. Хирĕçӳ-тытăçу вĕсен хĕрсех пычĕ.

Ĕçтăвкомра камантласа, хатĕр хут-хĕтĕр айне алă пусса ларма вĕреннĕ бюрократсене хаçат кухнинче идеологи апачĕ пĕçерме хăнăхтарнă хыççăн, канса илес терĕм. Хушăран редакцине пырса пăхаттăмччĕ. Николай Перлов хусах типографи хĕрĕсемпе кулкала-кулкалах полосасене калăплать, линотип цехĕнчен тухма пĕлмест, лутакарах, хурарах çӳçлĕ чăп-чăмăр пике çумне юнашар ларса йĕркесем шăратса кăларманни çеç. Хамăн вĕренекенĕн секретарь ĕçĕнчи ӳсĕмĕсемпе чуна лăплантаратăп.

Акă, отпуск вĕçленсен, ĕçе тухрăм та... Номер планлама тытăнтăм, пĕр путлĕ материал алла лекмерĕ. Пӳлĕмсен алăкĕсене уçса пăхрăм — пĕр çын шăрши çук. Редакторне райкома чĕннĕ, терĕç. Заместителĕ Шупашкарта, семинарта. Перлов хашкаса çитрĕ те, сĕтел çинче мĕн пуррине майлаштаркаласа, юсаса, çĕнетсе номер турăмăр, материалсене вуланă-вуламан набора яратпăр. Эпир чупнипе коридорти йывăç урай кисренсе кăна тăрать. Çав урай кисренĕвĕ вăл маншăн хам Йĕпреçрен тухса кайиччен ĕç кĕрлевĕн кĕвви пулса тăнăччĕ. Редакципе типографи хушшинчи

стенана касса алăк тутарса хăварнăшăн Геннадий Степановича тав тăваттăм. Тӳрĕ çул ĕç хăвартлăхне нумай ӳстеретчĕ.

Редактор çухалчĕ. Вăл арăмне курорта ăсатма Канаш станцине кайнă. Перловпа чакаланатпăр. Ирпе пиллĕкре номере алă пусса патăм. Пичетлемелли машина халтлатма пуçларĕ. Киле кайса апат çисе кăштах кантăм та, тăххăрта, эпĕ — хам вырăнта. Çитес номер «апат» ыйтать.

«Çĕнтĕрӳшĕн» кĕрешекенсем кăнтăрлапа персе çитрĕç те, пирĕн умрах чĕлхисемпе тытăçса ӳкрĕç. Семинарта тăн пухса килнĕ Удаловĕ тӳрех редактора малашне мĕнле ĕçлемелли çинчен вĕрентме пуçларĕ. Мироновĕ ăна «Чепуха, сан пек кахалпа, пакăлтипе хаçат тума май çук, сан хăвăн çырма вĕренес пулать», — тесе пусарма хăтланчĕ. Пĕрне-пĕри усал сăмахсемпех ятласа тăкрĕç.

Комсомол райкомĕнче пĕр çамрăк ĕçлеме пуçланăччĕ. Салтак тумне тин çеç хывса пăрахнăскер, çарти йăла-хăнăху çирĕплĕхне тытса пыни, çынсемпе васкамасăр, ăслă калаçни тӳрех тыткăнланăччĕ. Çамрăксен пурнăçĕ çинчен çырнă темиçе статья илсе пычĕ. Юсама та ытлах кирлĕ мар, кăшт тĕккелемелле çеç набора яриччен. Район комсомолийĕн ертӳçи Николай Андреев пĕрмай мухтать ăна. Эйпеçре ĕçлекен Николай Николаевич Максимов учитель-директор ачи пулчĕ ку. Николай Максимов салтака кайиччен авланма ĕлкĕрнĕ, Сережа ятлă ачи ӳсет, Йĕпреçре çын патĕнче арăмĕпе Клара Фотиевнапа пурăнать. Саранскра Мордва университетĕнче хăй тĕллĕн вырăс чĕлхипе литературине вĕренет. Çавăнпа унăн статйисем çыпăçуллă, логика саккунлĕ, йăнăшсăр.

«Çак ачаначчĕ редакци еннелле çавăрма», — тесе шухăшлама пуçланăччĕ. Ман шухăшлав, хăйĕннипе ыттисен шухăшлавĕпе пĕрлешсе, вăй илнĕ пулас, «автансен вăрçи» хĕрсе çитнĕ самантра алăкран Николай Максимовпа райком секретарĕ кĕрсе тăчĕç...

Çав кун, 1966 çулхи чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнче Александр Ивановăн «Христос халăха курăнни» картини чĕрĕлсе тăнă пекех туйăнчĕ. Николай Максимов çырусен пайĕнче ĕçлеме тытăнсан эпĕ тинех лăш сывласа ятăм. Перловпа иксĕмĕр çумне чăн-чăн çыракан хутшăнчĕ! Аталанса пырса çырусен пайĕнчен ответлă секретаре, редактор заместительне, редактора çити ӳссе пычĕ. Редакципе типографире пурте хисеплекен культурăллă çынччĕ, ĕç коллекивĕсенче тăтăшах пулма юрататчĕ, нумай, ăста çыратчĕ. Унра эпĕ малтанах пысăк малашлăх пуррине курса тăраттăм.

Йӑнӑшман иккен. Пӗртте. Николай Николаевич «Ҫӗнтӗрӳшӗн» редакцийӗнче хӑйне майлӑ ӑсталӑх йӗрӗ хӑварма пултарчӗ. Унпа эпир Йӗпреҫре икӗ тапхӑр ӗҫлерӗмӗр. 1967 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗччен туслашса кайрӑмӑр. Хаҫачӗ ӗнтӗ иксӗмӗр ҫинче ытларах тытӑнса тӑратчӗ.

Те Мальцев юрату чирӗ ертсе хӑварчӗ редакцие, те пуҫлӑхсен йӑли-йӗрки ҫавнашкал ясарлӑ, Миронов та хӑйӗн секретарь-машинистки ҫумнелле кушак аҫилле йӑпшӑнма пуҫларӗ. Арӑмӗ хушӑран пырса ҫӗмӗрет, пурпӗрех усси ҫук. Удаловӗ кут хыҫӗнче вӗсем пирки хӗрарӑмсене ахӑрттарать.

Ҫав камите курса йӑлӑхнӑ хушӑрах эпӗ Чулхулана вӗренме тухса кайрӑм. Каникула килсен те килте ахаль ларман, редакцие пулӑшаттӑм.

Эпӗ партин аслӑ шкулӗнчен таврӑннӑ тӗле «Ҫӗнтӗрӳшӗн» кӗрешекенсем ҫукчӗ ӗнтӗ. Иккӗшне те редакцирен шӑлнӑ. Николай Николаевич тепӗр редакторпа хӗн курса пӗтнӗ. Мироновне юсанма ярсан, шкулта унччен чипер ӗҫленӗ ӑста учителе Герман Павлович Павлова, КПСС райкомӗнче кӑшт вӗренсе пӑхнӑ хыҫҫӑн, ирӗксӗрлесех тытаҫҫӗ те лартаҫҫӗ редактора. Ҫынни ӗмӗрне кунашкал пултарулӑх лаҫҫинче вутӑ хурса курман. Чӑтӑмлӑ педагогшӑн ҫакӑ тамӑка лекнӗнех туйӑннӑ пуль.

Редактор лавне кам туртнӑ-ха ҫав вӑхӑтра? Паллах, Максимов. Райкомрисем те, обкомра пичет енӗпе ӗҫлекенсем те пур енӗпе те хатӗр, пултаруллӑ ҫамрӑк редактор Йӗпреҫ редакцийӗнчех пиҫсе ҫитнине туйма та, курма та шутламан пулас.

Чулхуларан килсен эпӗ Герман Павловича редакцире курмарӑм. Вӑл каллех хӑйӗн юратнӑ ӗҫне куҫнӑ терӗҫ. Хаҫатне Максимов «редактор заместителӗ» тесе алӑ пусать. Иккӗмӗш тапхӑрта ӗҫлеме пуҫларӑмӑр иксӗмӗр. Халӗ ӗнтӗ пирӗн унченхи пек редакторсене хаҫат тума вӗрентес ҫук, ҫамрӑксемпе хытӑ ӗҫлемелле.

Аланчӗ ҫапла хаҫат али. Темиҫе ҫул хушши. Кам пултаруллӑ, талантлӑ, кам чӑтӑмлӑ — ҫавӑ ҫакланса юлчӗ унта. Вӗсем хӑйсен вӑйне кӑтартрӗҫ. Халӗ те вӗсен ӑста аллипех хаҫат тухать.

## Ӑсталӑх лаҫҫинче

Сӑпас уйӑхӗ маншӑн паллӑ уйӑх. Ҫурла уйӑхӗнче мана анне пурнӑҫ ҫурли тыттарнӑ, унтанпа ӗнтӗ вӑтӑр тӑватӑ ҫул ҫитетчӗ. Темле, тӗнчекурӑм ҫаврӑмӗнчи асра хӑваракан вӑхӑт вӑл маншӑн. Ҫурла уйӑхӗнче салтака, парти шкулне вӗренме кайнӑ, редакторта ӗҫлеме пуҫларӑм. Идеологи секретарӗ Христина Сергеевна

Башкирова 1971 çулхи августăн 1-мĕшĕнче мана Пионер урамĕнчи 22-мĕш çурта райкомран «çавăртса» пырса ярса хăварни ячĕшĕн çеç пулнă. «Çĕнтерӳшĕн» хаçат тăвакансемшĕн эпĕ çĕнĕ çын пулман та, мана эртел хапăлласах шанчăклăн кĕтсе илчĕ. Çыннисем манпа мĕнле ĕçлемеллине, мана итлемесен, улталасан, мĕн пулассипе-пулмассине малтанах пĕлетчĕç, ăнланатчĕç. Çирĕп йĕрке, таса кăмăл, юлташлăх, пĕрлĕх, пултарулăх шайĕ — маншăн чи кирли те чи пахиччĕ. Хамăра вĕрентнĕ, хамăртан хытă ыйтакан йĕрпе тӳрĕ тытса пырас тенĕ хама шанса панă çынсене. Халăха коммунизмра пурăнма çине тăрса хатĕрленĕ тапхăрта марксизм-ленинизм шухăшлавĕн вăйĕ хăватлахчĕ-ха. Вăл пуçлăхсен алтуйийĕ кăна мар, çынсен пуç мимине вăйпа çапса кĕртнĕ савăлччĕ те. Этемлĕх аталанăвĕнчи ăслă ăсчахсен юмахла ĕмĕчĕ нумайăшĕн пуçне çĕнетсе улăштарнă. Тавçăрулларăххисене, иккĕлентерсе, шухăша янă. Çав иккĕленӳ вăй илсе халăха ан пăтраттăр тесе çине тăратчĕ компарти. Унăн аслă пуçĕ мĕн шут тытнине ним пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмеллеччĕ. Эс ăна мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслекенсем нумайччĕ. Çапах та вăл йышăнусем çĕршыв хăватне пур енлĕн тĕреклетес, халăх пурнăçне лайăхлатас тĕллевлĕччĕ, хальхи пек уйрăм çынсене патшалăх пурлăхне çаратса, пĕтĕм халăха улталаса-çарапакартлантарса пуйтармалли йышăнусем пек хура тĕллевлĕ марччĕ. КПСС райкомĕпе ĕççынни депутачĕсен район совечĕн хаçачĕн, ăна алă пусса кăлараканĕн, аслисем мĕн хушнинчен иртме юрамастчĕ. Шухăш ирĕклĕхĕн маччи лутраччĕ, ытлашши хытăрах сиксенех, лĕпкене лекетчĕ.

Хăнăхнăччĕ ĕнтĕ шухăша читлĕхре явăнтарма. Партшкулта ирĕклĕрех шухăшласа тавлашнă вăхăт хыçалта. Ĕçре йăлтах урăхла, çӳлтен хатĕрлесе панă çирĕп йĕркепе ĕçлемелле, çыравçăсен ушкăнне те çав йĕрпех уттармалла. Шухăш вăйне, çунатне нимĕнле читлĕхре те хупса усрама май çуккине эпĕ тахçанах ăнланнă, çавăнпа та ачасене ытлашши хуптĕрлемен, «Ирĕклĕ шухăшласа мĕнле çырма пултаратăр, çапла сăрмаклăр, — теттĕмччĕ. — Пурпĕрех хăвăрăн ăс-тăн тӳпинчен, пултарулăх шайĕнчен иртсе каяймастăр. Хăвăр мĕнле — япалу-хайлаву та çаплах».

Коллектив чăмăртанса, çирĕпленсе пычĕ. Улатăр вăрманĕн мăн уçланкинче пытанса ларакан чăваш ялĕнчен, Эйпеçрен, хурамкка сăнлă чип-чипер йĕкĕт Костя Алимасов, вăтанчăкраххăн пырса кĕрсе, пирĕн хĕрсене татах хитреленме куçкĕски умне тăратрĕ. Йĕпреçрен Анатолий Филиппов, Пысăк Упакассинчен Николай Ядрицев, Канаш районĕнчен Василий

Григорьев, Хумпуҫӗнчен Василий Иванов журналистика анине тухса ӑмӑртма пуҫларӗҫ. Хӑшин хыҫӗнче мӗнле паккус юлни тӳрех курӑнчӗ.

Ҫамрӑксен вӑйлӑ япаласем ҫырас, хаҫата витӗмлӗрех те интереслӗрех кӑларас ӗмӗт пысӑкчӗ. Шухӑш-ӗмӗт ҫурални питӗ лайӑх та вӑл, анчах... ручка тытса сӗтел хушшине кӗрсе ларсанах, кашнин тенӗ пекех алӑ лӑштӑрах усӑнатчӗ. Пуҫра малтан ҫавӑрттарни ниепле те шурӑ хут ҫине авӑртнӑ тырӑ ҫӑнӑхӗ пек йӑкӑр-йӑкӑр юхса анмастчӗ. Ҫырма пуҫласан тата ялан мӗн те пулин ҫитместчӗ. Вырӑнта пулса ҫынпа калаҫнӑ чухне тӗплӗн ыйтса пӗлме вӑтанни е васкани, асӑрхаса юлманни касатчӗ. Парти ӗҫне, обществӑлла организацисен ӗҫ йӗркине, промышленноҫпа ялхуҫалӑх производствин ыйтӑвӗсене, ӗҫ коллективӗсен пурнӑҫне ӑнланса, пӗлсе ҫитерейменни, ҫав вӑхӑтрах журналистика мелӗн вӑртӑнлӑхӗсене алла илейменни, ӑсталӑх, чӑтӑмлӑх ҫитменни пӗтеретчӗ ҫамрӑк ҫыравҫӑсене.

Шухӑша пуҫра кумса илемлӗ чӗлхепе статья тавращӗ хайласси мӗн тери йывӑррине редакцие ӑнсӑртран ӗҫлеме лекнӗ педагог-чӗлхеҫӗсем те аванах туйрӗҫ пулас. Хӑшӗсем нушалана-нушалана редакцирех тытӑнса юлаҫҫӗ, райхаҫат редакторӗсем те пулса пӑхатчӗҫ. Пирӗн те тупӑнчӗ цифра керменӗ купалакан ҫыравҫӑ-ҫӑравҫӑ.

Эпӗ вӗреннӗ вӑхӑтра Пучинкери вӑтам шкулта ӗҫлекен Аверкий Иванович Смирнова ялхуҫалӑх пайне пырса лартнӑ. Шупашкар районӗнченччӗ, ачи япӑхах марччӗ. Ҫыратчӗ, тӑрмашатчӗ, пӳлӗме чӗлӗм тӗтӗмӗпе, статийсене аслӑ органсен йышӑнӑвӗсемпе те цифрӑсемпе тултаратчӗ. Ячӗшӗн ирӗксӗрех лартса ратӑн материалне. Чирлӗ пирки, ӗҫрен хӑтарма юрамастчӗ ӑна. Ун патӗнче тӗтӗм ӗҫсе чыхӑннӑ ҫамрӑксем маҫтӑрланса кайрӗҫ, вӑл вара эп редакцире ӗҫлеме пӑрахиччен те пӗр илемлӗ, тыткӑнлакан, хумхантаракан хайлав параймарӗ вулакана. Мухмӑр чӗртсе ҫеҫ пире савӑнтарчӗ.

Халӑх хуҫалӑх специалисчӗсем те хаҫатра ӗҫлесе вулакансене тивӗҫтермелли материалсем шӑрҫаласа параймарӗҫ. Ҫав статьясене хаҫата юрӑхлӑ тӑвиччен манӑн та, Николай Максимовӑн та, ҫамка картлантарсах тертленме тиветчӗ. Хӑйсем те пирӗн умра аванмарланатчӗҫ. Вӗсене уншӑн кӳрентермен. Райком тӗксе панӑ кайман чӗр таварпа тутана пӑрсах килӗшмелле пулатчӗ те. Вӗсем вара, хӑйсене тарлаттарнӑ редакципе сывпулашса, юратнӑ ӗҫ вырӑнне савӑнсах таврӑнатчӗҫ.

Пирĕн ирĕксерех, пуç çине тиенĕ йывăрлăха сирсе, пултарулăхпа ăсталăх тĕнчин уçлăхне хамăрăн «симĕс ачасемпех» тухмаллаччĕ. Майĕпен... тухрăмăр эпир унта.

Çамрăксен пултарулăхне аталантарма ватă журналист, сăвăç Андреев-Хурамал та нумай пулăшрĕ. Шупашкартан тăван ялне Савккана таврăнсан Микулай Теветкел те вĕрентекенĕ патĕнчен тухма пĕлместчĕ. Василий Ивановичăн ăсталăх пуянлăхĕпе редакцире пĕлсех усă куртăмăр пуль, тетĕп.

Эпĕ Чулхулара чухне редакципе типографине кивĕ çăмăл автомашинăпа грузовик панăччĕ. Редакторта ĕçлеме пуçланă кунах «Москвичпа» Хурамал патне кайрăм. Арăмĕпе, Татьяна Егоровнапа, Коминтерн урамĕнче иккĕшех пурăнатчĕç. Йывăç пӳрчĕ умĕнче ывăлĕ Василий Волгин лартнă хурăнсем саркаланса кашлаççĕ. Пĕртен-пĕр ачи вĕсен йывăр чирпе вунçиччĕрех вилнĕ, чылай сăвăсем çырма ĕлкĕрнĕ. Вĕсене пухса «Çунатлă ĕмĕт» кĕнеке кăларнăччĕ Чăвашгиз. Чи лайăх сăввисемпе чăваш композиторĕсем юрăсем те кĕвĕленĕ. Талантлă поэт çинчен эпĕ те, Максимов та очерксем пичетленĕччĕ. Геннадий Мальцевпа пĕр сăмах тупаймарĕç те, хăйне кӳрентернĕшĕн Хурамал питĕ тарăхнăччĕ. Хăвăрт хĕрсе каякан çынччĕ. Мана курсан, савăнчĕ, ыталаса илчĕ. «Кайрăмăр ĕçе», — терĕм ăшшăн кулса. Тĕлĕннипе Василий Иванович ахаль те мăн куçне тата ытларах чарса пăрахрĕ: «Ăçта?» «Хаçат тума». «Чăнах-и? Эпĕ яланах хатĕр». Мĕн тери çĕкленсе хăпартланчĕç ватăла пуçланă çынсем!

Хавасланса хастаррăн тытăнчĕ юратнă ĕçе Хурамал, чи малтан Ленин ячĕллĕ колхоза кайса тăван ялĕн çитĕнĕвĕсем çинчен икĕ страница (разворот) хатĕрлерĕ. Дмитрий Киселевпа мотоцикл çинче сиккелесе çӳрет.

Хăйне çавăн пек чысланăшăн, ĕçре çамрăксем хисепленĕшĕн чунтан-чĕререн савăнчĕ. Вăл вăхăтра Василий Иванович партипе комсомол, вăрçă ветеранĕсен паттăрла пурнăçĕ çинчен нумай çырчĕ, хăйне евĕр энциклопеди хатĕрлесе хăварчĕ. Ăшра пиçнине, пуçра туптаннине йăлтах халăх çине кăларма тăрăшрĕ пулас. Сĕтел-пукан фабрикин, вăрманпромхозăн тата ытти ĕç коллективĕсен опытне анлăн сарчĕ. Çав материалсене хатĕрленĕ çĕре вăл, вĕренмелле тесе, çамрăксене те хутшăнтаратчĕ. Хăйĕн иксĕлми хастарлăхĕпе вăсен чĕринче çулăм чĕртетчĕ. Утмăл çулхи менелникне, КПСС райкомĕ йышăнăвĕпе, районти культура çуртĕнче савăнăçлă паллă турăмăр, юбиляра халалласа хаçатра ятарлă номер кăлартăмăр.

Çыравçăсен ĕмĕрхи чирĕнчен сывалайманни ăна хушăран самаях кансĕрлетчĕ, çапах та Никонор Павлович пек мар, чăтса ирттеретчĕ. Павлова те ĕçлеттерсе пăхрăм, анчах усси пулмарĕ, ман шанăçа тивĕçтереймерĕ. Хĕрĕх градуслă «Атăл шывĕпе» сипленсе каннă хыççăн, Хурамал та ман сивĕ пӳлĕме леккелетчĕ. Хĕлле ман чӳрече форточки нихçан та хупă тăмастчĕ. Манăн хаяр та йĕплĕ сăмахсем тăрăннине чăтаймасăр Василий Иванович алăкăн-тĕпелĕн кускалать, юлашкинчен чăтаймарĕ: «Çитет, — терĕ. — Хамăрăн сире тăн парас чухне халь ман сирĕн умăрта намăс курмалла пулчĕ. Эсир ятлани мана ывăл вăрентни пекех туйăнчĕ. Ваççукпа пĕр çулхисем вĕт эсир. Ывăлăма юратнă пекех юрататăп сире. Каçарăр коллектив ятне вараланăшăн. Урăх ун пек тумăп». Сăмахне тытрĕ çакăн хыççăн ватă журналист, редактор урăлтаркăчне урăх лекмерĕ.

Хаçат уйĕнче иурте хăйсен паккусне тухаймарĕç. Мала кайнисем, акă, Владимир Давыдов, Николай Перлов, Константин Алимасов, Анатолий Филиппов, çар хĕсметĕнчен килсен, çĕнĕ паккус пуçларĕç. Вĕсемпе, шанчĕк параканнисемпе, чăтăмлăн, тăрăшсах, вăхăта шеллемесĕр ĕçлеттĕмĕр ĕнтĕ. Вĕсене кулленкунри пурнăçра чи кирлине, чи усăллине палăртма, шухăшланине пурнăçламашкăн тĕп тема суйласа илме, темăна уçса памашкăн мĕнле жанрпа, мелпе усă курмаллине, чĕлхе илемлĕхне вĕрентеттĕмĕр, хăйсем тĕллĕн ĕçлеме, тарăнрах та анлăрах шухăшлама, пĕтĕмлетӳ тума хăнăхтараттăмăр. Çав хушăрах хамăр та вĕренеттĕмĕр. Мĕншĕн тесен хаçат «Эпĕ нумай пĕлетĕп, эпĕ чи лайăх çыратăп» тесе лăпланса хытнă çыравçа юратмасть, йышăнмасть. Пурнăç уттипе тан, пурнăç уттинчен маларах та пымалла-çке журналистăн.

Тин çеç çырма пуçлакансене, ăсталăх, пĕлӳ çитеймесĕр нушаланакансене хамăр çума илни вĕсене те, редакцие те пулăшрĕ. Вăрнарти пекех эпир те хăй тĕллĕн редакторта, заместительте, секретарьте ĕçлеме пултаракан çамрăк çыравçăсем вĕрентсе хатĕрлерĕмĕр.

Пĕтĕм коллектив маçтăрлăхĕшĕн тăрăшаттăмăр. Хаçат илемĕ, сăмах вăйĕн пĕрлĕхĕ çыравçăран çеç килмест-çке. Материала мĕнле тӳрлетнинчен, пичетлениччен мĕнле вуланинчен те номер пахалăхĕ ӳсет. Йăнăш алакана эпĕ ылтăн пĕрчи юхтараканпа танлаштаратăп. Хаçатăн йăнăшĕ ялан хаçат кăларнă чухне темиçе çын куçĕнчен пытанса юлать, тепĕр кунне, пичетленнĕ хыççăн вулама тытăнсанах, куç умне сиксе тухать. Редакци

çынnисемшĕн йăнăш вăл, чăн та, пĕрремĕш тăшманах. Çавăн-па ĕнтĕ, унран сыхланас, хăтăлас тесе, мĕн тери тăрăшса, вас-камасăр, пуç тавра çавăрса вулатчĕ страницăсене Римма Сте-пановна Яковлева. Вăл хăй йăнăшсен «хаяр тăшманĕччĕ». Шанчăклă, нумай пĕлекен ăста корректорччĕ, кăмăллă, сăпай хĕрччĕ. Явапла секретарьте те ĕçлеттерсе пăхрăм эпĕ ăна. Хăй тĕллĕн вĕренсе институт пĕтернĕ хыççăн, ăна райсовет ĕçтăвкомĕн секретарьне илчĕç.

Йăнăш вăл хамăр тимлĕ, асăрханулла пулма пăрахсан та, пире сăмса умĕнчех улталать. Малтан çыракан аллинчен вĕçерĕннĕскер, тепĕр чухне редактор алинчен те тухса ӳкет. Чее те хăрушă. Култарма та, макăртма та пултарать. Акă. 1974 çулхи кăрлачра хамăн ĕç кĕнекине çырса хунисем: «Çырусен пайĕн заведующийĕ Николай Перлов «Вăрман комбинатне КПСС об-комĕпе Министрсен Совечĕн, облпрофсоюзăн тата ВЛКСМ об-комĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă» тесе информаци хатĕрленĕ. Тĕрĕссипе комбината Диплом çеç панă. Ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ Аверкий Смирнов «Кубня» колхозри Копеева ĕне сăвакан декретлă отпуска кайнă, тенĕ. Копеева хĕрупраç, че-ретлĕ отпуска кăна кайнă, тесе шăнкăравлаççĕ ялтан. Констан-тин Алимасов литсотрудник ирттернĕ рейд материалĕнче 185 ĕне вырăнне 285, Петрова сĕт сăвакан вырăнне Платонова, сĕт сăвасси чакнă вырăнне «ӳсет» тесе вуламалла иккен. Парти пурнăç пайĕн заведующийĕ Василий Башкиров патока завочĕн дирек-торне Иванова хăйĕн статйинче, выговор вырăнне, строгий выговор панă. Калаçмалли, хамăртан култармаллли номертен-номере тупăнсах пыратчĕ. Йăнăш янăшăн никама та выговор паман, ĕçрен кăларса яман. Айăпа кĕнисем тӳрех ыйтатчĕç: манăн ăçта каймалла? Эпĕ вĕсене уншăн вăрманти чи инçе хуçалăхсене ăс пухма, уçăлма хăваласа яраттăм. Мĕн çинчен çырма хушнине çирĕп пурнăçламалла, унсăр пуçне хăв пуçăн-тан шухăшласа тупнă интереслĕ материал илсе килмелле. Çур-ран-и, тракторпа-и е сĕт турттаракан, почта леçекен вездеход-па — пурпĕрех вăхăтра кайса тулли кунтăкпа таврăнатчĕç ача-сем. Çакăн хыççăн вăй хутшăнатчĕ вĕсен.

Хăш-пĕр сотрудниксене вĕрентнипе пĕрлех, хаçат активĕпе ĕçлессине те манмарăмăр. Çавна май ятарласа ăсталăх универси-течĕ уçрăмăр. Вĕренӳ программине çулсерен парти райкомĕ çирĕплететчĕ. Республикăри паллă публицистсем, очеркистсем, фельетонистсем, писательсем килсе ирттернĕ занятисене, ман

шутпа, ĕçялкорсенчен пурăнаканнисем нумайăшĕ астума тивĕç. Пĕр занятие пирĕн пата Вăрнар районхаçачĕн редакторĕ Михаил Алексеевич Васильев тата «Мир» совхозри ватă корреспондент Степан Александрович Юркин килнĕччĕ. Кӳршĕсен редакторĕ информаци çырма вĕрентрĕ, ялкорĕ хăйĕн пуян опычĕпе паллаштарчĕ. Çак заняти уйрăмах çӳлĕ шайра, пит кăсăклă ыйтусемпе иртрĕ.

Ĕçе палăртма, хуравлă çынсемпе, ĕçченсемпе тĕл пулса каласма, хаçат жанрĕсемпе усă курса, çырма вĕренни, редакци кухнипе паллашни университета çӳрекенсемшĕн пустуях пулмарĕ. Ĕçялкорсенчен ăнăçлăрах материалсем килетчĕç. Вĕсенчен журналистика çулне çуйласа илекенсем те пулчĕç. Чăваш патшалăх университетечĕн журналистика факультетĕнче ĕçлекен Анатолий Абрамова Шупашкара вĕренме Йĕпреç редакцийĕнчен яни усăллах пулчĕ. Кĕлĕмкасси ялкорĕ тивĕçе тӳрре кăларчĕ, журналистикăри палăрнă ĕçсемшĕн ЧР Журналистсен Союзĕн С.В.Элкер ячĕллĕ премине илчĕ. Республикăри паллă журналистсем Иван Семенов, Вячеслав Тимуков, Елена Егорова, Николай Краснов район хаçатĕнче сăмсаланса вăй илнĕ. «Çĕнтерӳшĕн» юнкорĕсемпе ялкорĕсем чылайăн Чăваш патшалăх университетĕнче журналиста вĕренчĕç. Унта вĕренекенсем татах та пур.

1974 çулта, ĕçялкорсен юхăмĕн Донецкра иртнернĕ Пĕтĕм Союзри тăваттăмĕш слетĕнче, эпĕ хамăр тунă ĕçсем çинчен пĕлтертĕм, унтан таврăнсан, республикăри канашлура тухса каласрăм, кӳршĕ районсен редакцийĕсенче ĕçлекенсемпе тĕл пултăм, «Советская Чувашия» хаçатра «Рабселькор нуждается в учебе» ятлă тĕпчевлĕ анлă статья пичетлерĕм.

Эпир те ывăнма пĕлмесĕр, чупса, çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупмасăр тенĕ пек тăрăшатпăр, анчах кӳршĕсем тата хытăрах ĕçленĕн туйăнатчĕ. Вĕсем мĕнле майпа чаплă хаçат кăларнине курас килетчĕ. Геннадий Мальцевăн ку енĕпе пуçару пурччĕ. Вăл редакципе типографире ĕçлекенсене Аслă Каçала иккĕ те илсе кайрĕ. «Октябрь ялавĕ» хаçатăн редакторĕ Лаврентий Васильевич Таллеровчĕ. Унăн вăйлă ачасем ĕçлетчĕç: Никандр Якимов, Денис Гордеев, Виталий Шемекеев, Алексей Зайцев, Геннадий Уткин. Пурте вĕсем кайран районхаçат редакторĕсем пулчĕç.

Çавăнпа кӳршĕсен опытне вĕренни те пире сахал мар пулăшрĕ. Вăрнарти «Çĕнтерӳ çулĕпе» комсомольскисен «Октябрь ялавĕ» витĕмлĕ, çивĕч чĕлхеллĕ, интереслĕ те илемлĕ тухатчĕç. Вăрнар-

сен редакци ĕçне планласси, парти пурнăç ыйтăвĕсене çутатасси, хаçата техника енчен çыпăçуллă калăпласси килĕшетчĕ. Комсомольскисен оперативлăх, критика витĕмлĕхĕ, проблемăллă ыйтусене çутатни ытларах кăмăла каятчĕ. Эртелпе тухса çӳресе эпир вĕсемпе паллашнă, лайăххипе хамăр патра усă курнă.

Пичет секторĕ йĕркеленĕ семинарсенче, Мускавра-и е хамăр республикăра, — кашнинчех мĕн те пулин çĕнни тупăнатчĕ. Партин аслă шкулĕнче ĕçлекен уйăхлăх курсран та эпир, редакторсем, пĕлĕве çирĕплетсе ӳстермесĕр килмен. Чулхула, Мускав тата ытти облаçсенчи райхула хаçачĕсен çĕнĕлĕхĕсем хамăр майлă пурнăçа кĕни сисĕнетчĕ. 1974 çулхи пуш уйăхĕнче манăн республикăри семинара пухăннисене очерк çырма вырăсла вĕрентмелле пулчĕ. Вуласа пăхрăм та халĕ çав илемлĕх калаçăвне, тишкерĕвĕм хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман иккен.

Хаçат ĕçĕнче штамп пĕтерет. Унтан пĕтĕмпех ниепле те хăтăлса пĕтме çук ĕнтĕ. Çапах та хăш-пĕр штампа илемлĕх майĕсемпе, сăнарлăх çĕнĕлĕхĕсемпе улăштарма пулатех. Çакă та канăç памастчĕ пире.

Материалсене епле меллĕрех те халăха тивĕçлĕрех хатĕрлесе пичете парасси çинчен кунĕн-çĕрĕнех шухăшлаттăмăр. Çĕнĕ хыпара вулакан патне çийĕнчех çитерес килетчĕ. Тĕнчере, çĕршывра, республикăра пулса иртекен ĕç-пуç çинчен эпир малтан «Коммунизм ялавĕнчен» касса е Шупашкартан райхаçатсем валли Чăвашрадиопа ятарласа паракан материалсене илсе пичетлеттĕмĕр. Хыпарсем ик-виç кун кая юлатчĕç. Эпĕ вара Мускав радиовĕпе, телевизорпа усă курма пуçларăм. Чи кирлине тӳрех куçарса набора яраттăм. Уйрăмах тĕнче чемпионачĕсенчен кĕске репортажсем хатĕрлеттĕм. Çĕнĕ хыпарсемпе вара Йĕпреç вулаканĕсем Мускав хаçачĕсемпе пĕр вăхăтрах вуласа паллашатчĕç. Райкомри «хăлхаллă тĕрĕслевçĕсем» ăна униссе юлаймарĕç.

Очерксем, сăвăлла очерксем, тĕрленчĕксем, репортажсем ытларах яма тытăнтăмăр. Пилĕкçуллăх паттăрĕсем хăйсем çинчен, коллектив çинчен яка та тулăх чĕлхепе каласа панине мăн сăнӳкерчĕкпе пĕрремĕш страницăна вырнаçтараттăм. Пĕрремĕш калаçăва КПСС райкомĕн бюро членĕ, «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕн слесарĕ, бюро ларăвĕсенче юнашар ларакан Иван Григорьев ячĕпе çырса пуçарса ятăм. Çакă тӳрех хаçатăн сăнне уçса, çамрăклатса ячĕ. Дмитрий Киселев çине тăрсах тарăн шухăшлă, чĕрĕ фотопортретсем хатĕрлесе пычĕ. Ку çĕнĕлĕхе республика хаçачĕсем те, пуçлăхĕсем те çийĕнчех асăрхаса палăртрĕç.

Пухусемпе сессисенчен паракан отчетсене тĕрленчĕк вуланă пек илемлетрĕмĕр. Çавна май, пĕр калаçу аса килет. Райком пленумĕ физкультурăпа спорта аталантарас ыйтăва сӳтсе явнăччĕ. Отчетне çăмăл чĕлхепе, ирĕклĕ мелпе уçăмлă, пурне те тыткăнламалла çыртăм. Хаçат тухнă кун райкомран пĕрремĕш секретаре Петрова пулăшакан Костя Александров шăнкăравларĕ: «Эсир, - тет вăл, — мĕншĕн тайлă-пуçлă ыйтăва ача-пăчалла çутататăр? Райком отчечĕ парти документчĕ пулни çинчен манмалла мар». Мĕншĕн апла çырнине райкомра тимлĕн ăнлантарса памалла пулчĕ. Райком секретарĕсем шăпах тата ман хайлава ырланăччĕ.

Киввине хӳтĕлекен кĕвĕçӳллĕ çынсен сĕнĕвĕсене йышăнсах кайман эпир. Хăш ыйтăва мĕнле майпа-меслетпе, хăш шайра çутатасси журналист пĕлĕвĕпе ăсталăхĕнчен килнине çеç шута илнĕ. Хаçат материалĕсен содержанийĕпе витĕмлĕхне тĕрлĕ енлĕн ӳстерме тăрăшнă. Хаçатри ăсталăх шкулне аталантарнă. Ăсталăха вĕренсе çитнĕ журналистсене вырăнта хăварассишĕн, вĕсен ĕçри опычĕпе редакцире усă курассишĕн çине тăнă. Йывăр професси суйласа илнĕ çамрăксем ăсталăх шкулĕнче вăйланчĕç. Вĕсем халĕ хăйсем çамрăксене хаçат ăсталăхне çине тăрсах вĕрентеççĕ. Ăсталăх шкулĕн алăкĕ — яланах уçă.

1966 çултах эпĕ Йĕпреçре кун кĕнекине çапла çырса хунă: «Журналист хаçатра çуралать тесен, нихçан та ĕненместĕп. Чăнчăн журналист вăл малтанах çуралнă, вăл унта тимĕрçĕ лаççинчи пек туптанать çеç. Хаçат унăн сăнне вулакан умне сăнӳкерчĕк пек çапса кăна кăларать».

Мĕн тăвăн, çыравçа та турă пани кирлех çав.

## Алла тилхепе тытсан

Утмăл улттăмĕш çулта пурăнма куçса пынă çурт пирĕн ытла илемлĕ вырăнтаччĕ. Хваттер чӳречине уçсанах умра касмасăр хăварнă çăкасемпе хурăнсем, хăйăрлă çул урлă — вăрмана картласа уйăрнă парк. Кил хушшинчи сарайсем хыçĕнче — лартса ӳстернĕ хырлăх, ун варринче — сĕт завочĕн вăрăм пĕви. Сывлăшĕ техĕмлĕ. Канма аякка кайма та кирлĕ мар пек. Арăм вăрман касакансен Хурашыв поселокĕнчи шкулта ачасене акăлчан чĕлхи вĕрентет. Ачасем ясли-сада çӳреççĕ. Максимовсем те пирĕнтен тăварах çурта куçрĕç. Тинех патшалăх хваттерĕнче пурăнма пуçларăмăр. Пирĕншĕн те, вĕсемшĕн те савăнăç. Пӳлĕмсене кăмака хутса ăшăтатпăр, шыв çăлран йă-

татпăр, апат баллонлă газ плити çинче пĕçеретпĕр, урамра хăйăрпа пылчăк ăшĕнче çăрăлатпăр пулин те, ыррине, пурнăç улшăнасса кĕтетпĕр. Ирхине вăрман сукмакĕсемпе килениччен чупаттăм, хул-çурăма çемĕçтереттĕм, çĕр метрлă пĕве хӳринчен пуçне çити иккĕ ишсе килеттĕм, кăнтăрлахи апатра та шыва кĕрсе уçăлаттăм, каçпа хушăран Максимовпа шампăлтататтăмăр. Лĕп шыва пирĕн хĕрарăмсем те кĕретчĕç. Сывлăх çирĕпчĕ, ĕçлеме çăмăлччĕ, ывăнтармастчĕ. Çак йăлана эпĕ, Чулхуларан килсен те пăрахмарăм, уйрăмах, «Тăван Атăлта» ĕçленĕ чухне, апат вăхăтне тăссах, кашни кун Атăлта чун каниччен ишеттĕм.

Хама мĕнле тилхепе тыттарассине эпĕ малтанах пĕлнĕ. Экзаменсем умĕн Чулхулана парти обкомĕн оргпай пуçлăхĕ Борцов пынăччĕ. Вăл партшкул директорĕпе, партком секретарĕпе пĕрле кашнине уйрăммăн чĕнсе калаçрĕ, сире Лермонтов редактора лартасшăн, пирĕнпе калаçса татăлнă, тесе шантарчĕ. Мана «Коммунизм ялавĕн» редакторĕ Михаил Якимов хăй патне илесшĕнччĕ. Ун пирки эпĕ шарламарăм.

Чун Йĕпреçех туртрĕ. Унта пĕрремĕш секретаре улăштарнăччĕ. Петрова пртин тĕп комитечĕн обществăлла академине вĕренме ярсан, райкома ертсе пыма Канашран Николай Григорьевич Лермонтова куçарнă. Пĕрремĕш хут тĕл пулса калаçсанах хурахăмăртарах сăнлă, лăпкă куçлă пуçлăх мана кăмăла кайнăччĕ, ăна хам редактор пулма хирĕç мар тесе сăмах панăччĕ. Якимов мана кайран кашни тĕл пулмассерен, хăйпе килĕшменшĕн, сăмсаран шакканă пек, аса илтеретчĕ. Манăн вара хам тĕллĕн ĕçлесе пăхас кăмăл-туйăм вăйланнăччĕ.

Акă, каннă хыççăн, Шупашкара чĕнчĕç те. Çитмĕл пĕрремĕш çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшчĕ. Лермонтов хăй чупакан «Волгине» пачĕ. Ямшĕкĕпе, Василий Михалчпа, мăн çула тухрăмăр. Пичет секторĕн пуçлăхĕ Григорий Васильевич Васильев-Луч мана пурнĕç утăмĕн хучĕсене çырса хатĕрлеме пулăшрĕ. Владимир Прокопьевич Кузьмин коммунистăн «Личное дело» текен папки идеологи секретарĕ Илья Павлович Прокопьев сĕтелĕ çинче выртать. Вăл пире ăшшăн йышăнчĕ, чăвашла калаçрĕ, килти çинчен ыйтса пĕлчĕ, малашлăх туйăмне ăнланма тăрăшрĕ, ырпиллĕх сĕнĕвĕсем пачĕ.

Ĕçлеме тытăнсан тепре обкома чĕнчĕç. Бюрора ман çинчен Прокопьев каласа пачĕ. Мана редактора çирĕплетме пĕрремĕш секретарь Николай Анатольевич Вороновский пурне те алă

çĕклеттерчĕ. Унтан тухсан хашш! сывласа ятăм: обком номенклатуринче пуçран шăлмаççĕ, эпĕ — читлĕхре.

Çĕнĕ редакторăн çĕнĕ номер тума Вася Иванов радиоорганизатор хаçатра усă курма пырса тĕкнĕ пиçсе çитмен пĕр вăрăм информаци пекки пурччĕ. Пиçмен пашалусемпе йăлăхса çитнĕ Николай Максимов та алă сулнă пулас. Василий Хурамала илсе килсен, хăвăрт ĕçе кӳлĕнтĕмĕр, тепĕр кун валли страницăсене хатĕрлесе çитертĕмĕр. Хаçат вăхăтрах тухрĕ. Кайрĕ вара малалла. Ĕрĕхтерсех!

Райкомăн тата райсовет ĕçтăвкомĕн кулленхи, малаллахи палăртăвĕсене тĕпе хурса, редакцин ĕç планне туса хатĕрлерĕм. Редакцин штатра тăман пайĕсене турăм, хамăр патра ĕççыннисене йышăнма тытăнтăмăр. «Çавра сĕтел» тавра района ертсе пыракансемпе ытти хуравлă çынсене юнашар лартса, халăх нушитерчĕ пирки уççăн калаçтаратпăр. Районти учрежденисене, редакцие килекен çырусене, сĕнӳсене тишкерсе, халăха ытларах хумхантаракан, тарăхтаракан пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене палăртса, хаçатра ятарлă страницăсем, кăларăмсем пама пуçларăмăр. Халăх мĕн ыйтни ăçта епле пурнăçланнине тĕрĕслесех тăраттăмăр. Ку ĕçе штатра тăман пайсемпе ĕçялкорсене явăçтартăмăр. Вулаканпа, халăхпа çыхăну вăйланни сисĕмлехчĕ. Çынсем хаçата ытларах ĕненме, унтан пулăшу ыйтма редакцие йышлăрах пыма пуçларĕç.

Редакци ĕçченĕсене парта хушшине лартмалла пулчĕ. Кулленхи тĕркĕшӳре тĕнче шавĕнчен хупланса, пурнăç уттинчен юлас мар тесе «Журналист», «Ĕçялкор» журналсене, çĕршывăн тĕп хаçачĕсене, республика пичетне ушкăнпа тишкеретпĕр, ылтăн пĕрчи шыратпăр. Çын хыççăн каймасăр, çын ӳсĕмне пуça хыватпăр. Ушкăнри тавлашуллă калаçусем хамăр патра çĕнĕлĕх çуратачĕç, никама та пĕр вырăнта пĕччен тапăртатса тăма, мăкланса ларма памастчĕç. Ĕçялкорсен вĕренĕвне те çĕнĕрен йĕркелесе ятăм. Журналистсен союзĕн пуçламăш организацине туса хутăмăр. Чӳк уйăхĕнче Союзăн пиллĕкмĕш сьезчĕ пулчĕ. Унăн ĕçне эпир Андреев-Хурамалпа хутшăнтăмăр. Мана пуçласа правлени членне суйларĕç. Унтанпа ĕнтĕ правлени тытăмĕнче тăман çул манăн сахал пулнă. Союз ĕçне яланах хĕрӳ хутшăннă. Халĕ те правлени членĕ, ЧР Журналистсен Союзĕн республикăри профессилле писательсен Союзĕ çумĕнче йĕркеленĕ пуçламăш организацине ертсе пыратăп.

«Хула — яла» чĕнӳ Мускав енченех кĕрлесе çитнĕччĕ ун чухне. Йĕпреçре те тимлесех пурнăçлатчĕç ăна. Эпир те хамăрăн

грузовикпе Кĕтне улăхне чашкăрса çитрĕмĕр. Хурамалсемпе тимешсем валли пĕтĕм Йĕпреç симĕс апат хатĕрлет. Çыран тăрăх ӳсекен йывăç тураттисене касса, вĕлтрен çулса машина çине тиетпĕр. Пирĕн ямшăк Иван Ильич Ульянов хаклă тавара фермăсем патне турттарать. Пулă тытма та ĕлкĕртĕмĕр. Хуранта шӳрпе вĕрет. Эртелпе пĕрле ĕçленĕ, кулнă, калаçнă хушăрах ман пуçра «Асамат кĕперĕ» новелла çуралчĕ. Николай Перлов журналистпа юрату çунтармĕшĕ хушшинчи лирикăллă хутшăнусем хĕтĕртрĕç пулас. Коля кунчченех мана хăйсен юратăвĕн асапланăвĕсене уçса панăччĕ. Киле çитсен, ирпе, ĕçе кайиччен, çырса пăрахрăм.

Çынна хавхалантарма нумай та кирлĕ мар иккен. Унăн ăшри шухăшне тавçăрса, туйăмне ăнланмалла, чĕри мĕншĕн çуннине курмалла çеç. Чунтан, шанчăклăн алă пани Василий Хурамала епле хăпартлантарса ячĕ. Ывăç тупанĕсене сăтăрса, кулкаласа çеç çӳрет, «Литература вучахне тепре чĕртсе ярасчĕ, пирĕн çыракансем нумай», — тет куçран пăхса. «Ара, вучахĕ хăвăр ăшрах çунать-çке, мана та, Николай Николайча та хĕртет, — кулса ятăм чăтаймасăр. — Çиччас пухатпăр вучах тавра сăмах ăстисене».

Вăрçăччен çак хаçатра хăйĕн малтанхи сăввисене пичетленĕ Хурамал ăсчахĕ — «Çĕнтерӳшĕн» ветеранĕ, 1956 çулта, чăваш халăх поэчĕ Çемен Элкер Йĕпреçе иккĕмĕш хут килсен редакци çумĕнче литпĕрлешӳ йĕркеленĕ çыравçăсенчен пĕри — Василий Хурамал — республикипе паллăччĕ. Ватă писательсем ăна Деферан хушма хушаматпа пичетленнине лайăх астăватчĕç.

Кĕçех ман пӳлеме Йĕпреç çыравçисем тулса ларчĕç: Кĕркури Рикмас, Ваçлей Анисимов, Лексантăр Карсаков, Шупашкарта тахçан çамрăк писательсен канашлавĕвĕнче пĕрле пулнă Луç Кавĕрли, Микулай Андреев сăвăç-композитор, Аслă Каçал енчи Çĕвеçук Çĕпритунĕ (Борцов), Вячеслав Сорокин, Михаил Богатовпа Никита Чернышев-Шетмĕ мусăкçă-композиторсем тата хамăр ачасем. Шăпах Шупашкартан пир-авăр комбинатĕнчи илемлĕх мастерскойĕнче ĕçлекен Теветкел Микулайĕ тĕлпулăва килнĕччĕ. Рикмасов Хурамалтан сăнӳкерчĕк илсе килнĕ. 1957 çулта çапса илнĕскер. Ăна пăхсан, унта Çемен Элкер литпĕрлешӳре тухса калаçать. Тăнлаканĕсем — Вячеслав Сорокин, Григорий Рикмасов, Гаврил Лосев тата Николай Теветкел. Николай Александрович çав вăхăта аса илчĕ, çамрăксен сăввисене тĕплĕн тишкерчĕ, вĕсене хаклă сĕнӳсем пачĕ. «Мана сирĕн пултарулăх уйрăмах çывăх. Мĕншĕн тесессĕн эпĕ хам та литера-

тура тĕнчине Савккара лаша пăхса, Йĕпреçри сĕтел-пукан фабрикинче столярта, Шупашкарти стройкăра платникре, малярта, ӳнер училищи хыççăн художникре ĕçлесе тухрăм», — асра юлнă хаклă хăна сăмахĕсем. «Хăвăн ушкăнри лашасем хушшинчех шыраса тупнă ĕнтĕ эсĕ поэзи-муза урхамахне те, Пегас çине чалт утланса çилхерен çирĕп çавăрса тытнă, вĕçетĕн кăна Парнас тăвĕн тӳпинелле», — тесе шӳтлекелесе илтĕм те, вăл йăлл кулса, хуравларĕ: «Пĕччен мар, хамăрăн Элкер ушкăнĕпе — сирĕнпе хăпарасчĕ манăн унта. Ăмăртсах çырар». Николай Петровский-Теветкел Элкер ячĕллĕ литпĕрлешĕве пулăшсах тăчĕ. Çапла çĕнелсе тымар ячĕ йĕпреçсен литпĕрлешĕвĕ. Унăн вучахне эпĕ Вăрнар çыравçисен хĕрĕвĕпе чĕртсе, ялкăштарма пултартăм. В.И.Хурамалпа пĕрлех çамрăк талантсемпе Николай Максимов ӳркенмесĕр ĕçлерĕ. 1975 çултанпа литпĕрлешĕве пултаруллă, хĕрӳ поэт Геннадий Кузнецов хавхаланса ертсе пырать.

Ун чухне эпир литстраницăсем ытларах патăмăр. Çамрăк талантсем валли çул анлăланчĕ. Хурамалăн пичетленмен поэмисене кун кăтартрăм. Николай Андреев, Михаил Богатов, Никита Чернышев-Шетмĕ Йĕпреç поэчĕсен сăввисемпе юрă хыççăн юрă кĕвĕлерĕç. Вĕсене пула Николай Максимов, Владимир Давыдов сăввисем юрăра халăх хушшине саланчĕç. Кĕлĕмкасси ачи Геннадий Маркиянов композитор, Энтриелте çуралнă Иван Ахрат муссăкçă редакцире вĕсемпе тĕл пулатчĕç.

«Сӳннĕ вучаха чĕртме эпĕ район çĕнелсенех вут-шанкă хатĕрленĕччĕ, — терĕ пĕррехинче мана Хурамал. — Геннадий Мальцев çывăха ямарĕ. Хăй тĕллĕн ĕçлесшĕнччĕ. Пирĕн пултарулăха шута хурасшăн марччĕ. Эсир, Владимир Прокопьевич, çапах та хăраса ӳкмерĕр. Мана та, Киселева та, типографи хĕрарăмĕсене те ун тапкинчен хăтарма пулăшрăр. Пуçтах хыççăн каймарăр».

Усал-усаллисен ушкăнĕсене эпĕ ачаранах хутшăнман. Вăрнарта та таса чунпа юлтăм. Николай Орлов хаçат редакторне Петр Тихонова тата парти райкомĕн пĕрремĕш секректарьне Виталий Данилович Данилова хирĕçлесе Мускава яма ушкăнланса çырнă çăхав айне те алă пусмарăм, çăхавçăсене тарăхтартăм. Мальцева юсанă шавлă пухура та эпĕ асса кайнă редактора хӳтĕлемерĕм, редактортан чăн-чăнах инкек тӳснĕ юлташсем-ĕçтешсем майлă тăтăм.

Çав утмăл ултăмĕш çул вĕçĕнчех Шупашкартан Васлей Иванов-Шăхаль çыру янăччĕ. Вăл хăй кунта ĕçленĕ чухне

хăварнă алçырăвĕсене мĕнле тӳрлетмеллине ăнлантарнăччĕ. Çыруне çапла вĕçленĕ:

**«Этеме-юлташăма!**

Хампа пĕр чунлă пулнăран
Сана ямастăп асăмран.
Мăнаçланмарăн «портфельпе»,
Пуçна таймастăн эс «чина»,
Хака хуратăн чăн Çынна.
Ун пек этем йышра ыр ятлă,
Тĕрĕслĕхпе ялан хăватлă!»

Çын аллипе кăвар туртакан, çын пуçĕ çинче утакан, çын шучĕпе пурăнакан — маншăн ют. Хам курнине-тӳснине пуç тавра çавăрттарса пăхмалăх Чулхулара вĕреннĕ чухне вăхăт пулнă пулас, кун кĕнекине 1968 çулхи нарăсăн 25-мĕшĕнче çапла çырса хунă:

«Тем тесен те эпĕ пурнăç урапи çине ларма пĕлмен е унта хамăн вырăна йышăнайман. Çавăнпа мана тумхахлă çул пĕрмай унталла-кунталла çапăнтарать, хыçалти тĕнĕл çинче сиктерсе канăç памасть. Н. урапа варрине лайăх сарăлса кĕрсе ларнă та, нимле шăтăк-путăка та туймасть, ним хуйхи-суйхисĕр тĕлĕрсе пырать. Уншăн пулсан, урапи тӳнсе çеç ан кайтăр, майĕпен-майĕпен, çынсем хыççăн, лашине лĕпĕстеттерет: ни иртсе каймасть, ни кая юлмасть.

Сан пур, таçта çăва патне ĕрĕхет урхамаху, нимле тăвайкки-мĕнне пĕхмасăр малалла талпăнать, мана унталла-кунталла çапăнтарать. Анчах эпĕ те тилхепене çирĕп тытатăп, урапа çинчен ӳксе юлмастăп, урхамахăма аслă çултан пăрăнма памастăп».

Хам тĕллĕн ĕçлеме тытăнсассăн, район пурнăçне тарăнрах пĕлсе, ăна ертсе пыракансен ĕмĕт-кăмăлне çывăхрах ăнланса пынă май шухăрах, асăрханулăрах, хăюллăрах пулмаллине туякан пултăм. Хуть те хăш çĕрте те сана пурнăç урапи çинчен сирпĕтме, урхамаххун тилхепине туртса илме ĕмĕтленекен е ятарласа хатĕрленекен тупăнатех. Вĕсем сана куç шăрçине сыхланă пек сыхлаççĕ. Эс пĕчченнине курсан, пуç çĕклеттермеççĕ, пусараççĕ, хăйсене пăхăнтараççĕ е тĕппипе пĕтереççĕ. Унашкалли Йĕпреç тăрăхĕнче пулкаланă-çке.

Ытти пуçлăхсем пек хăвăн ĕçна çеç тусан юрĕччĕ-ха, хушу ĕçĕ пĕтерет редактора. Райкомрисем камантлама, хăйсене çӳле-

рех шайра тытма, хаҫата ертсе пыма хӑтланса пӑхрӗҫ. Ӗҫ тухмарӗ. Эпӗ вӗсене хаҫат ӗҫне пӗрремӗш секретарь ертсе пырать, уншӑн чи малтан вӑл яваплӑ, тесе ӑнлантартӑм. Хӑшӗсем ҫавӑнтанпа вӑрттӑн ҫыртма пуҫларӗҫ. Анчах пире те ҫара алӑпах илейместӗн ҫав, эпир те чӗрӗп пекех йӗплӗ.

Христина Сергеевна упӑшкине Василий Сергеевича редакцие тӗкни пирӗншӗн лавккара канфет ҫумне ҫӗрӗк пулӑ ирӗксӗрлесе панӑ пекех пулчӗ. Иккӗшӗ те Аслӑ Каҫал чӑвашӗсем. Христина Сергеевни Ирҫе Ҫармӑсра шкулта, упӑшки вӑрман заводӗнче ӗҫленӗ. Александр Петров вӑрман варринчен Йӗпреҫе илсе тухрӗ Башкировсене. Василий Сергеевичӗн, вӑрман инженерӗн, ӗҫлесчӗ хӑй вырӑнӗнчех. Арӑмран иртейменни пӗтерчӗ ӑна. Хӑй ӗнтӗ кӑмӑлӗпе питӗ лайӑх, мӗн хушнине тӑвать, ятласан та, кӳренмест. Тӗп ҫитменлӗхӗ — ҫырма пӗлменниччӗ. Ыттисем хушшинче, ҫырусен пайӗн заведующийӗнче, хаҫат ассийӗнче нушаланчӗ.

Райкомӑн иккӗмӗш секретарӗ Валентин Алексеевич Михатайкин Хӗрлӗ Чутайран Йӗпреҫе ӗҫлеме килнӗскер. Сӑмах май, Йӗпреҫ райкомӗнче ҫав ҫулсенче пӗрремӗш секретарьтен пай пуҫлӑхне ҫитиччен пӗр Анатолий Семенов кӑна вырӑнти тӗп халӑхран, тӑван районранччӗ. Ыттисем пурте таҫти-таҫти ҫӗртен килсе тулнисемччӗ. Михатайкин промышленность, строительство, суту-илӳ, йӑла ыйтӑвӗсене тивӗҫтерекен тата ытти тупӑшлӑ предприятисемшӗн яваплӑччӗ. Вӗсенчен хӑшне те пулин, уйрӑмах суту-илӳпе йӑла службисене хытӑрах хӗстерсенех, хӑйӗн пӳлӗмне лешсен пуҫлӑхӗсемпе пӗрле чӗнетчӗ. Кӳрентерес мар тата чӑнлӑха сыхлама тесе, малтанлӑха кайса та пӑхрӑм, кайран-алӑ султӑм. Пӗрремӗшӗ чӗнмесӗр, вӗсем патне пули-пулмишӗнех чупмастӑмччӗ.

Лермонтов чӑвашла начартарах пӗлетчӗ. Ӑна пулӑшаканӗ Константин Александров пичетленнӗ ҫӗнӗ номере тишкерсе, ирпе ун сӗтелӗ ҫине хуратчӗ. Ҫавӑн тӑрӑх пуҫлӑх ман ӗҫе хаклатчӗ. Константин Дмитриевичӑн редакцие варалас йӑла пӗтменччӗ, редактора та ялан кӗвӗҫетчӗ. Материалсене Николай Григорьевича ялан тӗсевлӗ ӑнлантаратчӗ. Манӑн вара тӗрӗслӗхшӗн ҫине тӑма тиветчӗ.

Чухӑн чунлӑ партӗҫченсене манӑн шеллес килетчӗ. Редакцие пулӑшас чухне ура хурса пынӑшӑн, эпӗ нихҫан та вӗсем пирки пӗрремӗш секретаре элеклесе пӗлтермен, хӑйсене куҫран калаттӑм. Редакци вӑрттӑнлӑхӗсене каҫалапа арӑмне пӗлтерсе

тăнăшăн та Башкирова ăйăплас темен. Лермонтов итлетчĕ ĕнтĕ хăйĕн пăхăнаканĕсен çăхавĕсене, анчах ун хыççăн вăл мана хĕстермен те, çунтарман та. Тепĕр чух пушă вĕçĕ хăйсенех питрен çатлаттаратчĕ. Ăслă, çынна витĕр куракан, ăнланакан, шухăшламасăр алă çĕклемен, усăсăр çăвар карман ертӳçĕччĕ.

Кусем вĕсем манăн кулллeнхи вак-тĕвек ыйтусемччĕ. Тĕп ĕç манăн сарлака мăн йывăç çуртраччĕ. Хаçата витĕмлĕ кăларса райкомпа район совечĕн ĕçтăвкомне халăх хуçалăхĕпе культурине, социаллă аталанăвне малалла аталанарас тапаланура мĕнле те пулин ытларах пулăшас шухăш-тĕллевччĕ. КПСС XXIY сьезчĕ совет пичечĕ умне уйрăмах пысăк задачăсем кăларса тăратнăччĕ. Вĕсем пире те тӳрремĕнех пырса тивни çинчен обкомран та, райкомран та аса илтерсех тăраççĕ. КПСС обкомĕн пленумĕ «Советская Чувашия» тата «Коммунизм ялавĕ» хаçатсен ĕçĕ çинчен» йышăннине пире те ĕç малашлăхĕ вырăнне хума хушнă. Хаçат райком пекех ĕç коллективĕсем хушшинчи ăнлантару, йĕркелӳ ĕçĕ тăвать, капитализм çĕршывĕсенче пурăнакан çынсен сăнарне сивлесе совет çыннин сăнарне чи мала хурса çӳле çĕклет. Чи çӳлти шайран анакан агитаципе пропаганда юххинчен никам та пăрăнса юлма, ăна хирĕçле ишме пултарайман, ăсĕпе-шухăшĕпе килĕшмесĕр иккĕленнĕ пулин те, пурпĕрех анлă вăй хумĕпе умри тĕтреллĕ çутă малашлăхалла чĕннĕ, ĕнентерсе хăвшăн мар, чи малтан обществăшăн, çĕршывшăн кĕрешме хавхалантарнă халăха. Вунпĕр ял тата икĕ поселок совечĕсен çĕрĕ çинче тытăнса тăракан вун виçĕ колхоз тата вуншар предприятипе организацире, учреждениre ĕçлекенсене пирĕн ĕненмелле, чуна уçса çĕклентермелле, çитменлĕхе кураймасăр питлемелле вăй кăларакан сăмах-шухăш апачĕ вăхăтра памаллаччĕ. Çав тĕркĕшӳллĕ хавхалану кунĕсене хыçала хăварса, «Çĕнтерӳшĕн» ăса, пĕлĕве, вăхăта шеллемесĕр малаллах утрăмăр. Хăйĕн кĕрешӳри çитĕнĕвĕсене палăртса хаçат хĕрĕх хутчен чан çапрĕ.

Менелнике хатĕрленсех ирттертĕмĕр. Аванах. Парти райкомĕн ларусем ирттермелли анлă пӳлĕмĕнче савăнăçлă тĕлпулу-калаçĕвĕ пулчĕ. Пичетпе полиграфи ĕçĕсен комитечĕн пуçлăхĕ Афанасий Иванов, Пичет секторĕнчен обком ячĕпе Николай Дубинин, кӳршĕ районĕсен редакторĕсем, ытти хăнасем, ĕçялкорсем ăшшăн саламларĕç.

«Çĕнтĕрӳшĕн» хаçатăн ултă редакторĕ пĕрле пултăмăр: Никонор Павлов, Николай Чангин, Иван Тенюшев, Анатолий

Миронов, Герман Павлов тата эпĕ. Геннадий Мальцев Йĕпреçе пымарĕ. Мыскарисем маннăçман та, вăтанчĕ пулас.

Вăл вăхăтра банкет-ĕçкĕ-çикĕпе аташтарман та, менелник миçе-миçе çулта ирттермеллине те Мускавранах çирĕплетсе кăтартса панăччĕ те... Ăна пăхăнмах тивнĕ. Хальхи пек кашни çул аçтахалла шавлайман. Укçи-тенки те хĕсĕкчĕ. Милици, авă халĕ, чикке-мĕнне, намăса пĕлмесĕр, пилĕк пая пайланса, уяв хыççăн уяв тăвать, халăх кĕсйине çаратать. Хăналамалăх укçи-тенки те пурччĕ ĕнтĕ счетра, анчах ăна ниепле те илме юрамастчĕ. Манăн ăслă бухгалтер Павел Агеевич Уткин вăрттăнлăхне пĕлтерчĕ. Ĕç хучĕсем пичетлесе панă тесе «Трудовик» колхоза укçа куçартăмăр та, эрех-сăра туянма упакассисен кассинчен хамăр укçанах «чĕрĕлле» илтĕмĕр. Райком çумĕнчи ресторанта чухăн ĕçки турăмăр. Типографире ĕçлекенсем Трофимова печатница килĕнче пухăнчĕç. Вăл кивĕ пӳрт редакцин çĕнĕ çурчĕ çумĕнче халь те ларать. Эпĕ ресторанта хуравличчĕ, Максимов — хĕрарăмсен ĕçкинче. Хаваслăх вăхăчĕ иртсен, кама савăнăçлăрах та интереслĕрех пулнине аса илсе, кулаттăмăр. Уяв савăнăçĕн хуйхи манах лекрĕ çав. Тепĕр çулне комитет ревизорĕ Уткинăн ултавне тăрă шыв çине кăларчĕ. Хăй Йĕпреçре эрне ытла «Атăл шывĕнче» ишрĕ пулин те, тĕрĕслӳ актĕнче пирĕн «йăнăша» палăртмасăр хăвармарĕ. Портфельсĕр министр Иванов та, уявра юрласах ĕçрĕ, хăна кучченеçĕ илсе кайрĕ пулин те, редакторсен канашлăвĕнче: «Хаçат 40 çул тултарнине паллă тунă чухне Кузьмин финанс дисциплинине пăснă», тесе пĕлтерчĕ. Ун пек тумасан юрамасть пире, тесе шӳтлекелесе ирттерсе ячĕ Афанасий Михайлович ман пите юлташсем умĕнче хĕретнĕ хыççăн. Юрĕ, терĕм, эпир чăтма вĕреннĕ.

Çĕршыв аллă çулхи менелникне палăртма хатĕрленет. Мĕнпур ĕç-пуç çав паллă кунпа çыхăннă. Эпир те хамăр район çур ĕмĕрте мĕнле улшăнса çĕнелни çинчен тăтăшах çыратпăр. Василий Андреев, Николай Максимов, эпĕ хам та ватă çынсен пурнăçне район, республика, çĕршыв аталанăвĕн хĕрӳ тапхăрĕсемпе сăнарласа очерксем хайлатпăр, хаçатăн ятарлă кăларăмĕсене йĕркелетпĕр. Анлă пуху-семинар ирттермелли тапхăр хĕрсе пырать. Райком та çĕртме уйăхĕнче çак ыйтăва пленумра пăхса тухрĕ. Унта эпĕ ку тĕлĕшпе пуçлăхсен те ытларах çырмаллине, пире ĕçре пулăшса пымаллине аса илтертĕм. Те хăйсем çырма пултарайманнипе пирĕн умра намăс курас теместчĕç, те кахалланатчĕç, — йывăрччĕ вĕсенчен материал туртса кăларма. Семеновпа Башкирова çеç çыратчĕç.

Социализмла ӑмӑрту ӗнтӗ хаҫатри чи ҫивӗч темӑсенчен пӗриччӗ. Шупашкарсем те хаҫат сӑнне ҫавӑн шайӗпе хаклатчӗҫ. Йӗпреҫ районӗ Канаш, Вӑрнар районӗсемпе ӑмӑртатчӗ. Ӗҫ эрни вӗҫленнӗ хыҫҫӑн эпир ҫемьепе канаттӑмӑр. Шӑматкун каҫалапа Лермонтов пӗлтерчӗ: «Делегаци пуҫлӑхӗ пулса ыран Вӑрнара каймалла».

Хатӗрлентӗм. Ирпе райком шоферӗ Василий Михалч машинӑпа ҫитрӗ. Райком инструкторне Анатолий Миронова тата ял хуҫалӑх управленийӗн тӗп экономистне Василий Кузьмина лартнӑ. Вӑрнара ҫитсе саламларӑмӑр. Манӑн чап сӑмахӗ каламалла пулчӗ. Украинӑри Золотоноша районӗнчен килнӗ вӑрнарсен ӑмӑртаканӗсемпе ӑшшӑн калаҫрӑмӑр, ӗҫкинче ташларӑмӑр-юрларӑмӑр. Райхаҫат КПСС райкомӗн пӗр пайӗ вырӑнӗнчехчӗ те, ним пӑркаланмасӑрах итленӗ чи асли каланине. Кӳршӗ район элчисемпе тӑван района пуҫлӑх пулса пыни ентешсем умӗнче ятӑма ҫӳлерех ҫӗклерӗ пуль ӗнтӗ. Мана унта пурте журналист-редактор вырӑнне кӑна мар, ӑмӑртакан районӑн килпетлӗ ушкӑнӗн пуҫлӑхӗ вырӑнне хурса хаклани кӑмӑла кайрӗ, ҫапах та КПСС райкомӗн бюро членӗ-ҫке. Райком ӗҫне хаваспах туса пыратӑп. Лермонтов мана шанать иккен.

Канма каяс умӗн Шупашкарта «Ҫамрӑк комунистра» ӗҫленӗ чухне хамӑн пуҫлӑх пулнӑ Романова тӗл пултӑм. Василий Прокопьевич хаҫат ӗҫне алӑ сулса облсовпрофа вырнаҫнӑччӗ. Мана вӑл ют патшалӑха кайма сӗнчӗ. Хура тинӗс хӗррине путевка пур. Ку таранччен нихҫан унашкал вырӑнта пулса курманскер, хаваслантӑм. Арӑмпа пӗрлех курсах ҫӗрерӗмӗр Болгари Халӑх Республикинче. Ушкӑнри Тамара Чумаковапа унӑн ҫамрӑк, ҫӗнӗ упӑшкийӗ Захар Шапиро, Валентин Ковалев артист хӑйӗн ӗҫкӗҫмайрипе тата пир-авӑр комбиначӗн ӗҫченӗсемпе самай култарса тӗлӗнтертӗмӗр пӗрне-пӗри. Артисчӗсем, Куславккари автофургон завочӗн директорӗ Соловей ҫумне ҫыпҫӑнса, хӑйсем камантӑланчӗҫ, хӑйсене пир тӗртекенсенчен уйрӑмрах, ҫӳлерех тытатчӗҫ. Эпир Риммӑпа ҫӗнӗ туссем тупрӑмӑр, комбинатри ахаль ҫынсемпех, Верӑпа Андрей Павловсемпе, паллашрӑмӑр. Тӗлӗнмелле. Шупашкарта кайран пӗр кил хушшине лекрӗмӗр, туслӑх ку таранчченех пырать. Пир тӗртекенсенчен пӗри, чипер йӑрӑс чӑваш инки, туркка майлӑ хурарах тӑсланкӑ каччӑ-гида манерсӗр юратса пӑрахрӗ. Валентин ӑна Софийӑра пӗччен пурӑнакан амӑшӗ патне те илсе кайса кӑтартрӗ. Пирӗн ертӳҫӗ, обком ӗҫлевҫи Борис Назаров, сехӗрленсех ӳкнӗччӗ. Чӑвашпа пӑлхар

юратăвĕ Витоша тăвĕ тăрринчен анман пулсан вăл ĕçсĕр тăрса юлатчĕ-çке. Маншăн савăнăç пулчĕ. Эпĕ «Пĕр вырăн çеç» ятлă калав çырса пăрахрăм мускавалла пуйăспа хăлтăртаттарса пынă май. Йĕпреçе çитсен, журналист блокнотĕнчен «1000 километр Болгари тăрăх» çичĕ пайлă илем хайлавĕ шăрçаланчĕ. Унпа Романов туристсен йыхрав кĕнеки пекех усă куратчĕ.

Аякри çулçӳреврен таврăннă чухне, Мускавран тухсан, тĕтĕмпе чыхăнма пуçларăмăр. Çул тăршшипе торф çунать, йăсăрланать. Çунтарасла шăрăх кунсем. Панулми сăпасĕнче, çуралнă кун ячĕпе, тăвансене, юлташсене пăлхар коньякĕпе хăналарăм.

Çуралнă кун хыççăнах мана Лермонтов хăй патне чĕнчĕ. Максимов пирки ыйтса тĕпчет. «Юрать, ăнлантăм», — терĕ те, хăйне Куславккапа çыхăнтарма хушрĕ. Кампа калаçнине ăнлантăм. Юлташăм çинчен эп мĕн каланине Атăл хулин пĕрремĕш секретарьне Анатолий Михайлович Леонтьева тĕппипе пĕлтерчĕ, унтан трубкăна хучĕ те: шухăшлăн ыйтрĕ: «Кама лартăпăр ун вырăнне?» Куславккасене редактор кирлине эпĕ малтанах пĕлнĕччĕ-ха. Николай Николаевич пирки обкомрисем те йĕкĕлтесе илнĕччĕ. Леонтьевпа Лермонтов манăн юлашки сăмаха итлессе кĕтнĕ пулас эпĕ Хура тинĕсре шыва кĕрсе таврăниччен. «Хатĕр çыннăн ӳсмелле, малалла каймалла. Шыратпăр, тупатпăр», — хуравларăм хуçана.

Максимов вырăнтахчĕ. Райкомран тӳрех ун патне кĕтĕм те: «Сутса ятăм сана, тусăм», — терĕм. Мана куçран пăхса лĕх-лĕх кулчĕ вăл: «Ăçта?» «Куславккана». Мĕн хакпа?» «Çур литрла». «Ытла йӳнĕ-çке эп?» «Ачу нумай — тăваттă тан. Хĕрхенетĕп. Канихват илме юлмасть». «Ăнлантăм, чупатăп апла...» Куславкка сăмах-юмахĕ ун хăлхине кĕмесĕр пулманах ĕнтĕ.

Вăйлă сылтăм алă çумран çухални манăн ĕçе тӳрех йывăрлатассине эпĕ ăнланнă. Анчах, мĕн тăвăн? Николай Максимовпа эпир хаçата пур енчен те йĕркелесе çитернĕччĕ. Çыннисем те ăна хăнăхнăччĕ. Вăл пиртен кĕçех уйрăлассине пĕлсен, чиперккесенчен тахăшĕн куçĕ те шывланчĕ. Туйăм кӳлли хумханать-çке, тăкăнать.

Ăшри пушарпа пĕрлех вăрман та çунма пуçларĕ. 1972 çулхи авăн уйăхĕн 27-мĕшĕнче Йĕпреç халăхĕ, вăл шутра эпир те, хăрушлăха хирĕç кĕрешĕве тухрăмăр. Пĕр кун кĕреçепе çĕр чавнă хыççăн, эпĕ Максимова урăх вăрмана ямарăм, хаçат кăларма хăвартăм. Редакципе типогрфин пĕчĕк ушкăнĕ, черетленсе, поселокра тĕтĕм çăтрĕ.Ултă кун иртен пуçласа каçчен çулăма лăплан-

тартăмăр. Вăрман çунни çинчен каярахпа эпĕ «Виçĕ юман» повĕçре тĕплĕн çырса кăтартнăччĕ.

Пушар хыççăн манăн редакцие чупмаллаччĕ, мĕншĕн тесен Николай Николаевич Куславккана ĕçлеме тухса кайнăччĕ. Çурçĕр иртиччен те хаçата кăларма алă пусса параймастăн тепĕр чухне. Ирпе — каллех вăрмана...

Пушар сӳнтерес енĕпе районта чрезвычайлă комисси тунăччĕ. Унăн членĕсем, пуçлăхра ларакансем, пурте «За отвагу на пожаре» медаллĕ пулчĕç. Йăпăлтатса, банк управляющийĕн кăкăрĕ çине те çакса ячĕç ăна — кĕреçепе хăйăр сапса çӳренĕшĕнех. Талăкĕ-талăкĕпе, путлĕ çывăрмасăр, канмасăр пушар сӳнтернĕ, хаçат кăларнă редакципе типографи ĕçченĕсене наградăна тивĕçлисен йĕркине кĕртмерĕç. Çав ыйтăва татса панă чухне мана, райком бюровĕн членĕ пулин те, ларăва чĕнме «маннă». Ахаль чухне пĕр ларуран та хăварман.

Тĕксе панă хушма ĕç хушăнсах пыратчĕ. Чулхуларан киличченех мана Вырăс Тимеш енчен район Советне депутата суйланăччĕ. Пĕрремĕш сессире социализмла законлăхпа обществăлла йĕркелĕхе сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси председательне çирĕплетрĕç. Самай кăсăклă, каварлă, кăткăс ыйтусем татса пама тиветчĕ. Вĕсенчен пĕри ытларах асра юлнă. Вăтаелĕнче тĕне кĕмен чăвашсем сыхланса юлнă. Çавсен пĕр йăх тымарĕнчен шăтса ӳснĕ Велит Керимович Керимов самай ăслă, пултаруллă экономистертӳçĕ шайĕнчеччĕ. Председателе суйласан, хăйĕн тăван Калинин ячĕллĕ колхоза республика шайне кĕртсе яма вăй çитерчĕ. Фермăсене чул çуртсемпе шуратрĕ, культура çурчĕ тата ыттине те капмарлантарса лартрĕ, районта чи малтан ялсене водопровод кĕртрĕ. Хăйне майлă чурăс, ырă кăмăл енчĕкне пуриншĕн те йăпăр-япăр уçман, çамрăк чиперккесемшĕн икĕ пуçне те хума хатĕр вăтам пĕве çитеймен çирĕп сывлăхлă арччĕ. Çын тивĕçлĕхне халăх умĕнче кăтартма пултаратчĕ. Çавăнпа ăна района ертсе пыракансем çунакан пушара сӳнтерме унта-кунта тĕкме хатĕрччĕ. Кĕлĕмкассисем хăйăр ăшĕнчен чакаланса тухайманнине кура Керимова «Красный фронтовик» колхоз председательне суйлаттарчĕç. Юхăннă хуçалăхра йĕрки те юхăнать. Хуçа çирĕплĕхне тӳрех кăтартрĕ Велит Керимович. Эпир те унăн ырă енĕсене палăртса, колхозăн çирĕпрех утăмĕсене кăтартса, хавхалантармалла мухтаса илтĕмĕр. Улшăнăвĕ райкома та çураçтарчĕ. Пĕрремĕш секретарь пӳлĕмĕнче Керимов, чи хĕрринчи пукан çине чалăшшăн сĕвенсе ларатчĕ те, Лермонтова куç айĕн пăхса итлетчĕ.

Правленийĕ хăйĕн мусульмансен çурчĕн хĕрарăмсем пурăнакан пайĕ пекехчĕ. Кĕлĕмкассипе Туçан пиçсе çитнĕ тулли кĕлеткеллĕ чи хитре хĕрĕсемччĕ. Вĕсем çине ăмсануллă сăнама та памастчĕ пире, ясар куçĕпе кĕвĕçӳллĕн кулкаласа, часрах илсе тухса каятчĕ.

Камантланине, вĕрентнине, улăштарнине хирĕç яланах хирĕçтăру пур. Керимова та унтан-кунтан вăрттăн сăхма пуçларĕç курăнать. Анчах хăрас йăла çуккăччĕ ун. Кастарман вăкăр пек куçа çавăрттарса пăхатчĕ те, мăйракасăрах тирсе илсе утăнтарма пултаратчĕ. Хăйĕнчен кăшт сӳрĕкрех пуçтах инженер пурччĕ унăн. Правлени ларăвĕнче иккĕшĕ «тытăçса» ӳкнĕ. Чее Велит Керимович, лару-тăрăва вăрттăн, уççăнрах татса пама, киккирикĕ çĕкленнĕ «автана» коридора тухма пуç сĕлтет. Лешне вăрттăн, хăй майлă юсанă хыççăн вăл, хашкани иртсе каймасăрах, пӳлĕме кĕрсе, ларăва малалла шутарать.

Чиперех пурăнатпăр, районта «ЧП» тени хыпкалантармасть. Ĕç шавĕнче райсовет ĕçтăвкомĕнчен чупса çитнĕ шăнкăрава хăлхана чикрăм. Районăн иккĕмĕш пуçĕ, ĕçтăвком председателĕ Турханов хăй патне кăшт калаçма чĕнет. Алексей Васильевич ман пата пĕр ыйтупа кăна шăнкăравланине хăнăхнăскер, эпĕ ун патне тĕлĕнерех кайрăм. Павел Агеевич Уткин текен финансист-ăславçă вăрçăччене шут ăстипе палăрнă, районти аслă организацисенче тĕп ĕçре хăйне ыррине кăтартнă. Пыр юххине шĕтĕрнекпе картласа пынă вăхăтрах вăл хăватлă вăй чун шăтăкне йăштаса аслатнине сисмен пуль çав... юлашкинчен редакцинчи пек пĕчĕк бухалтерин дебет-кредит хуллинчен тытса юлнăччĕ. Улталаман, таса чунлă, ялан хамăр çынсен пурнăç шайĕшĕн хыпкаланма пăрахман бухгалтер пулнăшăн эпĕ ăна ыр кăмăлне уçса пама пулăшаттăм. Йĕпреçсем вара, те пуйăс тĕтĕмĕпе хуралса юлнăран, хурамккарахчĕ. Павел Агеевич та çуралнăранпах питне çуман сăнлăччĕ. Эп редакцирен каймасăр вăл манран уйрăлмастчĕ, ăçтан та пулин çитсе ман ума сăнарланса тухса тăратчĕ. «Каçарăр мана, Владимир Прокопьевич, эпĕ пурпĕрех сире хамăн çамрăклăх юратăвĕ çинчен каласа памасăр киле каймастăп», — тетчĕ те... Юратăвĕ унăн юнашарахчĕ, редакцирен виçĕ çурт аяларах, авалхи икĕ хутлă çуртра, районти тĕп перекет кассинчеччĕ: унăн пуçлăхĕччĕ. Вăрман поселокĕнче унашкал хăватлă хĕрарăмсем модăраччĕ те. Уткинăн та савнийĕ чи курăмлисенчен пĕриччĕ, хăйĕнчен метр çӳллĕреххиччĕ. Алексей Васильевича Уткин ĕç вăхăтĕнче пӳлĕмсем тăрăх кукалесе çӳрени килĕшместчĕ, вара вăл мана бухгалтерна вырăна ларт, тесе телефонпа чăрмантаратчĕ. Хальхинче урăх ыйту иккен.

Турхановсем, влаçра нумай çул хăйсене пысăк пуçлăх ятне илттерме тата пăхăнтарма, хăратма вĕренсе çитнĕ ăслайсем, пăхăнакансене итлеттермелли сÿсленчĕк пушăпа хăмсарма самаях хăнăхса çитнĕскерсем, хăйсем татса памалли ыйтусене те урăххисем çине йăвантарма хатĕрччĕ. Вĕсен хăйсен таса юлмаллаçке, мĕншĕн тесен ун чухнех пуçлăхсен кучĕ пăхлăччĕ. Ирсĕр кута çулласа тасатакансем черетпе тăратчĕç мĕскĕнленсе, анчах та урараң ÿкерекен хаяр шăрша эпир ăша хывман. Алексей Васильевич мана Керимов ыйтăвне татса пама хушрĕ. Ман ушкăна райком секретарьне Христиана Башкирована тата милици пайĕн начальникне Александр Кондратьева кĕртнĕ.

Милици машинипе кăшкăртса-хăратса Кĕлĕмкассине кĕрсе кайрăмăр. Правленин пăтăрмахлă ларăвĕнче пулнă çынсене пурне те йĕркипе лартса тухнă Керимов. Эпир, виçĕ ушкăна пайланса, çынсемпе калаçса, РОВДн официаллă хучĕ çине, тĕрĕслĕхе çыртарса, алă пустаратпăр. Александр Ивановича тÿрех каларăм: «Пирĕн следстви ирттерме кунашкал права çук. Керимова айăплама никам та килĕшмест». Велит Керимович, район Совечĕн депутачĕ пулнă май, пирĕн ĕнтĕ ăна, райсовет сессийĕнче ирĕк илтерттерсе, суд тенкелĕ çине лартма пулăшмаллаччĕ. Мĕнле-ха? Башкирова хĕрарăмсене хăй майлă, Керимова хирĕçле алă пустарма пултарнă. Çапах та тĕне кĕмен чăваша райком хĕресне тыттараймарĕç. Курман-илтмен чăтлăхра туп-ха шыраса чăнлăхне.

Çăлса хăвартăмăр ачана. Шел, районта нумаях тытăнса тăраймарĕ Керимов. Ячĕ юлчĕ. Керимов гаремĕнчи «хĕвелсем» халĕ хăйсен çĕнĕ арăсланĕсене ăшăтса çывратаççĕ пуль, Велит патша мăнукĕсене ÿстерсе, сÿнсе пыраççĕ пуль.

Анлă çĕршывăн менелник çулĕнче аллă хăлаç тулли хăпартланупа тутă пултăмăр. Мĕнле кăна сăмах-юмах çăмахне çимерĕмĕрши? Юпа уйăхĕнче Атăлпа Урал тăрăхĕнчи 21 облаçпа республикăри районсемпе хуласен тата пĕрлештернĕ хаçатсен редакторĕсене Чĕмпĕре пухрĕç. «Пуçкăшăль» хăна çурчĕн пĕлĕтпе тан хутĕнче виçĕ кун пурăнтăмăр. Йĕпреçрен Канаша пуйăспа çитсен, «Коммунизмшăн» хаçат редакторĕн уазикĕпе кайрăмăр Ленин çĕршывне. Тĕрĕссипе Владимир Ильичăн тăванлăх çĕрĕ Чулхула кĕпĕрнинче. Ульяновсен йăхтымарĕ хальхи Арзамас енче сарăлнă. 1870 çулта Илья Николаевича тăватă уйăх каярах Чĕмпĕре куçарман пулсанах, тĕнчене кисретнĕ тĕлĕнтермĕш ача Чулхулара çуралатчĕ. Эпĕ те хамăн аташ çуралса ÿснĕ пÿртре, гимназире вĕреннĕ класĕнче, унпа çыхăннă урамсенче пулса хăпартлантăм.

«Чĕррисенчен те чĕрĕрех», «Сехет йĕппи вăхăт шутлать» очерксем çырнăччĕ çулпуç пурнăçĕн хавхаланăвĕпе чĕрĕлсе.

Канаш редакторĕ Василий Никитич Никитин маймар ытла ырă кăмăлласкер пулчĕ. Хулакомăн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕнче ĕçлесе çынсемпе мĕнле тытмаллине вĕреннĕ чăвашăн туйăм хутшăнăвĕсем тӳрех хăй çывăхнелле туртрĕç. Тепĕр партĕçлевçĕ, Вăрмар райкомĕн пай пуçлăхĕнчен редактора куçарса лартнă Ванифатий Андреевич Андреев хутшăнчĕ пирĕн çума. Виççĕн ĕнтĕ нимле лавккара та хăрамалла марччĕ. Çавăнтанпа пирĕн туслăх хамăр хушша хупăнчĕ. Вĕсем, паллах, журналистсем марччĕ, пурпĕрех хаçата ăнланатчĕç. «Хĕрлĕ ялавпа» «Коммунизмшăнах» вăй-халне парса малтисен ретĕнче пыратчĕç. Кашни канашлура, семинарта, курсра пĕр-пĕринчен уйрăлман. Чăвашсенчен Чĕмпĕрте Никитина тухса калаçтарчĕç. Уншăн унăн пире ресторанта пыр кăшăлĕ çавăрмалла пулчĕ.

Кунашкал тĕлпулусенче вăхăта усăсăр ирттермен, киле таврăнсан, çĕнĕ хавхалануллă шухăш-ĕмĕтпе ĕçе тата ытларах вăйлатас килетчĕ.

1972 çулхи раштавра Йĕпреçе КПСС обкомĕн хуравлă çынни пулса «Пионер сасси» редакторĕ Исаак Пантелеймонович Кириллов тата Антип Николаевич Николаев килчĕç. Ĕçялкорсен районти пухăвне çӳллĕ шайра ирттертĕмĕр. Унăн ĕçне пуçласа вĕçне çитиччен парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Николай Григорьевич питĕ кăсăкланса хутшăнни пирĕн хаçатăн курăмлăхĕ мĕнлине аван кăтартса пачĕ. Лермонтов ĕçялкорсемпе чунтан калаçрĕ. Ĕçялкорсен республикăри сьездне кайма 9 делегат суйларăмăр: журналистсен районти пуçламăш организацийĕн ертӳçине Василий Андреев-Хурамала, район больницин фельдшерне Василий Варганова, Черноречкăри 8 çул вĕренмелли шкул учительне (халĕ академик) Василий Кириллова, «Смычка» колхоз бухгалтерне Галина Краснована, Хурамалти 8 çул вĕренмелли шкул ачине Валя Кузнецована, «Путиловка» колхозри выльăх самăртакан Николй Пакова, райкомăн пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхне Анатолий Семенова, Ленин ячĕпе хисепленекен колхозри ревизи комиссийĕн председательне Вячеслав Сорокина тата мана. Пухура ĕçялкорсен ялан ĕçлекен шкулне çĕнетсе йĕркелерĕмĕр.

Николай Максимов Куслаккана пулă тытма тухса вĕçтернĕ хыççăн эпĕ чылай шар куртăм. Йĕрке тăрăх пĕрремĕш секретарьтен ыйтмасăр район чиккинчен нумайлăха каçса кайма юрамастчĕ. Эпĕ хăйсене кирлĕ чухне яланах ирĕк памастчĕ. Шупаш-

кара-мĕне çĕр выртмалла кайсан, хаçатшăн шухăшласа тăнран тухаттăмччĕ. Унта çиччас мĕн те пулин сиксе тухать. Пĕррехинче обкомран час таврăнаймарăм. Тӳрех редакцине кĕтĕм. Хаçат çапаççĕ. Тытса пăхрăм та пĕр листине... «Будапештра коммунистсен партизанĕсемпе рабочи партийĕсен руководительсен канашлăвĕ ĕçлеме пуçланă» тесе вулатăп. Явапли, Николай Перлов, çĕнĕ юратăвĕпе лили чечекĕ шăршласа тăрать. Чарса лартрăм, 3 пин тиража касма (под нож) хушрăм, «партизанĕсемпе» вырăнне «партийĕсемпе» тесе тӳрлеттерсе, сехет çурăран тин малалла çаптартăм.

Эпĕ Максимов ыйтăвне татса панă хыççăнах хама пулăшаканĕ кам пуласси пирки Лермонтова каланăччĕ. Вăл Трак тăрăхне вĕренсе çын пулма кайнă Геннадий Кузнецовчĕ. Красноармейски хаçатне вырнаçма та хамах пулăшнăччĕ ачана. Редакторĕ Анатолий Толмасов ăна Йĕпреçе яма килĕшрĕ. Кузнецов авланма ĕлкĕрнĕ, ачапчаллă та пулнă. Хваттер ыйтăвне пĕрремĕш секретарьпе тӳрех татса патăмăр. Николай Николаевичăн виçĕ вӳлĕмлĕ хваттерне манăн куçмалла, ирĕкленнĕ ман хваттере Кузнецова памалла. Вăл çаплах пулса тухрĕ. Татса памалли тепĕр ыйту юлнăччĕ. Редактор заместителĕн парти пурнăç пайне ертсе пымаллаччĕ. Геннадий Васильевич Красноармейскинче тем шăхăрса пурăннă, кĕмен партие. Николай Григорьевич çапла сĕнӳ пачĕ: «Хăйсен парторганизацийĕнчен виçĕ рекомендаци илсе килтĕр те, хăвăр патра кандидата илетĕр, бюрора çирĕплететпĕр». Çавăн пекех турĕ Кузнецов, çемйине куçарчĕ, ĕçлет ман çумра. Пуху ирттертĕмĕр, ыйтăва коммунистсен персональнăй ĕçĕсене малтан пăхса тухакан комисси али витĕр кăлартăмăр. КПСС райкомĕн бюро ларăвĕнче парти членĕн кандидатне илни çинчен Кузнецова Лермонтов алă тытса саламларĕ. Хĕпĕртерĕмĕр. Ахух, ирпе ман пата ĕçе райком бюровĕн членĕ, районти халăх контроль комитечĕн председателĕ Анатолий Кушев шăнкăравларĕ: «Володя, ĕнер эпир йăнăш тунă. Кузнецов ыйтăвне татса панă чухне пĕр сасă çитмен». Астурăм, вăрман комбиначĕн директорĕ Анатолий Шереметьевваскавлă ĕçпе ыйтса тухса кайнăччĕ. Сасăлавра ăна та шута хунă. Апла тума юраман. Анчах Лермонтова пулăшаканĕ Александров та ларура малтан шăп-шăпăрт ларчĕ, вара вăл бюро йăнăшне кайран «тупса палăртнă». Хура çĕленех çав. Николай Григорьевич, йăнăша ăнлансан, республикăри парткомисси председателĕнчен Черновран сехĕрленсе ӳкнĕ. Бюро членĕсене хăвăрт пухрĕ те вăл ĕнерхи йышăнăва пăрахăçлаттарчĕ.

Çунса кайрĕ ман Кузнецов. Пире хирĕç тăраканĕсем пурччĕ çав. Каллех ман заместитель шырамалла. Редакци штатĕнче кăшт куçарусем турăм та, Геннадий Васильевича явапла секретаре лартрăм.

Темиçе çын та тупрăм хамăн çум юлташ-ĕçтеш пулма. Лермонтов килĕшет, Башкирова хирĕçлет. Николай Григорьевич йăлăхсах çитрĕ пулас, иксĕмĕре юлашки эрне вăхăт пачĕ. Ман кандитатурăсемпе идеологи секретарĕ мĕншĕн килĕшменнине-иккĕленнине эпĕ малтанах туйнăччĕ-ха, çавăнпа урăх никама та шырамарăм, хушнă вăхăт иртсен, Лермонтова пĕлтертĕм: «Тупрăм». «Кама?» «Башкирова». Христина Сергеевна тахçанах кĕтнĕ иккен эп çапла каласса, тутине пăркаласа мăк-мăк тукаларĕ те, «Те пултарать ĕнтĕ, тытăнса пăхтăр апла», — терĕ. Çав кунах приказ çыртăм, райком бюровĕ Василий Сергеевича редактор заместительне çирĕплетрĕ. Башкиров хăй те пĕртте хирĕç пулмарĕ.

Бюро членĕ пулнă май, райком штатĕнче тăнă пекех ĕçленĕ. Хăш-пĕр инструкторсем машина кĕтсе çуршар кун чӳречерен сăнаса ларатчĕç, сехет çине пăхса пиллĕкре килĕсене уттаратчĕç. манăн, райком хушăвне пурнăçласа кун irттерне хыççăн, тĕп ĕç редакцире тин пуçланатчĕ. Савăнăçлă ларусенчен те, арăма лартса хăварса, васкавлă информаци пама типографине чупаттăм. Президиумсенче те, тĕрлĕрен канашлусемпе тĕлпулусенче те, эпĕ яланах тӳрех набора ямалли материал çырнă. Райком бюровĕнче кăсăклă, çивĕч ыйтусем нумайччĕ. Чи кирлине, витĕмлине суйласа илсе, çынсене итленĕ, ыйтăва татса панă çĕре хутшăннă вăхăтрах манăн пуç кăмакинчен илем çăкăрĕ пиçсе тухатчĕ. Парти докуменчĕсемпе сăнарлă хăтланнăшăн Александровсем манпа каллех килĕшесшĕн марччĕ, Лермонтов умĕнче наркăмăш сирпĕтсе илетчĕç-илетчĕçех. Юрать Николай Григорьевичĕ, вĕсене тăнласа итленĕ пек тăватчĕ те, кайран мана лăплантаратчĕ: «Йывăр ан илĕр. Пуç мимийĕ хытса ларнă вĕсен. Эпĕ сире тӳрех ăнланнă, шаннă. Хăвăр пуçупа ĕçлĕр».

Çамрăк чух Лермонтов ветеринар пулнă. Манса кайман вăл теорипе практикăна та. Пĕррехинче бюрора ларатпăр. Ялхуçалăх министерствинчен килнĕ аслă ветеринар пирĕн районта вылькăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешессине паянхи наука шайĕнче туса пымаççĕ тесе чиперех ятласшăн. Тавлашса кайрĕç. Скальпель тытманни çеç. Аслă пĕлӳллĕ сакăр тухтăра фельдшер çĕнтерчĕ: парти мăлатукĕпе çапса та мар, ăспа, пĕлӳпе. Ертӳçĕ-психолог пулмах

çуралнă тесе шухăшлаттăм Лермонтов пирки. Темĕн тĕрлĕ кăткăс ыйтусене те çăмăллăн татса пама мехел çитеретчĕ. Çынна шанатчĕ, ĕненетчĕ, суйнине-улталанине юратмастчĕ. Халăх хуçалăхĕпе культурин районти пуçлăхĕсемпе пĕр кашăкран шӳрпе çиме те, пĕр стаканран ярса пыр чӳхеме те хăрамастчĕ, вăтанмастчĕ. Кайран пурпĕрех пĕрне те пуçран шăлмастчĕ. Хăнăхнăччĕ ĕнтĕ эпир унăн ĕç мелне-меслетне. Унран çăмăллăх кĕтсе ланмалли çук, хăвăннах туртмалла кӳлнĕ лавна.

Райком аппаратĕнче те халăха пăтратакансем пурччĕ, вĕсем хăйсене хăйсем мăнна хурса, ĕçлĕ вырăнĕпе мухтанса-çĕкленсе, пурне те пуççаптарасшăн хăлаçланса, районта миçе çынна макăртмарĕç пуль. Çав хушăрах хăйсен тăванлăх туйăмне Йĕпреç хăйăрĕпе пăтратса ылтăнлантарма та манмарĕç, тăванĕсене тупăш сапакан çĕре вырнаçтарчĕç. Пĕчĕкрех пуçлăхсене сехĕрлентерсе пуякансен шутĕнче вĕсем çеç мар, тӳре-шарасем татах та пулнă. Мĕнпур чаплă япала вăрманпомхозра тар тăкакансем валли ятарлă килсе тăратчĕ. ОРС çывăхне кĕме пултарнă чиновниксем мĕн кăна хăтланман пуль. Хăйсене урăх района е республика шайĕнчи кантура куçарнă чухне машини-машинипе ковер е ытти «дефицит» турттарса кайнине кайран мана «вăрттăн» пĕлтеретчĕç. «Эсир мĕншĕн пирĕнтен нимĕн те ыйтман?» — тетчĕç. «Пирĕн валли лавккара пулнă, сĕрсе панине илме хăнăхман», — тесе мăнкăмăллăн хуравлаттăм.

Эпĕ пичетре ĕçлеме пуçличчен кашни районтах пĕр хăрушă çын пулнă. Главлит, чăвашла каласан, пичет хăрушлăхĕн пушши — цензорĕ. Вăл вуласа, алă пусса штамп лартса памасăр пĕр сăмах та хаçатра е радиора тухайман. Халăх шухăшлавĕн пограничникĕсем пире хамăр çĕршыв тĕнчи йăтăнса аничченех чикĕ урлă каçармасăр нушалантарчĕç-ха. Анчах пирĕн вăхăтра редактор район пичетне хăех аласа, алари мĕнле шăтăкран мĕн-мĕн кăларма юраманнине сăрхăнтармалли инструкципе усă куратчĕ. Çавăнпа унăн хуравлăхĕ пысăкчĕ ĕнтĕ. Редакторпа юнашарах район цензорĕ пулма хăтланакансем те сиксе тухатчĕç. Ăна эпĕ райкомăн идеологи комиссийĕнче ĕçленĕ май лайăх туйрăм. Ялан çавăнта йĕкĕлтӳллĕ пăтрав ыйтусем кĕртсе яма хăтланатчĕç. Эйпеç вăтам шкулĕнче ĕçлекен Роман Чепунов роман çырнă пулнă, чăтаймасăр сыпăкĕсене юлташĕсене вуласа кăтартнă. Вĕрентекен юрăхсăрсен сăнарĕсенче тахăшĕсем хăйсене шыраса тупнă. Çăхав çырса, райкома çитернĕ. Чепунова икĕ хутчен комиссине чĕнтерчĕç, романа пире вулаттарăр, тесе ыйтрĕç. Пусахласах çитерчĕç учитель-писателе. Эпĕ

çакна хирĕçлерĕм, мĕншĕнне тĕплĕн ăнлантарса патăм. Çыравçа инкекрен хăтартăмăр. Романăн романĕ каярахпа «Тăван Атăл» журналта чиперех пичетленсе тухрĕ, вулавçăсем хушшинче тивĕçлĕ хак илчĕ.

Мана «Советская Чувашия» хаçата ĕçлеме куçарнă хыççăн, эпĕ Йĕпреçпе калаçнисене телефонисткăсем райкомăн пĕр пуçлăхне вăрттăн итлеттернине каярахпа мана почтăри юлташăмсемех хыпарларĕç.

«Çĕнтĕрÿшĕн» хаçатра пичетленсе тухмалли манăн çивчĕ материалсене пичете пама хатĕр полосасенчен райкомăн çав «хисеплĕ» «цензорех» кăларттарни те пулнă. «Мĕнле-ха капла райком тĕрĕслемесĕр кăлармалла хаçата?» Çĕнĕ редакторăн çак пусмăра хирĕç тăма вăй-халĕ çитеймен пулас. Малтанах сехĕрленнĕ те пуль вăл. Унашкал хăтланса пурăннă каппайчăксен чыссăр ячĕ халĕ те тасалса пĕтмен-ха Йĕпреçре.

Тепĕр кăсăкларах ĕç асран каймасть. Вăрманти чăвашсемпе ирçесем тахçантанпах кÿршĕллĕ туслашса пурăннă. Ăнланусăр йĕрке юхăмĕ Йĕпреç станцине те çапăнса юлчĕ. Каллех пĕрлештермелле колхозсене. Райком бюровĕпе райсовет ĕçтăвкомĕ çапла йышăнчĕ. Унран иртейместĕн. Башкирова Кĕтне тăрăхĕнче эрнипехирттерчĕ чăвашсемпе ирçесене пĕр кантурта лартса пĕр эрелпе ĕçлеме ăнлантарса. Пысăк ĕç турĕ. Пĕрлехи пухăвĕ пулмалли çурхи кун мана Башкирова хушать: «Сирĕн Чăвашрадио корреспонденчĕсене кĕтсе илмелле те, вĕсемпе çÿресе пулăшса памалла. Çавна пурнăçламасăр эсир ниçта та каймастăр», — шăтăртаттарнипе шăл сийĕ те тĕпренчĕ пулмалла унăн. Эпĕ ăшра лăх-лăх кулса: «Христина Сергеевна, шупашкарсемшĕн эпĕ мар, эсир хуравлă, ку енĕпе сирĕн мана камантлама нимле правă та çук, эсир те бюро членĕ, эпĕ те. Ĕнер пĕрремĕш секретарь Ирçе Çармăса кайма каланă, эпĕ ăна пурнăçлатăп. Тавтапуç ырă сĕнÿшĕн», — терĕм лăпкăн. Çав вăхăтрах Лермонтов хăйĕн пÿлĕмĕнчен тухрĕ те: Вĕçтертĕмĕр, Владимир Прокопьевич», — тесе мана хăйпе юнашар лартса кайрĕ.

Пĕрлештертĕмĕр ирçесемпе чăвашсене «Çăнĕ вăй» колхоза. Хастар ĕçлерĕ Николай Трофимов ирçе председательте, анчах пĕрлĕх нумая каймарĕ, икĕ халăхăн чун-чĕре йăшăлтатăвĕ шыв пекех шăтăк тупрĕ, пĕвене татса ячĕ.

Ыркăмăллăхăн тымарĕ тарăн, тавĕ ĕмĕр. Йĕксĕклĕхĕн тымарĕ ăшăх, çĕрет, усала куçать.

Ман пата çав çуркунне чăваш чĕлхин çуначĕсем вĕçсе килчĕç. Университетра журналистика майĕсене вĕренекен «Тенюшев ачи-

сене» унччен эпир ахалех хурланă иккен. Вăрнарти Виталий Родионов, Элĕкри Вениамин Павлов, Канашри Петр Кузьмин тата Николай Прокопьев ман алла лекрĕç. Практика текен вăхăтра ман вĕсене хаçат çатми çинче ăшаласа илмелле. Асăрханса пăхаççĕ ман çине. Эпĕ те вĕсене сăнатăп. Хăш-пĕр редакторсем пек читлĕхе хупмарăм вĕсене, тӳрех ирĕклĕх уççи патăм: ĕçлĕр, вĕçĕр! Виççĕшĕн сăнарлăх çуначĕ аталанчĕ. Прокопьев милици çулне суйласа илчĕ, полковнике çитрĕ. Шăпа камăн мĕнле вĕт.

Чулхулара вĕреннĕ чухнех манăн хам алăпа хаçат туса кăларас ĕмĕт çуралнă пуль çав. Тем тĕрлĕ шухăшлавра халăхăн йăлайĕркине, çынсен хутшăнăвĕсене, ăс-пуç техĕмне çӳлерех çĕклес килетчĕ, çавна май пĕрмай пĕр тĕллев канăç пами пулчĕ: «Йĕпреç хаçатĕнче «Культурăна юратакансен клубĕ» уçмалла». Пуçларăм эпĕ ăна, анчах ку рубрикăна тытса пыма пултараканни хамăн ачасенчен никам та çукчĕ. Иван Ахратăн чăваш инструменчĕсем çинчен çырнă паха хайлавĕсене пичетлерĕм... «Кушлавăш çумĕнчи Хураçырма ачи Родионов çеç пултарать ку ĕçре», — тесе шутларăм. Лайăх кăларăмсем патăмăр культурăна чăннипех кăмăллакан, юратакан, ăнланма пуçлакан çынсем валли Виталий Григорьевичпа. Петĕр Кузьмин халĕ «Тантăшра» хаçат тантăшĕсене хатĕрлет, Виталий Родионов Чăваш патшалăх университетĕнче илемписемпе сетнерсене чăваш чĕлхине чăмлама, чăваш культурине вĕрентет. Манмаççĕ мана хăйсене хаçат çулĕпе пĕрле утма хăнăхтарнăшăн. Шанчăклă утăмра тăван чĕлхе шанăçĕ те пур. Вениамин Павловĕ хăйĕн Элĕкĕнчех юлчĕ. Çырма пултаракан ачах. Темшĕн шупашкаралла тухма шутламарĕ, ял чирĕпе хавшарĕ.

Хаçатăн, редакторăн пулăшаканĕсем-тусĕсем нумайччĕ. Чăваш Тимеш каччине Василий Константинович Гордеева типографире мастерта ĕçлеттертĕмĕр. Чунĕ çĕртен уйрăлмарĕ, ялах тапрĕ. Ялхуçалăх институтĕнче вĕренчĕ, «Ибресинский» совхоз директорĕнче тата ытти çĕрте пуçлăхра нумай ĕçлерĕ. Вăрманпромхоз директорĕ Анатолий Степанович Шереметьев, Буинскри комбайн пайĕсем кăларакан завод хуçи Расик Садыкович Алимов, Липовкăри вăрман заводне ертсе пыракан Николай Федорович Козлов, районти çыхăну уйрăмĕн начальникĕ Николай Григорьевич Григорьев, Йĕпреç чугун çул станцийĕн начальникĕ Иван Павлович Петров, райпо председателĕ Василий Иванович Абрамов, Йĕпреçри вăтам шкул директорĕ Федор Гаврилович Ильин, Пучинкери вăтам шкул директорĕ Николай Андреевич Андреев, интернат-шкул директорĕ Николай Алексеевич Анд-

реев, парти райкомĕн пай пуçлăхĕсем Семен Тимофеевич Яковлев, Анатолий Васильевич Семенов, халăх контроль комитечĕн председателĕ Анатолий Яковлевич Кушев, «Трудовик» колхоз председателĕ Антон Григорьевич Шордеев...

Уйрăмах ман кăмăла уçса яраканĕ Патăрьел тăрăхĕнчи Каншелтен ĕçлеме килсе Йĕпреç тымарĕ янă Пантелеймон Михайлович Ермошкинччĕ. Райком бюровĕнче е пленумĕнче вăл ялан çĕнĕлле калаçнипе çынсене тĕлĕнтеретчĕ. Унăн яланах хамăр патра тума ĕлкĕреймен темскер тупăнатчĕ. Уншăнах хаçатра ятарлă рубрика уçрăм. Обществăна, халăха, ĕç коллективĕсене ертсе пырассине мĕнлерех улăштарса çынсене усăллăрах тумалли шухăшĕсĕнĕвĕ пуç туллиехчĕ ĕнтĕ. Вунă номерте пичетлесе, вĕсене вулакан патне çитертĕм. Ермошкин статйисене Лермонтов кашни пуçлăха вуласа шухăшлама сĕннĕччĕ. Уазикĕпе кĕрлеттерсе çитетчĕ те вăл редакци умне, мана лартса каятчĕ. Ялсем тăрăх çӳреттĕмĕр. Колхозсен техники мĕнлине вăл хăй куçĕпе курса хаклатчĕ, инженерсемпе техниксене, механизаторсене вĕрентсе хăваратчĕ. Литературăпа искусство ыйтăвĕсем уншăн çăкăрпа танахчĕ. Анлă тавракурăмлă ăслă пуçлăх-ертӳçĕ эпĕ урăх Йĕпреçре тĕл пулман. Ахальтен мар вăл каярахпа, хăйне райсовет ĕçтăвкомне ертсе пыма шансан, райком пулăшнипе, чаплă музей йĕркелерĕ, район хулине капăр сăн кĕртрĕ. Унăн сăнарне «Ашшĕсен çулĕпех» повеçре тата «Çунат» илемлĕ очеркра халăха парнелерĕм. Хăйăр-тăпра тусанне ĕçсе, хуралса таврăнаттăмăр. Ял-ял тăрăх çӳренĕ хыççăн кунне икĕ шур кĕпе улăштарнă. Арăмсем темле çуса ĕлкĕретчĕç.

Виçĕ район ăмăртăвĕнчен Вăрнар майĕпен тухса ӳкрĕ. Лермонтов канашалла ытларах туртăнчĕ. Куçса çӳрекен вымпел турăмăр. Ăмăрту хĕрĕвне кашни виçĕ уйăхра тĕрĕслеттĕмĕр. Хаçат ку ĕçре райкома пысăк пулăшу пачĕ. Йĕпреçсем канашсен пурнăçне нихăш вăхăтра та унашкал тĕплĕн пĕлмен пуль.

Хаçатра тĕнчери лару-тăрăва та, çĕршыв пурнăçне те, республика утăмĕсене те тăтăшах çутаттаратчĕç. Çапах та вырăнти материалсем тĕпре пулнă. Редакторсем пĕрле пухăнсан, калаçмалли пĕтместчĕ. Мускавра Журналистсен тĕп çурчĕ эрнелĕх семинарсем йĕркелетчĕ. Çавăнта ытларах хĕретчĕ тавлашу. Хамăр кăларакан хаçатсен шайĕнчи пултаруллă редакторсен тачă пĕтĕçнĕ ушкăн пурччĕ: эпĕ, Вăрнарти Михаил Васильев, Муркашри Денис Гордеев, Куславкkари Николай Максимов, Комсомольскинчи Никандр Якимов, Канашри Василий Никитин, Вăрмарти Ванифатий Андреев. Пирĕн çума, тем пек тăрăшсан та, Елчĕк

редакторĕ Александр Миллин çыпçăнаймарĕ. Ытла тытас килместчĕ ун хаçатне, хăй те темле чеерехчĕ. Унăн çулçӳреври хыткукарлăхĕ çинчен «Апельсин хуппи» калавра култарнăччĕ. Шăмăршă редакторĕ Кузьма Семенч хыçран юлмастчĕ. «Эсир мана хăварас тесе тем пек хытă утсан та, эпĕ шалча пек çӳллĕ Никандр пуçне курса пыратăп, халăх хушшинче çĕтсе каймастăп», — тетчĕ те, ырă кăмăлĕшĕн сĕтел хушшине юнашар лартса черкке тыттараттăмăр вата журналиста.

Аса илмелли, култармалли нумайччĕ, кашниннех чĕлхи кĕçĕтсе тăратчĕ пулас. Чулхулари пĕр хуйхăллă кулăш аса килчĕ. Журналистсен облаçри конференцине чăваш журналисчĕсен организацийĕн яваплă секретарĕ (штатра тăман) Алексей Крысин тата «Молодой коммунист» редакторĕ Николай Каменский уазикпе пычĕк. Хăйсем «Москва» хăна çуртне вырнаçнă, шоферне ман пата общежитине çывăрма ячĕç. Занятисем вĕçленсен эпир Денис Гордеевпа Свердлов урамне антăмăр. Крысинсем пире хăйсен пӳлĕмĕнче кĕтеççĕ. Тĕлпулу, паллах, типĕлле иртмест. Эпир йĕркеллех сывпуллашса тухрăмăр. Ĕçсен чăрсăрланса каякан Каменский пӳлĕмри япаласене йăлт çапса аркатнă, коридорта çухăрса çӳренĕ. Кăларса сирпĕтнĕ шупашкарсене хăна çуртĕнчен. Вĕсем вара çĕрле таксипе «Ленинская смена» редакторĕ Юрий Пастухов патне çитнĕ. Юрать-ха Чулхула журналисчĕсен ушкăнĕн яваплă секретарĕ Тюльников çăлса хăварнă вĕсене. Çĕмĕрнĕ япаласемшĕн тӳленĕ хыççăн, ирхине мухмăр чĕртме те укçи юлман шереметсен. Крысин ман пата шăнкăравларĕ. Фигнер урамне, редакцие тулли кĕсьепе çитсе, вилесрен çăлтăм ентешсене.

Пĕрремĕш секретаре хăналани те пулнă. Ток пыма пăрахнипе хаçат кая юлчĕ. Яваплă секретарьпе Володя Давыдовпа ларатпăр вăхăта стаканпа виçсе. Алăк уçăлчĕ те, пӳлĕме Петров кĕрсе тăчĕ. «Çĕнĕ информаци пур, ачсем. Лартма пулать-и? Носков комбайнера «Хисеп палли» орден патăм. Тин çеç уйран», — терĕ. «Çакна пушатсан, пулать», — тесе, стакана эрех тултарса, хуçана тыттартăм. Александр Петрович хирĕçлемерĕ. «Тусан-хылчăка çуни пăсмасть, тавтапуç, асăрханарах хăтланăр», — тесе пирĕнпе сывпуллашрĕ. Эпĕ çыртăм, Володя алăпа наборларĕ. Информаци ирпе района саланчĕ.

Тепрехинче... 1966 çулта Йĕпреçе Улатăртан паровозпа Иваньково-Ленино вырăсĕ Александр Васильевич Лĕнин, Вăрнартан çăмăл машинăпа Çĕрпел чăвашĕ Василий Игнатьевич Романов персе çитрĕç. Чапа тухнă икĕ колхоз председательне те СССР

Верховнăй Совечĕн депутатне суйлама кандидата тăратнă. Хурамалта, Буинскра тĕлпулусем irttерчĕç. Çынсем банкет сĕтелĕсене тасатса тухнă çĕре манăн репортаж хатĕрччĕ. «Кĕçĕрех лартасшăн-и?» — ыйтрĕ Петров. «Кайран кая юлать, кивелет», — пăхрăм секретарь куçĕнчен. Васкаса машинăна чăмнă инструкторĕсене кăларчĕ те, эсир ирпе пуйăспа пыратăр, тесе мана пĕрле кĕртсе лартрĕ. Çитсенех, наборлаттарса, пичете ятăм васкавлă хыпара.

«Çĕнтерÿшĕн» республикăри конкурссенче çĕнтерсех пычĕ. Çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче Пысăк Упакассинче Çемен Элкерĕн 80 çулне писательсемпе анлăн паллă турăмăр. Ăна ирттермелли комисине мана та кĕртнĕччĕ. Çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче мана «Советская Чувашия» хаçат редакторĕ хăй патне чĕнме пуçларĕ. Ăна парти пурнăç пайĕн пуçлăхĕ кирлĕ-мĕн. Килте лайăх виçсе пăхнă хыççăн, эпĕ килĕшрĕм. Ун хыççăнах Михаил Иванов обкома пĕлтернĕ, Лермонтовпа калаçнă. Николай Григорьевч мана хăй патне чĕнчĕ. «Питĕ лайăх ĕçлесе кайнăччĕ пĕрле, шел, ямалла пулать, çамрăксен ÿсмелле, — терĕваскамасăр манпа юнашар пырса ларнă май. — Редактор ăçта тупăпăр?» «Пур вăл. Красноармейскинче. Ефимов Серафим Ефимович. Редактор заместителĕнче ĕçлет», — пĕлтертĕм хамăн шухăша. Красноармейски тенине илтсенех, вăл кулса ячĕ: «Да... Кузнецовпа ăнмарĕ. Ку тата мĕнлескер?» «Вăрнар ачи. Редакцире пĕрле ĕçленĕ. Чулхулари партшкултан вĕренсе тухнă. Пултарулăскер». Николай Григорьевич красноармейскисен пĕрремĕш секретарĕпе Андрей Петровпа телефон тăрăх калаçса татăлчĕ те, «добро» терĕ. 1974 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче эпĕ тăванланнă çывăх хаçатăм айне юлашки хут алă пусрăм. Серафим Ефимов ман вырăна тата хваттере йышăнчĕ.

Серафим Ефимович кирпĕчрен пичет çурчĕ ларттарчĕ, çĕнĕ пÿрт ĕçкине чĕнчĕ, мана редакцин Хисеп кĕнекине кĕртрĕ. Редакцин кивĕ çуртне пăснă, ячĕ асра çеç юлчĕ. Хаçатăн çур ĕмĕрхи, утмăл çулхи менелникĕсенче хăнара пултăм. Çавăнта пуçăмра сăвă йĕркисем çуралнăччĕ:

Эс, Йĕпреçĕм, ман тĕрекĕм,
Халăхри вăйпа тĕртен
Ĕç тесен, юлхав пулманшăн
Савăнса лăпкан пуçран.

Эс, Йĕпреçĕм, ман сиплевçĕм,
Чĕрери таппа чĕртен

Ĕç, тесе вăрман симпылĕн
Черккине сĕнсе чунтан.

Эс, Йĕпреçĕм, ман савниçĕм,
Илемре вăййа хĕртен
Вĕçтерсе сăнар асамĕн
Тыткăнне илсе кĕртен.

Эс, Йĕпреçĕм, ман çемьеçĕм,
Ăрури йыша хушан
Вăй парса ача хĕвелĕн
Çуттинче пире усран.

1997 çулхи нарăсăн 6-мĕшĕнче хаçатăн 65 çулхи кунне палăртса таврăнсан, тепĕр кунне ирех тăрса «Вунтăххăрмĕш редактор» хайлав майласа пăрахрăм:

«Шупашкара командировкăна кайнăччĕ те... Тĕп хулара ĕмĕрĕпе вĕçленмен ĕçсене майлаштарнă хушăра çирĕм виçĕ çул иртсе те кайнă. Атăл çыранĕнчи чăвашсен уйĕнче, тимĕр-бетон вăрманĕнче выртатăп.

— Владимир Прокопьевич, — шут шăрçине шаклаттарса вăратрĕ тутлă ыйхăран пĕр мĕштĕркке. — Киле каймалла. Отчет пама вăхăт çитнĕ. Ман та Кондратьев майорăн, милици начальникĕн пÿлĕмне çуса тухмалла. Аттукăн вăл мана читлĕхрен кăлармасть. Сирĕн те паян çула май «Гвардеец» колхоза умма кăларса парса хăвармалла-ха. Унсăрăн... партбилетсăр тăрса юлаттăр вĕт. Васкар, ĕлкĕрер, хăвăр юратакан çунатлă сăмахсем çине утлансах вĕçтерер: «Кĕрешмелле, шырамалла, тупмалла та парăнмалла мар».

Йĕпреçьен Кăвакалĕсен чаплă йăхĕнчи Агей Павăлĕ йăлкăшса тăра парать ман умра, эккей. Сумлă кĕсйине тавăрса вексель илчĕ те, сăмсине шăнкартса унпа пит-куçне шăлчĕ, уссăр хута кут хыçне чикрĕ. Хамăр бухгалтер хам çумрах чухне хытнă хăнкăла вырăнне юлмăп-ха тесе хыпăнсах ĕçе васкарăм.

Йĕпреç алăкне уçса тĕп картишне кĕрсен, çунатлă Уткин милици еннелле пăхмарĕ те, тĕп перекет кассине хĕрарăм йĕмĕ тĕплеме юлчĕ. Эпĕ капăр чул çурта васкаса çитрĕм. Иккĕмĕш хута уххăрла улăхса кĕтĕм те... Ман вырăнта сĕм вăрман варринчи Мĕтри упа йĕкеленчен шăтса тухнă хунав Юман лара парать. Алăк уçнипе варкăшнă сывлăш ăна пукан çинчен вăшт кăна çĕклерĕ, пит-куçĕнче кăмăл хумĕ кăларчĕ. Çыпăçуллă та капăр тум тăхăннă Костя

Алимасов мана ăшшăн кĕтсе илчĕ те, «Тархасшăн, ларăр çак пукан çине» тесе редактор вырăнне кăтартрĕ. «Тавтапуç, хамăн вĕренекенĕм, хамăн çыравçă-ĕç-пуç тусăм-юлташăм, утмăл пилĕк çулпа саламлатăп. «Çĕнтерӳшĕн» ялавне алăра çирĕп тытмашкăн юман сĕткенне ĕмме ан ман», — тесе сăмахпа çамкаран шаккарăм.

Чĕрĕк ĕмĕре яхăн иртнĕ хушăра райхаçат редакторĕн пуканĕ пĕр кун та пушă ларман. Унта эп çук чухне хамăн пултаруллă çамрăк вĕренекенĕм, Улатăрьенчи Эйпеç чиперкке йĕкĕчĕ тымар янăшăн хĕпĕртерĕм. Юрать-ха çывратса хăварман мана ĕçчен те кăмăллă Павел Агеевич финансист, тахçанах аркатнă перекет кассин çурт вырăнĕнче юрату ванчăкĕн ылтăнне макра-макра шыракан Кăвакал. Çулăмлă сăмахсем çине утлантарса та, хамăрăн хăлтăр-халтăр грузовикпе те, чăхчах, пăх-пах тăвакан «Мусквичпа» та вăхăтра илсе çитерчĕ тăван редакцие.

Йĕпреç хĕрĕсене усламçу хĕвелте ирĕлнĕ пек çемçетсе яракан кулăллă редактор кăмăла уçса ячĕ, вара эпĕ утмăлмĕшçитмĕлмĕш çулсене, вăрман шавĕллĕ, пăравус хашлатăвлĕ, шăпчăк юрриллĕ тĕнче кĕтесне килсе кĕтесленнине аса илтĕм, самантрах хамăн журналистика çулĕпе чупса тухрăм.

Чăн та, этемех иккен Константин Дмитриевич! Вăл, ĕçлекен чĕрĕ редактор, мана хăйĕн вырăнне ларма сĕнет? Аллă саккăрмĕш султанпа вун виçĕ редакторпа ĕçлесе курма тиврĕ, кунашкаллине тĕл пулман. Петр Тихонов-Ялгир, Петр Маркин, Анатолий Толмасов, Аркадий Кустиков, Геннадий Мальцев, Анатолий Миронов, Михаил Иванов, Николай Дубинин, Николай Максимов, Лаврентий Таллеров, Иван Тенюшев, Михаил Юхма, Хветĕр Агивер... Акă вĕсем — мана тăн парса ĕçлеттерекенсем, ман ăспуçпа хаçат-журнал тăвакансем. Пуканĕсене вĕсенчен хăшĕ-пĕри арăмĕсене сыхлассинчен шанчăклăрах сăнчăрпа кăкарнăччĕ, ĕмĕр ванми çăрапа питĕрсе илнĕччĕ... Каккуй ларма сĕнеççĕ сана унта, хăйсен пуканĕ çине куç хӳрипе пăхма памаççĕ! Алимасов вара мана ăшă кăмăлтан ларма ыйтрĕ хăйĕн пуканĕ çине.

Килĕшрĕм. Хаваспах.

Савăнсах кайрăм тата Канашьенчи Шуркасси Тимĕрçĕн Ваçли ачи вĕркĕчне хашлаттарса çитнĕ Кинатине курсан. Мана Кузнецов тӳрех хаçат тыттарчĕ, «Менелник парнине алă пуссах памалла мар-и?» — тесе ыйтрĕ. Эпĕ килĕшрĕм.

Нарăс уйăхĕн тăваттăмĕшĕнче кун курнă «Çĕнтерӳшĕн» çине «Тăван хаçатăмăра пуç таятпăр» тени тăрне çиçĕмле сăмахсем çырăнса та хурăнчĕç пултаруллă сăвăçăн ман ятпа:

«Итле, Кузьмин. Эс — çын!
Ак санăн пысăк чин».

Хаçата чĕре çумне паян та, акă, нарăсăн улттăмĕшĕнче, менелнике хавассăн паллă тума килнĕ кун, Костя Алимасов сĕннĕ пукан çине ларса, «Çĕнтерÿшĕн» кĕрешрĕм.

Халĕ еплерех, лайăх пĕлместĕп, анчах хăрушăччĕ Йĕпреç поселокĕ утмăлмĕш çулсенче. Усаллăхпа чапа тухнă Корчагинсен «гитара ушкăнĕ» урамра хуçаланатчĕ, никама та ирĕклĕ савăнса утма памастчĕ. Аякран килсе кĕнĕ журналистсене çĕнĕ касă тума чăрмантаракансем пурччĕ.

Хăйăр, пылчăк, тусан...
Çĕр çине хăрамасăр пусан.
Ют çынна кăмăлтан эс сăнлан,
Сыхланан вĕçекен сăнăран.

Сивĕ куç çухалмасть нихăçан,
Пуç тавра явăнать выç çăхан.
Урăлмасть кунтăкки аçтахан.
Хÿтлĕх тупнă çăхав çыракан.

Парăнмаççĕ пуçтах ачасем,
Алла тытнă кăвар пересем,
Çунтараççĕ, хăртаççĕ кăкран
Çăхавпа хÿтлĕхне пурнăçран.

Çак манăн сăвăри пекех çĕнтерсе пытăмăр эпир Николай Максимовпа, Геннадий Кузнецовпа, Николай Перловпа, Владимир Давыдовпа, Константин Алимасовпа, Римма Яковлевапа, Анатолий Филипповпа, Василий Григорьевпа, Николай Ядрицевпа — çамрăк çыравçăсем.

Эпĕ вĕсенчен кăштах аслăрахчĕ те, Вăрнар хаçачĕн вĕри кăмакинчен Серафим Ефимовпа юнашар пиçсе тухнăскерччĕ те, вĕсем мана итлетчĕç, шанатчĕç, хисеплетчĕç. Ĕçе ху лайăх пĕлмесĕр çынна çав ĕçе тума ан вĕрент тесе анне каланине яланах асра тытнă та, пултарулăх вăйăи-хайлавĕнче çурăк сасă кăларман, çамрăксене яланах хăйсене илем çуначĕ сарма ирĕк парса пулăшнă, çав çунатпа ăçталла вĕçмеллине кăтартнă, йăнăш çулпа каяссинчен сыхланă.

Кашни ачи вӗсенчен хӑй евӗрлӗ, хӑйне май кутӑн. Вӗсен черченке туйӑмне вӑхӑтра та вырӑнлӑ асӑрхама пӗлни мана кӑна мар, пӗтӗм ӗҫ йышне ҫӗклентерме, ӗҫе малалла аталантарма, ҫав вӑхӑтрах район умӗнче тӑракан йывӑр та кӑткӑс ыйтусене халӑха майлӑ, усӑллӑ татса пама пулӑшатчӗ.

Кульцаври вӑтам шкулта вӗреннӗ чухнех Пегас ҫине утланса ларнӑ Геннадий Кузнецова тытса чарма та йывӑртарахчӗ. Урхамахӗ ют сӗлӗ анине иленнӗччӗ те, хӑй те сисмен ача Шетмӗ тӑрӑхне мӗнле ҫитсе ҫапӑннине, юрать чӗлпӗрне хамӑр еннелле туртса илме ӗлкӗртӗм. Халӗ епле ташлаттарать Парнас ҫинче поэзи урхамахне! Шупашкарта пурӑнас пулсассӑн-и вӑл, тупата, тахҫанах шӗкӗлчесе тухмалла асфальт шӗккисене.

Нумай ҫамрӑк вӗренчӗ Йӗпреҫ шкулӗнче. Виталий Родионов (ЧГУ профессорӗ, писатель), Петр Кузьмин-Ҫӑлкуҫ сӑвӑҫ («Тантӑш»), Вениамин Павлов (Элӗкри «Пурнӑҫ ҫулӗпе» хаҫат), Николай Максимов («Советская Чувашия» редакторӗ, писатель) хӑйсен пурнӑҫӗнчи йывӑр каҫалӑка «Ҫӗнтерӳшӗн» уйӗнче ӑмӑртса тухрӗҫ. Пурне те мухтаса, пурин пуҫ-кӑранташ вӗҫне-кутне тухса пӗтмешкӗн халлӗхе май та ҫуккӑ, мӗншӗн тесессӗн мана Костя Алимасов хаҫат калӑпӑшӗнче палӑртнӑ вырӑнтан ытла пӗр йӗрке те памасть. Хамах вӗрентнӗ ӑна пустуй шыв юхтаракансемпе кӗрешме. Ҫавӑнпа та Николай Перлов каланине ҫеҫ кӗртсе хӑварас пуль.

«Ҫӗнтерӳшӗн» дипломне чи лайӑх хакпа илнисенчен хӑшӗсем урӑх еннелле вӗҫме пуҫларӗҫ. Вӗсене хӑйсем тӗллӗн ӗҫлемелли пысӑкрах вырӑн сӗнчӗҫ. Вӑрман касса ывӑннӑ Николай Максимов Куславккана пулӑ тытма васкарӗ, район «Ялавне» республика ҫийӗн ҫӗклерӗ. Владимир Давыдов, тӑван ҫӗршывне ҫавӑнса ҫитсе, Аслӑ Каҫалри «Октябрь ялавне» ҫӗнӗлле варкӑштарчӗ. Ман та черет ҫитрӗ пулас...

Мана Шупашкара ҫавӑтса каяссине чи малтан Кузнецов пӗлнӗччӗ. Ҫыхӑну енӗпе питӗ йывӑр пулнӑ пирки, редактор телефонӗ ҫумне юнашар пӳлӗмре тепӗр аппарат лартнӑччӗ. Мӑшӑр калаҫу-хутшӑнуччӗ. Ман пата тӗп хуларан шӑнкӑравланӑ хушӑра Геннадий Васильевичӑн алли асамлӑ авӑр еннелле туртӑннах ӗнтӗ. Сӑмах-юмахӗ те ӗмӗрлӗх вӑрттӑнлӑх мар. Ватӑлса ҫитнӗ ҫурт мӗнпур шӑв-шавран пӑшӑл пӑтти пӗҫерсе хӑйӗн юлашки вӑхӑтне пурӑнса иртерне.

Мӗн кӑна пулман пуль хӑй вӑхӑтӗнче ҫав ҫуртра, мӗнле кӑна кӗвӗ янӑраман пуль. Ҫӗкленӳллӗ, хӑватлӑ, илемлӗ кӗвӗ пусӑрӑнчӑк кӗвӗҫ, юнтармӑш, чухӑнлӑх туйӑмӗн кӗввине куҫнӑ самант кӑмрӑклантарсах ячӗ пӗррехинче хаҫат тӑвакан йыша. Тилӗ хӳрипе йӑпанса

ашкăнма пуçланă Геннадий Мальцев хăйне тăрă шыв çине кăларса çутă шыв юххипе юхтарас текенсене епле тавăрнине никам та манман пуль-ха. Дмитрий Киселева, фотоăстаçа, типографи çынни туса хума щутланăччĕ вăл. Ăна, эсĕ нимех те тумастăн тесе, çĕрлехи ĕçе кӳлнĕччĕ. Унăн ĕнтĕ, пичет станокĕ хыçĕнче, япăхрах çапăнакан хаçат листисене суйласа аяккалла илсе пăрахса лармаллаччĕ. Хушнине вăл пурнăçлама юрататчĕ, анчах та... Унăн ĕçĕ марччĕ-çке вăл. Пуç çине тăмсай хыт тăм тăкнине хирĕçлесе Киселев çил-тăвăл кăларать. Ытти ĕçре нихçан япăххине илтмен юман кĕрешĕ пек Чĕмпĕр вырăсне хӳтĕлесе шанчăк памалла пулчĕ. Типографири миçе хĕрарăм куççуль юхтармарĕ пуль пуçлăхăн ĕçри кăнттамлăхĕшĕн. Юрать вăхăтра кăларса тăратрĕç мухтанчăк каçăр автана Йĕпреç алăкĕ хыçне.

Редакцин çав йывăç çурчĕн пĕренисем, урайĕсем мĕнпур вăрттăнлăха хăйсемпе пĕрлех çунтарса кĕллентерчĕç-ши? Çыраттăмăр, юсаттăмăр, çапаттăмăр... Эрнере виçĕ хутчен хаçат кăлараттăмăр. Пĕрле: арçынĕсем те, хĕрарăмĕсем те. Тар кăларса. Юрласа. Ташласа. Пĕрнепĕри хисеплесе, юратса. Малашлăха шанса. Пурнăç сĕткенне тутанса.

Мана Сăр вăрманĕн шăрши ӳсĕртсе юрлаттарнă, Элĕкьен пики пурнăç ташши ташлаттарнă. Мана вăрман халăхĕ хастарлантарнă, имлĕ йывăç-курăк тавралăхĕ хăйĕн ĕшнине хупнă. Мана çав уçă сывлăш ĕçчен çынсемпе паллаштарнă, хăйсен ытамне илнĕ. Ахальтен мар миçе очерк, калав, «Тымар» роман, «Виçĕ юман», «Юрату кăварĕ» повеçсем çуралчĕç.

Çав хĕрӳ ытамран уйрăлма ай-яй çăмăл мар — вăхăтлăх пулин те. Вунă çул ĕмĕрĕн самай паллă пайĕ. Анчах...

Канмалли кунсенче ахаль такамшăн ĕçлесси ака уйăхĕнче кăна мар, ытти вăхăтра та йăлараччĕ. Шăматкунсенче вакунсене вутă тиеттĕмĕр, Çĕпĕр вăрманĕнчен вăрман варринчи Спотара заводне çункав чĕрсе тума ăсатнă пихта-хыра пушататтăмăр. Хальхинче Улатăр çулĕ çине тухрăмăр. Асфальт сарма икĕ енĕпе вăрман касрăмăр. Аслисен тарçисем-пуçлăхĕсем Йĕпреç леш енче, Хĕр шывĕ хĕрринче, лесниксене пулă тыттарса каçхи апат хатĕрленĕ. Ун чухнех кашни хуçан куçса çӳрекен хĕрлĕ хупахчĕ. Лермонтовпа Турханов мана систерчĕç: саншăн паян ăсату банкечĕ пулать. Шыва кĕрсех, çылăхсене каçарттарсах юрларăмăр тулли уйăх çутинче. Ĕçлĕ вырсарник маншăн Йĕпреçре ĕçри юлашки шав кунĕ пулчĕ.

Акă мана хамăн вĕренекенсем те — «Çĕнтерӳшĕн» гвардеецĕсем ăсатаççĕ. Кил еннерех, парк уçланкине суйласа илтĕм çакă паллă ĕç-калаçăва тума. Микулай Перловпа Микулай Ядрицев утаççĕ хулпа-хул çакланса. Упакасси ачи хăйне майлăрахчĕ. Йăл кулатчĕ те,

ăшрине ним пытармасăр мана каласа паратчĕ. Эпĕ вара ăна, хуçă-ран пĕчĕкрех айăпа кĕрсен те, май килнĕ таран каçараттăмччĕ.

Хама пăхăнакан кашни çынна эпĕ витĕр курса тăнă, кашнин пурнăç-масине пĕлнĕ, кăмăл-туйăмне ăнланма тăрăшнă, ĕмĕт вĕçевне çунат хушма хатĕр пулнă. Илем шерпетне тутанма хăшĕсем пек тӳрех васкаман.

«Эпĕ, — терĕ Микулай Ядрицев, — сире чĕререн хисеплесе, эрменсен коньякне туянтăм, пилĕк çăлтăрлине. Ярар пĕрер черкке». Ятăмăр пĕрер. Çырма хĕрринче ларнă май, шывра ишекен пилĕк кăвакал йĕррине сăнарăм. Ярлаттарса пычĕç-пычĕç те вĕсем, пĕри тăрук кутăн чăмрĕ. Вăл тухнине эпĕ асăрхаймарăм. Пилĕк çăлтăрлă хăвата ытама илнĕ пилĕк йĕкĕт-çăлтăртан пĕри Микулай Ядрицев туслăх кăшăлĕнчен яланлăхах уйрăлса каясса пĕлтерчĕ-ши çакă? Нумаях та пурăнаймарĕ лайăх ача, вăхăтсăр уйрăлчĕ ушкăнран.

Микулай Перлов вара тепĕр кунне çапла каласа пачĕ:

«Эсир сывпуллашса, тав туса килелле утсан, эпир тата темиçе çăлтăр сиксе тытрăмăр. Уйăх çинчи кĕвентеллĕ хĕр астарнипе тата тутлăрах, пылакрах шыв ĕçме вĕçрĕмĕр. Ясар хĕр витрине йăтма иккĕн-виççĕн каймастăн вĕт. Çухатса хăварнă эпир, юлташсемпе, Микулай Ядрицева».

Акă мĕнле мыскара курнă вара вăл çĕрлехи вăрманта. Микулай кăмари кăмакинче хăрушшăн çухăрса ярса куçне уçать те, хыпашласа пăхать: саваламан пĕрене. Тăрса унталла-кунталла çапăнать: каллех пĕрене. Сикет ирпе — ăна хĕвел шевли çапса ӳкерет. Талпăнать çӳлелле, хăпарма вăй-хал çитмест. Мунча пури ăшне хăй мĕнле майпа кĕрсе ӳкни çинчен журналист тĕпчевĕ тунă хушăра ăна çурăм хыçĕнче нăрхлатнă сасă чуна чĕртсе ярать. Кĕç кут айĕнчи çĕр чĕтресе каять. Йăшта-йăшта сысна пусĕ шалаллах кĕрет, акă вăл хăсăка чаплаттарма пуçлать. Ядрицев та тавçăрса илет: сыснапа пĕрле чавмалла! Хăйне çăлаканĕ çырма хĕрнелле юрласа кайсанах вăл тарăнлатнă шăтăкран аран-аран мекеçленсе тухать те тăвалла сулланать. Редактор ăна ĕнер юлашки хушу парса хăварнă-çке: редакци çурчĕ тăрне хĕрлĕ ялав çакмалла! Çав шухăшпах çĕрле кĕтес тăрăх мекеçленсе хăпарнă пуль те вăл, пĕренене çамкапа пырса тĕкĕнсен çĕрелле шаплатнă та, хуп турттарма пуçланă.

Микулай Перлов тусăма итленĕ май эпĕ çавăн чухнехи хитре кĕленче çинчи çăлтăрсене «Çĕнтерӳшĕн» çăлтăрĕсемпе танлаштартăм. Мухтавлă, хăватлă, çутă çăлтăрсем вĕсем. Журналистика тӳпине пурте çĕкленсе хăйсен вырăнне йышăнчĕç. Кашнин хăйĕн çути пулсан та, пурин те пĕр çутă — Йĕпреç çути.

Çăмăл мар редактор пуканĕ. Ăмсанакансемшĕн тата карьеристсемшĕн кăна çăмăл пуль вăл. Хаçат менелникĕ вĕçленнĕ хыççăн Костя Алимасов ăна йăтса пăхрĕ те, çамки çине тар кăларса, каларĕ:

— Сăпасчен командировкăна ямалла пулать пуль сире, Владимир Прокопьевич. Йывăр пулсан та, хамах ларам-ха кунта.

Авă мĕнле вăл манăн вунтăххăрмĕш редактор. Ахалли те мар — тĕп редактор. Тымарлă. Ытти редакторсем майлăрахах. Пĕр кун ĕçлеттерчĕ те...»

1997 çулта, хам çуралнă çĕршывра, Çĕрпелти культура керменĕнче, мана вĕсем эртелпе саламларĕç: Константин Алимасов, Геннадий Кузнецов, Николай Перлов, Серафим Ефимов, енчĕк хуçи Лилия Орлова бухгалтер, типографи пуçлăхĕ Альбина Петрова, почта-çыхăну начальникĕ Николай Григорьев, вăрманпромхоз директорĕ Александр Ведин, «Виçĕ юманăн» тĕп геройĕ Дубов-Петров. Сăпасра ман патра хăна пуканĕ çине лартăмăр. Геннадий Кузнецов вăтăр пилĕк çухрăм тăршшĕпех сăвă юптарса пынă, вуласа пачĕ ăна:

Хĕпĕрте паян эс, Çĕрпел енĕ,
Савăнмашкăн санăн тивĕç пур:
Утмăл çул каялла тĕнче пилленĕ
Ывăлне чыслать халь Хурăнсур.

Хурăнсур кăна-и? Чăваш çĕрĕ
Килсе ларнă çак кĕрекене.
Санар шывĕ тунă кĕмĕл тĕрĕ
Илемлетнĕ йышлă черккене.

Тыр ăсти паян пире ятламĕ
Ĕç пĕтиччен эрех ĕçме
Тытăннишĕн. Юбиляр ятран-мĕн
Капан лартнă аслă йĕтеме.

Ун капанĕ курăнать мăнаçлăн,
Пысăкрах та вăл ыттисенчен!
Ăстаçи çĕрпе тек пĕр канашлă,
Чунĕпе те, юнĕпе хресчен.

Ахальтен-им аллине вăл тытнă
Çурла уйăхĕн çут çурлине.
Кĕлетки уйра пиçсе ун хытнă
Вырнă чух çĕн пурнăç тыррине.

Кĕлтисем — куратăр-и — сулмаклă,
Çĕр çынни ăмсанĕ вĕсене.
Вулакан çакна хăй сумлăн хаклĕ
Тĕшшине хурсассăн пӳлмене.

Тусăмçăм, тăванăм, Улатимĕр,
Тар тăкса ĕçленĕрен чунтан,
Сив сăмах сана пĕрре те тивмĕ
Çирĕп ыйтакан ял-йышунтан.

Çиçрĕ санăн «Юрату кăварĕ»,
Кăмăлтан ӳстертĕн «Виç юман.
«Çăлкуç» шывĕ пачĕ те вăр-варлăх,
Тăваллах эс талпăнан ялан.

Тарăн çеç «Тымар» чĕр пурнăç панă
Йывăç авăнмасăр тăрĕ тек.
«Çĕр пики» те тупнă, ав, йăпанăç
Йăлтăр «Шурăмпуç çăлтăрĕпе».

Хĕм сапать пулсан «Шăратнă сыпă»,
Çын пырать-тĕк «Ашшĕ çулĕпех»,
«Хулăн тетрадьре» кĕç вырăн тупĕç
Çĕнĕ ĕçӳсем сан йĕркипех.

Чăннипех сĕткенлĕ çĕрĕн-шывăн
Ырлăхне татах та ӳстерсе,
Малалла та шанчăклăн эс пырăн,
Ывăнма пĕлмесĕр вĕçтерсе.

Ĕçӳпе пулсамччĕ Улăп-паттăр,
Канăçа ан парăнччĕ пачах.
Улатимĕр, пил сана: вăй патăр!
Ялкăштăр эс чĕртнĕ хĕм-вучах.

«Çĕнтерӳшĕн» ачисем çав вучах таврах пухăннă çав. Элĕкрен саламлама килнĕ Виталий Родионовпа (Элĕк кĕрӳшĕ пулса кайнă) Вениамин Павлов ушкăна хутшăнни туслăх кĕрекине хамăр майлă илемлетрĕ. «Çунат» очеркшăн Йĕпреç хаçачĕн Элкер ячĕллĕ премине пани маншăн чи пысăк парне вырăнне пулчĕ.

*2000 çулхи*
*ака уйăхĕн 10—18-мĕшĕ.*

## ХАВАСЛĂХ ТА, ПУЛТАРУЛĂХ ТА – ХАМĂРТАХ

Вунă çул Йĕпреç вăрманĕ вунă хутчен чечекленсе-ешерсе вунă хут хăйĕн пуянлăх хитрелĕхне çĕнетсе улăштарнă пек кăна туйăнать мана иртни. Ăшра хăй вăхăтĕнче тăван тавралăх, тăван район-поселок, тăван урам-кил пулнă пурнăç тапхăрĕ çĕнелсе аталаннă. Пире, Вăрнарпа Элĕк ачисене, хăй ытамне илсе, пирĕн шухăш-туйăма йышăнса малалла аталанма сĕткен панă Чăваш çĕршывĕн кĕтесĕ – Йĕпреç пирĕншĕн паян та çывăхах иккен. Йĕпреç ен пире хаваспах алă парать. Района ертсе пыракан чи аслă пуçлăх Анатолий Иванович Петров хăйне евĕр йĕпреçле те хресченле, патшалла та юлташла ăнланса йышăнни, çывăх юлташсем манманни, çĕнĕ туссем тупăнни маншăн темрен те хаклă. Эпир пĕрле пурăнни, ĕçлени, кĕрешни хамăр тăван район çыннисен ӳсĕмĕнче юлни вăл — туслăх çĕнтерĕвĕ. Ăна эпĕ «Çĕнтерӳшĕн» хаçатăн çĕнтерӳллĕ сакăр вунă çулĕнче пулнă май, питĕ ăнланулллăн туйрăм.

Манăн кĕрешӳллĕ çамрăклăх çулĕсене асра тытнишĕн хĕпĕртерĕм. Вăхăта, сывлăха шеллемесĕр хаçатшăн, районшăн тăрăшни харама кайман иккен. Мана çав вунă çул хушшинче юратнă мăшăрăм, Йĕпреç ачисене акăлчан чĕлхи вĕрентсе пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнă Римма Ильинична Кузьмина чăтăмлăн вăй парса тăнă. Ăна хăй вĕрентнĕ ачисемпе ашшĕ-амăшĕсем манманни те пирĕн çемьешĕн сиплĕ шыв пекех. Акă çапла, чунăм юрринче:

Йĕпреç вăрманĕ, эс сип-симĕс, анлă,
Хĕвеллĕ тухăçран инçе анат таран,
Тĕнче кăрманĕ, эс пуян, ытамлă,
Хĕрӳллĕ пурнăçпа çиçсе тăран.

Йĕпреç кĕтесĕ, эс ытла асамлă,
Чăваш йăхне авалтанпа упран,
Тĕнче картийĕ ăшĕнчи çĕр халăх
Çемйи йышне вăйлантарса пыран.

Йĕпреç çĕршывĕ, эс вутра та çуннă,
Тăшман килсен çĕн пурнăçа ватма.
Тĕнче хăвачĕ пулнă иккен санăн
Хура эшкер çулне пӳлсе лартма.

Йĕпреç кĕтесĕ, эсĕ — мăн тăванлăх,
Епле манайăн сиплĕ çăлкуçа.
Тĕнче карттинĕ — курăнлăх, юманлăх,
Сăнарлăн, паттăр курăнан куçа.

Йĕпреç çынниййĕ, эсĕ çил-çунатлă,
Чапна кăтартрăн вăрçăра, ĕçре,
Тĕнче юрриййĕ шăратан уç саслăн,
Ытакланса ларса кĕрекере.

Йĕпреç телейĕ, эс — манра, санра та,
Çĕнсе туптаннă çутă ăраскал.
Тĕнче паллиййĕ илнĕ çич ютра та,
Кĕрешӳре нихçан чакман вăй-хал.

Туслăхпа юратăвăн чикĕ çук тенĕ пекех, пирĕн, йĕпреçсемпе вăрнарсен хушшинче те, чаркăç картиййĕ нихçан та пулман пуль. Кӳршĕсем ялан туслăн, çывăхланса пурăннă. Манăн та, 1974 çулта, хăнăхнă вырăнтан хама Атăл хĕрнелле туртнă вăхăтра, «Çĕнтерӳшĕн» тилхепине çамрăк чух пĕрле Вăрнар хаçатĕнче туптаннă ентешĕмех тыттарса хăварас килчĕ. Пуçлăхсем мана итлерĕç, çавăнпа эпĕ пуçри шухăшăма пурнăçа кĕртрĕм. Красноармейски хаçачĕн редактор заместителĕнче ĕçлекен Серафим Ефимович Ефимов çапла Йĕпреç çынни пулса тăчĕ — ĕмĕрлĕхех пулас. Вăрнар ятне ямарĕ, «Çĕнтерӳшĕн» йăли-йĕркине аркатмасăр, ăна хăй енчен çĕнетсе, вăйлантарса пычĕ, çирĕм икĕ çул хушшинче район пичетне халăх хушшинче те, республика шайĕнче те çӳллĕ шайра тытса пычĕ. Вулакансенчен те, район пуçлăхĕсенчен те, пичет органĕсенчен те пултаруллă журналиста, йĕркелӳçе пысăк хак тивĕçнĕ. Чулхулара пĕр вăхăталлах социаллă пурнăç политики институчĕн дипломне илнĕ çывăх юлташăм пирĕн вăхăтри ĕç коллективне сыхласа хăварма пултарнишĕн яланах хĕпĕртеттĕм. Вăл хăй хыççăн ĕçлемелли редактор та вĕрентсе, çитĕнтерсе хăварма пултарчĕ. Константин Дмитриевич Алимасов халĕ республикăри чи вăйлă редакторсенчен пĕри шутланать.

Вăтăр виçĕ çул каялла хăйĕн коллективне хавшатса хăварнăшăн Красноармейски районĕн хаçат редакторĕ мана кӳреннĕччĕ. Чи вăйлă журналистсене хамăр пата туртса илтĕм-çке. Теприйĕ вăл Геннадий Васильевич Кузнецов ĕнтĕ. Хамăн пултаруллă вĕренекенсенчен чи ĕçченни, пит маçтăрри. Унăн журналист,

поэт таланчĕ ӳссех пырать. Вĕрентекенĕсен шайĕ уншăн тахçанах чикĕ мар. Фантазийĕ вăйлă пирки, сăмах тĕшшипе — сăнарлăхĕпе усă курма пĕлнине пула тата ощество аталанăвĕн кăткăс ыйтăвĕсене тӳрех ăнланса пуç тавра çавăрттарса хăйшĕн те, вулаканшăн та усăллă сăмах тупса чĕрĕ хайлав шăрантарма мехел çитернипе ыттисенчен уйрăлса тăрать вăл.

Хаçат менелникĕсене çӳренĕ хушăрах сисмен те, хамран пĕр çул кăна кĕçĕнрех Серафим Ефимович та пенси çулне çитсе тухнă. Çурран утма инçе терĕç, вĕçтертĕмĕр вара çăмăл автомашинăсемпе тап-такăр çул тăрăх Кĕтне юханшывĕ еннелле. Ирçе Çармăс çывăхĕнчи вăрманта, кӳлĕ хĕрринче, йывăç тăррине çитиччен вĕçтертĕмĕр ачана. Йĕпреçри юлташсем, туссем, кӳршĕ районсен хаçат редакторĕсем пĕрле пухăнса шавласа илтĕмĕр, çамрăклăха аса илсе сип-симĕс улăха улахлантарсах ятăмăр пулас. Чĕлхен шăмми çук-çке: асаилӳ хыççăн асаилӳ... Манăн та чĕлхе çинче сăвă йĕркисем кăтăклантарса сиккелерĕç:

Эс, Йĕпреçĕм, ман тĕрекĕм,
Халăхри вăйпа тĕртен
Ĕç тесен, юлхав пулманшăн
Савăнса лăпкан пуçран...

Вăрнарла та, йĕпреçле те, ирçелле те юрларăмăр, ура хуçса ташларăмăр Çĕнĕ Сăрьел йĕкĕчĕн уявĕнче — кăмăл-туйăма уçăлтарса çĕнетрĕмĕр.

Район хаçачĕсем халĕ чылайранпа ĕнтĕ вырăнти влаç органĕсем мар, вĕсен тĕп учредителĕ — Чăваш Республикин пичет-информаци политикин ведомстви. Пурте пĕр çирĕп алăра, темелле. Хăш вăхăтра мĕн-мĕн пичетлемеллине хушса, хыççăн тĕрĕслесе тăраççĕ. Министерство тăлли районщиксене хытăрах сикме те, ĕрĕхме те памасть — пĕр йĕрпе уттарать. Çав вăхăтрах Йĕпреç район администрацийĕ хăйсен хаçачĕпе пĕлсе усă курма тăрăшать, редакцие пулăшать. Политика юхăмĕ мĕнле шавласа çапăннине пăхмасăр, ĕç халăхĕ хаçатра хăй çинчен çырнине вуласа пĕлмешкĕн ăнтăлать. Çавăнпа вулаканпа хаçатăн çыхăнăвĕ пĕртте чакмасть, унăн активĕ те сахалланмасть. Хаçат хăйĕн ĕмĕрхи пурнăçĕпех пурăнать. Менелникĕ умĕн, авă, вăл мана та манса хăварман:

Йĕпреç районĕ çĕнĕрен йĕркеленнĕ хыççăн 1965 çулхи ака уйăхĕнче вулакансем тин кăна çĕнĕрен тухма пуçланă «Çĕнтерӳшĕн» хаçатăн номерĕсене илсе тăма тытăннă. Хаçатçăсем ку тăрăхра пулса иртекен ырă улшăнусене çийĕнчех асăрханă, редакцин хальхи пек çăмăл машина пулман пулсассăн та, вĕсем ял-поселоксене вăхăтра çитнĕ, ĕç çыннисен анлă сарăлнă ăмăртăвне тĕплĕн çутатса пама тăрăшнă. Лайăх журналистсем çитменни сывлăш пекех сисĕнсе тăнă.

Райхаçатăн тĕп редакторĕн лавне туртса пыма пуçланă Геннадий Степанович Мальцев коллектива ăста та пултаруллă кадрсемпе çирĕплетес тесе уйрăмах нумай тимленине палăртмасăр иртме çук. Шăп та лăп вăл редакторта ĕçленĕ тапхăрта «Çĕнтерӳшĕн» хаçат сăн-сăпачĕ те, чĕлхи те палăрмаллах улшăннă.

Хаçат страницисенче вырăн тупакан тĕрлĕ жанрпа çырнă материалсенче вăрманçăсен, сĕтел-пуканçăсен, çул-йĕр ăстисен, тыр-пул ӳстерекенсемпе выльăх-чĕрлĕх пăхакансен, çурт хыççăн çурт купалакансен, ытти професси çыннисен кулленхи хĕрӳллĕ ĕçĕ-хĕлĕ тĕкĕр çинчи евĕрлех уçăмлăн курăнса тăни савăнтарнă хаçатăн сывăх тусĕсене. Журналистикăна хăйсен тĕп ĕçĕ туса хунă çамрăксенчен пĕри Вăрнар тăрăхĕнчи Хурăнсур Çармăс ялĕнче çуралса ӳснĕ Владимир Прокопьевич Кузьмин пулнă. Вăл Йĕпреçе киличченех хăйне палăртма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ: çамрăк журналистăн çивĕч чĕлхепе çырнă очеркĕсемпе тĕрленчĕкĕсене эпĕ хам та «Çамрăк коммунист» хаçатра пĕр сиктермесĕр тенĕ пек вуласа пыраттăм. Анчах та вĕсен авторĕпе унччен çывăххăн паллашман пулнă-ха. «Яш-кĕрĕме канăç паман ыйтусене питĕ лайăх пĕлет, хăй те пĕр-пĕр комсомол райкомĕнче ĕçлемест-ши?» - тесе шухăшлаттăм эпĕ, унăн статйисемпе паллашнă хыççăн.

Владимир Кузьминпа Йĕпреç паллаштарчĕ мана, Йĕпреç сывăхлатрĕ, Йĕпреçех чыслă та пархатарлă хаçатçă ĕçĕн çулĕпе унпа юнашарах утма, унăн сывлăшĕпе сывлама пил пачĕ мана. «Çĕнтерӳшĕн» Вăрнарăн канăçсăр чун-чĕреллĕ çамрăкĕ Йĕпреçе килнĕ хыççăн чăннипех çĕнĕлле янрама тытăнчĕ. Пĕрре те ӳстерсе каланă сăмахсем мар кусем. Хăйĕнпе час-часах колхозсемпе предприятисене çитсе, пĕрле материал хатĕрлеме тивнĕрен эпĕ, хаçат ĕçне тинтерех кӳлĕннĕскер, тĕлĕнмеллипех тĕлĕнеттĕм хамран нумаях мар аслă юлташăмăрăн тавракурăмĕ пысăк пулнинчен. Вăл

кирек кампа та пĕр чĕлхе тупатчĕ, статйисене çырнă чухне вара ваттисен сăмахĕсемпе, ăслă каларăшсемпе пĕлсе те вырăнлă усă куратчĕ. Вулама çăмăлччĕ Владимир Кузьмин çырнă хайлавсене. «Çĕнтерӳшĕн» очерксене хăюллăн çул паракан хаçат пулса тăнинче çак авторăн тӳпи калама çук пысăкчĕ. Вăл КПСС райкомĕн пленумĕсенчен, халăх депутачĕсен район Канашĕн сессийĕсенчен çырса хатĕрленĕ материалсене те чĕрĕлĕх кĕртетчĕ. Унччен хаçатра протокол чĕлхипе çырнă шăналăк лаптăкăшне йышăнакан «подвалсем» номертен номер сиктермесĕр кайса пынă пулсан, Владимир Кузьмин яваплă секретарьте ĕçленĕ тапхăрта ку шаблонран тĕппипех хăтăлса çитнĕччĕ эпир. Редакцин пултарулăх кухнин тĕп стрелки Владимир Прокопьевиччĕ. Халĕ «Çĕнтерӳшĕнре» ĕçлекен хаçатçăсенчен ытларахăшĕ шăпах унăн «апатне» тутанса аталаннисем. Апла пулсан, тĕп хаçатçă хывнă çул малаллах такăрланать, пурнăç кĕнекине çĕнĕрен çĕнĕ йĕркесем çырăнаççĕ.

Владимир Кузьмин Йĕпреçе вăхăтлăха кăна килнĕччĕ. Сисеттĕм унăн тапса тăракан талантне вырнаçтарма район хаçачĕ пĕчĕкрех пулнине. Анчах та тӳпери çутă çăлтăр пек ялкăшса хĕмленекен ĕмĕтне туллин пурнăçа кĕртиччен вăл хăйĕн ăс-хакăлне, тавра курăмне анлăлатма кирлине чи малти вырăна хучĕ. Пĕр хушă партин Чулхулари шкулĕнче журналист çивĕчлĕхĕпе ăсталăхне алла илчĕ, пурнăç кăларса тăратакан ыйтусене татса панă чухне парти принциплăхне тĕпе хурса ĕçлеме вĕренчĕ. Владимир Прокопьевич «Çĕнтерӳшĕн» хаçатăн тĕп редакторне ăнсăртран килсе лекнĕ çын мар. Малтан яваплă секретарь, унтан редакторăн çумĕ, диплом илнĕ хыççăн — редактор... Журналистика çулне вара литсотрудникран пуçланă. Редакци пусмин пур картлашки çинче те тăрса курнă вăл.

«Çĕнтерӳшĕн» хаçат редакторĕн ĕçне пурнăçа кĕртсе пынă хушăрах хăй алă пусса кăларакан изданире тăтăш тенĕ пекех хитре, янравлă очерксем пичетлетчĕ. Каçăхса кайсах вулаттăмăр вĕсене, хамăр та унран тĕслĕх илме тăрăшаттăмăр мар-и?

Хăйĕн ĕмĕрне пичет ĕçĕнчех иртгерчĕ Хурăнсăр Çармăс чăвашĕ. Шăпа таçта та илсе çитерчĕ ăна, тĕрлĕ пукан çине лартрĕ, анчах Владимир Кузьмин хăй çамрăклăхра суйласа илнĕ тĕп ĕçĕнчен пĕр шит те пăрăнмарĕ. Тĕлĕнес килет вăл çанă тавăрса ĕçленинчен, халĕ те çулсеренех кĕнеке хыççăн кĕнеке пичетлесе кăларать. Кĕнекелемелли тата миçе? Сунтăхра кун çути кăтартма хатĕрлесе хунисем те вуннăран иртеççĕ.

— Йӗпреҫре манӑн ҫамрӑклӑхӑм иртнӗ. Вӑл чи хӗрӳ те чи ӑнӑҫлӑ тапхӑр пулнӑ. Кӗҫех ҫитмӗл тултаратӑп, анчах та вӑрманлӑ поселокра ирттернӗ вӑхӑт халӗ те куҫ умӗнчен кайма пӗлмест. Хамӑн хайлавӑмсенче Йӗпреҫре курса паллашнӑ, вӗсемпе паян кунччченех ҫыхӑну тытакан ӗҫчен те канӑҫсӑр ҫынсен сӑнарӗсене ҫутатса памашкӑн ӑнтӑлни пӗрре те ӑнсӑртран мар, — кӑмӑлтан палӑртать паллӑ ҫыравҫӑ.

Вӑл пирӗншӗн — паян та редактор.

*Геннадий Кузнецов».*

* * *



Журналистсемпе тӗл пулнӑ чухне е канашлусенче манран ҫамрӑк редакторсем ҫапларах ыйтаҫҫӗ: «Эсир райхаҫатра чылай ӗҫленӗ-и?» Эпӗ хамӑн историпе кӗскен паллаштаратӑп та вӗсене, вара вӗсем манпа уҫӑнрах калаҫма тытӑнаҫҫӗ. Хальхинче те ҫаплах пулса тухрӗ. 2007 ҫулхи нарӑсӑн 9-мӗшӗнче эпӗ Йӗпреҫе, «Ҫӗнтерӳшӗн» менелникне, шупашкарсемпе мар, Шупашкар районӗн «Тӑван ен» автомобилӗпе кайса килтӗм. Хаҫат редакторӗ Вячеслав Сорокин, ман ҫинчен тӗплӗнрех пӗлсен, хаваспах каларӗ: «О-о, апла эсир — хамӑр ҫын». Пӗрле ӗҫленӗ нумай-нумай редактор, ӗҫтеш, халӗ ӗҫлекеннисем-паллаканнисем те мана Сорокин пекех калани чуна ҫӗклет, район хаҫачӗ пуҫран тухмасть. Ҫамрӑкранах юратнӑ та ӑна... Мӗншӗн? Вӑл халӑхпа чи ҫывӑх пулнӑран, ӑна халӑх чи аслӑ ят — тӑван хаҫат ятне панӑран. Унпа ҫыхӑну татмастӑп. Ӑна валли манӑн ватӑлман машинка ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ хайлав пичетлет-ҫапать.

*2007 ҫулхи*
*пуш уйӑхӗн 10-мӗшӗ.*

## ТУПМАЛЛИ

«СОЦИАЛИЗМ ÇУЛĔПЕ» «ÇĔНТЕРӲ ÇУЛНЕ» ТАКĂРЛАНИ
Чуна ерекен чир.....3
Ялгир шкулĕ.....4
Писательсемпе паллашни.....10
Юрлама та, ташлама аван.....15
Хастарлă, хыт утăмлă.....20
Тӳсĕм.....24
Мускавра камит лартнă çулсенче.....31
Чăнлăхпа ултав пĕрле чухне.....41
Клубсем халаçма пуçласан.....46
Вăрнар чĕппisене вĕçтерет.....51
УМРИНЕ КУРМАСĂР — ПУЛАССИНЕ ТУЙСА
«Стариксем» хушшинче.....53
Пултарулăх çăлкуçĕ.....59
ЭЛĔК ЕН ТЕ — ТĂВАН ЕН
Ăçта йывăр — çавăнта.....63
Чĕресем пĕрлешсен.....66
КАШ-КАШЛАТЬ ЙĔПРЕÇ ВĂРМАНĔ
Çĕнĕлĕх чĕнет.....71
Ала витĕр.....76
Ăсталăх лаççинче.....86
Алла тилхепе тытсан.....94
ХАВАСЛĂХ ТА, ПУЛТАРУЛĂХ ТА — ХАМĂРТАХ.....125
Вăл пирĕншĕн паян та редактор.....128

**Владимир КУЗЬМИН**

# МАН ПУРНĂÇ — МĂН ПУРНĂÇ

Компьютерный набор *И.М.Николаевой*
Верстка *Т.В.Алексеевой*

*Оригинал-макет типографии «Новое Время»*

Подписано к печати 15.09.2007.
Формат 60х84/16. Бумага офсетная.
Печать оперативная. Гарнитура Тип Таймс.
Тираж 300 экз. Заказ № 138.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034, г.Чебоксары, ул. М.Павлова, 50/1. Тел.: (8352) 41-27-98.

**Владимир Прокопьевич Кузьмин Чăваш Республикинчи Вăрнар районне кĕрекен Хурăнсур Çармăс ялĕнче 1937 çулхи çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче çуралнă. Çĕрпелти çичĕ çул вĕренмелли, Вăрнарти вăтам шкулсенче, Шупашкарти И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика, Чулхулари социаллă политика институчĕсенче вĕреннĕ. Салтака кайиччен ялта, тата киномеханикре ĕçленĕ. Çартан таврăнсан, 2007 çулччен, республикăри массăллă информаци хатĕрĕсенче тăрăшнă, нумай наградăна тивĕçнĕ. Тăван ялĕнчи пĕр урама унăн ятне панă. Вуншар калав, 15 повесть, 3 роман, пьесăсем çырнă, 18 кĕнеке кăларнă. Раççей журналисчĕсен, Раççей Федерацийенчи писательсен союзĕсен членĕ.**

## ТĂВАН ЯЛĂМ ХУРĂНСУР

**Пилĕк юплĕ çырма пуçĕ варринче**
**Эп çуралнă çăлкуç шывĕ сассипе.**
**Пиллĕх илнĕ тăван халăх**
**хушшинче,**
**Ӳснĕ ялăн пыллă-çуллă тутипе.**

**Хурăнсур, Хурăнсур, Хурăнсур,**
**Эсĕ – манăн çуралнă çĕршыв.**

**Пĕрлешсессĕн вак хуçалăх чăмăра,**
**Çирĕпленнĕ те вăйланнă ушкăнра.**
**Чапай ячĕллĕ колхозшăн хамăра**
**Хĕрхенмесĕрех тар тăкнă вырмара.**

**Хурăнсур, Хурăнсур, Хурăнсур,**
**Эсĕ – манăн çĕнелнĕ çĕршыв.**

**Вăрманта та, авăнра та авăнман,**
**Чапай ячĕ пулнă пирĕншĕн ялав.**
**Тăшмана та, никама та парăнман,**
**Алăран вĕçертмĕпĕр ăна нихçан.**

**Хурăнсур, Хурăнсур, Хурăнсур,**
**Эсĕ – манăн мухтавлă çĕршыв.**

**Хĕр куллиллĕ, яш вăййиллĕ ялăма**
**Ытамран вĕçертмĕп шуçăм**
**киличчен.**
**Чун-чĕре шăратнă вăйлă туйăма**
**Сыхласа усратăп ĕмĕр виличчен.**

**Хурăнсур, Хурăнсур, Хурăнсур,**
**Эсĕ – манăн юратнă çĕршыв.**

